31-141

Н. КОЉУШКИН, М. ÇИРОТКИН.

К-III/3

колхос çамрăкĕсен шкулĕсенђи

III круппăра вĕренмелли

# КЕОКРАФИ

Хакĕ 1 т. 50 пус

ЂĂВАШИСТАТ 1932 ШУПАШКАР

Отпечатано в типографии № 1
Чувашгиза г. Чебоксары,
Канашская. 16.

# ПУÇЛАМĔШ

Совет Сойусĕ йĕри тавра кăпиталисла патшалăхсем пурăнаççĕ: Поԓшă, Румыни, Анкли, Франтси, Кермани, т. ыт. те. Кăпиталисăмăн хаԓхи ԓп çĕнĕ тапхăрне—империалисăм тапхăрĕ теççĕ.

«Кăпиталисăмăн ԓи курăнакан паллисенԓен пĕри, вăл—промышлĕннăç вăйлă ÿснипе тăвăмлăх пысăк претприйаттисене хăвăрт пуçтарăнса пыни пулаť, тенĕ В. И. Ленин—«империалисăм—кăпиталисăмăн ԓи çÿлти сыпăкĕ» йатлă кĕнекйнԓе.

Тăвăмлăх пур патшалăхсенԓе те пĕр алла йе сахал çын, шултра кăпиталиссен аллипе пухăнса пыраť.

Пысăк претприйаттисем ÿспĕçемĕн вак-тĕвеккисем саланса, пĕтсе пыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем конккурентсинԓе пысăк, шултра хапрăк-савăтсем тупă йÿнĕ таварпа ăмăртма пултараймаççĕ.

Хаԓхи вăхăтра паллăрах, аслă патшалăхсенԓе вак-тĕвек претприйаттисем ним вырăнне те мар.

Претприйаттисен шуԓĕ сахалланса, вĕсем шултраланса пынă çемĕн вĕсене хăйсен таварсен хакĕсене ԓакарас мар тесе калаçса татăлма та çăмăл.

Çапла ĕнтĕ тăвăмлăх пуçтарăнса, шултраланса пыни хăй ÿснĕ майпе хăйех монопполи патне илсе çитерни курăнаť. Мĕншĕн тесен вуншар претприйаттисене пĕр-пĕринпе сăмах татма, килĕшме йăвăрах мар, тепĕр йенԓен; пысăк претприйаттисене пĕр-пĕринпе тавлашма йăвăрланса çитет, çак вара вĕсене пушшех монопполи йенне çавăраť. (Ленин).*

Çак вара кăпиталиссем килĕшÿсем туса монопполи пĕрлешĕвĕсем—карттеԓ, çинтиккат, трест, контсерисем йрĕксĕрех тутараť. Монопполиллĕ пĕрлешÿсем кăпиталисла патшалăхăн еккономĕкпа политтĕк пурнăçĕнԓе хуçа пулса тăраççĕ.

Кăпиталиссен монопполиллĕ пĕрлешĕвĕсем пысăк услам илесшĕн хăйсен таварĕсене сутма май кирлĕ çĕршывсене хăйсем хушшинԓе валеçеççĕ, ԓĕрĕ тавар пур вырăнсене туртса илеççĕ, таварсем çине пысăк хак хураççĕ, çулйĕрсене, хатĕрсене алла илеççĕ, вĕсен тытăмне кĕмен претприйаттисене, пĕрлешÿсене пăхăнтарма, йе пĕтерме тĕрлĕ майсем шыраççĕ, пĕтереççĕ те.

Монопполиллĕ кăпиталисăм вăл—çĕрекен кăпиталисăм.

Кипиталисла промышлĕннăçра пуринԓен ытла вăрçă промышлĕннăçĕ хытă малалла кайаť, мĕншĕн тесен кунта мĕн пур çĕнĕрен шухăшласа тупнă йапаласем хăвăрт вырăн тупаççĕ.

Вăрçă хыççăнхи кăпиталисăм технĕккă ÿсĕмĕ вырăнне кăпиталисла ратсионалисатсишĕн кĕрешет. Кăпиталисла ратсионалисатси—тăвăм ĕç йĕркине ĕçлекене вăй ытларах хуртарса тупăш ытларах илесшĕн тăрăшаť. Кăпиталисла ратсионалисатси ĕçлекен пурнăçне йапăхлатаť: унăн ĕç укçи ԓакаť, ĕç кунĕ тăсăлаť, ÿтпÿ-вăй ԓас пĕтет. Кунпа пĕрлех нумай çынна ĕçсĕр хăвараť.

---

*) Ленин çырнине пĕтĕмпех „Империалисăмăн кăпиталисăмăн ԓи çÿлти сыпăкĕ" йатлă кĕнекерен илнĕ. (Миххайлăв куçарнă).

## Моноппoли кăпиталисăм хирĕçӳсене пĕтермест.

Моноппoли кăпиталисла тăвăмăн йĕркесĕрлĕхне, плапсăрлăхне, криçиспа конккурентсине пĕтермест. Пĕтерме мар, вăл вĕсене малтанхинђен те хытăрах çивĕђлетет, йапăхтараť.

«Криçĕссене карттелсем пĕтрĕç тени, вăл пуршуаçи екконоmçисен кăпиталисăма мĕнле те пулин тĕрĕсе кăларас шутпа саракан йумах. Криçĕссене пĕтерме мар, ун вырăнне хăш-хăш промышлĕннăçра пулакăн моноппoлисем пĕтĕм кăпиталисăмăн йĕркесĕрлĕхне вăйлатса йараççĕ. Кăпиталисăмăн паллă çĕрĕçĕпе промышлĕннăç хушшинђи хирĕçӳсем тата ытларах ӳсеççĕ» (Ленин).

Империалисăм вăхăтĕнђе йалхуçалăхĕ промышлĕннăçран кайа йуласси тата вăйлăрах пулаť, промышлĕннăçăн уйрăм пайракисем мала кайса ыттисене хĕсce кăлараççĕ тăвăмлăх йĕркесĕрлĕхĕ ӳсет.

Кунсăр пуçсăр тата ĕçхалăхĕн илӳ пултаруллăхĕпе тăвăм вăйĕ хушшинђи хирĕçӳ тарăнланаť; ĕçхалăхĕн илӳ пултарулăхĕ (ĕç укçи ђакнă май, ĕçсĕрсен шуђĕ ӳснĕ май т. ыт.) ђакаť, кăпиталисла претприйаттисен тăвăмлăх пултаруллăхĕ çаплипех йе ӳсет те. Çапла ĕнтĕ империалисăм вăхăтĕнђе мĕн пур кăпиталисла хуçалăх çиçтеминђе выртакан шалти хирĕçӳсем хытă çивĕђленсе пыраççĕ, вăл клас çапăçăвне çивĕђлетсе кăпиталисăм пĕтессине хăвăртлатаť.

## Панксемпе вĕсен çĕнĕ ĕçĕсем.

«Панксен малтанхи тĕп ĕçĕ вăл укçа тӳлес ĕçе туса тăрасси. Çав майпа панксем ахаљ выртакан кăпитала услам паракан кăпитал туса йараççĕ, тĕрлĕ укçа тупăшсене пуçтарса кăпиталçăсене ĕçлеме параççĕ.

Пысăк панксем пĕђеккисене хĕстерсе кăлараççĕ, аксисене укçалла илнипе йе улăштарса илнипе, пĕђеккисен кăпиталне пайа кĕнипе т. ытти майсемпе вăйлăраххисем ваккисене хăйсен ушкăнне кĕртеççĕ. Панксем контсентратсиленеççĕ.

Панксем контсентратсиленсе сахалланса йулса пĕр-пĕринпе моноппoли тĕлĕшпе килĕшсе панк тресĕсем тума тăрăшаççĕ.

Панксен ĕçĕсем ӳссе кайсан моноппoлиссем кăпиталисăмăн промышлĕннăçпа суту-илӳне хăйсен аллине çавăрса илеççĕ. Вĕсем укçа-тенкĕ кивçен ытларах йе сахалтарах панипе т. ыт. майсемпе те кăпиталçăсене хăйсем кăтартнипе ĕçлеттерме пулăшаççĕ, унпа тем тума та пултараççĕ.

Çапла ĕнтĕ промышлĕннăç кăпиталĕ панк аллине лекет. Панк кăпиталĕпе промышлĕннăç кăпиталĕ çыпăçса пĕтĕçсе кайаççĕ. «Хаљхи кăпиталисăм опђăствинђе пĕтĕм ĕçе темиçе çĕр финанс королĕсем анђах хăйсем хушшинђе валеçсе туса пыраççĕ» (В. Ленин).

Çакă ĕнтĕ панксен империалисăм вăхăтĕнђи çĕнĕ ĕçсем.

## Кăпитала йут çĕре куçарса усă курасси.

Кăпиталисăм ђух тĕрлĕ претприйаттисем, тĕрлĕ промышлĕннăçсем, çĕршывсем пĕр пек мар, сикђевлĕ ӳсеççĕ. Малта пыракан çĕршывсенђе (технĕккă мала кайнă май ĕçхалăх пурнăçĕ йапăхланса пыраť, кăпиталçăсем пысăк тупăш илеççĕ) кăпитал ытлашши тулса кайаť.

Кайа йулнă çĕршывсенђе услам питĕ пысăккă пулаť, мĕншĕн тесен унта ĕç вăйĕ нумай, ĕç укçи сахал тӳлемелле, çĕр хакĕ йӳнĕ. Кăпитала усламлă вырнаçтарас тесе моноппoлисен ирĕксĕрех кăпитала йут çĕре кăлармалла пулаť. Кăпитала йут çĕре кăларса империалисла патшалăхсем темĕн ђухлĕ çĕршыва,

колонисене, çурколонисене, йăхăнса, тăракан çĕршывсене пусмăрласа пурăнаççĕ. Империалисăм вăрçиҫҫен кăпитал йут çĕре, кайа йулнă патшалăхсене, виçĕ империалисла патшалăх—Анкли, Францси, Кермани 200 мĕлйарт франка йахăн кăларнă. Вăрçă хыççăн кăпитал йута кăларас тĕлĕшпе ÇАПШ мала тухрĕ. ÇАПШ, Анкли, Францси тĕнҫе панккирĕсем пулса тăраççĕ.

Колонисене, çурколонисене хывнă кăпитал пысăк усă парса кăпиталçăсене нимĕн ĕçсĕр куппон касса кăна пурăнма май параť.

Империалисла патшалăхсем çурколониллĕ, колониллĕ, кăпитал хывнă çĕршывсенҫе тĕп, никĕс пулакан промышлĕннăç пайракисем ÿсессине йури ҫарса тăраççĕ.

## Аслă патшалăхсем тĕнҫене хăйсем хушшинҫе валеçсе илнĕ.

Кăпиталисла патшалăхсем хăйсем хушшинҫе тĕнҫе çĕрне валеçсе пĕтернĕ, анҫах вăл ăна тепĕр хут валеçме пултарас çуккине пĕлтермест. Тĕнҫене пирвайхи хут валеçсе пĕтернĕ, урăх «хуçасăр» çĕр çук, малашне ĕнтĕ пĕрре валеçнĕ çĕре тепĕр хут валеçмелле пулаť; хаҫ пĕр хуçаран тепĕр хуçана куçасси анҫах йулҫĕ.

Империалисла патшалăхсем çĕнĕ рынăксемшĕн, ҫĕрĕ тавар вырăнĕсемшĕн, кăпитал вырнаçтармалли тупăшла вырăнсемшĕн çунаççĕ, вĕсемшĕн çапăçаççĕ. Çавăнпа империалисла патшалăхсем çĕнĕ рынăксем туртса илессишĕн, çĕнĕ çĕршĕн хытă тăрăшаççĕ, вăрçăра хăйне хирĕçме амантма урнă пек вăрçă хатĕрĕсем устереççĕ. Йапони Киттайăн Манҫшурине туртса илни кунта питех те лайăх кăтартаť.




1914—1918 çç. вăрçă умĕн тĕнҫе валеçĕнсе тăни.

## Ҫĕрĕ таваршăн çапăçни.

Империалисла патшалăхсем ҫĕрĕ тавар пуйанлăхне пурте пĕр пек илеймен, çавăнпа вĕсем ăна каллех вăрçăпа валеçесшĕн. Ҫĕр таварсенҫен ҫи пысăк вырăн йышăнакан нехтă тĕнҫере пур çĕрте те çук (таплитсă пăх). Çĕркăмрăкпе тимĕр рути те пур патшалăхра та мар, ытти пуйанлăхсем те çавăн пекех.

Нехтăпа çĕркăмрăк, тимĕр рутисемшĕн империалисла патшалăхсем хушшинҫе вăйлă çапăçу пырат: Йапони Манҫшурине—нехтăпа çĕркăмрăк, вăрман пуйанлăхĕшĕн туртса илнĕ, Францси, Керманин Рур оплăçне çĕркăмрăкĕшĕн туртса илнĕ, т. ыт. те.

Тимĕр рути 80 проҫ.—ÇАПШ, СССР, Прачилинҫе; Нйу-Фаунтленра Францсире выртат.

Минерал, меттал, ўсен-тăран, ҫĕрĕ таварсем нимрен ытла колониллĕ çурколониллĕ, пăхăнакан çĕршывсенҫе нумай выртаççĕ. Çавăнпа та империалисăмла патшалăхсем çав çĕрсене çавăрса илесшĕн çапăçаççĕ. Тепĕр йенҫен колонире кăпитал хывни пысăк тупăш парат, промышлĕннăç таварĕ сутма пысăк рынăк пулса тăрат.

## Кăпиталисăм сикҫевлĕ ўсет.

Кăпиталисăмăн хирĕçў кăларакан тепĕр тĕп саккунĕ вăл—уйрăм патшалăхсем, хуçалăхăн уйрăм пĕр пек ўсменни, вĕсен аталанăвĕ сикҫевли. Кăпиталисла уйрăм патшалăхсем тĕнҫе хуçалăхĕнҫе йĕркеллĕ, пĕр-пĕрне кансĕрлемесĕр ўсмеççĕ; пĕр-пĕр хуçалăх пайракĕсем мала тухаççĕ, ыттисем хĕснипе кайа йулаççĕ; пĕр патшалăх ўссе теприне хĕсĕрлесе кăларат, пĕрмай çапăçу пырат. Кăпиталисăм сикҫевлĕ ўснине çак тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

АНКЛИ ЎСĔМĔ (проҫ.)

| | 1913 ç. | 1928 ç. | 1929 ç. |
|---|---|---|---|
| Çĕркăмрăкĕ | 100 | 82,6 | 89,7 |
| Ҫукун | 100 | 64,4 | 73,9 |
| Çĕрмамăкне ĕçлени | 100 | 67,9 | 55,5 |

ТĔРЛĔРЕН ПАТШАЛĂХСЕМ ПРОТУКСИ КĂЛАРНИ ЎСĔМĔ (%).

| | 1913 | 1927 | 1929 |
|---|---|---|---|
| ÇАПШ | 100 | 207 | 230 |
| Францси | 100 | 110 | 134 |
| Кермани | 100 | 98 | 100 |
| Анкли | 100 | 96 | 98 |

Кăпиталисăмăн уйрăм патшалăхсенҫе те патшалăхсемпе патшалăхсем хушшинҫе йепле килĕшейми хирĕçусем пуррине епĕр малта куртăмăр. Империалисăм саманинҫе вăл хирĕçусем татах çивĕҫленеççĕ, мĕншĕн тесен рынăкшăн, ҫĕрĕ йапаласем-вырăнĕшĕн малтанхи пек уйрăм кăпиталçăсем мар пысăк кăпиталисла пĕрлешўсем çапăçаççĕ. Çак кăпиталисла патшалăхсем, тăраççĕ, çавăнпа тĕнҫе хуçалăхĕ килĕшейми хирĕçўллĕ, кирек хăш вăхăтра та кăпиталисла патшалăхсем хушшинҫе пĕрпĕр территторине алла илесшĕн вăрçă пулма пултарат.

## Кăпиталисла çĕршывсен тĕп тĕсĕсем.

«Кăпиталисăм пĕр пек ўсмеҫ, вăл сикҫевлĕ ўснĕ пирки империалисăм саманинҫе вăл сикҫевлĕх хайарланса пынă пирки, тĕрлĕ çĕршывсенҫе кăпиталисăм тĕрлĕ çĕршывра тĕрлĕ таран пиçсе çитнĕ сыпăксем пулса тăҫĕç, çав вара револютси протсесĕшĕн тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ, хăй майлă условисем туса хуҫĕ» (Комуниссен Интернатсионалĕн прокрамĕ).

Кăпиталисла çĕршывсене виçĕ тĕп тесе уйăрма пулат: 1 кăпиталисăм питĕ ўссе кайнă çĕршывсем (ÇАПШ., Кермани, Анкли, Францси, т. ыт.) унта тăвăмлăх вăйĕсем питĕ хăватлă тăвăмлăх пуçтарăнса, ҫăмăртанса çитнĕ, вак ху-




Тĕнĕри енеркеттĕк вырнаçăвĕ.




Тĕнĕри меттал тупăнăвĕн картти.




Тĕнҫери тырă тăвамĕн картти.




Тĕнчен вăрманлă районĕсем.




.Тĕнђерй выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетӳ районĕсем.

ҫалăхсем сахалланса пыраҫҫĕ, тытăм пуршуаллă темократти аллинҫе. Ҫав ҫĕршывсенҫе прокрам тӳрех пролеттари тиктаттури патне куҫма хушать.[1])

Ҫакăн пек пĕр ывăҫ империалисла патшалăхсем тĕнҫе хуҫалăхĕнҫе пуҫ пулса темĕн ҫухлĕ колониллĕ, ҫурколониллĕ пăхăнса тăракан ҫĕршывсене пусмăрласа, ĕмсе пурăнать, вĕсене аталанассине ҫарса тăраҫҫĕ.

Ҫапла ҪАПШ, Анкли Франтси, Кермани, Иттали лаптăкĕшĕпе тĕнҫере 8,3% анҫах йышăнаҫҫĕ пулсан та тĕнҫери тăвăмран

| | | |
|---|---|---|
| Нехтă | 72 проҫ. | |
| Кăмрăк | 79 „ | |
| Ҫукун | 80 „ | |
| Хурҫă | 83 „ | |
| Пăхăр | 58 „ | |
| Машшин тăвасси | 90 „ | йышăнаҫҫĕ. |

2) Кăпиталисăм вăтам ӳснĕ ҫĕршывсем (Испани, Португали, Полҫă, Венкри, Палканри ҫĕршывсем т. ыт.). Кунта йалхуҫалăхĕнҫе феоталисăм йулашкисем пурха, влаҫ пуршуаллă-темократти аллине пĕтĕмпех куҫайман.

3) Колонисемпе ҫурмалла колониллĕ ҫĕршывсем (Киттай, Инти, Интонеҫи т. ыт.) тата пăхăнса тăракан ҫĕршывсем (Аркентина, Праҫили, т. ыт.). Кусенҫе интустри анҫах ӳсме пуҫланă, хăш ҫĕрте ҫылайах та ӳснĕ; промышлĕннăҫ, суту-илӳ, панк, претприйаттийĕсем ҫи хăватлисем, транспăрт, ҫĕр латтифунтийĕсем тата плантатсийĕн тĕп хатĕрĕсем т. ыт. йут ҫĕршыври империалиссен аллинҫе.

Колонипе ҫурколониллĕ ҫĕршывсенҫи ĕҫхалăхĕ йут империалиссенҫен, кивĕ феоталлă йĕркесенҫен, суту-илӳ кăпиталĕ йенҫен пусмăр тӳсет, хресҫен масси ҫаралать, ҫухăнланать, тем ҫухлĕ халăх выҫăпа пĕтет. Промышлĕннăҫ йапăх аталаннă май ҫука йулнă хресҫенсем ĕҫ тупаймаҫҫĕ. Ĕҫлекен клас та йӳпĕ ĕҫ вăййĕ нумай пирки питĕ хытă пусмăр тӳсет, 12—16 сехет ĕҫлет, ĕҫ укҫи тăранмаллăх та илеймест т. ыт. те.

Халĕ ҫивĕҫленсе пыракан економĕк криҫĕсĕ нимрен ытла колонисенҫе хытă сисĕнтерет. Кăпиталисăм криҫĕс йывăрлăхне ĕҫлекенсемпе, колонири ĕҫ масси ҫине тийет, вĕсен шуҫĕпе тухма тăрăшать. Ҫавăнпа економĕк криҫĕсĕ май ĕҫлекенсемпе хресҫенсен револутси йухăмĕ те вăйланса, хăпарса пырать.

Тата питĕ кайа йулнă ҫĕршывсем пур. Вĕсем колониллĕ майлă ҫĕршывсем (Афрĕккăри хăшпĕр вырăнсенҫе); халăхăн нумайăшĕ йăхăн пурăнаҫҫĕ, тара кĕрĕшсе ĕҫлекенсем ҫук, йе ҫукпа пĕрех, натси пуршуаҫиĕ ҫукпа пĕрех, йут ҫĕршыври империалисăм кунта ҫи малтан ҫар вăйĕпе ҫĕрсене турта-турта илет.

«Ҫавăн пек ҫĕршывсенҫе натсийе ирĕке кăларасшăн ҫапăҫасси тĕп вырăн йышăнса тăрать. Пролеттари ҫĕршывĕсем вăйлă пулăшас пулсан, кунта натси востанийĕпе вăл ҫĕнтерни, кăпиталисăм виттĕр тухмасăрах сотсиалисăма ҫул уҫма пултараҫҫĕ» (К. И. П.)

## „Ултра—империалисăм“ тата „орканисатсиленнĕ кăпиталисăм“ теорийĕсем.

Тĕнҫери сотсиал-темократти империалисăм саманинҫе кăпиталисăм монополиллĕ пĕрлешӳсем ӳсинҫен, рынăка монополи сойусĕсем валеҫсе илинҫен ҫапла вăхăт тăваҫҫĕ: кăпиталисăм империалисăм саманинҫе ҫапăҫусăр, планлă, йĕркеллĕ, криҫĕссĕр ҫул ҫине тухать, ҫак ҫул ăна конккурентсине, вăрҫăсене пĕ-

---

1) Патшалăхсене тĕрлĕ пайсене пĕтĕмпех „Комунисла Интернатсионалăн Прокрамĕ“ йатлă кĕнекерен илнĕ.

терсе тĕнђе тресђĕ туса сотсиалисăм патне илсе пыраť. Çакăнтан кăпиталисăма сыхламалла, ăна хирĕç çапăçни кирлĕ мар, тесе сўпĕлтетеççĕ Каутскине сотсиал-темократсем.

Каутски империалисăм хирĕçĕвĕсен тарăнăшне кăтартса парас вырăнне вĕсене пытарнă, шăлса йакатса хунă.

Çакăн патнех Пуххарĕнăн «орканисатсиллĕ кăпиталисăм» теорийĕ те пыраť. Ку теори—уйрăм патшалăхсенђе монополиллĕ пĕрлешўсем ўсни тăвăмлăх йĕркесĕрлĕхне, конккурентсисене, криçĕссене пĕтерет, кăпиталиссăм орканисатсиленет; планлăх, йĕркеллĕх пулаť, хирĕçўсем патшалăхсем хушшинђе çеç çивĕђленсе пыраççĕ,—тесе вĕрентет.

Халђхи пур патшалăхсене те çавăрса илнĕ еккономĕккă криçĕсĕ ку теори йăнăшшине вăл оппортунислине питĕ лайăх кăтартаť.

Шултра монополиллĕ пĕрлешўсем ўсни уйрăм патшалăхри шалти конккурентсине пĕтерме мар çивĕђлетет, тарăнлатаť, мĕншĕн тесен промышлĕннăçпа йалхуçалăхĕ кăпиталисла патшалăхсенђе пĕр пек ўсмеççĕ, вĕсем сикђевлĕ ўсни кăпиталисла хуçалăхăн ирĕксĕрлĕхне ўстерет.

## Кăпиталисăм пĕтесси.

Империалисăм пĕтĕм тĕнђипе финанс кăпиталĕн сăнђăрĕсемпе, йуппа, высçлăхпа çавăрса илет; пĕтĕм çĕршыв, пур халăх, рассă пролеттарийĕсене хăйĕн пусмăрлăхне ирĕксĕрлесе кĕртет; пролеттариата експлуаттатсиленине тем пек хайарлатса çитерет; влаçа тўрех илес ĕçе пролеттариат умне кăларса тăратаť; ĕçлекенсене патшалăх ђиккисене, натси, кулђттур, ђĕлхе йе рассă уйрăмлăхне, арçынне-хĕрарăмне, професçине мĕнне пăхмасăр,—пĕр пĕтĕм тĕнђери пролеттарисен интернатсионаллă çарне пĕрлешмелле тăваť. Çапла вара империалисăм сотсиалисăм тума кирлĕ маттерйаллă условисене туса пĕтерет; пролеттариата ирĕксĕрех пĕтĕм тĕнђери ĕçлекенсен кĕрешў йулташлăхне туса пĕрлешмелле тăваť,—хăйне вилĕм шăтăкне пытаракансен çарне ђăмăртаса пĕрлештерет.

Империалисăм самани кăпиталисăм хирĕçĕвĕсене тем пек аслăлатса пыраť: вак кăпиталиссем вырăнне конккурентсинђе шултра монополи пĕрлешўсем çапăçаççĕ, криçĕссем темиçе çĕршывра, тĕнђипе пулаççĕ, тĕнђе вăрçисем пулса пыраççĕ, малтан уйрăмăн, сахалăн пуршуаçине хирĕç тухакан пролеттари пĕтĕм тĕнђипе тĕнђе пуршуаçине хирĕç тухакан пулђĕ. Кунсăр пўçсăр империалисăм, финанс кăпиталăн вăйне хирĕç икĕ револђутсиллĕ вăй орканисатсиленет: кăпиталисăм патшалăхĕнђи ĕçлекенсемпе вĕсем йертсе пыни хыççăн пыракан йут кăпитал пусмăрланă колони халăхĕсем. Колониллĕ çĕрсенђи халăхсем ирĕке тухасшăн çапăçаççĕ, вĕсем кăпиталисла патшалăхсенђи пролеттариатпа пĕрле кăпиталисăма хирĕç çапăçаççĕ.

«Империалисăм самани хуçалăха сотсиалисăм валђи хатĕрлесе çитернипе (тăвăмлăх хатĕрĕсене контсентратсилени, ĕçе тем пек опђăлани, ĕçлекенсен орканисатсийĕсем ўсни) пĕрле аслă патшалăхсем» хушшинђи хирĕçўсене хайарлатса çитерет, вăрçăсем кăлараť; вара вăл вăрçăсем пĕр пулса тăракан тĕнђе хуçалăхне аркатса салатса йараççĕ. Çавăнпа та империалисăм вăл çĕрсе çитекен, вилекен кăпиталисăм. Вăл—кăпиталисăм ўсĕмĕн йулашки тапхăрĕ. Вăл тĕнђипе сотсиалисăм револђутсийĕ пуласси умĕнђи кун.

Çапла ĕнтĕ, пролеттари револђутсийĕ пуласси вăл кăпиталисăм, пуринђен ытла унăн империалисăм тапхăрĕ, ўсninђен тухаť. Кăпиталисăм çиçтемин пĕ-

тĕмпех пĕтесси çитет. Финанс капиталĕн тиктаттури револютсин хумĕпе пĕтет, унăн вырăнне пролеттари тиктаттурĕ влаçа аллине çавăрса илет, сотсиалисăмла опђă, сотсиалисăмла хуçалăх тума тытăнаŭ.

## Кăпиталисла патшалăхсем.

### Çурçĕр Амерĕкри Пĕрлешŭллĕ Штатсем

1. ÇАПШ-сене карттă çинђе тупăр.
2. Вăл хăш патшалăхсемпе, мĕнле çĕрсемпе ђикĕленнине пĕлĕр.
3. Километрпа, кратăспа ÇАПШ çурçĕртен кăнтăралла, хĕвелтухăçĕнђен хĕвеланăçнелле мĕн ђухлĕ тăсăлнине шутласа пĕлĕр.
4. Тинĕс çинђе мĕнле шыв йухăмĕсем пур, вĕсем ÇАПШ климăтне мĕнле улăштараççĕ.
5. Релйефа, шывсене, кŭлĕсене пĕлĕр.
6. Климăт уйрăмлăхсене каласа кăтартăр,

### Çутçанталăк условийĕсем.

ÇАПШ 7.840 тваткăл километр çĕр талккăш йышăнаççĕ. Унта 118,6 мĕлйун çын пурăнаŭ, кашнă тăваткăл километра 15 çын тивет. Тĕп хула— Вашинктон. ÇАПШ-сен аллинђи колонисем лаптăкăшĕ—1.931,8 пин тăваткăл километр. Унта 15 мĕлйун çын пурăнаŭ. Колонийĕсемпе ÇАПШ-сем пурĕ—9,771,8 пин тăваткăл километр çĕр йышăнаççĕ, 133,6 мĕлйун çын пурăнаŭ.

ÇАПШ-сен Атланттĕк оккеанпа Лăпкă окçеан хĕррисенђе кавађсем пумай. Лăпкă оккеан тăрăх ÇАПШ çулталăк хушшипех Хĕвелтухăçпе Кăнтăр Аçипе, Атланттĕк оккеанĕ тăрăх Хĕвеланăç Йевроппăри патшалăхсемпе çыхăну тытма пултараŭ.

ÇАПШ хĕвелтухăç йенĕ тŭремлĕ. Атлантти оккеанĕнђи катарах мар çеç çŭллех мар Аппалађ тăвĕсем выртаççĕ. Аслă кŭлĕсем таврашĕнђе сăртлă вырăнсем тĕл пулаççĕ. Хĕвелтухăç тŭремлĕхĕ ÇАПШ лаптăкĕшĕн 2—3 пайне йышăнаŭ. Ађаскă çĕрĕ питĕ сăртлă, вĕсен тăрринђе йур выртаŭ.

ÇАПШ-сен климăт вăтам кăнтăрти районсенђе климăт тропик çывăхĕнђи майлă. Нŭрĕклĕх ђи нумай Лăпкă окккеан хĕррипе кăнтăралли районсенђе ŭкет. Атлантти оккеан хĕрррнђен хĕвелтухăçнелле кайнăçемĕн нŭрлĕх (çăмăр) сахалланнăçемĕн сахалланса пыраŭ, хĕвеланăçри тусем патнелле вара çăмăр питех те сахал çăваŭ. Кунта вара тĕрлĕрен шăвармалли майсемсĕр çĕрĕçлеме те май çук.

ÇАПШ. Çĕр айĕнђи пурлăх питĕ нумай. Ун 1927-мĕш çулта çĕркăмрăкĕ пĕтĕм тĕнђерин çурри йахăн, нехтă—72,1%, тимĕр рутисем 1926 çулта—44,6%; ылттăн, кĕмĕл, пăхăр тата ыттисем те нумай, «шур кăмрăк» (шыв вăйĕпе усă курасси») 11% йышăнаŭ.

# I. Кăпиталисăм питĕ ӳссе кайнă çĕршывсем (империалисăм тĕп вырăнĕсем).

Еккономĕк тĕлĕшĕнҫен ÇАПШ ытти кăпиталисла патшалăхсем хушшинҫе пысăк вырăн йышăнаççĕ. Промышлĕннăç, йалхуçайстви, транспăрт тата кăпитала йут çĕре кăларассипе вăл тĕнҫере пĕрĕмĕш вырăн йышăнаť. Тĕнҫе тăвамĕнҫен 45% кăмрăк, 50% ҫукун, 48% хурçă, 54% пăхăр, 66% нехтă, 17% тулă, 75% куккурус, 38% тапак, 50% ытла çĕрмамăкĕ Амерĕкре тăваççĕ. Тĕнҫери ылттăнтан çурри ытла, ҫукун çулăн $^2/_3$ пайĕ Амерĕкре.

Опҫăпа еккономĕк, историллĕ фактăрсем уйрăмăнах çыхăннипе тата пур тĕслĕ çутçанталăк пуйанлăхĕсем пурри Пĕрлешӳллĕ Штатсене кĕске вăхăтрах еккономĕкка йенҫен вайлатрĕç.

### ÇАПШ-сен ӳсĕмĕнҫи историллĕ сăлтавсем.

ÇАПШ-сен ӳсĕмĕнҫи уйрăмлăхĕ вăл унта феоталисăм йĕрки пулманни. (Кăнтăрти хăшпĕр районсенҫе çеç вăл пулнă, унта халиҫҫенех те тăраť). Çак уйрăмлăх вăл Амерĕкка кăпиталисăмне пĕр ҫăрмавсăр, хăвăрт ӳсме май паҫĕ, тепĕр йенҫен тата Амерĕкка кăпиталисăмĕ ваҫҫи патшалăхăн ирĕклĕ çĕр нумай пулнă.

Çĕре укçасăрах илме май паракан саккун кăларсан йалхуçалăхĕ арентăран хăтăлнă. Ирĕклĕ, çĕрĕçĕнҫе пухăннă кăпитал çĕрĕçне йусама, çитĕнтерме кайнă. Ирĕклĕ çĕр пĕтсен каллех арентаттăрсем ӳсеççĕ, çĕр хакĕ хăпараť, фермĕрсен тупăшĕ панксене, сутăçсен аллипе тата ытти çĕре те кайаť; фермĕрсем тупăш сахалрах илме пуçлаççĕ, йе паҫах та илмеççĕ, нумайăшĕ, вакраххисем пĕтсе пыраççĕ.

Еç вăйĕ сахалли, вăл çитменни, ĕç вăйшĕн расхут ӳсни, конккурентси тавара йӳнелтернĕ, машшинсемпе ытларах усă курас ĕçе вăйлатнă. Çавăнпа вăл промышлĕннăçа, йалхуçалăхне хытă мехханисатсиленĕ, автоматтисатсиленĕ.

### Промышлĕннăç.

ÇАПШ-сен халăх хуçалăхĕн уйрăмлăхĕ вăл—промышлĕннăç мехханисатсиленнипе проиcвотствă контсентратсиленни. Технĕкка тĕлĕшĕнҫен ÇАПШ ытти кăпиталисла патшалăхсенҫен малта тăраť. Промышлĕннăç таварĕ унта йалхуçалăх таварĕнҫен 4 хут ытларах.

Енеркеттиккăри (електритсă вăйĕпе усă курасси) технĕкка ӳсĕмĕ (пĕтĕм промышлĕннăçăн никĕсĕ) ăна питĕ мала йаҫĕ. Мехханĕкле вăйпа усă курас тĕлĕшрен вăл Керманипе Анкли патшалăхсенҫен 5 хут маларах тăраť.

Çĕркăмрăкĕ кăларассипе Амерĕкка тĕнҫере пĕрĕмĕш вырăн йышăнаť. Ăна кăларасси мехханисатсиленсе пырса ĕç тухăçне хăпартаť. Пĕҫĕк шахтăсем, кивĕ машшинлисем кайа йулса пăрахăçа тухаççĕ, пĕтеççĕ.

Шыв вăйĕпе усă курса електритсă кăларас йенҫен те Амерĕкка кайарах мар. Електритсă вăйĕ тупса унпа усă курасси йенҫен вăл пĕтĕм тĕнҫери ытти патшалăхсем пĕрле усă курнинҫен те ытларах тупаť.

Нехтӑ та еперки (вӑй) тупнӑ ҫӗрех кайаѓ. Нехтӑ тупассипе вӑл ђи малти вырӑнта. Транспӑрт ӳссе пынӑ май, нехтӑ тӗнђери империалисла патшалӑхсене ҫапӑҫтаракан йапала пулса тӑраѓ.

Анђах йулашки ҫулсенђе економӗккӑ криҫӗсӗ сарӑлса пынӑ май Америкре нехтӑ тупас ӗҫ ђакса пыраѓ. Шалти рынӑк хӗсӗннӗ май вӑл нехтине пиҫта ђикме аптӑраѓ, тепӗр йенђен Кӑнтӑр Америкри йӳнӗ нехтӑ Америк нехтипе хытӑ ӑмӑртаѓ.

Електротехнӗккӑ промышлӗннӑҫӗпе те Пӗрлешӳллӗ Штатсем тӗнђере пӗрӗмӗш вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Ку промышлӗннӑҫ контсентратсиленсе пыраѓ. Икӗ монополиллӗ пӗрлешӳ—«Пӗтӗм Електритсӑ Кампанипе» Веҫтинкаус контсерни ҫакӑн ђухлӗ протукси параҫҫӗ: 77% кенераттӑр, 77% трансформаттӑр, 70% мотторпа унӑн пайӗсем, 60% лампӑђкӑ, 61% виҫмелли тӗрӗслемелли хатӗрсем. Пӗрӗмӗш вырӑн «Пӗтӗм Електритсӑ Кампани» йышӑнаѓ. Вӑл хайӗн патшалӑхӗнђе анђах мар ытти патшалӑхсем ҫине те аллине ђӑснӑ.

## Ђукун, тимӗр, хурҫӑ тата ытти метталсем.

Тимӗр-тӑмӑр тупас, шӑратас ӗҫпе ҪАПШ малта тӑраѓ. Ђукун, тимӗр, хурҫӑ, пӑхӑр ҫулталӑкри тупни тӗнђери ытти патшалӑхсем пӗрле тупнипе танлашма хӑтланаѓ. Пӑхӑр тупас телӗшпе ҪАПШ иккӗмӗш вырӑн йышӑнаѓ. Тӗнђери тупнӑ ђинккӑран 50%-не, шуртӑхланпа алђуминин 35%-не ҪАПШ-сем тупаҫҫӗ. Ку промышлӗннӑҫра монополиллӗ пӗрлешӳсем хуҫа пулса тӑраҫҫӗ.

Метталпа метталурки промышлӗннӑҫсен тӗп вырӑнӗ—ҫурҫӗрпе-хӗвеланӑҫ йенђи Атлантти оккеан хӗрри, тата Кӳлӗ тавра районсем. Халђи вӑхӑтра урӑх, ирӗклӗ йӳнӗрех ӗҫ вайӗ ытларах ҫӗрелле куҫаҫҫӗ; тӗслӗх Пирминкама кӑтартма пулаѓ.

## Машшин тӑвакан промышлӗннӑҫ.

Пӗрлешӳллӗ Штатсен машшин тӑвакан промышлӗннӑҫӗ пӗтӗм тӗнђен 57%-не йышӑнаѓ, вӑл Керманирен 4 хут ытларах тӑваѓ. Машшин тӑвас промышлӗннӑҫра трактӑр, компайн, автомопил, йалхуҫалӑх машшинӗсем тӑвасси малта тӑраѓ. Тӗнђери 30 мӗлйун автомопилтен 26 мӗлйунӗ Пӗрлешӳллӗ Штатсене тивет. Автомопил промышлӗннӑҫӗпе пӗрле халиђђенех ресинӑ промышлӗннӑҫӗ те хытӑ ӳснӗ. Йулашки ҫулсенђе вӗсене хытӑ хӗстерекен економӗк криҫӗсӗ автомопил тӑвассине ђакарђӗ. Ђи пысӑк автомопил королӗн—Фортӑн тӑвӑмӗ 30% йахӑн ђакнӑ.

## Ҫимӗҫ промышлӗннӑҫӗ.

Ҫимӗҫ промышлӗннӑҫӗ ытти промышлӗннӑҫсем хушшинђе ҫулталӑкри протукси хаклӑхӗпе пӗрӗмӗш вырӑн йышӑнаѓ. Пӗтӗм промышлӗннӑҫран пӗр ашкакай промышлӗннӑҫӗ тунӑ протукси хаклӑхпа 6% йышӑнаѓ. Аш-какай хапрӑкӗсенђе 120 пин ӗҫлекен шутланаѓ. Какай промышлӗннӑҫӗ 7 фирмӑ аллинђе тӑраѓ. Вӗсем ылђӑх пусассипе 65%, кӑпиталӗпе 55% йышӑнаҫҫӗ. Аш-какай промышлӗннӑҫӑн тӗп хули Ђиккако.

ҪАПШ ҫӗрмамӑкӗнђен тӗрлӗрен тавар тӑвакан промышлӗннӑҫ тӗнђере пӗрӗмӗш вырӑн йышӑнаѓ. Технӗккӑ йенђен вӑл промышлӗннӑҫ питӗ малта тӑраѓ. Хӑй тӗллӗн ӗҫлекен станоксене (автоматсене) ӗҫе кӗртни ӗҫ тухӑҫне ҫак ҫирӗм ҫул хушшинђе 6 хут ытларах ӳстерђӗ. Малтан пӗр ӗҫлекен 8 станокпа

ĕçленĕ пулсан, халҫхи вăхăтра 30—35 станокпа ĕçлет, (тепĕр ҫух 70 станокпа та ĕçленисем пур). Пиравăр промышлĕннăç йулашки вăхăталла кăнтăр йенелле ҫĕрĕ тавар, йӳнĕ ĕç вăйĕ патнелле куçаť.

## Промышлĕннăçри монополиллĕ пĕрлешӳсем.

Пĕрлешӳллĕ Штатсенҫи кăпиталиçăмăн уйрăмлăхĕ вăл—происвотствă хăвăрт пĕрлешни.




Ç. А. П. Ш-сен промышлĕннăç картти.

1904 çулта 1%, пысăк, шултăра претприйаттисенҫе 25% ĕçлекен пулнă, вăл претприйаттисем тунă протукси пĕтĕм тăвăмран 38% йышăннă. 1925 çулта 6%, пысăк претприйаттисенҫе 60% ĕçлекен пулнă, 70% протукси тунă. Çав вăхăтра ытти промышлĕннăçла претприйаттисем хăйсен йывăрăшне çухатса, ҫакса пынă. Çапла вара сахал претприйаттисем хулăмланса, контсентратсиленсе пырса ваккисене шултрисем хĕссе кăларса пăрахаççĕ.

Пĕрлешӳллĕ Штатсенҫе трест, консерн, карттелсем аллинҫе пĕтĕм пысăк, шултра претприйаттисем тăраççĕ. Цысăк монополиллĕ пĕрлешӳсем хуçалăхăн пур пайракисене пăхăнтарса тăраççĕ. Пĕрлешӳллĕ Штатсенҫе монополиллĕ пĕрлешӳсене мĕн пур претприйаттисенҫен—$^1/_3$ пайĕ, 86% ĕçлекен, 90% промышлĕннăç протуксийĕ лекет. Çак ҫыхвăрсем Пĕрлешӳллĕ Штатсен хуçалăх пурнăçĕнҫе монополиллĕ пĕрлешӳсем мĕнле вырăн йышăнса тăнине лайăх кăтартаççĕ.

Монополиллĕ пĕрлешӳсем промышлĕннăçра çеç мар, хуçалăхăн пур пайракисем те—панк, ҫукун çул, шыв çулйĕрĕ, суту-илӳ, пурте пĕрлешӳсем тăваççĕ.

Панк кăпиталĕ консентратсиленни промышлĕннăç кăпиталĕпе пĕтĕçни Пĕрлешӳллĕ Штатсенҫе ытти патшалăхрисенҫен те вăйлăрах пыраť. Пĕр ываç пысăк панк хуçисем (Моркан, Рокфеллĕр, Меллон т. ыт.) пĕтĕм Пĕрлешӳллĕ Штатсен хуçи пулса тăраççĕ. Монополиллĕ пĕрлешӳсем ӳссе пыни конккурент-

сине пушпех хытă çивĕҭлетет. Промышлĕннăç уйрăм пайракисем пĕр пек ўсменниц, патшалăхăн уйрăм районĕсем пĕр пек ўссе пыманни вĕçихĕррисĕр пăтраштару туса конккурентсине, хирĕçĕве хытăран хытă çивĕҭлетет. Çакă сылтăм оппортуниссем: монополисĕм ўснĕ май конккуентси, криçĕс пĕтеççĕ, «кăпиталисăм органисатсиленет»—тени тĕрĕс маррине кăтартаť.

### Ыйтусемпе ĕçсем.

1. Ç.А.П.Ш мĕнле колонисем тытса тăраť? ÇАПШ колонисене карттă çинҭе тупăр.
2. ÇАПШ хĕвеланăç пайĕпе хĕвелтухăçне çутçанталăк условийĕсем йенҭен мĕнле уйрăмлăхсем пуррине пĕлĕр.
3. Вĕсен çĕрĕнҭе мĕнле паллăрах тусем пур? Вăл тусем хăш вырăнта выртаççĕ?
4. ÇАПШ-ҭе мĕнле çĕрайĕнҭи пурлăхсем пур, мĕн ҭухлĕ?
5. ÇАПШ историллĕ кĕске вăхăтра хытă ўссе кайни мĕнтен килет?
6. ÇАПШ-сен халах хуçалăхĕнҭе мĕнле уйрăмлăхсем пур?
7. Тĕрлĕрен промышлĕннăçсем мĕнле аталаннă?
8. Промышлĕннăç тăвăмĕ йепле констенстратсилленсе пынине каласа кăтартăр.

# Йалхуçалăхĕ.

Пĕрлешўллĕ Штатсен йалхуçалăхĕ технĕккă йенҭен малта тăраť, унăн таварлăхĕ те пысăк. Пур тунă йалхуçалăхĕ таварĕнҭен 80% рынăка кайаť. Кашнă уйрăм район çутçанталăк условийĕсем тăрăх пĕр-пĕр куҭттурă тăваť. Пĕрлешўллĕ Штатсен йалхуçалăхĕ—кăпиталисла хуçалăх, унта çурри ытла çĕр хуçисем, фермĕрсем тара тытса ĕçлеттереççĕ. Промышлĕннăçри пекех йалхуçалăхĕнҭе те фермĕрсен кулакла—кăпиталисла сийĕ хăйĕн аллине нумай çĕр çавăрса илсе пыраť, вак фермĕрсем ҭухăнланса пĕтсе пыраççĕ.

Пĕрлешўллĕ Штатсен йалхуçалăхĕ вăрçăранпах (1914—1918) тарăн еккономĕкĕнҭен тухаймасť.

## 1. Йалхуçалăх технĕккипе йалхуçалăх криçĕсĕ.

Пĕрлешўллĕ Штатсенҭе, йалхуçалăхĕнҭе трактăр вăйĕ питĕ хăвăрт выҭăхҭĕрлĕх вăйне улăштарса ĕçе кĕрсе пыраť. 1919 çулта 80 пин трактăр пулнă пулсан 1929 çулта 850 пин трактăр ытла ĕçлет. Çав вăхăтрах лаша шуҭĕ 7,5 мĕлйун ҭакнă. Трактăр вăйĕ пурнăçа кĕни ытти çĕрĕçлемелли машшинсене улăштарттараť. Кăпиталисла условисенҭе трактăрсем, компайнсем автомопилсем тата ытти машшинсем йалхуçалăхĕнҭе сарăлни йалти клас хирĕçĕвĕсене вăйлатаť, йалхуçалăх тăвăмне кайалла йараť, йалхуçалăх криçĕсне вăйлатаť, хресҭенсен хуçалăхне çĕмĕрсе ҭухăна кăлараť. Вăл кăпиталисла çиçтемăран килет, мĕншĕн тесен кăпиталисăмра нумай фермĕрсене трактăр, компайн йе ытти пысăкрах йалхуçалăх машшинĕсем илме май çук, вĕсене илме пуйан фермĕрсем кăна пултараççĕ, вак фермĕрсем йухăнса пĕтсе пыраççĕ. Çапла вара йалхуçалăхĕнҭи технĕккăлла улшăну кăпиталисла условинҭе криçĕс илсе килет.

Трактăрсемпе, компайнсемпе усă курма 1000 кектартан кайа мар çĕр кирлĕ. Пĕрлешўллĕ Штатсенҭи фермĕрсеҭнен $^4/_5$ пайĕ 70 кектар таран кăна çĕр тытаççĕ, 3,5% çеç—200 кектар таран. СССР-ҭе çеç тĕнҭери ҭи пысăк сотсиалисăмлă йалхуçалăхĕ—колхоссемпе совхоссем ўснипе малта тăракан йалхуçалăх технĕккине ĕçе йани йалхуçалăхне калама çук пысăк ўсĕм параť, ĕçлекенсемпе колхоçнĕксен пурнăçне лайăхлатма пулăшаť.

Йулашки вăхăтра Пĕрлешўллĕ Штатсенҭе йалхуçалăхĕн уйрăм пайракĕсем пĕр пек ўсмеççĕ: хăш пĕр пайракăсем хытă малалла кайаççĕ, хăшĕсем ĕнтĕ ҭакаççĕ. Тĕслĕх: кайăк-кĕшĕк, сĕт выҭăхĕ, пахҭа-çимĕç ĕрҭетесси малалла

кайнăçемĕн çĕрĕçĕ, какай выḑăхĕ усрасси вырăнтах тăраť, хăшĕсем ḑакаççĕ те. Çакă каллех криçĕсе çивĕḑлетме пулăшаť.

Çўлте асăннă пайраксем пĕр пек ўсменни йалхуçалăх таварĕсемпе усă курасси хытă улшăннипе пулса пыраť.

Пĕрлешўллĕ Штатсен криçĕсĕн тĕп сăлтавĕсем çаксем: йалхуçалăхĕпе промышлĕннăç пĕр пек ўсменни, промышлĕннăç йалхуçалăхне хĕсĕрлесе кăларни, йалхуçалăхне кăпитал нумай кĕни, промышлĕннăçпа йалхуçалăх тавар хакĕсем килĕшменни (йалхуçалăх таварĕсем йўнĕ). Кăпитал пысăккăн, нумайăн йалхуçалăхне кĕни питĕ нумай вак фермĕрсене пĕтерет. Промышлĕннăç таварĕ хакланса пыни, фермĕр хуçалăхĕн таварĕ йўнелни фермĕра пĕтерет: унăн налук тўлеме, панка %% тўлеме хăйĕн таварĕсене йўне сутма тивет. Çав вăхăтрах таварсене турттарнăшăн ыттисемшĕн те укçа нумай тўлемелле.




ÇАПШ-ḑи пĕрлешўллĕ тырăсен картти.

Халḑхи вăхăтра йалхуçалăхĕнḑе те, йалхуçалăхпа промышлĕннăç хушшинḑе те хирĕçўсем вăйланса пыраççĕ. Фермĕрсем те çĕршерĕн-çĕршерĕн ḑăтаймасăр хуçалăхне салатса пĕтерсе, çука йулса пыраççĕ.

## Пĕрлешўллĕ Штатсен еккономĕк районĕсем.

Еккономĕк йенḑен Пĕрлешўллĕ Штатсене пилĕк района валеçме пулаť: Атлантти, Лăпкă оккеан, Вăтам, Кăнтăр, Ту районĕсем.

**Атлантти** районĕ ḑи малтан колонисатсиленнĕ район. Вăл ÇАПШ-сен çурçĕрпе хĕвеланăç, Атлантти оккеанĕ хĕрĕнḑи пайне йышăнаť, еккономĕк тĕп ḑенттăрĕ пулса тăраť. Район питĕ промышлĕннăçли çакăнтан палăраť: кунта хула халăхĕ 75 проḑ. йышăнаť, ÇАПШ-сем тунă протуксинḑен çурри майлă çак район параť, пĕтĕм халăх пуйанлăхĕн $^1/_3$ пайне йышăнаť. Çак районта ÇАПШ-сен ту пурлăх промышлĕннăçĕ 27 проḑ.

Промышлĕннăç вăйлă аталанни йалхуçалăхпе рынăк уçса парса ун сăнпитне хытă улăштарнă. Районăн йалхуçалăхĕнḑи тĕп пайракисем—сат-пахḑа çимĕç тăвасси, сĕт выḑăхĕ ĕрḑетесси. Мĕн пур йалхуçалăх лаптăкĕшĕнḑен çурри ытла выḑăх-ḑĕрлĕх валḑи курăк акасси йышăнаť. Йалхуçалăх протукси пĕтĕмĕшпе тепĕ пекех района сутма кайаť. Тара тытса ĕçлеттересси питĕ пысăк вырăн йышăнаť.

**Лăпккă оккеан** районĕ хĕвеланăç йенђи виçĕ штата йышăнаť: Орекон, Вашинктон, Калифорни. Районăн хĕвеланăç йенĕ тусемлĕ, оккеан хĕррипе лăпамлăк. Лăпкă оккеан хĕррипе çулталăкĕпех шыв шăнман каваңсем нумай. Çав каваңсем тавра пысăк портлă хуласем ÿссе ларнă: Портлант, Оуклант, Сан-Франтсиско тата ыттисем те.

Шыв хĕррипе климăт çемçе пирки пысăк сатсем ĕрђетнĕ. Калифорни штађĕн кăнтăрпа çурçĕр пайĕсенђе нÿрлĕх сахал, çавăнпа кунта шăварса ÿстетересси пысăк вырăн йышăнаť. Кунти фермĕрсен тара тытса ĕçлеттерессипысăк вырăн йышăнаť. Кунта кашнă кектар шăвармалли çĕршĕн тĕрлĕ мелсем туса, машшинсем илсе 25 пин толлăр тăкак тăваççĕ. Вак фермĕрсем, укçъ тенкĕ нумай тытайманнисем, ђухăнланса пыраççĕ.

Еккономĕк тĕсĕ йенђен ку района промышлĕннăçлă теме пулаť. Мĕн пур протуксирен 70 прођ. промышлĕннăçа лекет, йалхуçалăхĕнђе халăх 37 прођ. çеç шутланаť.

**Кăнтăр районĕ.** Кăнтăр районне кăнтăр йенђи 13 штат кĕреççĕ. Мĕн пурĕ 31 мĕлйун çын пурăнаť. Ку район—йалхуçалăх районĕ. Тĕп йалхуçалăх тăвăмĕ: çĕрмамăкĕ, тата рис. Çĕрмамăкпе тапак ђи пысăк вырăн йышăнаççĕ. Тĕнђере тунă çĕрмамăкĕнђен 50 прођ., тапакран—38 прођђăнне çак районта тăваççĕ.

Малтанах, кунта куçса ларсан, йалхуçалăхĕнђе, плантатсисем тума ĕç вăйĕ çитмен. Вара Афрĕкри некăрсене вăйпа илсе килсе ĕçлеттерме тытăннă. Вăл вăхăтра Афрĕккăри некăрсене тытса килсе вĕсемпе суту-илÿ тăвасси ђи тупăшлă ĕç пулнă. Çапла, вăл район ÿсĕмĕ 300 çул хушши вăйпа ĕçлеттерпĕ некр-ђурасен ĕç вăйĕнђен килнĕ. Пысăк çĕрсем çинђе некр-ђура аллисем çĕрмамăк планттатсийĕсем, рис тапак уйĕсем тăва-тăва лартнă. 1861—1863 çулсенђи краштăн вăрçи хыççăн ђуралăха хут çинђе улăштарнă пулин те—некр ђуралăхрах йулнă, мĕншĕн тесен вĕсен хăйсен ĕçлеме нимле ĕç хатĕрĕ те çук. «Ирĕклĕ» патшалăхра халиђђенех некр ађисем уйрăм шкулта вĕренеççĕ, некăрсене ваљђи хуласенђе уйрăм кварттăл, пойăссем çинђе уйрăм вакун, тата пуршуаçин тискер суђĕ. Вĕсене «шур ÿтлисемпе» хутăштармаççĕ, йĕрĕнеççĕ, çын вырăнне хумаççĕ. Акă 1932-мĕш çулăн йанвар уйăхĕнђе сакăр некр ађисене, амерĕк хĕрарăмне тивĕçлемен, çаратма тăнă тесе, айăпсăрах пуршуаçи суђĕ електритсă пукапĕ çине лартса вĕлермелле тунă.

Кăнтăр районĕ ытти районсемпе танлаштарсан йалхуçалăх технĕккă йенђен, кайра. Ђуралăха саккунпа пĕтерсен çĕрхуçисем çĕрсене вакласа тара пуçлаççĕ. Тара илсе ĕçлекен çын кирек йепле пулсан та йалхуçалăхне машшин илсе, çĕре йусаса усă курма пултараймаст. Çавăнпа кутна йалхуçалăх технĕкки те кайра. Технĕккăна малалла йарас йенђен кунта çĕрмамăкĕ акакан ђенттăр малта тăраť (Техас, Оклакома). Вак хуçалăхсем кунта та пĕтсе пыраççĕ. Хаљхи вăхăтра 75 прођ. некр-фермĕрсем хуçалăхĕсене пăрахнă.

Çĕркăмрăкĕпе, тимĕр рутипе усă курса Алапам штађĕ метталурки ђенттăрĕ пулса тăђĕ. Оклакомпа Техас штатсенђе нехтă тупасси пуçланђĕ. Тепĕр йенђен тата пиравăр промышлĕннăçĕ йунĕ ĕç вăйĕ нумай пирки кунта куçма пуçларĕ.

Еккономĕккă криçĕсĕ ку районра та сарăлнă пирки çак йулашки икĕ çул хушшинђе йалхуçалăхпа промышлĕннăç протукси тăвасси иккĕшĕ те ђакрĕç.

**Вăтам район** Миççиçипи шывĕ пуçламăшпе Миççиçипине Миссури, Арканзас, Окайо шывсем йухса кĕнĕ тĕлти талккăшпа йышăнаť. Миççиçипи шывĕ тăрăх çĕр лăпамлă, тÿрем, çурçĕр йенĕпе хĕвелтухăç йенелле—пĕђĕк сăртсем.

Климăт пĕрҫĕллĕ тырăсем тума йурăхлă. Нўрлĕх ҫителĕклĕ, хĕвеланăҫ йенҫе ҫеҫ сахалтарах. Районта хура тăпраллă ҫĕрсем те ҫылай. Ҫакăнтах тимĕр рутисем, ҫĕркăмрăкĕ нумай выртаҭ, ҫавăнпа меттал промышлĕннăҫпе ҫĕркăмрăк кăларасси паллă вырăн йышăнаççĕ.

Ытти промышлĕннăҫсенҫен—аш промышлĕннăҫпе тыр авăртса ҫăнăх тăвакан промышлĕннăҫ малта тăраҭ.

Пĕрҫĕллĕ тырăсенҫен куккурус, тулă ытларах тăваççĕ. Кунти тулă шалти рынăкра ҫеҫ мар, ытти ҫĕре те кайаҭ. Куккурус тăвас йенҫен Вăтам район Пĕрлешўллĕ Штатсенҫе пĕрремĕш вырăнта тăраҭ.

Районта йалхуçалăхĕнҫе ĕçлекен халăх 47 проҫ. шутланаҭ.

**Тулă район** ҫурҫĕртен кăнтăралла тăсăлакан Скалитси тусене пĕтĕмĕшпех йышăнаҭ. Тĕрлĕрен ҫĕрайĕнҫи пурлăхсем (ылттăн, пăхăр, кĕмĕл, нехтă) нумай пирки ту пурлăхсене тупас промышлĕннăҫ хытă ўснĕ. Ту пурлăхсене тупассине пĕтĕм патшалăхра тупнин вуннăмĕш пайне йышăнаҭ. Тўрем вырăнсенҫе выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетсе ҫĕрĕҫĕпе пурăнаççĕ. Районта ҫĕрĕҫлеме йурăхсăр ҫĕр нумай; унта выҫăх-ҫĕрлĕх пăхса усă кураççĕ.

**Ыйтусемпе ĕçсем.**

1. ҪАПШ-сен йалхуçалăхĕ сăн-тĕсне каласа кăтартăр.
2. ҪАПШ-сен йалхуçалăхĕ империалисăм вăрçи иртнĕреннех криҫĕсрен тухайаманни мĕнтен килет.
3. Кăпиталисăм условинҫе йалхуçалăхне пысăк машшинсем кĕни мĕншĕн клас хирĕçĕвĕсене вăйлатаҭ? Мĕншĕн криҫĕс ҫивĕҫленет.
4. Мĕншĕн кăпиталисла условинҫе йалхуçалăх машшинĕсемпе усă ҫителĕклĕ курайас ҫук?
5. Йалхуçалăх пайракисем пĕр пек ўсменни мĕнтен килет?
6. ҪАПШ-сен йалхуçалăх криҫĕсĕн тĕп сăлтавĕсем мĕнлескерсем?
7. ҪАПШ-сен економĕк районсен сăн-тĕсне каласа кăтартăр. Мĕнле районсенҫе промышлĕннăҫ хытă аталаннă? Мĕншĕн?
8. ҪАПШ карттине хăвăр тетраҭсем ҫине ўкерĕр.

## Ҫ. А. П. Ш-ҫи кăпиталисăм ҫиҫтемин криҫĕсĕ.

Кăпиталисăм хавшаса, ҫĕрсе пыни, ăна пĕтĕмĕшпе криҫĕс хуплани халăх хуçалăх пĕтĕмĕшпе, йе уйрăм пайраксем ўсме ҫарăннинҫен, йе кайалла кайнинҫен те паллă.

ҪАПШ-ҫи хуçалăх ўсĕмне илсен унта епĕр акă мĕн куратпăр.

1900—1913 ҫулсем хушшинҫе хурçă шăратасси кашнă ҫул 9 проҫ. ўснĕ. 1920—1929 ҫҫ. 4 хут кайарах—2 проҫ. ўснĕ; тăвакан промышлĕннăҫ 4—5 проҫ. ўснĕскер—2,8 проҫ. ҫитиҫҫен ҫакнă.

Пиравăр промышлĕннăҫĕ, ҫĕркăмрăк кăларасси т. ыт. пĕр вырăнта тăнă, ўсмен.

Уйрăм промышлĕннăҫсем йепле ўссе пыни ҫак таплитсăран курăнаҭ.

Пĕрлешўллĕ Штатсенҫе криҫĕс пуҫламĕшĕ 1929 ҫул нойапĕр уйăхĕ теме пулаҭ, мĕншĕн тесен ун ҫух вĕсен интексĕ кайалла кайма пуҫлаҭ.

| Промышлĕннăҫ пайракĕсем | Ҫулсем | Ўсĕмĕ | Ҫулталăкри ўсĕмĕ вăтам шутпа |
|---|---|---|---|
| Нехтă | 1920—29 | 128 % | 9,6 % |
| Електротехнĕк | 1920—29 | 119 | 10,3 |
| Хурçă | 1917—29 | 21 | 1,6 |
| Ҫукун | 1916—29 | 8 | 0,6 |
| Пăхăр | 1916—29 | 23 | 1,6 |
| Сĕркăмрăкĕ | 1918—29 | 12 | 1,1 |
| Машшин тăвасси | 1920—28 | 32 | 3,5 |
| Тăвакан промышлĕннăҫĕ. (пĕтĕмпе) | 1917—29 | 40 | 2,8 |

1929 çулхи промышлённăç индекĕсне 100 шутласан, 1930 çулта йанварте 94, теккапĕрте 74, 1931-мĕш çулăн авкуст уйăхĕнђе 72 çитиђђен ђакнине куратпăр.

Пĕр çул хушшинђе çеç (1929 çулхипе танлаштарсан çĕркăмрăкĕ тупасси 11,5 прођ., ђукун шăратасси—23 прођ. (11.057 пин тоннă), хурçă шăратасси—28 прођ. (15.280 пин тоннă) ђакнă.

1931 çулхи çиђĕ уйăх хушшинђе (1929 çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан) çĕркăмрăкĕ тупасси—24 прођ. (72.800 пин тоннă), ђукун шăратасси—53% (15.575 пин тоннă), хурçă—51 прођ. (20.280 пин тоннă) ђакнă.

Нехтă тупасси 1930 çулта 1929 çулхинђен нехтă 106 мĕлйун сахалрах тупнă. 1931 çулхи 6 уйăх хушшинђе малтанхи çулхи 6 уйăхринђен 13 прођ. (13 мĕлйун паррељ) сахал тупнă. Хакĕ те нумай ӳкнĕ. Хака хăпартас тесе Олкокам штатĕнђи кĕпĕрнаттăр унта çар йарса нехтă тупассине вăйпа 1929 çулхине çитиђђен ђакарттарнă. Техас, Кансас штатсенђе те çакăн пек вăйпа ђакарнă. Çапла хăтланнипе нехтă тупассине кашнă кун 1 мĕлйун тоннă ђакарнă.

Криçĕс Амерĕкри автомопил промышлённăçне хытă çапрĕ. 1930 çулта автомопил тăвасси 2 мĕлйун ђакнă (40 прођ.).

ÇАПШ-ђе автомопил тăвасси çапла пулнă:

| | 1929 ç. | 1930 ç. | 1931 ç. |
|---|---|---|---|
| | | (пинпе) | |
| Авкуст Йанвар | 4.225 | 2.668 | 1966 |
| Çулталăкĕпе | 5 359 | 3.344 | — |

Çак автомопил промышлённăçĕ ђакнинђен ытти промышлённăçсем ђакасси те паллă. Мĕншĕн тесен ку промышлённăç мĕн пур ÇАПШ-ђе ĕçе йанă хурçăн 18 прођ. ĕçе йарать тĕслĕ меттал—25 прођ., реçинă—85%, кантăк—74 прођђăн. Автомопил тăвас ĕçре кунсăр пуçсăр нумай çитсă—пусма, нехтă, йăвăç таварĕсем кирлĕ.

Пур çĕнĕрен аталаннă промышлённăçсенђе те (кунта електротехнĕк, хими, реçинă, автомопил промышлённăçĕсем кĕреççĕ) епĕр ӳсĕм хытă ђакнине куратпăр.

Çак пĕр май ђакса пыракан ӳсĕмпе пĕрле машшинсем, хапрăк-савăтсем хăйсен пултарулăхĕнђен питĕ кайа ĕçленине кăтартмалла пулать. Автомопил промышлённăçĕ пултарнинђен 28 прођ. кайа ĕçлет, машшин тăвасси—38 прођ., конçервă тăвасси—56 прођ., пăхăр шăратасси 50 прођ., ђинк 50 прођ., сахăр—50 прођ., автомопил промышлённăçĕ—50 прођ., тăхăнмалли тăвасси 20 прођ., йăвăç çурасси—70 прођ. Ытлашши тавар туни ĕçхалăх пурнăçне лайăхлатма кайас вырăнне кăпиталисăм вăхăтĕнђе йапăхлатса пырать. Кăпиталисăм криçĕсран тухас тесе техĕнĕккăна ӳсме, малалла кайма ђарас тесе майсем шырать. Кунта çĕнĕ, çын ĕçне çăмăллатса, ĕç тухăçне хăпартакан машшинсене ĕçе йарас марри çинђен килĕшӳсем (токăвăр) туни те пулнă,

Пĕр май тавар ытлашши туни йалхуçалăх таварĕсен хакĕ ӳкнĕ вăхăтра вăрçă хыççăн ирĕксĕрех фермĕра тĕрлĕрен çĕнĕ техĕнĕккăна ĕçе кĕрттерсе пыђĕ. Йалхуçалăхĕ хытă механисатсиленђĕ.

Трактăрпа компайн çулсерен çакăн ђухлĕ ĕçленĕ (пинпе).

| | 1918 ç. | 1920 ç. | 1924 ç | 1925 ç. | 1928 ç. | 1929 ç. | 1930 ç. |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Трактăр | 80,1 | 246,1 | 498,2 | 506,7 | 768,8 | 853 | 1000 |
| Компайн | — | 3,6 | — | 5,0 | 26,0 | — | 50 |

1931—1932-мĕш çулта трактăрпа тата компайнпа усă курасси питĕ ђакрĕ.

Çапла йалхуçалăхĕ хытă мехханисатсиленнĕ, çав вăхăтрах вăл хытă çĕрсе, хавшаса пырать. Вăл çакăнтан паллă: 1) ÇАПШ-ђе пур фермĕр та трактăрпа усă кураймасть. Трактăр вăйĕпе усă курманни 63 мĕлйун фермĕр шутланать 2) йалхуçалăх тухăçлăхĕ сахал, пађар, вăл тĕрлĕрен майсемпе (хими, електритсă т. ыт) усă курма май çуккинђен килет; 3) монополи пур май пур машшинсемпе те усă курма çук (автоплук т. ыт.); 4) çĕр уйрăм хуçалăхăн пулнипеле, контсентратси çителĕклĕ маррипе вак-тĕвек тăкак питĕ пысăк.

Йалхуçалăх криçĕсĕ питĕ нумай фермĕрсене пĕтĕмĕшпех пĕтерђĕ. Тавар хакĕ (йалхуçалăхĕн) пĕр май ӳксе пынă май вак фермĕрсем расхутсене тӳсеймесĕр пĕтсе, çука йулса пыраççĕ.

Çĕрмамăкĕ пулни татах нумай фермĕрсене салатрĕ. Усă курман çĕрмамăк саппасĕ 24.590 пин кип шутланать. Лайăх пулсан та унтан çурри кăна ĕçе кайма пултарать. Çавăнпа çĕрмамăк хакĕ хытă ӳкет. Ытти йалхуçалăх протуксисем те çавах. Вăл каллех вак фермĕрсене пĕтерет. Ку каллех шалти рынăка, промышлĕннăçа кĕрет. Йалхуçалăх криçĕсĕ промышлĕннăç криçĕсне çивĕђлетет. Рапођђисен, вак фермĕрсен пурнăçĕ йапăхланса пырать.

ÇАПШ-сен промышлĕннăçĕ, пĕр май ӳксе, пађарланса пыни машшин, хапрăк-савăтсем пултарулăх çителĕклĕ ĕçлеменни, хуçалăхăн нумай пайракĕсем ӳсме ђарăнни, çĕнĕрен аталанакан промышлĕннăç пайракĕсем пĕр пек ӳсменни, ĕççĕр аптракансен шуђĕ ӳссе пыни—кăпиталисăм тăвăм вăйне, технĕккă малалла кайассине сăнђарланине, тăлланисене кăтартать.

Шалти рынăкра тавара сутма пултарайман пирки хăйĕн усламне ђакармасăр ӳстерме май çук пирки, кăпиталисăм йут рынăк тупма тăрăшать, вăрçăсем пуçласа йарать (Йапониле хирĕçни, Киттайшăн тавлашни).

## Ĕç укçи.

Америкри рапођђисем ытти кăпиталисла патшалăхри рапођђисенђен тавар ытларах илме пултараççĕ пулсан та, вĕсенђен 90 прођăнне ĕç укçи пурăнма çитеймест. 10 прођ. квалификкатсиллĕ маçтăрсен çеç ĕç укçи пысăкрах.

Ĕç укçи тĕрлĕ районсенђе, хуçалăхăн тĕрлĕ пайракĕсенђе пĕр пек мар. Çултан çул рапођђисен ĕç укçи пур вырăнта та ђакса пырать. Кăпиталисăм рапођђисен ĕç укçине ђакарса, çав ĕç укçи шуђĕпе, рапођђи класăн пурнăçне йапăхлатнипе криçĕсрен хăтăласшăн.

ÇАПШ-ђе 1930 çул хушшинђе ĕç укçи 9.600 мĕлйун толлăр ђакнă. 1931 çулăн 1мĕш кварттăлĕнђе тата 2—3 мĕлйарт тенкĕ ђакнă. Нумай пулмасть виçĕ хурçă тресђĕ 275 пин ĕçлекенĕн ĕç укçине 10% ђакарнă.

Нимрен ытла çĕркăмрăк кăларакансен пурнăçĕ питĕ йапăх: вĕсен ĕç укçи йӳнĕ, сывлăха сыхлас йĕркесем питĕ пађар, сусăрлансан, сывмарлансан пулăшасси çинђен каласмалли те çук. Çавăнпа 1927 çулта Пенçилванинђи ту пурлăхне кăларакан промышлĕнăçĕнђи, çĕркăмрăк кăларнă çĕрте ĕçлекенсем пысăк стађкă туса илђĕç. Çав вăхăтрах стађкăсем ĕç укçи хăпартассишĕн ытти районсенђе те пулса иртрĕç. Стађкă тунăшăн 70 пин рапођђине хĕл кунĕнђе хăваттерсенђен йапали мĕнĕпе кăларса сирпĕтнĕ. Рапођђисен ађисем тăхăнмалли çуккипе шкула та çӳреме пултарайматççĕ, нумайĕшĕ вĕренмесĕр йулаççĕ. Нимрен ытла пекр—рапођђисен пурнăçĕ кансĕр: вĕсене йăвăр ĕç ĕçлеттереççĕ, ĕç укçи сахал параççĕ. Çамрăксене 11—12 çултах хапрăк-савăтра йапăх апатпа йывăр ĕç ĕçлеттерсе йурăхсăра кăлараççĕ.

## Ĕççĕр аптрани.

Криçĕс пирки кăпиталиссем рапоҫҫисене пиншерĕн-пиншерĕн ĕçрен кăларса пăрахаççĕ. Йулашки вăхăтра ÇАПШ-ҫе 13 мĕлйупа йахăн рапоҫҫи аптăраса пурăнаççĕ. Мĕн пур тĕнҫери ĕççĕр аптраса пурăнакансен шутĕнҫен виççĕмĕш пайĕ.

Кăпиталисăм ратсионалисатсийĕ мĕлйуншарăн халăха выçăхтарса хăварать. 1919-28 çулсем хушшинҫе промышлĕннăç протуксийĕ 25% хăпарнă ĕçлекенсен шуҫĕ 12% ҫакнă.

Амерĕкри ĕççĕрлĕх пире кăпиталисла ратсионалисатси сăн-питне, кăпиталăсăм хирĕçĕвне татах паллăрах кăтартать. ÇАПШ-ҫе револҫутсиллĕ вăй, револҫутси йухăмĕ хытă ўссе пырать, рапоҫҫи клас ҫуралăха, çуклăха, пусмăра кăпиталисăма пĕтермесĕр пĕтерме май çуккине ăнланса çитет.

ÇАПШ-ҫи пролеттариата Комунисла Партти йертсе пырать. Кăпиталисăм çав револҫутсиллĕ йухăма пĕтерме мĕн пур майпа усă курать. Ку ĕçре фашиссем питĕ хĕрўллĕ ĕçлеççĕ, револҫутси пуласран тем пекех сыхланаççĕ.

## Рынăкшăн кĕрешни.

ÇАПШ-ҫе халăх ҫухăнланса пынă май таварсем илме пултарман пирки кăпиталиссем таварсене çунтараççĕ, шывпа йухтарса йараççĕ. Çапла туса вĕсем тавар хакĕсене ўстерессишĕн тăрăшаççĕ. Çав вăхăтрах ытти патшалăхсен çĕрне туртса илме таварсене сутмалли майсем шыраççĕ.

Пĕрлешўллĕ Штатсен суту-илў тăвас ĕç, тавартавăрнăçавĕ питĕ пысăк. 1909 çулта йут патшалăхсемпе суту-илў тунă таварçавăрнăçавĕ 2,2 мĕлйарт тенкĕлĕх пулнă, 1910 çулта вăл 10 мĕлйарта çитнĕ. 1901 çулта промышлĕннăç тварĕсем мĕн пур йут патшалăхсене кăларнă таварсенҫен виççĕмĕш пайне йышăннă, 1928 çулта 60% çитнĕ. Рынăкта Йевроппăран колониллĕ, çурколониллĕ çĕрсене кусна. ÇАПШ-сен йут патшалăхсемпе суту-илў тăвас ĕç пысăккăн пĕтĕм çĕр ҫăмăрне империалисла патшалăхсем валеçсе пĕтерсен тин пуçланҫĕ. Çавăнпа Амерĕкĕн йут çĕре тавар кăларасси урăх патшалăхсен рынăкĕ ҫакни шуҫĕпе çеç аслăланма пултарать. Ҫăн малтанах, вăл Анклипе Кăнтăр Амерĕкшĕн хирĕçĕве кĕрет. Унтан ытти патшалăхсенҫи рынăксене те хуллен, «килĕшўллĕ» аслăлатса пырать. Анҫах ку кĕрешўсĕрех пулмасть, пĕрмайах хирĕçўсем пулса пыраççĕ, вăрçăсăр ку ĕç татăклă пулма пултараймасть. ÇАПШ, вăрçă вăхăтĕнҫе питĕ пуйса йулнăскер, тĕнҫе ылттăн саппасĕн çуррине йахăн тытаканскер пур кăпиталисла патшалăхсене те укçа кивçен парса тăнă. «Ытлашши» кăпитал ÇАПШ-сен питĕ нумай, çав кăпитала вырнаçтарма вăл вырăн шырать.

1930 çулта ÇАПШ-сен йут çĕре кăларнă кăпиталĕ 30 мĕлйарт толлăр пулнă. (Кунта Йевроппăри патшалăхсен 12 мĕлйарт вăрçă тўлевĕ те кĕрет).

### 1930-мĕш çулта Пĕрлешўллĕ Штатсен йут çĕре кăларнă кăпитал çапла саланнă.

**(мĕлйун толлăрпа)**

| | 1914 ç. | 1930 ç. |
|---|---|---|
| Йевроппăна | 350 | 5.107 |
| Кăнтăр Амерĕке | 100 | 2.786 |
| Вăтам Амерĕке | 1200 | 2.936 |
| Канатăна | 750 | 4.389 |
| Австралине | 175 | 927 |
| Ытти çĕре | 50 | 459 |
| Пĕтĕмпе | 2.625 | 16.605 |

Хаҗхи вăхăтра П.Ш. кăпиталĕсĕр çĕршыв çук та ĕнтĕ. Ку кăна мар Америк кăпиталĕн тĕнҗе промышленăçĕнҗе хăйне палăртман вырăн çук. Америк кăпиталĕ услам илесшĕн тăрăшса екккономĕк йенҗен кайра тăракан çĕршывсен хуçайствисене кĕрсе пырат. Кăнтăрпа Вăтам Америке, Аслă оккеан урлă Киттайа т. ыт. Аçирн çĕршывсене кĕрет.

Патшалăхран йут çĕре кăпитал кăларса мул хуçисем ним тумасăр куппон касса пурăнаççĕ. Рантйесен, харам пырсен шуҗĕ ӳссе пырат.

Пĕр 1927 çулта кăна Пĕрл. Шт. пĕр мĕлйарт толлăр проҗҗăн илнĕ. Çав вăхăтра ÇАПШ-ен суту-илӳ туса илнĕ тунăшĕ 600 мĕлйун толлăр кăна пулнă.

Пĕрл. Шт. кăпитал йута кăларни вĕсене ытти империалисла патшалăхсемпе хирĕçтерет, нимрен ытла Анклипе. Америк кăпиталĕ Анклийе вăл йышăннă вырăнсенҗен (Кăнтăр Америк т. ыт.) хĕссе кăларат. Анкли те парăнасшăн мар мĕн пур вăйпа тапаçланат; вĕсем хушшинҗи хирĕçӳ çивĕҗленсе пырат. Америк кашни çул йут çĕре кăпитал Анклирен 3—4 хут ытларах кăларат.

## ÇАПШ-пе ССРС.

ÇАПШ халиҗҗенех пире саккунлă патшалăх вырăнне (де-юре) йышăнмаст. ÇАПШ—пролеттари тиктаттури патшалăхне—С.С.Р.С-не хирĕç империалисла вăй пухнă çĕрте пысăк вырăн йышăнат.

Краштăн вăрçи вăхăтĕнҗе Америк империалисăмĕ револютсине хирĕç интервентсипе килҗĕ, ССРС çур çĕр йенҗен кĕрсе рапоҗҗисемпе хресҗенсен влаçне пĕтерме хăтланҗĕç.

ÇАПШ-сем С.С.Р.С-не саккунлă патшалăх тесе шутламаст пулин те пирĕнпе екккономĕкла çыхăну тытаççĕ. Америк пуршуаçине пирĕнпе çыхăну тытни кирлех: С.С.Р.С. Америкрен машшинсем илет, йулашки çулсенҗе тата технĕккă йенҗен пулăшассипе те килĕшӳсем тăваççĕ.

Екккономĕк криçĕсĕ хĕстернĕ вăхăтра хăйĕн шалти рынăкĕ те хĕсĕннĕ пирки **йут рынăксем хушшинҗе С.С.Р.С Америк пуршуаçишĕн пысăк вырăн йышăнат,** çавăнпа та вăл пирĕнпе суту-илӳ тăват.

**Ыйтусемпе ĕçсем:** 1. ÇАПШ-җи кăпиталисăм çиçтеми криçĕçри мĕнтен палла?

2. ÇАПШ промышленнăс пайракĕсен тăвăмĕ çултан çул йепле җакса пынине тиакрам туса кăтартăр. Çав пайраксем ССРС йепле ӳссе пынине тиакрам тăвăр. Танлаштарăр.

3. Кăпиталисăм ытлашши тавара пĕтерес тесе, тавар хакĕсене ӳстерес тесе мĕнле меллсемпе усă курат.

4. Машшинсем хапрăк-савăтсем мĕншĕн çителĕклĕ ĕçлеймеççĕ?

5. Йалхуçалăх криçĕсĕ мĕнрен килет?

6. ÇАПШ йалхуçалăхĕ хытă меххаңисатсиленни мĕнә пĕлтерет?

7. Кăпиталисăм шалти рынăкăн илӳ пултаруллăхне ӳстерме пултарати?

8. Кăпиталисăм криçĕсрен мĕнле тухасшăн тăрăшат?

9. Ĕçлекенсем хушшинҗе револютси йухăмĕ ӳссе пыни мĕнрен килет?

10. Мĕн вăл кăпиталисла ратсионалисатси?

11. Кăпиталисăм мĕншĕн йут рынăка туртса илесшĕн?

12. Мĕнле патшалăхсемпе ÇАПШ рынăкшăн кăпитал кăларассишĕн хирĕçӳ çивĕҗрех?

13. ÇАПШ-җи тĕслĕхсене илсе «ÇАПШ-җи тата ССРС-җи йалхуçалăхĕ» соҗинени çырăр. Икĕ тĕслĕ хуçалăх çиçтемине кăтартăр.

14. С.С.Р.С-пе ÇАПШ мĕншĕн екккономĕкла çыхăну тытат? Мĕншĕн вăл пире хирĕç империалисăмла вăй пухат.

15. Хаҗхи вăхăтри Америкри лару-тăрăва хаçатсем тăрăх пĕлĕр. Криçĕс мĕнле çивĕҗленсе пырат. Револютси йухăмĕ йепле?

## Приттани империйĕ.

Аслă Приттани йе Анкли лаптăк тĕлĕшпе Йевроппăри пĕҗĕк патшалăхсенҗен пĕри. Вăл Йевроппă лаптăкĕн $^1/_{30}$ пайне, халăх йышĕн $^1/_{10}$ пайне йышăнат. Çĕр лаптăкĕ йенҗен патшалăх пулсан та вăл тĕнҗери җи вăйлă кăпиталисла патшалăхсенҗен пĕри.

Приттани патшалăхĕн пайĕсем тĕнҫен пур пайĕсенҫе те пур. Вĕсем XVI—XIX ĕмĕрте Анкли пусмăрне кĕрсе ўкеҫҫĕ. Вĕсене Анкли кăпиталĕ екконоимĕкпе политтĕк тĕлĕшĕнҫен хăйне пăхăнтарса тăрать, вĕсене томинпонсем теҫҫĕ. Анклипе ăна пăхăнакан патшалăхсене пăхсан ҫакна куратпăр:

| | Ҫĕр лаптăк. | Халăх йышĕ |
|---|---|---|
| 1. Аслă-Приттани . . . . . . . . . . . | 244 пин тв. кл. | 44 млн. ҫын |
| 2. Ăна пăхăнакан патшалăхсем . . . . . | 36.0?0 пин. т. к. | 425 млн. ҫын |

Ҫапла ĕнтĕ Аслă Приттани хăйĕн колонийĕнҫи ҫĕр лаптăк хисепĕпе 147 хут халăх йышĕпе 10 хут пĕҫĕкрех.

Ытти патшалăхсемпе таплаштарсан Анкли шултра кăпиталисла патшалăх пулса тăрать. XIV ĕмĕртех Анклинҫе сурăх ĕрҫетсе ҫăм промышлĕннăҫĕ питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Ҫав вăхăталла Анкли тĕнҫери ҫăмран тунă таварсене сутас тĕлĕшрен ҫи вăйлă патшалăх пулса тăнă. Вăл йут патшалăхсене ҫăм, пустав таварĕсене тăратнă. Суту-илўн тĕп ҫулĕ уп ҫухне Вăта ҫĕрти тинĕс пулнă. Анкли ҫав ҫултан айакра тăнă пирки пĕтĕм тĕнҫери суту-илў ĕҫне таҫах хутшăнайман.

Америк пуррине пĕлсен Афрĕк тавра тинĕс ҫулне уҫнă; вара Атлантти оккеанĕ тĕп ҫул пулса тăнă. Вара Анкли тĕнҫере ытти патшалăхсенҫен ҫи аван вырăн йышăнса тăра пуҫланă. Мĕншĕн тесен упăн пур йенҫен те тинĕс Аслă Приттани пысăк карапĕсене кĕрсе тухма йурăхлă пухттăсем нумайййи, ҫырансем, шыв хĕррисем пур йенҫен те тинĕсри патшалăхшăн килĕшўлли Анклин тинĕс флотне хăвăрт ўсме, Анклин суту-илў кăпиталне йут патшалăхсене кăларма, Америкпе ытти патшалăхсенҫен маларах усă курма пулăшаҫҫĕ.

Ҫĕнĕ патшалăхсене, ҫĕршывсене тупни Анкли хуҫалăхне ҫĕнĕллетсе хурать.

Арлакан машшинă, тĕртекен станок, пăс машшинĕсене тупни Анклири кăпиталисла шултра промышлĕннăҫа аталанма пысăк вăй панă. Пăс машшинне туса, ăна арлас, тĕртес ĕҫе ҫыхăнтарни Анклипе Колланти, Франтси, Испани патшалăхĕсенҫен нумай мала йарать. Асăннă патшалăхсем ҫĕркăмрăкĕ тĕлĕшпе Анклирен ҫухăн пирки кайа тăрса йулаҫҫĕ. Анклин ҫĕр пуйанлăхĕсем нумайййи, вĕсем шыв ҫулĕсемпе йупашарах пулни промышлĕннăҫа тата вăйлăрах ўсме пулăшнă.

Ҫав вăхăтра мануфактурă вырăнне шултра хапрăк промышлĕннăҫĕ ҫитĕнсе пырать. Анклире тавар питĕ нумай хатĕрленĕ пирки, Анкли пуршуаҫи ăна вырнаҫтарма ҫĕнĕ рынăксем шыраса пĕтĕм тинĕссем тăрăх ҫўрет.

1770—1848 ҫулсем хушшинҫе акăлҫансем Австралипе Ҫĕнĕ Ҫеланти, Кăнтăрти Афрĕкпа пĕтĕм Интостан ҫĕрĕсене туртса илеҫҫĕ.

Ҫĕнĕ ҫĕршывсенҫе Анкли хăйĕн таварĕсене сутса вĕсенҫи пуйанлăха йўнĕ хакпа илсе калама ҫук пысăк тупăш илет. Колонисенҫе пусмăрта пурнакансен аллисем тупнă ылттăн-кĕмĕле Анкли хăй патне турттарнă. Упта пурнакан тĕрлĕ халăхсем Анклири ҫитĕнсе пыракан пуршуаҫи ним хĕрхенмесĕр експлоататсиленĕ. Афрĕккăра некăрсене хĕҫпăшалпа кайăксене тытнă пек тытса Америке ҫĕрмамăк пахҫисене вăйпа ĕҫлеме йанă. Анклин аталанакан кăпиталисла промышлĕннăҫĕ хăйĕн йўнĕ таварĕсемпе колонисенҫи вак ăсталăх тăвăмпе тĕппипех пĕтерсе пырать, унти халăха выҫă хăварать.




9. Приттани тытăмĕн картти.

Çак майпа колонисем економĕк тĕлĕшĕнҫен Анклин пусмăрне кĕрсе ӳкеççĕ. Çак майпа Интири пиравăр тĕртес ĕç алăсталăхĕ пăҫланса Инти пиртĕртекенĕсем йышĕ-йышĕпе пĕтеççĕ.—«Интин тӳремлĕхĕсем пиравăр тĕртекенсен шăммисемпе шуралнă»—тесе пĕлтерет Интири пĕр кĕнерал—кĕпернатăр.

XIX ĕмĕрĕн вĕçĕнҫе Анкли Афрĕккăри çĕнĕ çĕрсене туртса илнĕ.

Йулашки империалисла вăрçăра Анкли Кермани колонисене, Туртсин Месоппоттами çĕрне туртса илнĕ.

Приттанине пăхăнса тăракан патшалăхпа çĕршывсем тĕнҫен пур пайĕсенҫе те сапаланс авыртни, вĕсем Анклин хăй çĕрĕнҫен (метрополинҫен) айакра пулни вĕсене тытса тăма Анклишĕн пит йăвăр, ытти империалисла патшалăхсем тапăнасран сыхлама, колонисене тытса тăма, тинĕсре пĕҫҫен хуçа пулма тĕнҫере ҫи вăйлă тинĕс флоҫĕ кирлĕ. 1914 çулти империалисла вăрçăҫҫен Анкли тинĕсре патшалăхсенҫен ҫи вăйли пулнă.

Приттани импери сапаланҫăк пулсан та унăн çĕрĕсем Канатăсăр пуçне Инти оккеанĕ тавра выртаççĕ. Инти оккеанĕ Анкли оккеанĕ пулса тăрать.

Анкли хăй çĕрĕнҫен пуçласа колонисене çитиҫҫенхи çула çирĕплетмешкĕн çул тăрăшшĕпе çирĕплетнĕ пунктăсем, тинĕс крепăçĕсем оппорлă пасăсем пуринҫен ытла тинĕс хапхисем пулса тăракан проливсене лартса тултарнă.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Карттă çинҫе Аслă Приттанипе Приттани империне кĕрекен çĕршывсене тупса, çĕр лаптăкне шутлăр.
2. "Тинĕс хапхисене" шыраса тупăр.
3. Карттă çинҫе Приттани империн çĕршывĕсене тупса пĕр тĕслĕ сăрăпа сăрлăр.
4. Анклирен колонисене кайакан ҫи çывăх çулсене тупса хурăр.
5. Анклипе унăн колонисен танлаштаруне кăтартакан тиакрамсем тăвăр.

## Аслă Приттани.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. **Тинĕссем:** Çурçĕр, Ирланти.
2. **Проливсем:** Па-те-Кале, Ламанш.
3. **Йӳхан шывсем:** Темсă, Çеверн, Клайт.
4. **Сăрт тусем:** Кемпри, Пеннин.
5. Ливĕрппуљпа Нйу-Кестљ, Туврпа Кале хушшисене масштап тăрăх пĕлĕр.
6. Шыв хĕррисен каскаланҫăкне сăнăр.
7. Аслă-Приттанин çĕр лаптăкĕ мĕнрен аваннине каласа парăр.
8. Патшалăхăн çĕр питне карттă тăрăх сăнăр.

Анклин Йевроппăри çĕршывĕсен лаптăкĕ 313 пин тăваткăл километр, халăх йышĕ—47 мĕлйун çын.

Çав шутра—1) Аслă Приттани—244 пин тăв. клм., халăх йышĕ 44 мĕлйун çын. 2) Ирланти—69 пин тăв. клм., халăх йышĕ 3 мĕлйун çын.

Мĕн пур колонисене илсен—пĕтĕм çĕр лаптăкĕ 36 мĕлйун тăв. клм. (çĕр çийĕн $^1/_4$ пайĕ), халăх йышĕ—470 мĕлйун çынна (çĕр ҫăмăрĕ çинҫе пурăнакансен $^1/_4$) çитет.

Анклире 1 тăв. клм. çĕр лаптăкĕ çинҫе вăтам шутпа 180 çын пурăнать.

Анкли—утравсем çинҫе пурăнакан промышлĕннăçлă патшалăх. Халҫхи вăхăтра Анклин хăйĕн тырри аран кăна 3 уйăха çитме пултарать.

Анкли йутран йалхуçалăхне кирлĕ ҫĕрĕ таварсене, минераллă йапаласене, çимĕçсене кӳрет, йута—промышлĕннăç таварĕсене—пиравăр, меттал таварĕсене машшинсене кăларать.

Анкли промышлĕннăçĕ патшалăхра ҫĕр таварсем—çăм, çĕркăмрăкĕпе меттал тăприсем пур пирки питĕ аталанса кайнă. (Халҫхи вăхăтра Анклин çăм çитмест, ăна вăл Аркенттинăпа Австралинҫен кӳрет.

Анкли патшалăхĕ йышăннă утравăн çурçĕр тата кăнтăрпа хĕвеланăç йенĕсем сăртлă. (Шотланти тăвĕсем, Пеннин, Уеђс, Корнуеђс тăвĕсем).

Патшалăхăн кăнтăрпа хĕвелтухăç йенĕ тӳремлĕ айлăм.

Çĕркăмрăк, тимĕр, тата ытти метталсен тăприпе пуйан вырăнсем патшалăхăн хĕвеланăç йенĕнђе.




10. Аслă Приттанипе Ирлантин еккономĕк районĕсем.

Çĕркăмрăкĕпе пит те пуйан вырăнсем патшалăх варринђе тата Шотланти районĕпе (Клайт шывĕ тăрăх) Çурçĕрпе—хĕвелтухăç (Ђйу Кестђ хула районĕ), Кăнтăр Уеђс районсенђе выртаççĕ.

Анкли çĕр кăмрăкĕ ыттисенђен авантарах, пимĕнрен ытла Кăнтăр Уеђсра тупăнакан Картиф кăмрăкĕ аван. Çав майпа Картиф порт тĕнђери çĕркăмрăк порђĕсенђен пĕри пулса тăрат̆. Çĕр кăмрăк хисепĕпе Анкли тĕнђере улттăмĕш, Йевроппăра иккĕмĕш вырăн йышăнса тăрат̆.

Анклин меттал хисепĕ нумай мар—тимĕр тăпри анђах, çĕр кăмрăк тупăнакан районсенђех тупăнат̆.

Меттал тăприсем пахах мар пирки Анкли промышлĕннăçĕ йутран кӳрекен меттал тăприсемпе ытларах усă кураť.

Вăрçăђђенех Анклире шăратакан ђукунăн çуррине йутран кӳнĕ тимĕртен шăратнă.

Мĕн пур тимĕр хисепĕ тĕлĕшпе Анкли, Кермани, Франтсй, Швется патшалăхĕсенђен кайра тăраť.

Ытти метталсем Анклинђе çителĕклĕ тупăнаймаççĕ.




11. Анклин импăрт çыхăнăвĕсем.

Корнуелс утравĕнђе тăхлан, Енклеçи утравĕнђе пăхăрпа шур тăхлан т. ыт. тупăнаççĕ.

Тĕслĕ метталсене Анкли хăйĕн колонисенђен кӳрет. Нехтă çук пирки Анкли ăнэ йут çĕртен кӳрет. Çĕр айĕнђен кăларакан йапаласене тата йалхуçалăх ђĕрĕ йапалисене, çĕркăмрăксăр пуçне йут çĕршывсенђен кӳме тивет.

## Промышлĕннăç.

Анклин промышлĕннăçĕн ђи паллă, авалтан пулнă уйрăмĕсем виççĕ: пиравăр, çĕр кăмрăк, тата меттал (ку шута тимĕр, машшин тата кимĕ тăвас ĕç промышлĕннăçĕ кĕрет).

Хими, електротехнĕккă, пысăк машшин тăвас ĕçĕн хăш-пĕр пайĕсем,— хађхи вăхăтра хуçалăхăн паллă пайĕсем Анклире ытти тĕслĕ промышлĕннăçран кайарах йулса пыраççĕ, Керманипе ÇАПШ-ђи пек мар.

Çавăнпа Анкли промышлĕннăçне вăрçăђђенех тĕнђе рынăкĕсенђен çамрăк кăпиталисла патшалăхсем—Кермани, ÇАПШ хĕстерсе кăларма тытăннă. Вăрçă вăхăтĕнђе тата ун хыççăн Анклире електротехнĕккă, хими ратио, авто промышлĕннăçĕсем те аталанса кайрĕç.

Кăпиталисла патшалăхсенђе вăрçă хыççăн конккурентси тата питĕ сарăлса кайнă, пĕр. пĕрне парăнасшăн мар вĕсем тăвăма ратсионалисатсилесе протукси хаклăхне йӳнетме тăрăшнă.

Анкли пуршуаçин те çавăн пекех тумалла пулнă. Анђах нађар оркаписат-

силлĕ промышлĕннăçра ăна тума хĕптерех. Çавăнпа та Анклире, ытти патшалăхсенҫен ытларах, капиталисла ратсионалисатси рапоҫҫисен ĕçхакне ҫакарса, ĕçкунне вăрăмлатса пыраť, ытлашки рапоҫҫисене ĕçрен кăларса ывăтса ĕçсĕр аптракансен шутне ÿстерет.

Анклири çĕркăмрăк промышлĕннăçĕнҫе 1924 çултан пуçласа 1929 çула




12 Аслă Приттанипе Ирлантин промышлĕннăç картти.

ҫитиҭҫен кăпиҭалисла ратсионалисатси рапоҭҫисен хисепне 20% ҭакарҭĕ, ĕҫ хакне те вăрҫăҭҫенхи вăхăтран 13% ҭакарнă. Ҭукун шăратакан промышлĕннăҫра ĕҫсĕр йулнă рапоҭҫисен 1929 ҫулта 12,1%, хурҫă ирĕлтерекенсен—19,8% ҫĕрмамăк пиравăр промышлĕннăҫĕнҭен—22% ҭакнă.

Вăрҫă хыҫҫăн Анкли промышлĕннăҫ протуксийĕ вăрҫăҭҫенхинҭен нумай сахалланнă, хуҫалăх наҭарланса пыра пуҫланă.

Малта пыракан кăпиталисла патшалăхсенҭи промышлĕннăҫ протуксийĕ 1913 ҫулхине 100% шутласан ҫапла улшăнса пынă:

| Ҫулсем | Ҫ.А.П.Ш. | Франтси | Иҭали | Пелки | Кермани | Анкли |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1913 | 100 | 100 | 100 | 100 | 100 | 100 |
| 1921 | 96 | 55 | 69 | 54 | 78 | 68 |
| 1924 | 144 | 109 | 103 | 94 | 80 | 90 |
| 1927 | 160 | 110 | 114 | 116 | 106 | 96 |
| 1928 | 165 | 127 | — | 124 | 108 | 93 |
| 1929 | 177 | 139 | — | — | 110 | 100 |

Анклин промышлĕннăҫ ҭенттăрĕ патшалăх варринҭе: унта ҫĕркăмрăк промышлĕнăҫĕпе пиравăр промышлĕннăҫĕ хытă аталаннă; ҫĕрмамăк пиравăр промышлĕннăҫĕ Манҭҫесттĕр хулинҭе, ҫăм—Литс хулинҭе, меттал шăратасси, машшин тăвакан промышлĕннăҫ—Шеффилҭт, Пирлинкам, Манҭҫесттĕр хулисенҭе.

Анклин промышлĕннăҫла районсенҭен паллăрах вырăнсем:

**Шотланти ҫĕркăмрăк вырăнĕсем:** Кунта ҫĕркăмрăк промышлĕннăҫĕсĕр пуҫне меттал, кимĕ тăвакан тата ҫăм-йĕтĕн промышлĕннăҫĕсем саралнă. Районăн тĕп хули—Класко.

**Ҫурҫĕрпе—Хĕвелтухăҫ Анкли.** Тĕп хула—Нйу-Кестҭ. Кунта ҫĕркăмрăк, кимĕ тăвакан меттал, пиравăр промышлĕннăҫĕсем вăйлă саралнă.

**Кунта Уелҫс районĕ.** Тĕп хула—Картиф. Ку районта ҫĕрмамăкĕпе меттал промышлĕннăҫĕ вăйлă аталаннă.

## Йалхуҫалăхĕ.

Анклире ҫĕр пысăк ҫĕрулпутсен-лентлортсен аллинҭе. Хресҭенсене ҫĕртен уйăрас ĕҫ темиҫе ĕмĕр хушшинҭе пулса иртет. Аталанакан пиравăр промышлĕннăҫĕ валҫи нумай ҫăм кирлĕ майĕпе хресҭенсене йалĕ-йалĕпе хăваласа кăларса ҫав вырăнсенҭе сурăх кĕтĕвĕсем ĕрҭетнĕ. Хресҭенсене ҫĕрсĕр хăварни ҫĕр ĕҫне шултралатса йама пулăшнă.

Лентлортсем ҫĕре фермĕрсене тара парса усă курассĕ. Халҫхи вăхăтра Анклире лентлортсен ҫĕрне тара тытса ĕҫлеттерсе рынăка кирлĕ протуктăсем хатĕрлекен пуйан фермĕрлă хуҫайствăсем.

Амерĕкре Раҫҫейрен йӳнĕ хакпа тырă пынă пирки, тата Австралипе кăнтăр йенҫи Афрĕккăран ҫăм йӳнĕ хакпах пынă пирки Анклинҭе выҫăх ĕрҭетес ĕҫ, пахҫа ҫимĕҫ тăвас ĕҫ наҭарланса пынă. Выҫăх-ҭĕрлĕх нумай ĕрҭетнĕ пирки Анклинҭе ҫарансем саралнă.

Пĕрҭĕллĕ тырăсем пĕтĕм акакан ҫĕр лаптăкĕн ҫуррине кăна йышăнассĕ. Уй ĕҫне нумай пусăллă, тĕрлĕ имҫамсемпе ҫемҫетсе, машшинсемпе туса пынă

пирки тырӑ тухӑҫлӑ пулнӑ. Тĕп йалхуҫалӑх районĕ—кӑнтӑрпа хĕвелтухӑҫ лапамĕ—«Симĕс Анкли». Сӑрт-туллӑ—Шотлантинҙе сурӑх ĕрҙетнĕ.




13. Йалхуҫалӑхпа ҫĕрай пурлӑхсен картти.

## Йут патшалӑхсемпе суту-илҙӳ туни.

Пурӑнма кирлĕ пĕтĕм йапаласенҙен $^3/_4$ пайне Анкли ытти ҫĕртен кӳрет: ҫĕрмамӑкĕ, ҫӑм, вӑрман, кауҙҙук, нехтӑ, тĕслĕ метталсем, тимĕр, тĕрлĕ ҫимĕҫсем. Ҫав вӑхӑтрах Анкли промышлĕннӑҫ хатĕрленĕ таварсене ытти патшалӑхсене куҫарать. Анкли ҫĕрмамӑкран пиравӑр тӑвакан промышлĕннӑҫĕн 75%, ҫӑм промышлĕннӑҫӑн 20%, ҫĕркӑмрӑкӑн 25%, метталуркин 30%, йапалисене йут патшалӑхсене сутать.

Анкли ытларах хайĕн колонисемпе сут тӑвать. Анҙах вӑрҫӑ хыҫҫӑн колонисенҙе хайсен промышлĕннӑҫĕ ӳсе, ҫирĕпленсе пынӑ пирки вĕсем Анклирен пыракан таварсене илесшĕнех мар, Анкли промышлĕннӑҫĕпе тавлаша пуҫлаҫҫĕ, Анкли пусмӑрĕнҙен хӑтӑласшӑн тӑрӑшаҫҫĕ, ытти кӑпиталисла патшалӑхсемпе суту-илӳ тума тытӑнса, вĕсемпе ҫыхӑну тыта пуҫлаҫҫĕ.

1913-мĕш ҫулта Австрали импӑртĕнҙе Анкли 51,8 проҙ. йышӑннӑ пулсан 1925 ҫулта вӑл 43 проҙ. ҫити ҙакнӑ. Ҫав вӑхӑтрах ҪАПШ пайĕ 13 проҙҙӑнран 24,6 проҙ. ҫитиҙҙен ӳснĕ.

Канатӑ импӑртĕнҙе ҪАПШ пайĕ 65 проҙ. йышӑнса тӑнӑ вӑхӑтра Анкли мĕн пурĕ 18 проҙ. кӑна йышӑнса тӑрать.

Вӑрҫӑҙҙен ҙи пуйан панккир вырӑнĕнҙе Анкли пулнӑ пулсан халĕ ун вырӑнĕнҙе—Амерĕк.

Америк капиталĕ Анкли колонисене хăйне парăнтарса Анкли економĕк пусмăрĕн хĕçне хăй аллине туртса илет.

«Лăпкă» економĕкле кĕрешӳре Анклине Америкĕн вăйлă империалисăмĕ çĕнтерсе пыни колонисене Анкли пусмăрĕнçен хăтăлма пулăшать, Приттани империне ишĕлтерет.

Вăрçă хыççăн Анкли тинĕс хуçи йатне те çухатать.




14. Аçлă Приттанири рапочисемпе служăщисен ĕç уйрăмлăхĕсен тиакрамĕ.

1890 çулта Анкли суту-илӳ флочĕ тĕнчери суту-илӳ флотăн çуррине йышăнса тăнă пулсассăн 1927 çулта вăл 30 проц. çеç йышăнса тăнă.

ÇАПШ суту-илӳ флочĕ вăрçăччен Анкли флотĕнчен 4,5 хут сахалтарах пулнă пулсан, 1928 çулта Анкли флотĕнчен 1,5 хут çеç сахалтарах пулнă.

Тĕнчипе сарăлнă економĕк криçĕсĕ Анклин начарлана пуçланă промышлĕннăçне татах та вăйлăрах çапăнчĕ. Вăл пуринчен ытла меттал, кимĕ тăвакан промышлĕннăçра сисĕнчĕ.

1930-мĕш çул ĕçлекен томнăсенчен 1931 çулта 50 проц. çеç ĕçленĕ.

Промышлĕннăç криçĕсĕ йалхуçалăх криçĕсĕпе çыхăнать. Океан урлă патшалăхсенче тырă протуксийĕ ӳссе пынă, анчах ĕççыннисем ăна укçа çук пирки илме пултараймаççĕ, капиталиссем тыр хакне йӳнетес мар тесе ăна

тинёсе тăкаççĕ, пăравусра вутă вырăнне çунтараççĕ. Тыр хакĕ йўнелнĕ пирки вак фермĕрсем ђухăнланса çукка йулаççĕ, тыр сахалтарах акма тытăнаççĕ. Çĕрмамăкран пиравăр тăвакан промышлĕннăç та йухăнса пыраť.

Çĕрмамăк пиравăр промышлĕннăçĕнђе ĕçлекенсенђен виççĕмĕш пайĕ 1930 çулта май уйăх тĕлне ĕçсĕре йулнă.

Профсойус ђленĕсем шутĕнђен, прођђăнпа шутласан ĕçсĕр йулнисен шуђĕ Анклире çапла ўсĕ пынă: 1930 çулта йанвар уйăхĕнђе 12,6 прођ., ийуњте 15,8 прођ., ийуљте 17,1 прођ., авкустра 17,5 прођ., çенťапĕрте 18,1 прођ., окťапĕрте 18,7 прођ.

Ĕççĕрлĕх ўснĕ çемĕн ĕçхакĕ ђакса пыраť. Ĕçхакне ђакарасси 1926 çултанпах пыраť. Криçĕс вăхăтĕнђе тата вайлăрах ђакаť. 1920 çултан 1929 çула çитиђђен ĕç укçин фонтне 615 мĕлйун кĕренке çтерлĕнка ђакарнă. Криçĕс клас кĕрешĕвне вайлатса пыраť. 1930 çул сапастовккăсем тунă пирки 4.400000 ĕçкунĕ пĕтнĕ. 1931 çулăн пĕрремĕш кварттăлĕнђе сапастовккăсене пула 5.500000 ĕçкунĕ çухалнă.

**Ĕç.** 1. Вĕренсе тухнă маттериал тăрăх Анклине мĕнле економĕк районĕсене пайлама пулассине каласа парăр.

2. Тĕнђен онтткурлă картти çинђе Анкли хăйне кирлĕ ђĕрĕ таварсене, йапаласене—çĕрмамăк, çăм, нехттă, вăрман. тырă, çу, аш, ăçтан илсе килнине паллă тăвăр.

3. С.С.Р С-ђен Анклине мĕнле таварсем кайаççĕ, Анклирен мĕнле таварсем кўреççĕ?

4. Анклире криçĕс ўснине кăтартакан маттериала йĕркелесе, аçатсехнђен маттериал пухса, тиакрам туса кăтартăр.

## Анклири рапођђи клас.

XIX-мĕш ĕмĕрĕн 40-мĕш çулсенђе тата кайарах та Анкли кăпиталисăмĕ тĕнђере ђи пуйан хуçа пулса пурăннă. Колонисенĕ вĕçĕмсĕр експлоататсилесе вăл питĕ пысăк услам илнĕ. Çав шутпа Анкли пуршуаçийĕ хăй çĕренђи рапођђи класăн пĕр сийне, ђи малта пыракан сийне шалу пысăкрах парса ытти майсемпе çав сийĕн пурнăçне аванлатаť, ăна классен кĕрешўсĕрех сотсиалисăм тума пулаť тесе вĕрептет.

Промышлĕннăç тĕрекленсе пынă çемĕн рапођђи класăн пурнăçĕ аванланаť тесе вĕрентет, рапођђи класăн пуйанрах сийĕнђен аристократти хатĕрлет. Анђах Анклири рапођђи класăн аван пурăнасси нумайа пыман.

Иртнĕ ĕмĕрĕн йулашки çулĕсенђен пуçласа Анкли промышлĕннăçăн тĕнђери монополийĕ çухалаť. ÇАПШ-па Кермани Анкли промышлĕннăçне хĕстерме тытăнаççĕ, Анклири рапођђи класăн ђыслăхĕ те пĕтсе лараť, м. т. пуршуаçи рапођђин ĕç условисене тапăнма тытăнаť. Вара пролеттариатăн куçĕ уçăлаť, вăл пуршуаçине хирĕç тăра пуçлаť.

Империалисла вăрçă хыççăн Анкли промышлĕннăçĕ нађарланнă пирки пуршуаçи рапођђисен пурнăçне нађарлатса пырасшăн тăрăшаť: ĕççĕрлĕх ўссе, ĕç укçи ђакса, ĕç кунĕ вăрăмланса пыраť.

1926 çулта Анкли пролеттариађĕ пастовккă тăваť, анђах «Рапођђи Партти» тăрăшнипе сапастовккă сўнсе лараť.

Хаљхи криçĕс Анклире револютсиллĕ йухăма çĕнетсе пысăклатса пыраť. Револютсиллĕ йухăма 1920 çулта орканисатсиленнĕ Комунисла партти йертсе пыраť.

Комунисла партти пысăк мар пулсан та пролеттариатăн револютсиллĕ кĕрешĕвне йертсе пыраť, «рапођђи» парттине йертсе пыракансен ултавне таса шыв çине кăларса пыраť. Колонисенђи рапођђисемпе пĕтĕм ĕçхалăх масси Анкли пусмăрĕнђен хăтăласшăн тăрăшаť. Ку ĕçре те Комунисла партти йертсе пыраť.

## ССРС-пе Анкли.

Револутси пулсанах Анкли Раççей контрреволутсионерĕсене Совет влаçĕпе кĕрешме пулăшса тăнă, Совет çĕрĕсене интервентсипе килне, вăл нехтăпа пуйăн вырăнсене хăй аллине çавăрса илесшĕн пулнă. 1921 çулта ССРС-пе Анкли суту-илӳ килĕшĕвĕ туса пĕр-пĕрнипе суту-илӳ тума тытăнаççĕ.

Анклири интервентси орканисаттăрĕсем çак сыхăнăва пĕтересшĕн тăрăшаççĕ, анчах Анклири револутсиллĕ кĕрешӳ тата колонисенчи револутсиллĕ йухăм çак сыхăнăва пĕтерме памасăр тăчĕ.

ССРС-чи рапочи Анклири пастовккă тăвакан рапочисене пулăшни Анкли пуршуаçине уртарса йачĕ. 1927 çулта çак суту-илӳ килĕшĕвне пĕтермелле пулчĕ.

1929 çулта кăна Анкли правиттĕлстви ССРС-пе сыхăнăва çĕнетрĕ.

1929 çулта сарăлма тытăннă крисĕс, (тĕнчери суту-илӳ ĕçĕнче сухалнă вырăнсене пула хуçалăхри чăрмавсем), Анкли пуршуаçине ирĕксĕрех Совет сойусĕпе суту-илĕвĕ çĕнетсе сыхăну тытма хушать.

## Ирланти.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Ирланти утравĕ таврa мĕнле тинĕссем пур.
2. Анклирен Ирлантине мĕнле тинĕс уйăрса тăрать

Анклирен хĕвееланăç йенелле **Ирланти** йатлă аслă утрав пур. Вăл Анклипе пăхăнакан çĕршывсенчен чи çывăххи. Ирланти Анклине Йевроппăн хĕвеланăç хĕррине, Вăта çĕрти тинĕсе, Амерĕке каймa пӳлсе тăнă. Çавăнпа та çак утрава страттеки тĕлĕшĕнчен аваншăн, Анкли хăйне XII-мĕш ĕмĕртех пăхăнтарнă.

Ирлантин аталанма тытăннă сурăх ĕрчетес ĕçĕ, çăм, çĕрмамăк пиравăр промышлĕннăçне пусмăрласа пĕтерсе хунă.

Ирланти çĕрĕсене Анкли çĕр улпучĕсене валеçсе пынипе Ирланти хресченĕсеем çĕрсĕре тухнă. Ирланти халăхĕ вĕçĕмсĕр çĕршĕн кĕрешнĕ пирки Анкли правиттĕлстви çĕр реформи тунă. Анчах реформă хыççăн Ирланти хресченсене çĕре укçалла илме пултарнă пулсан та вăл ĕçхатĕрĕсене иккĕмĕш хут çуратни пулнă. Анкли пăхăнтарнăранпа Ирлантиреe халăх йышĕ ӳсме мар—чакса пырать. 1841 çулта Ирлантиреe пурĕ 8 мĕлйун çын пулнă пулсан халĕ 4,5 мĕлйун çеç йулнă. Ку халăх чухăнланса вилсе пĕтнĕ пирки тата Ирлантирен йут çĕршывсене куçнă пирки пулнă.

Ирланти ĕçхалăхĕ пусмăрлакансемпе хĕçпăшалланса та темиçе хут та кĕрешнĕ. 1916 çулта Ирлантин хĕçпăшаллă пăлхавне Анкли калама çук тискерĕн путарнă. 1921 çулта Анкли правиттĕлствин ирĕксĕрех Ирлантине уйрăм правиттĕлствă тума ирĕк пама тивнĕ, анчах Анкли промышлĕннăçăн чи вăйлă районĕсене хăй аллине хăварнă.

Ирланти промышлĕннăçĕ çурçĕрпе хĕвелтухăç йенче; тĕп хула—Пелфаст. Ирлантинче çутçанталăк условисем йалхуçалăхшăн—аванах теме йурать. Кунта нӳрĕ, тинĕс климăчĕ, хĕл сивĕ мар, çулла уçă.

Ирлантин çĕр пичĕ тӳремлĕ, утрав хĕррисем сăртлă.

Çаранлă вырăнсем пур пирки Ирлантире выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç сарăлнă. Уйри тырпулсенчен çĕрулми сĕлĕ ытларах акаççĕ.

**Ыйтусемпе ĕçсем:**

1. Ирлантин промышлĕннăçла районĕсене тупăр.
2. Картă çинче Ирлантин чи пысăк хулисене—Пелфаст, Лонтон, Терри, Туплина, Корк—тупăр.

Приттани импери йухӑнса пырат. Приттани империйӗ темиҫе ӗмӗр хушши колонисене туртса илнипе ӳссе пыҫӗ. 1914—1918 ҫулти вӑрҫӑ вӑхӑтӗнҫех Приттани импери ишӗлме пуҫларӗ. Пӗтӗм тӗнҫе хуҫалӑхӗнҫе Анкли пайӗ пӗҫӗкленсе пырат.

1. Ҫӗрмамӑк промышлӗннӑҫӗ 1910 ҫ.—29,9% йышӑнат, 1913 ҫулта—21,%; 1925 ҫулта—18,4%, 1928 ҫулта—16,5%.

1929 ҫулта Анкли вӑрҫӑҫҫенхипе танлаштарсан ҫӗркӑмрӑкӗ 82% тупнӑ, 1930 ҫулӑн йанвар уйӑхӗнҫе—92%, анҫах авкуст уйӑхӗнҫе каллех 71% ҫитеҫҫен ҫакса ларат.

### II. Метталурки промышлӗннӑҫӗ.

| Ҫукун шӑратасси. | | | Хӳрҫӑ шӑратасси | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1913 ҫ. | — | 13,2% | 1901—05 ҫҫ. | — | 4,5% |
| 1927 ҫ. | — | 8,5% | 1911—13 ҫҫ. | — | 12,4% |
| 1929 ҫ. | — | 7,7% | 1927 ҫ. | — | 9,2% |
| | | | 1929 ҫ. | — | 8,1% |

1930-мӗш ҫулӑн авкуст уйӑхӗнҫе вӑрҫӑҫҫенхин 58 проҫ. анҫах йышӑнат.

### III. Ҫӗрмамӑк пиравӑр промышлӗннӑҫӗ.

1910 ҫ.—40,3%; 1914 ҫ.—38,7%; 1921 ҫ.—36,8%; 1928 ҫ.—34,6%; 1930-мӗш ҫулӑн сентапӗр уйӑхӗнҫе вӑрҫӑҫҫенхин 54% анҫах тунӑ.

### IV. Суту илӳ флоҫӗ.

1914 ҫ.—41,6%; 1921 ҫ.—29,7%.

Меетталурки промышлӗннӑҫӗ тӗлӗшпе Анкли ҪАПШ, Кермани, Франтси патшалӑхӗсенҫен те кайарах йулнӑ.

1930-мӗш ҫулӑн вӗҫӗнҫе ССРС-ҫи уйӑхри хурӑҫпа ҫукун тӑвӑмӗ Анклинҫен иртсе кайнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ Анкли промышлӗннӑҫӗн протуксийӗ ҫулран ҫул ҫакса пырат.

Анкли томинионӗсем интустриленсе Анкли пусмӑрӗнҫен хӑтӑласшӑн тӑрӑшаҫҫӗ.

Тӗнҫери кӑпиталиссенҫен ҫи вӑйли ӗнтӗ Анкли мар ҪАПШ пулса тӑҫӗ.

ҪАПШ-ран йут ҫӗре кӑпитал кайни Анклиринҫен икӗ хут ытларах.

Амерӗк кӑпиталӗ Анкли колонисене те кайат.

Анклипе Амерӗк кӑпиталӗсем Канатӑна вырнаҫнине сӑнӑр.

| | Анкли (толлӑрпа). | | ҪАПШ (толлӑрпа). |
|---|---|---|---|
| 1913 ҫулта — | 1 860 000 000 | — | 417 143 220 |
| 1923 ҫулта — | 1 890 000 000 | — | 2 425 000 000 |
| 1928 ҫулта — | 2 240 000 000 | — | 3 385 000 000 |
| 1929 ҫулта — | 2 263 000 000 | — | 3 645 000 000 |

Канатӑ хуҫайствине кӳнӗ Анкли кӑпиталӗсем ҪАПШ кӑпиталӗнҫен кайарах. Ытти ҫӗрте те ҫавнашкалах ҪАПШ-ӑн вырӑнӗ Анклинҫен ытлараххине куратпӑр.

Анкли колонисен тулашӗнҫи суту-илӳри Анкли пайӗ ҫакса пырса ҪАПШ-ӑн пайӗ ӳсни курӑнат.

| Аслӑ Приттани пайӗ (% шутласан) | ҪАПШ пайӗ (% шутласан) |
|---|---|
| Канатӑ импӑртӗнҫе | Канатӑ импӑртӗнҫе |
| 1913 ҫулта — 21,3 | 1913 ҫулта — 64,0 |
| 1928 ҫулта — 15,2 | 1928 ҫулта — 68,2 |
| 1929 ҫулта — 14,7 | 1929 ҫулта — 69,9 |

| Австрали импăртĕнђе | | Австрали импăрт. | |
|---|---|---|---|
| 1913 çулта | — 51,8 | 1913 çулта | — 13,7 |
| 1928 „ | — 41,2 | 1928 „ | — 25,1 |
| 1929 „ | — — | 1929 „ | — — |

**Çĕнĕ Çĕлэнти импăртĕнђе**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1913 çулта | — 59,7 | 1913 çулта | — 9,5 |
| 1928 „ | — 47,9 | 1928 „ | — 18,0 |
| 1929 „ | — 45,4 | 1929 „ | — — |

**Кăнтăрти Афрĕккă импăртĕнђе**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1913 çулта | — 56,8 | 1913 çулта | — 8,9 |
| 1928 „ | — 44,8 | 1928 „ | — 15,4 |
| 1929 „ | — — | 1929 „ | — — |

**Интии мпăртĕнђе**

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1913 çулта | — 64,2 | 1913 çулта | — 2,6 |
| 1928 „ | — 46,3 | 1928 — | — 7,4 |
| 1929 „ | — 43,1 | 1929 — | — 7,2 |

Çак ђыхвăрсенђен ĕнтĕ епĕр Анкли ĕлĕкхи вăхăтра тĕнђери-ђи вăйлă патшалăхран кайаран-кайа йулма тытăннине куратпăр.

Анкли томинионĕсем те Анклирен татăлса уйрăм патшалăхсем пулма тăрăшаççĕ.

Анклири револютсиллĕ кĕрешӳ, колонисенђи натсиллĕ-револютсиллĕ кĕрешӳ вăйланни Приттани империн тĕрекне пĕтерсе пырать. Влаçа алран йарасшăн мар Анкли империалисĕсем калама çук хăвăрт хĕçпăшалланнаççĕ. Çĕнĕрен çĕнĕ тинĕс карапĕсем тăваççĕ, сывлăш флотне вăйлатаççĕ.

Анђах темĕнле сыхлансан та Аслă Приттани империалисăмĕн вăйĕ ђаксах пырать, револютси йухăмĕ çĕнтеретех.

Анклипе Америк хушшинђе пит пысăк хирĕçӳсем пыраççĕ. Америк тĕнђере пĕтђĕн хуçа пуласшăн, Приттани империйĕ хăй вырăнне Америке ирĕккĕн парасшăн мар. Тĕнђери екпомĕк криçĕсĕ вĕсен хушшинђи хирĕçĕве татах та вăйлатать. Империалисăм вăрçиђђен ÇАПШ Анклинђен темиçе хут хăвăртрах ӳссе вăйланса пынă. Вăрçă хыççăн Анкли хуçалăхĕн ӳсĕмĕ ђаранса тăђĕ. Анкли промышлĕннăç протуксин 1913 çулти калăпăшне 100% шутласан, 1929 çулта вăл 98% пулнă. ÇАПШ-не илсессĕн çав çултах 167% пулнă. Çапла Америкпе Анкли хушшинђе рынăкшăн çапăçу тухса кайать.

Империалисла вăрçăђђен Анкли йут çĕре кăпитал хывакансенђен пĕри пулнă, унăн йут çĕршыври кăпитал 20 мĕлйарт толлăра çитнĕ.

ÇАПШ-сен вăрçăђђен йут çĕршыври кăпиталĕ 2,6 мĕлйарт толлăр кăна пулнă, йут патшалăхсен ÇАПШ-сенђи кăпиталĕ 5 мĕлйарта çывăхарнă.

Анклин халђхи вăхăтра йутри кăпиталĕ вăрçăђђенхинђен нумай кайа. Анкли ÇАПШ-сене 11 мĕлйарт толлăр парăмлă.

ÇАПШ-ен йут çĕршывсене кăпитал хывасси 1913 çултанпа 6 хут ӳснĕ. 1929 çулта ÇАПШ-çен йут çĕр-шыври кăпиталĕ 16,5 мĕлйарт толлăра çитнĕ.

Америк кăпиталĕ Анкли колонисене, ĕлĕк Анклине пăхăнакан çĕршывсене нумай вырнаçнă. Вăл Анклипе çав çĕршывсенђен хĕстерсе кăларать, çавăнпа Америкпе Анкли хушшинђи хирĕçӳ çивĕђленсе пырать.

ÇАПШ-не нехтă нумай кирлĕ, анђах ун хăйĕн нехтă вырăнĕсем çулран çул пĕтсе пыраççĕ. Çурçĕрпе Кăнтăр Америкри нехтă вырăнĕсем Анкли аллинђе пирки хирĕçӳ татах вăйланать.

Анкли кăпиталĕ тĕнђери каућук плантатсисен ђи пуйан хуçи. ÇАПШ-сене упта тĕрлĕрен реçинă ыйтакан промышлĕннăç хытă аталаннă май, каућук питĕ нумай кирлĕ. Ку ђĕр таваршăн та харкашу вăйлă пырать.

ÇАПШ пăхăрăн монополийĕ хуçи. Приттани промышлĕннăçĕ вађђи кирлĕ пăхăрăн 70 прођ. ÇАПШ-ран килет. Никкĕл протуксин $^{9}/_{10}$ пайĕ Канатăра, Амерĕке пăхăнса тăрать.

ÇАПШ-пе Анкли хушшинђе вăрçă пуласси паллах. Икĕ патшалăхĕ те ăмăртса вăрçа хатĕрленеççĕ.

Амерĕкка хĕçпăшалланнас тĕлĕшпе Анклипе таншрĕ ĕнтĕ. ÇАПШ-сен вăрçă тăкакĕсем 750 мĕлйун толлăра çитеççĕ.

Вăл тĕнђери патшалăхсен вăрçă тăкакĕсенђен ђи пысăк вырăн йышăнать.

Анкли империалисăмĕ те хăйĕн империн тĕрлĕ çĕрти, тинĕсри вăрçă пунктисене вăйлатать.

## Анклири тытăмăн йĕрки.

Тытăм тĕлĕшпе Аслă Приттани—парламĕнтлă монархи.

Анклири парламĕнт икке пайланать, пĕри—опшђинă палатти, тепри—çўлти лортсен палатти. Опшђинă палаттине тепуттатсене 5 çуллăха суйлаççĕ. Лортсен палаттине ђи пуйан хуçасене ĕмĕрлĕхе суйлаççĕ.

Тĕрлĕ йĕркесемпе, саккунсене кăларас ĕçе ђи малтан опшђинăсен палатти çирĕплетет, вара тин лортсен палаттине кайать.

Патшалăх тытăмĕн пуçĕ—опшђинăсен палатти пулнă майĕпе, палаттăра хуçаланса тăракан партти хăйĕн хушшинђен министăрсен кăпинетне уйăрса хăварать. Патшалăха тытса пырасси ђăннипе министăрсемпе вĕсен кăпинеђĕсен аллинђе.

Анкли парламĕнтĕнђе висĕ партти тăраççĕ: конçерваттăрсен партти (пуйан çĕр улпуђĕсен, шултра интустри хуçисен, липералсен (карап-кимĕ хуçисен, пиравăр хапрăк хуçисем), Анкли профсойусĕсемпе (третйунионсемпе) тађă çыхăнса тăракан «рапођђи» партти.

Анклири комунисла партти йышлă мар пулсассăн та (мĕн пурĕ 5 пин çынна йахăн), вăл куллепех ўсе пырать, пролеттарнатпа ĕçхалăхĕ хăй йенелле çавăрать, революци йухăмне сарса пырать, Совет сойусне хирĕç вăрçăпа тухасран пĕтĕм ĕçхалăхне сыхлать.

# Кермани.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Кермани патшалăхĕ мĕнле патшалăхсемпе ђикĕленнине пĕлĕр.
2. Ытти патшалăхсемпе çыхăну тытас йенђен шыв çулĕсем, ђукун çулсем пури, мĕн ăскерсем?
3. Кермани çĕрне рельйеф тăрăх мĕнле валеçме пулать?
4. Конттурла карттă тăрăх тусен, шывсен йађĕсене çырса тухăр.
5. Керманири пысăкрах хуласене çырса тухăр. Вĕсем хăш йенерех тăраççĕ? Мĕншĕн?
6. Кермани патшалăхĕн карттине ўкерĕр.

## I. Кермани халăх хуçалăхĕн ўсĕмĕ.

### 1. Кермани 1914—1918 ç. ç. вăрçă умĕн.

Вăрçăђђен Кермани Хĕвеланăç Йевропăра пысăк капиталисла патшалăх пулнă; лаптăкĕшпе те, халăх шуђĕпе те вăл Хĕвеланăç Йевропăра пĕрремĕш вырăн йышăннă. Халĕ вăл 472 пин тăваткăл километр çĕр йышăнать, 63 мĕлйун çын пурăнать. Кашнă тăваткăл километра 134 çын тивет.

Кермани тĕнђе хуçалăхĕнђе мĕнле вырăн йышăннине çакăнтан курма пулать, вăл 1913 çулта çĕркăмрăкĕ тупассине (ÇАПШ, Анкли, хыççăн) виççĕмĕш

вырӑнта тӑнӑ, тӗнђере тӑвӗмӗн $^1/_5$ пайне тупнӑ; хурҫӑ шӑратассипе 2-мӗш вырӑнта тӑнӑ—тӗнђе тӑвӑмӗн $^1/_4$ пайне; пиравӑр промышлӗннӑҫӗпе 3-мӗш вырӑн йышӑннӑ (ҪАПШ, Анкли хыҫҫӑн).

Керманин ҫамрӑк кӑпиталисӑмӗ Анклирен те хытӑ ӳснӗ. Нимрен ытла халђхи кӑпиталисла хуҫалӑхра пысӑк вырӑн йышӑнакан електротехнӗккӑ хими, машшин тӑвакан промышлӗннӑҫ хытӑ ӳснӗ.

Кермани таварсене йута кӑларакан пысӑк патшалӑх пулса тӑнӑ.

Йут рынӑкра Анкли айне пулас мар тесе унӑн промышлӗннӑҫне технӗккӑ йенђен малта тӑракан пысӑк претприйаттисем тумалла пулнӑ. Ун пек претприйаттисене пӗђђен хӑвӑрт тума май ҫук, ҫавӑнпа аксионерлӑ опђӑствӑсем, тата ытти монополиллӗ пӗрлешӳсем Керманире питӗ хӑвӑрт ӳсеҫҫӗ.

Хӑвӑрт ӳсекен кӑпиталисӑмлӑ рынӑк тӑвӑр пулма пуҫланӑ, ҫавӑнпа Кермани империалисӑмӗ колонисем шырать. Анђах вӑл ӳснӗ вӑхӑтра ҫӗрсене туртса илсе пӗтернӗ пирки Кермани империалисӑмӗ сахал тӗпђенӗ хӗвелтухӑҫпе вӑтам Афрӗккӑна Палинеҫине туртӑнать. Унта вӑл Кйаођао ҫӗре, Маршал, Самаон, Мариан утравӗсене ҫавӑрса илет; тата Лӑпкӑ оккеанри Каролин утравӗсене Испанирен сутӑн илет. Ку ҫӗрсем урлӑ вӑл ытти ҫӗрелле—Австралипе, Хӗвелтухӑҫ Аҫи йенелле ҫул уҫмашкӑн кӑна пулнӑ.

Таварпа кӑпитал кӑлармалли вырӑнсене аслатас йенђен Кермани Кӗҫӗн Аҫипе Туртсине кӗресшӗн пулнӑ.

Ҫывӑх хӗвелтухӑҫнелле ҫул уҫас ӗҫ сайомсем, панксем, контсеҫҫисем урлӑ питӗ ӑнса пырать; Туртси ђукун ҫулӗсенђен ђылайӑшӗ Кермани аллине кӗрсе ӳкнӗ. Перҫҫи саливӗ патне пыракан Пактат ђукун ҫулне хывма Туртсирен контсеҫҫине илсен Анкли хӑйӗн Инти оккеанӗнђи ђаплӑхӗ пӗтесрен питӗ хӑраса ӳкнӗ. Ку ҫул тӑрӑх Кермани Мессопоттамине ҫул уҫса кӗме пултарнӑ. Ҫавӑнпа Керманин ҫак планӗ тӑрӑх пысӑк ҫапӑҫу пуҫланса кайнӑ.




15. Рур ҫӗркӑмрӑкӗпе Лоттаринки тимӗр тӑпри.

Кермани хăвăрт ӳссе йут патшалăхсемпе суту-илӳ тăвас тĕлĕшрен Анклине хуса ҫитнĕ. Хăвăрт вăйланса пыракан Кермани флоҭĕ Анклине хытă хăратнă. Анклипе Кермани хушшинҭе хирĕҫӳ тухса кайнă, вăл Ҫывăх хĕвелтухăҫри ыйтусем пирки ҫивĕҭленсе пынă.

Керманин хĕвеланăҫ ҭиккинҭе ҫĕркăмрăкĕ пур, Франтсин хĕвелтухăҫĕнҭе тимĕр рутисем нумай. Франтси Керманин ҫĕркăмрăкпе хапсăннă, Кермани Франтсин тимĕр рутисене хапсăннă. Ҫак хирĕҫӳсем 1914 ҫ. вăрҫăн сăлтавĕсенҭен пысăк сăлтавĕ пулса тăрат.

## 2. Кермани вăрҫă хыҫҫăн.

Вăрҫă 4 ҫул ытларах тăсăлҭĕ. Кермани йенҭе наҭартарах кăпиталисла патшалăхсем—Австро-Венкри, Туртси, Полкари, пулҭĕҫ. Ăна хирĕҫ—Анкли, Франтси, Раҫҫей, Иттали, Йаппони, Пеҭки, Ҫерпи тата ытти вак-тĕвек патшалăхсем вăрҫрĕҫ. Вăрҫакан йепĕсен вăйĕсем пĕр пек мар пулсан та Кермани 1914 ҫултанпа 1918 ҫулăн нойапĕр уйăхне ҫитиҭҭенех вăрҫă ҫирĕп, ăна хирĕҫ вăрҫакансен ҫĕр ҫинҭе тенĕ пекех ирттӗрҭĕ.

Керманине ҫĕнтерҭĕҫ те, тĕппипех ҫаратрĕҫ: мĕн пур колонисене, суту-илӳ флоҭне, ҫĕрсене, пăравуссене туртса илҭĕҫ. Унсăр пуҫсăр Керманин питĕ нумай парăм, реппаратси тӳлемелле пулҭĕ. Халиҭҭен вăл 20 мĕлйарт тенкĕ тӳленĕ. Вăл тӳленĕ укҫапа ҫĕнтерекен патшалăхсем валеҫсе илеҫҫĕ. Пуринҭен ытла Франтси илет.




16. Керманин вăрҫăҭҭенхи тата вăрҫă хыҫҫăнхи картти.

Вăрҫă хыҫҫăн Керманин хăйĕн ҫĕрĕ те катăлҭĕ. Елсас-Лоттаринки, Саар ҫĕркăмрăк паҫҫейни Франтси аллине кайрĕҫ; Тури Ҫилеҫи, Пруҫҫи пайĕ, Поснаҥ—Поҭшăна. Ҫак ҫĕрсем кайнипе Кермани тимĕр рутисем, ҫĕркăмрăк, тырă ҫухатрĕ.

Версcаҭ токăвăрĕпе пăвса хунă Керманине економĕк криҫĕсĕ хытă ҫапрĕ. Ун хуҫалăхĕ пĕтмех пуҫларĕ.

Кермани хуҫалăхĕ майсăр тăни клас хирĕҫĕвне хытă ҫивĕҭлетрĕ, пролеттариатăн революҭтси хумĕ питĕ вăйланса кайрĕ. (Паваринҭе Канаш ирĕкĕ пулни). Кермани пролеттарин революҭтси хумĕ тĕнҭе пуршуаҫине хытă хăратрĕ; вăл, сотсиал-темократсен аллипе (Носке, Шейтеман) пролеттари революҭтсие

йуп ăппе путарсан Кермани хуçалăхне ура çипе тăратасшăн «сиплеме» пуçларĕ. Малтан Тауес планĕ сиксе тухрĕ. Ку план тăрăх реппаратси тӳллевĕ çултан çул ӳссе пыраť. Ун хыççăн Йунк планĕ тухрĕ. Ку план тăрăх Америк кăпиталисĕсем Кермани пуршуаçипе кивçен укçа параççĕ. Америк пуршуаçийĕ ку планпа Кермани хуçалăхĕнђе йертсе пыракан вырăн йышăнасшăн. Çак плансем пурĕш те ĕçлекең клас çине йывăррăн тийенеççĕ. 1924—29 çç. хушшинђе Кермани пуршуаçийĕ йут патшалăхсенђен кивçен 15,5 мĕлйарт маркка илсе промышлĕннăç ӳстерме, ратсионалисатсилеме йанă. Кăпиталисла ратсионалисатси рапођђи класа хытă пусмăрласа, унăнне йуп ĕмсе 8,5 мĕлйарт маркка реппаратси тӳлевне татма пулăшрĕ.

1931 çулăн ийуң уйăхĕнђе тата Кувер планĕ сиксе тухрĕ. Кермани хуçалăхĕ економĕк криçĕсĕпе хăшкăлми пулђĕ. Вăл реппаратси тӳлевĕсене пама пултараймасť. Ку план тăрăх Америк те пĕр çул нихăш патшалăхран тӳлевсене илмест, ытти патшалăхсене те çапла тума хушаť. Ђăнах та ĕнтĕ ылттăн çăмарта тăвакан ђăхха (Кермани) нимле те алран йарас килмест. Кунсăр пуçсăр тата Кермани хуçалăхĕ хытă аманнă май рапођђи клас та револђутсиленсе комунисла партти йертсе пынипе влаçа хăй аллине илме пултараť. Капла пулсан Америкĕн Керманири кăпиталĕ ылттăн парасси те, рапођђи класăн йунне ĕмесси те пĕтсе лараť. Çавăнпа та ĕнтĕ Америк преçитенђĕ Куверăн хăйĕн планĕпе тухмалла пулђĕ.

Кермани кăпиталисăм тĕнђинђе ђи нађар вырăнĕ, сыпăкĕ пулса тăраť. Керманинђе класла хирĕçӳ те ытти çĕртинђен çивĕђрех.

**Ыйтусемпе ĕçсем:**

1. Вăрçăђђен Кермани патшалăхĕ хăвăрт ӳсни мĕнтен килнĕ.
2. Мĕншĕн Керманире Монополиллĕ пĕрлешӳсем хăвăрт ӳснĕ.
3. Керманин мĕнле колонисем пулнă?
4. Вăрçăђђен Кермани Анклипе тата Франтсипе мĕншĕн хирĕçнĕ? Халĕ мĕнле хирĕçӳсем пур?
5. 1914 çулта империалисăм вăрçи мĕншĕн пуçланнă?
6. Мĕн вăл Версаљ токăвăрĕ?
7. Вăрçă хыççăн Кермани хуçалăхĕнђе мĕнле улшăнусем пулђĕç?
8. Мĕншĕн капиталисла патшалăхсем Керманине „сиплеççĕ"?
9. Мĕнле майпа Кермани вăрçă хыççăн аманнă хуçалăхне хăпартрĕ?

## II. Кермани халăх хуçалăхĕ.

Кермани интустриллĕ патшалăх. Унта мĕн пур халăхран хула халăхĕ 64 прођ. шутланаť.

Ĕç тĕлĕшĕнђен илсен Керманинђе халăх вăрман хуçалăхĕнђе—23 прођ., промышлĕннăçра—41 прођ., транспăртпа сутуилӳрĕ—16,9 прођ. пурăнаť. Халăх тупăшĕнђе вăрманпа йалхуçалăхĕ—20 прођ. йышăнаť.

Кермани интустриллĕ патшалăх нулни вăл йута кăларнă тавартан та курăнаť: йута кăларнă тавартан $^3/_4$ пайне промышлĕннăç таварĕ йышăнаť. Йутран илнĕ таварсенђен $^4/_5$ пайне ђĕрĕ таварсемпе апат-çимĕçсем йышăнаççĕ.

### Çутçанталăк пуйанлăхĕсем.

Малта епĕр Кермани промышлĕннăçĕ хăвăрт ӳссе аталаннă терĕмĕр. Çав хăвăрт пулса пынă ӳсĕм вăл çĕрайĕнђи пуйанлăхсем Кермани çĕршывĕнђе нумайинђен те килнĕ.

Кермани çĕршывĕн ређйефĕ питĕ тĕрлĕрен: çурçĕр пайĕнђе айлăмлăх, кăнтăр йенђе айлăмлăх хуллен хăпарса пырса тусем патне кĕрсе кайаť, шыв хĕрисемпе çеç айлăмлăх çаплипех йулаť.

Вӑтам Керманин тусем çӳллех мар, тата вӑрманпа купаланса ларaççӗ. Çӗрайӗнђи пурлӑхсем Керманин сӑртлӑ вырӑнсенђе ытларах. Çӗрайӗнђе пуринђен ытла çӗркӑмрӑкӗ тупӑнаҭ. Ку тӗлӗшпе вӑл Йевроппӑра пӗрӗмӗш вырӑн йышӑнаҭ.

Пысӑкрах тусем çаксем пулаççӗ: Рута, Сутет, Швартсваљт тӑвӗçем.

## Çӗркӑмрӑкӗ.

Ђи паллӑ çӗркӑмрӑк районӗ—Рур паççейни. Мӗн пур Керманинђе шутланакан çӗркӑмрӑкӗнђен 60 прођ. çакӑнта шутланаҭ; тупма та мӗн пур Керманинђе тупнинђен 75 прођ. Рур оплӑçӗнђе тупаççӗ. Çӗркӑмрӑк тупассипе иккӗмӗш




17. Керманин çӗрай пурлӑхӗсем.

вырӑнта Ахен паççейни тӑраҭ. Ытти районсенђен Тури Çилеçире, Саксонирен çӗркӑмрӑк вырӑнӗсем пур.

**Тимӗр рутисем,** Керманин малтанах çителӗклӗ пулманскер, Лоттаринки Франтсине куçсан, пушшех сахалланђӗç. Лоттаринкире 700 мӗлйун тоннӑ тимӗр рутисем шутланаççӗ.

Тимӗр рути сапласӗсем Керманин хӗвеланӑç пайӗнђе—Çикерлент, Кановер районӗсенђе ытларах. Вӗсем хыççӑн иккӗмӗш вырӑнта—Оперкессен, Нассау районӗсем тӑраççӗ.

Ытти çӗрайӗнђи пурлӑхсенђен Керманире тӑхлан, шур тӑхлан тупнине асӑнма йураҭ, анђах вӗсем питӗ сахал.

Çӗрайӗнђи пурлӑхсенђен пуйанраххи—Вӑтам Кермани. Кӑнтӑр йенђи ра-

йонсем шур кăмрăкран пуйан. Павари районĕ «шур кăмрăкран» ђи пуйанчи шутланаҭ. Мĕн пур шур кăмрăк пуйанлăхĕнђен Кермани 10 прођăнĕпе усă кураҭ (2 мĕлйун лаша вăйĕ).

## Промышлĕннăç.

Кермани промышлĕннăçĕн уйрăмлăхĕ вăл—шултра претприйаттисем ытларахҳи, промышлĕннăç хытă контсентратсиленни.

Кермани промышлĕннăçĕн иккĕмĕш уйрăмлăхĕ, вăл—претприйаттисем технĕккă йенђен малта тăни. Технĕккă тĕлĕшпе Кермани промышлĕннăçĕ ÇАПШ-пе танах. Тимĕр промышлĕннăçне енеркилес тĕлĕшпе Керманире кашнă унта ĕçлекене 18,7 лаша вăйĕ тивет, ÇАПШ-ђе 17,5 Анклире—11,1. Томнă кăмакисен тăвăм пултарулăхĕ вăрçăђђен 153 тоннă пулнăскер 1927 çулта 273 тоннăна çитнĕ. Çĕркăмрăк тупасси хытă мехханисатсиленнĕ: ăна тупасси кашнă ĕçлекеп пуçне вăрçăђђенхипе танлаштарсан 34 прођ. ўснĕ. Промышлĕннăçăн ытти пайракисем те хытă мехханисатсиленнĕ.

Кермани промышлĕннăçĕн шултра пайракисем—меттал промышлĕннăçĕ, тĕрлĕрен машшинсем, твикăттĕлсем тата пăрахут-кимĕ тăвасси.

Меттал промышлĕннăç йапалисем мĕн пур йута кăларнă таварсенђен $^1/_4$ пайне йышăнаççĕ. Ку промышлĕннăçра 2,5 мĕлйун çын ĕçлет, тĕп ђенттăрĕ—Рур оплăçĕ.

Керманире хими промышлĕннăçĕ хытă аталаннă. Унăн ђĕрĕ таварĕсем тĕрлĕрен çĕркăмрăкĕ, кали тăварĕсем Керманиђе ђылай выртаççĕ. Çĕркăмрăкĕ пĕр çунтармалли йапала кăна мар, унтан çунакан сывлăш (кас), смала, краскă, тĕрлĕрен çусем тăваççĕ.

Краскăсем, емел тăвассипе Кермани тĕнђере пĕрĕмĕш вырăн йышăнса тăраҭ.

Керманишĕн пысăк вырăн електротехнĕк промышлĕннăçĕ йышăнаҭ: тĕрлĕрен електритсă аппараҭĕсем йута сутаççĕ. Ку промышлĕннăçăн ђенттăрĕ—Перлинра мĕн пур Керманире тунă електротехнĕк таварĕнђен 80 прођăн тăваççĕ.

Промышлĕннăçăн ытти пайракĕсенђен Керманире пиравăр, апат-çимĕç промышлĕннăçĕ аталаннă. Пиравăр промышлĕннăçĕ вађђи ђĕрĕ тавар йутрăн кўреççĕ.

Йулашки çулсенђе Кермани промышлĕннăçне криçĕс питĕ хытă хĕстерђĕ. 1929 çулђђен ытти йут кăпиталисла патшалăхсем кивçенленипе аталанкаласа пыркаларĕ. Хађхи вăхăтра унăн промышлĕннăçĕ пур йенђен те ђакнăçем ђакса пыраҭ. Промышлĕннăçăн хăшпĕр пайракисем 20—25—30 çул пек ђакса ларђĕç. 1931 çулхи малтанхи ултă уйăх хушшинђи промышлĕннăç тăвăмне 1929 çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан протукси 38 прођ. ђакнине куратпăр.

## Йалхуçалăхĕ.

Кермани йалхуçалăхĕ ђакса, промышлĕннăçа вырăн парса пыраҭ. Анђах çапахта Керманире йалхуçалăхĕ хытă аталаннă. Йалхуçалăхĕнђе çĕре çемçетмелли йапаласемпе (кали тăварĕ, асот, çелитрă) нумай усă kураççĕ, тата вăл технĕккă йенђен питĕ малта тăраҭ, машшинсемпе нумай усă кураççĕ. Керманире кăпиталисла йалхуçалăхĕ.

Çĕре çемçетмелли йапаласемпе усă курасси мĕнле ўссе пынине çак таплитсăран курма пулаҭ.

(пин тоннăпа).

| Çулсем | Асот | Фосфăр йӳçĕкĕ | Кали |
|---|---|---|---|
| 1913/14 | 185 | 555 | 490 |
| 1924/25 | 340 | 371 | 663 |
| 1925/26 | 337 | 475 | 717 |
| 1926/27 | 390 | 505 | 780 |
| 1928/29 | 430 | 510 | 785 |

1928 çулта йалхуçалăхĕнҫе 11 пин трактăр ĕçленĕ, 1929 çулта—17000 çитнĕ.

Йалхуçалăхĕнҫе електритсă вăйĕпе усă курасси те ӳснĕ. 1924—25 çулта йалхуçалăхĕнҫе 3,5 мĕлйун лаша вăйĕ електритсă ĕçленĕ.

Керманире йалхуçалăхĕнҫе тара тытса ĕçлеттересси питĕ пысăк вырăн йышăнаҫ. 1917 çулта мĕн пур ĕçлекен 15 мĕлйун пулнă, çав шутран 4,5 мĕлйун йалхуçалăхĕнҫе ĕçлекен пулнă.

Авал Керманире пысăк феоталлă тытăмсем нумай пулнă. Кайрантарахпа тавар хуçалăхĕ ӳснĕ çемĕн вăл хуçалăхсем вак-тĕвек хресҫенсене хĕссе кăларса кăпиталисла хуçалăхсем пулса лараççĕ (Пруççи). Хресҫен хуçалăхĕсем Керманире çурçĕрпе хĕвеланăç, кăнтăр пайĕсенҫе ытларах; анҫах кунта та йалхуçалăхĕнҫе кăпиталисăм ӳснĕ май пĕр йенҫен питĕ нумай хресҫен саланса пĕтсе пыраççĕ, тепĕр йенҫен кулаксем ӳсеççĕ.

Çутçанҫталăк условийĕсемпе йалхуçалăх тĕлĕшĕнҫеп Кермани вăтам Йевропăри патшалăхсем майлă.

Керманире климăт тĕлĕшпе хĕвеланăçпе хĕвелтухăç йенĕсенҫе пысăк уйрăмлăхсем пур: хĕвеланăç йенҫе, Атлантти оккеанĕ хĕрри май çулла сулхăн тăраҫ, хĕл ăшă пулаҫ; хĕвелтухăç йенҫе хĕл сивĕ, çу шăрăх тăраҫ.

Керманире ҫи ăшă вырăн—кăнтăрпа хĕвеланăç пайĕ—Тури Рейн айлăмĕ, çавăнпа унта сат-пахҫа ĕрҫетесси хытă аталаннă.

Тăпра Керманире çĕрĕçлеме йурăхлах мар; çурçĕр йенҫе—кĕллĕ (Кермани кĕллĕ, тухăççăр тăпра полоссинҫе выртаҫ) ытти çĕртре шурлăхсем пур, хăйăрлă вырăнсем. Шыв хĕррисемпе çеç тăпрасем йурăхлă.

Керманире çĕрĕçĕнҫе пĕрҫĕллĕ тырăсем акаççĕ. Мĕн пур акнă лаптăкран 50 проҫ сĕлĕпе ыраш йышăнаççĕ; ыраш тăвассипе Кермани ССРС хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăнаҫ.

Ырашпа сĕлĕ хыççăн виççĕмĕш вырăнта тулă акасси тăраҫ. Криçĕс май йалхуçалăхĕн пур пайракĕсем те ҫакса пыраççĕ.

1928—29 çулта 38,5 мĕлйун квинттал пухнă, 1928—30 çулта 33,5 анҫах.

Пĕрҫĕллĕ тырă тăвакан районсем çурçĕрти айлăмра, нимрен ытла хĕвелтухăç Пруççинҫе тата Çилеçире. Çилеçире пĕрҫĕллĕ тырăсемсĕр пуçне сахăр кăшманĕ тăваççĕ. Сахăр кăшманĕ пухассипе Кермани тĕнҫере пĕрĕмĕш вырăнта тăраҫ. Çилеçирисĕр пуçне сахăр кăшманĕ Саксонире Рейн-Вестфаҫ районĕнҫе нумай акса тăваççĕ.

Керманире ҫӗрулми те нумай тӑваҫҫӗ, Йевроппӑра пӗрӗмӗш вырӑн йышӑнаҭ. Ҫиме кайнисӗр пуҫне ҫӗрулминҭен ҫпирт, крахмал тӑваҫҫӗ, тата выљӑх тӑрантарма кайаҭ.

Выљӑхсенҭен шултра, мӑйракаллӑ выљӑх тата сысна ӗрҭетесси малта тӑраҭ. Апат-ҫимӗҫ промышлӗннӑҫӗн йулашкисем, пӑрахӑҫӗсем выљӑха ҫитерме кайаҫҫӗ. Сӗтлӗ выљӑх ӗрҭетесси хуласем тавралла, сутма рынӑк пур ҫӗрелле вӑйланнӑ.

Тырпулӑ тухӑҫӗ пысӑк пулсан та Керманине хӑйӗн тырри ҫитмест. Вӑл апат-ҫимӗҫ таврашӗсем, промышлӗннӑҫ ваљљи йалхуҫалӑхӑн ҭӗрӗ таварӗсене йутран кӳрет.

**Ыйтусемпе ӗҫсем:**

1. Кермани мӗншӗн интустриллӗ патшалӑх шутланаҭ.
2. Керманире мӗнле ҫутҫанталӑк пуйанлӑхӗсем пур? Хӑш вырӑнсенҭе?
3. Кермани ҫӗршывӗн рељйефӗ, климӑҭӗ—мӗнлине каласа кӑтартӑр?
4. Кермани промышлӗннӑҫӗнҭе мӗнле уйрӑмлӑхсем пур? Мӗнле промышлӗннӑҫсем хытӑ сарӑлнӑ? Мӗншӗн?
5. Криҫӗс май промышлӗннӑҫ мӗнле ҭакса пынине тиакрам туса кӑтартӑр.
6. Мӗнле йалхуҫалӑх куљттурисем ытларах тӑваҫҫӗ? Ӑҫта?
7. Мӗн вӑл кӑпиталисла ратсионалисатси? Ӗҫлекен клас пурнӑҫне мӗншӗн кӑпит. ратсионалисатсийӗ ҫӑмӑллатма пултараймаҭ?
8. ССРС-ҭе ратсионалисатси мӗнле вырӑн йышӑнаҭ? Кӑпиталисла патшалӑхри ратсионалисатсипе сотсиалисӑмла ратсионалисатси ҫинҭен каласа кӑтартӑр.

## III. Еккономӗкле районӗсем.

Керманине ҫакӑн пек тӗп районсене уйӑрма пулаҭ: Ҫилеҫи, Саксон—Тӳринки, Ҫурҫӗр Кермани, Кӑнтӑр Кермани, тата Хӗвеланӑҫӗнҭи промышлӗннӑҫлӑ район.

**Хӗвеланӑҫӗнҭи промышлӗннӑҫлӑ район** Рейн шывӗ тӑрӑх вырҭаҭ. Ку шултра интустриллӗ район. Кунта Рур паҫҫейнинҭе ҫӗркӑмрӑкӗ нумай, Лоттаринкире тимӗр рутисем. Мӗн пур промышлӗннӑҫра ӗҫлекенсенҭен 30,4 проҭ. ту промышлӗннӑҫӗпе меттал промышлӗннӑҫӗнҭе ӗҫлеҫҫӗ.

Метталуркипе ҫӗркӑмрӑк промышлӗннӑҫ ҭенттӑрӗсем: Тортмунт, Тупспурк, Еҫҫен хулисем.

Шултра интустрисӗр пуҫне ҫак районта хими промышлӗннӑҫӗ хытӑ аталаннӑ (Кӗкӗрт йӳҫӗкӗ кӑларни).

Пиравӑр промышлӗннӑҫӗ те малта тӑраҭ; Кељпа Крефиљт хулисем паллӑ пурҫӑн ҭенттӑрӗсем, Аахан—ҫӑм промышлӗннӑҫ ҭенттӑрӗ пулса тӑраҫҫӗ.

**Ҫилеҫи районӗ** метталуркипе сӑрт пурлӑхӗпе ӗҫлекен промышлӗннӑҫ аталаннипе Керманинҭе иккӗмӗш вырӑнта тӑраҭ. Ҫилеҫинҭи ҫӗркӑмрӑк промышлӗннӑҫӗ Хӗвелтухӑҫ Керманинҭи шултра интустри никӗсӗ пулса тӑраҭ. Метталурки промышлӗннӑҫне ӳсме ҭараканни—ку районта тимӗр рутисем сахалли.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн Ҫилеҫи районӗн вӑйӗ Керманишӗн ҭакрӗ, мӗншӗн тесен ҫӗркӑмрӑк саппасӗ ҫурри ытла, пӗтӗм меттал Пољшӑна кайрӗ. Ҫапах та ҫӗркӑмрӑк Ҫилеҫи районӗнҭе Керманинҭе тупнинҭен 12 проҭ. тупаҫҫӗ. Кунсӑр пуҫсӑр ҫак районтах апат-ҫимӗҫпе пиравӑр промышлӗннӑҫӗ аталаннӑ.

**Саксон—Тӳринки районӗ** тӑвакан промышлӗннӑҫлӑ район. Кунта промышлӗннӑҫ пайракисем питӗ тӗрлӗрен. Пӗрӗмӗш вырӑнта пиравӑр промышлӗннӑҫӗ тӑраҭ, кунта районти ӗҫлекентен 23 проҭ. ӗҫлет.

Тӗрлӗрен кали тата ытти тӑварсем районта нумай вырҭни шултра хими промышлӗннӑҫне хытӑ ӗрҭетнӗ. (Стасфурт). Апат-ҫимӗҫ промышлӗннӑҫӗ те хытӑ аталаннӑ. Сахӑр тӑвассипе район Керманире пӗрӗмӗш вырӑнта тӑраҭ.

Асăннă промышлĕннăçсемсĕр пуçне районта машшин тăвас промышлĕннăç та паллă вырăн йышăнаť.

Çурçĕр Кермани районĕ—йалхуçалăхлă район. **Кунта сĕлĕ, çĕрулми тăваççĕ.** Районăн хĕвелтухăçĕ йенђе çĕрĕçĕ ытларах аталаннă, хĕвеланăç пайĕнђе—выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетесси.




18. Керманин екkономĕк районĕсем

Çĕрайĕнђи пурлăхсем йенђен район ђухăн. Промышлĕннăç йапăх аталаннă; малта апат-çимĕç промышлĕннăçĕ тăраť. Промышлĕннăç ђенттăрĕсем—Перлин (електротехнĕк промышлĕннăçĕ), Кампурк, Премен. Ку хуласенђе ђылай промышлĕннăç пайракисем шăтса тухнă: реçинă хапрăкĕсем, пăрахут тăвасси т. ыт.

Кăнтăр Кермани районне Паварипе Тури Рейн айлăмĕсем кĕреççĕ. Район йайлхуçалăх районĕ:—сĕлĕ, урпа нумай акаççĕ. Çак асăннă тырăсем сăра тума кайаççĕ. Сăра тăвакан промышлĕннăç хытă саралнă. Рейн айлăмĕнђе винократ, сатпахђа, тапак хăмла нумай ӳстереççĕ. Кусене пĕтĕм Керманире тунинђен 80% çак районта тăваççĕ.

Кермани йалхуçалăхĕ—çирĕп кулакла хуçалăхĕ.

Промышлĕннăç йенђен район ђухăн. Вырăнти ђĕрĕ таварсемпе апат-çимĕç, йăвăç промышлĕннăçĕсем ĕçлеççĕ. Районăн тĕп хулинђе—Мӳхенра йăвăçран йапаласем тăвакан промышлĕннăç сăра тăвакан промышлĕннăç ӳснĕ.

Кăнтăр Керманинђе шыв вăйĕпе усă курас ĕç питĕ вăйлă. Шыв вăйĕ «шур кăмрăк»—енерки паракан тĕп вăй пулса тăраť, ку районта çĕрайĕнђи пурлăхсем çук.

Çапла ĕнтĕ тĕп промышлĕннăç районĕсем—Хĕвеланăçпе Саксон-Тӳринки районсем пулаççĕ. Револјутси йухăмĕ ђенттăрĕсем те çак районсем (Рур корњаксен йухăмĕ, Кампурк портĕнђе ĕçлекенсен сапастовкки, çуртйĕрте ĕçлекенсен сапастовкки т. ыт.).

## Çулйĕр (транспăрт).

Шалти çулйĕр Керманин çителĕклĕ теме пулаť. Ђукун çул тăршшĕпе Кермани ÇАПШ, С.С.Р.С хыççăн виççĕмĕш вырăнта тăраť. Ђукун çул ђи çăра вырăн Рур паççейнинђе. Çурçĕр Керманинђе ђукун çул йĕрĕн ђенттăрĕ—Перлин. Хĕвеланăçпа хĕвелтухăç Йевроппăна пĕрлештерекен тĕп ђукун çулсем Кермани урлă иртеççĕ.

Шыв çулĕ тĕлĕшпе те Кермани аван вырăн йышăнаť. Унти йухан шывсем тинĕсе тухаççĕ, çавăнпа вĕсем çыхăну тытма питех те аван.




19. Кермани промышлĕннăçĕн вырнаçăвĕ.

Тепĕр йенђен йухан шывсене каналсемпе çыхăнтарни çулйĕре аванлатаť. Портмунт—Емски канал çурçĕр тинĕспе Рур паççейнине çыхăнтараť, халĕ тата Рейнпа Тунай шыв паççейнисене пĕрлештерекен пысăк канал туса пĕтереççĕ.

Керманин ђи пысăк порђĕсем—Кампурк, Премен, Щтетпин—йухан шывсем тинĕсе кĕнĕ çĕрте лараççĕ. Палттипе Çурçĕр тинĕсĕсем хушшинђи çыхăну валђи Киђ каналĕ тунă. Ку канал тăрăх тинĕс карапĕсем те çÿреме пултараççĕ.

Вăрçă хыççăн Керманин суту-илÿ флоđĕ нумай ђакрĕ. Халĕ вăл каллех

ӳссе вӑрҫӑҭҭенхинҭен $^3/_4$ пайне йышӑнҭӗ, тоннаш тӗлӗшпе тӗнҭере 4-мӗш вырӑн йышӑнса тӑраҭ (4,1 мӗлйун тоннӑ).

Сывлӑш ҫулӗ те хытӑ сарӑлнӑ. Халӗ Керманире 56 сывлӑш ҫулӗ шутланаҭ.




20. Ҫӗрай пурлӑхсемпе промышлӗннӑҫ.

## Патшалӑх тытӑмӗ.

1918 ҫултанпа Кермани респуплӗк. Патшалӑх пуҫӗнҭе преҫитент тӑраҭ. Ӑна 7 ҫуллӑх суйласа лартаҫҫӗ. Ҫав преҫитентах ҫарпа флот пуҫлӑхӗ пулса тӑраҭ; вӑл ҭиновнӗксене, охвитсерсене илме кӑларма пултараҭ.

Саккунсене рейхстак кӑлараҭ. Министӑрсем ҫав рейхстака пӑхӑнса тӑраҫҫӗ.

Керманине 17 пӗҭӗк патшалӑхсем кӗреҫҫӗ: Пруҫҫи, Паварп, Саксони Патен, Тӳринки т. ыт. (карттӑ ҫине пӑх). Кермани сойусӗн пур патшалӑхӗсем те хӑйсене хӑйсем йӗркелеҫҫӗ, тӗп саккун хушнӑ таран саккун кӑларма та пултараҫҫӗ. Вырӑнти правиттӗлствӑ претставиттӗлӗсенҭен Сойус Канашӗ тунӑ. Ҫав Сойус Канашӗ рейхстак йышӑннӑ саккунсене улӑштарма пултараҭ.

**Ыйтусемпе ӗҫсем:**

1. Керманири еккономӗк районӗсен мӗнле уйрӑмлӑхсем пур? Еккономӗк районсенҭи паллӑрах хуласене вӗсем мӗн йенҭен паллине ҫырса илӗр.
2. 17 №-ле карттӑ тӑрӑх хӑш районта мӗнле ҫӗрайӗнҭи пурлӑхсем пуррине ҫырса илӗр?
3. Кермани ҫулйӗр мӗнле? Шыв ҫулӗсене, ҭукун ҫулсене паллӑраххисене ҫырса илӗр.
4. Конттурлӑ карттӑ тӑрӑх Керманинҭе ҫӗркӑмрӑк кали тӑварӗ, тимӗр рутисем тупакан вырӑнсене паллӑ тӑвӑр.
5, Керманире вӑрҫӑ хыҫҫӑн мӗн ҭухлӗ ҫӗркӑмрӑк йулни, ҫӗнтерне патшалӑхсене кашнине тиакрам туса кӑтартӑр.

## IV. Економĕк криҫĕсĕпе пролеттариатăн револютси йухăмĕ.

Тĕнђе економĕк криҫĕсĕ Кермани хуҫалăхне питĕ хытă хĕстерђĕ тепĕђђĕ. Криҫĕс Керманире хытă ҫивĕђленни хуҫалăхăн вăрҫă хыҫҫăнхи уйрăмлăхсенђен килет. Вăл уйрăмсем ҫаксем: патшалăхăн пысăк тăвăм пултарулăхĕпе унăн тĕнђе хуҫалăхĕнђи пăхăнса тăни, халăхăн илӳ пултарулăхĕ тăвăм хушшинђи хирĕҫӳ, Кермани хуҫалăхне репаратси тӳллевĕпе, Америк сайомĕсем тăрăх прођђăн тӳллессипе тăллани. Версаљ токăвăрĕ хыҫҫăн Кермани пролеттариаđĕ икĕ хут ытларах пусмăрта; пĕр йенђен ăна хăйĕн пуршуаҫийĕ пусмăрлаť, тепĕр йенђен йут кăпиталисла патшалăхсене тӳллемелли те рапођђи клас ҫинех тийенет.

Ҫакăнта ĕнтĕ клас хирĕҫĕвĕ те ҫивĕђленђĕ. Кермани кăпиталисăм ҫистеминђе ђи наҫар сыпăкĕ пулса тăраť.

Керманири економĕк криҫĕсне ђăн малтан тăвăм ђакни, промышлĕннăҫ претприйаттисен пултарулăхĕпе ҫителĕклĕ усă курманни кăтартаť. 1929 ҫулхи март—октяпĕр уйăхсем хушшинђи промышлĕннăҫ тăвăмне 1931 ҫулхипе танлаштарсан—32% ђакнине куратпăр. Промышлĕннăҫăн хăшпĕр пайракĕсем тата ытларах та ђакнă: тимĕр шăратакан промышлĕннăҫ—45%... Тăвăм ђакнă май пĕђĕкрех претприйаттисем пĕтсе саланса пыраҫҫĕ, вĕсем монополиллĕ пĕрлешӳсем аллине куҫаҫҫĕ, кăпитал контсентратсийĕ вăйланса пыраť.

Йут патшалăхсемпе суту-илӳпе пăхсан та криҫĕс ҫивĕђленнинех куратпăр. 1930 ҫулта тавар кăларасси 11 прођ., кӳресси 23 прођ. ђакнă. Тавар йута кăларасси ђакни Керманине тата хăрушлăха лартрĕ, мĕншĕн тесен репарасси тӳлеме ăна укҫа-тенкĕ, тавар сутни питех те кирлĕ.

Йутри рынăксенђе хăйĕн вырăнне ҫухатас мар тесе Кермани пуршуаҫийĕ промышлĕннăҫ тăвăмне ратсионалисатсилет. Анђах ратсионалисатси рынăкăн илӳ пултарулăхĕ ҫаплипех йулнă, йе ђакнă вăхăтра тăвăм пултарулăхне татах ӳстерсе халăх хуҫалăхĕнђе криҫĕсе ҫивĕђлетет.

Йутри рынăкра вырăн ҫухатас мар тесе пуршуаҫи ĕҫлекен класа хытăрах пусмăрласа йӳнĕ тавар, усламне ђакармасăрах, кăларасшăн. Ҫав шутпах пуршуаҫи шалти рынăкра пысăк хаксем туса таварсене сутаť. Вăл ĕҫлекенсен пурнăҫне пушшех ђухăнлатаť.

Керманинђе те ытти ҫĕрти пекех промышлĕннăҫ криҫĕсĕ йалхуҫалăх криҫĕсĕпе пĕтĕҫрĕ, ҫыхăнђĕ.

Йалхуҫалăх криҫĕсĕ питĕ нумай хресђенсене салатаť, вĕсен ҫĕрĕсем шултра ҫĕрхуҫисем аллине лекеҫҫĕ.

Кăпиталисла криҫĕс, тăвăм ђакни ĕҫсĕрсен шутне ӳстерет. Керманинђе кунран кун, ҫулран ҫул ĕҫсĕрсен шуђĕ ӳссе пыраť.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ĕҫсĕрсен шуђĕ . . . | 1928 ҫ. | 1929 ҫ. | 1930 ҫ. |
| (вăтам шутпа уйăхра) . . | 1,5 мĕлйун | 2 мĕл. | 3 мĕлйун. |

Ĕҫсĕрлĕх илӳ пултарулăхне ђакараť; илӳ пултарулăхĕ ӳкнĕ май криҫĕс ҫивĕђленсе пыраť.

Кăпиталисăм, мĕлйунлă пролеттариат ҫарне нушана хăварса клас хирĕҫĕвне ҫивĕђлетет, пролеттари револютси патне илсе пыраť. Пурнăҫа лайăхлатасшăн кăна пулса пыракан ҫапăҫусем кăпиталисăма, пуршуаҫине пĕтересшĕн политтĕкле ҫапăҫусем пулса кайаҫҫĕ.

Рапођђи класăн активлăхĕ хăпараť. Комуниссен парттине йулашки вăхăтра ҫĕршерĕн пиншерĕн кĕреҫҫĕ.

Клас хирĕҫĕвĕ вăйланнă вăхăтра пуршуаҫин темократтиллĕ пăхăнтармалли майсем ҫителĕклĕ мар. Ҫавăнпа вăл фашшисла тиктаттурăна куҫаť. Пролет-

тарпатăн политтĕк орканисатсисене çĕмĕрсе салатса йарасшăн, комунисла парттин ђленĕсене, унăн рукковотиттĕлĕсене пĕтересшĕн, пролеттариат пуç çĕклеине путарса тăкса хăйĕн пуç пулассине çирĕплетесшĕн тăрăшаť. (Тĕслĕхсем темĕн ђухлĕ те кăтартма пулаť: Кампурк хулинђе Кермани парламĕнђĕн комунисла теппуттатне—Кепинка вĕлерни, ĕçлекенсене темонстратсисем тума ђарни, пиђет ирĕкне пĕтерни, сут ĕçĕ купран куп ўсни, комунисла партти Тĕпкомне ухтарни, рукковотиттĕлсене хупа-хупа хуни т. ыт.).

Фашпиисла правиттĕлствăна, рапођђи класа пусмăрлама, унăн ĕç укçине ђакарма, револђутси йухăмне пусарма, сотсиал-темократсен парттийĕ пулăшса пыраť.

Комунисла партти çакăн пек йывăр условисенђе пĕрре ђакмасăр, пролеттариата йертсе пырса, ĕçхалăх массине пĕрлештерсе финанс кăпитал пусмăрне пĕтерсе револђутси туса, пролеттари тиктаттури тăвасшăн кĕрешет.

Економĕк криçĕсĕ политтĕк криçĕсне кĕрсе кайаť.

Кермани пролеттарпађĕн револђутси йухăмĕ хăпарнине 1930—31 ç. пулнă Перлинри метталиссен стађки, Рур пролеттариађĕн çапăçăвĕ, Тури Çилеçири ту промышлĕннăçĕнђе ĕçлекенсен сапастовкки (6 прођ. ĕç укçи ђакарнă пулсан та) лайăх кăтартаççĕ.

Керманири комунисла партти йертсе пынипе комсомол йухăмĕ те ўсрĕ, комсомол орканисатси вăйлансах пыраť. Хăйĕн ретне çĕнĕрен те çĕнĕрен вуншарăн-çĕршерĕн ĕçлекен клас çамрăкĕсене хутăштараť. Клас çапăçăвĕнђе, комсомол комунисла парттине çирĕп пулăшса пыраť. Фашпиисла правиттĕлствă комсомола хирĕç поххотсем тăваť, комсомол йухăмĕн пуçлăхĕсене тĕрмене тултараť, вĕлерет. Комсомола хирĕç пуршуаçине сыхлакан револђутси йухăмне пĕтерме пулăшакан çамрăксен орканисатсисем тăваť.

Вăл кăна мар фашпиисла правиттĕлствă пионер орканисатсисене те салатаť. Шкулсенђе вĕренекенсене «штрафлатпăр, арĕслетпĕр» тесе хăратса пионертан кăлараççĕ. Хăш пĕр пионерсен ашшĕсене ађи пионерта тăнăшăн 40 маркка (марккă 45 пус) çитиђен штрафланисем пур. Пионер активĕсен хваттерĕсенђе политсисем опыскссем (ухтару) тăваççĕ.

Пуршуăçи хăйĕн нађарланса, вăйсăрланса пыракан влаçне мĕнле те пулин çирĕплетесшĕн. Анђах економĕк криçĕсĕ çивĕђленни револђутси криçĕсне ўсме май параť.

## Керманипе С.С.Р.С.

Кермани Совет сойусĕпе çыхăну тытаť. Вăрçă хыççăн хуçалăх питĕ арканнă май, тулти рынăк сахал пирки вăл пирĕнпе економĕк çыхăнăвĕ тытмасăр пултараймасť. Çав вăхăтрах Кермани пуршуаçийĕ ытти кăпиталисла патшалăхри пекех Совет сойусне питĕ кураймасť. Керманири сотсиал-темократсем—Прейтштейт, Килђфертинк Франтсипе пĕрле ССРС-ђе тытнă меншевикла вретиттĕлесене интервентси хатĕрлеме вĕрентсе пынă.

Керманипе економĕклă çыхăну тытса Совет сойусĕ, унăн технĕккă йенђен пысăк ўсĕмĕсемпе усă кураť, строиттĕлствăра кирлĕ таварсене илет. Кермани патшалăхĕ пире промышлĕннăç таварĕсем сутса, технĕккă йенђен вĕреннĕ вăй парса усă курма пултараť. Çавăнпа Кермани пуршуаçийĕ Совет сойусне темĕн пек кураймасť пулсан та пирĕнпе çыхăну тытаť. ССРС-пе Кермани хушшинђе суту-илў тума токăвăрсем тунă.

Пирĕн суту-илўре Кермани пысăк вырăн йышăнаť. Епĕр йута кăларнă,

йутран илнĕ таварсен $^1/_4$ пайĕ Керманипе тивет. ССРС Керманирен метталурки, електритсă, ту промышлĕннăçĕсен таварĕсене нумайрах илет, мĕншĕн тесен Совет сойусĕн ӳсĕмĕ питĕ пысăк пирки ку таварсем хамăрăн çитеймеççĕ. Кермани, пирĕн хуçалăх протукҫĕсене: нехтă, вăрман, йĕтĕн-кантăр, выҫăх-ҫĕрлĕх протукҫĕсене т. ыт. илет.

**Ыйтусемпе ĕçсем:**

1. Мĕншĕн Керманийе криçĕс ҫăн малтан çапрĕ?
2. Мĕншĕн Кермани, кăпиталисăм çиçтеминҫе ҫи наҫар сыпăк пулса тăрат?
3. Економĕк криçĕçĕ тăвăма мĕнле ҫакарнине кăтартакан тиакрам тăвăр.
4. Мĕнле майпа кăпиталисла патшалăхсенҫе ратсионалисатси криçĕçĕ çивĕҫленет?
5 Керманире револютси йухăмĕ хăтарнине тĕслĕхсемпе ăнлантарăр,
6. Мĕншĕн пуршуаçи фашшисла тиктаттурă йышăнат?
7. Хаçат-шурналсем тăрăх вуласа Керманире революсти йухăмĕ мĕнле пыни çинҫен çырăр
8. Мĕншĕн Кермани пуршуаçийĕ Совет сойусне кураймасть пулсан та пирĕнпе çыхăну тытат?
9. Керманирен епĕр мĕнле таварсем илетпĕр? Керманине мĕнле таварсем сутатпăр?
10. Совет сойусне кăпиталисла патшалăхсемпе çыхăну тытма кирлĕ-и?

# Франтси.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Франтси мĕнле çĕрсемпе, шывсемпе ҫикĕленет.
2. Франтсин кеокрафиллĕ вырăнне каласа кăтартăр.
3. Карттă çинҫе Франтси колонисене тупăр, çырса илĕр.
4. Франтси патшалăхĕн çĕр лаптăкăшне масштап тăрăх виçĕр.
5. Франтсин тинĕс хĕрринҫи суту-илӳ хулисене (портсене) тупăр.
6. Франтсин кеокрафиллĕ вырăнне Анклиннипе танлаштарăр. Йут патшалăхсемпе çыхăну тытас йенҫен хăшĕн аванрах.

## Халăх хуçалăхĕ.

Франтси 551 пин тв. километр çĕр йышăнат, унта 41 мĕлйун çын пурăнат. Хĕвеланăç Йевроппăра вăл ҫи пысăк патшалăх. Вăрçăҫҫен уп лаптăкăшĕ 530,4 пин тăваткăл километр пулнă. Империалисăм вăрçи хыççăн Керманинҫен туртса илнĕ Елсас-Лоттаринки Франтси çумне хутшăнҫĕ. Франтсин колонийĕсем те нумай. Хăй, хуçа патшалăхран 22 хут лаптакĕшпе пысăкрах, халĕ те 1,5 ытларах. Колонисем тытас тĕлĕшпе вăл Анкли хыççăн иккĕмĕш патшалăх.

Вăрçăҫҫен Франтси халăх хуçалăхĕнҫе йалхуçалăхĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă. Мĕн пур халăхран 40,7 проҫ. йалхуçалăхĕнҫе, 28,6 проҫ.—промышлĕннăçра, 17,2 проҫ.—çулйĕрпе суту-илӳре ĕçленĕ. Йалхуçалăх протуксийĕ хаклăхĕпе те промышлĕннăçĕнҫен ытларах пулнă.

Франтсире, тинĕссем çывăх майĕпе, климăт çемçе, тăпрасем те çĕрĕçне питĕ йурăхлă. Çутçанталăк условийĕсем йалхуçалăхне самайах лайăх. Анҫах çапах та йалхуçалăх тăвăмĕ патшалăха кирлине çимĕç йенҫен туса çитереймен вăрçă умĕн Франтси 10 проҫ. тырăсем йутран илнĕ.

Промышлĕннăç наҫар аталаннă пулнă; промышлĕннăç ӳсессине çĕркăмрăкĕ патшалăхра сахалли ҫарса тăнă. Тимĕр рути питĕ нумай, çĕркăмрăкĕ сахал, май промышлĕннăçа валҫи çĕркăмрăкĕ йут патшалăхсенҫен кӳмелле пулнă. Çĕркăмрăкĕ çукки метталурки промышлĕннăçне ӳсме паман, çавăнпа вăл Керманирен кайа йулнă.

Тĕнҫе хуçалăхĕнҫе Франтси тавар кăларассипе мар, кăпитал кăларассипе паллă вырăн йышăнат. Таварсенҫен Франтси йут патшалăхсене капăрлăх (роскошь) йапаласем, пурçăн, ҫăнтăр, тумтир т. ыт. нумай йанă. Вăрçăҫҫен праравăр промышлĕннăçĕ пысăк вырăнта тăнă.

Франтси империалисӑмӗ Йевроппӑри ҫӗрсем ҫине те аллине ҭӑсма пуҫлаҭ. Анҭах кунта Анклисӗр пуҫне, тата ӑмӑртакан—Кермани хирӗҫ тухаҭ. Хӑвӑрт ӳсекен Кермани промышлӗннӑҫӗ Франтсине хытӑ хӑратнӑ. Нимрен ытла метталуркипе Кермани Франтсине хӗсӗрлесе иртсе кайнӑ. Вӑл ҫак таплитсӑран лайӑх курӑнаҭ.

| Ҫулсем | Ҫӗркӑмрӑкӗ тупасси (пин тоннӑпа) | | Ҭукун шӑратасси (пин тоннӑпа) | |
|---|---|---|---|---|
| | Франтси | Кермани | Франтси | Кермани |
| 1820 | 1094 | 600 | — | — |
| 1860 | 8304 | 1600 | 450 | 450 |
| 1870 | 13.330 | 30,000 | 1178 | 1391 |

Франтсипе Кермани промышлӗннӑҫӗн интересӗсем Франтсин хӗвелтухӑҫ ҭиккинҭе хытӑ хирӗҫмелле пулнӑ: тимӗрпе пуйан, ҫӗркӑмрӑкӗпе пуйан Рур паҫҫейни икӗ патшалӑхне те хытӑ илӗртнӗ. Нимрен ытла Франтсине Керманин ҫӗркӑмрӑк вырӑнӗ питӗ кирлӗ пулнӑ. Франтсипе Керманин хушшинҭи 1914 ҫулхи вӑрҫӑн тӗп сӑлтавӗ те ҫаках пулса тӑнӑ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн Франтсин халӑх хуҫалӑхӗ хытӑ улшӑннӑ. Керманирен туртса илнӗ Елҭасапа Лоттаринки Франтси промышлӗннӑҫне вӑйлатрӗҫ. 1926 ҫулта Франтсире шӑратнӑ ҭукунтан 40 проҭ., хурҫӑран—37 проҭ. Лоттаринкине тивнӗ, ҫӗркӑмрӑкӗ пиравӑр промышлӗннӑҫӗ—25 проҭ., ҫӑм промышлӗннӑҫӗнҭен—25 проҭ. Елҭасра пулнӑ. Елҭасрах Франтсин пӗтӗм калҭи промышлӗннӑҫӗ.

Империалисӑм вӑрҫинҭе Франтси Керманине ҫӗнтерҭӗ. Ҫавӑнпа Франтси Керманирен репаратсипе контрипутси тӳлевӗ илет. Репаратси тӳлевне малтанласа Кермани йапаласемпе те тӳлленӗ. Ҫавӑнпа Франтси промышлӗннӑҫӗ вӑрҫӑ хыҫҫӑн хытӑ, ҫӗнӗ технӗккӑна ӗҫе кӗртсе хӑпараҭ.

Ҫӗркӑмрӑкӗ вырӑнне Франтси «шур кӑмрӑкпа» усӑ кураҭ. «Шур кӑмрӑкпа» усӑ курас йенҭен вӑл Йевроппӑра пӗрӗмӗш вырӑн йышӑнаҭ (11 мӗлйун лаша вӑйӗ).

Вӑрҫӑҭҭенхипе танлаштарсан Франтси промышлӗннӑҫӗ 39 проҭ. ӳснӗ. Промышлӗннӑҫӑн ҫӗнӗ пайракисем—машшин тӑвасси, автомопил, авиатси, хими промышлӗннӑҫсем хытӑ аталаннӑ.

Ҫакӑнпа пӗрле унӑн ытти патшалӑхсем хушшинҭи вырӑнӗ те ӳснӗ. Пӗтӗм Хӗвеланӑҫ Йевроппӑ тупинҭен Франтсине ҫакӑн ҭухлӗ тивнӗ (проҭҭӑнпа);

| | 1913 ҫ. | 1928 ҫ |
|---|---|---|
| Тимӗр рути . . . . . . . | 21 | 60 |
| Ҫӗркӑмрӑкӗ . . . . . . | 8 | 10 |
| Ҭукун. . . . . . . . . | 15 | 22 |
| Хурҫӑ . . . . . . . . | 15 | 22 |
| Пиравӑр промышл, . . . | 8 | 11 |
| Машшин тӑвасси . . . . | 10 | 20 |
| Хими промышл. . . . . . | 15 | 20 |
| Автомопил промышл, . . | 35 | 35 |

Франтсин метталурки промышлённăçĕ Анклине хуса çитсе иртсе кайрĕ, вăл ÇАПШ-пе Кермани хыççăн виççĕмĕш вырăн йышăнтĕ.

Франтси вăрçăттенех питĕ нумай тимĕр рутиллĕ çĕр тытаканскер Лоттаринкине туртса илнĕ хыççăн тимĕр рутисентен татах пуйанлантĕ. Люксемпуркпа Наиççи хушшинти тимĕр рути промышлённăçĕ Йевроппăра пĕрĕмĕш вырăн йышăнать. 1927 çулта Франтсинте 45 мĕлйун тоннă тимĕр рути тупнă. Вăл мĕн пур патшалăхсем тупнин 25 проц., Хĕвеланăç Йевроппăра тупнин 60 проц. пулать. Франтси тупнă тимĕр рутисентен $^3/_4$ пайне хăй метталурки савăтĕсенте шăрататъ, ыттине йут патшалăхсене сутать. Лоттаринкипе пĕрле вăйланнă Франтси метталурки промышлённăçĕ 1930 çултенех ÿссе пытĕ. 1931 çулта çеç ăна тĕнтери екномĕк крисĕсĕ çитсе çапрĕ.

| Çулсем | Букун шăратасси | Хурçă шăратасси |
|---|---|---|
| | (мĕлйун тоннăпа) | |
| 1913 ç. (Лоттаринкисĕр) | 5,2 | 4,7 |
| 1926 | 9,4 | 8,4 |
| 1928 | 10,0 | 9,3 |
| 1929 | 10,4 | 9,6 |

Йута сутнинтен йулнă меттал йулашки машшин тăвакан промышлённăçа кайать. Машшин тăвакан промышлённăç шалти рынăка кирлинтен тавар ытларах та тăвать. Машшин йута сутасси хаклăхпа пиравăр промышлённăç таварĕ хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăнать.

Вăрçă хыççăн автомопил промышлённăçĕ те хытă ÿссе пытĕ. 1921 çулта 5 пин автомопил тунă пулсан 1928 çулта 210 пине çитернĕ. Ку шутпа Франтси ÇАПШ хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăнать. Кашнă çул вăтам шутпа 50 пин автомопил йута сутаççĕ.

Химп таварĕсене йутран илекенскер Франтси 10—15 çул хушшинте хăй йута кăларма пуçларĕ. Нимрен ытла кали тăварĕсем, краскă, реçинă, вăрçă хатĕрĕсем тăвасси хытă ÿснĕ.

Пиравăр промышлённăçĕ вăрçăттенхине çитеймен. Пиравăр промышлённăçĕнтен çĕрмамăкĕ тĕртесси, çăм, пурçăн промышлённăçсем хытă аталаннă.

Çĕркăмрăк кăларассипе Франтси 4-мĕш вырăнта тăнă. Халĕ пирĕн ССРС тăваттăмĕш вырăна кÿса ларнă май вĕсем такса пыраççĕ. Пĕтĕм хăйне кирлĕ çĕркăмрăкран $^1/_4$ пайне Франтси йутран илет. Çителĕклĕ тупайманни çĕркăмрăкĕ Франтсире сахаллинтен килет. (Мĕн пурĕ унта 17,5 мĕлйарт тоннă шутланать, вăл Йевроппăри 3 проц., пĕтĕм тĕнтерин 0,3 проц. пулать).

Франтсин промышлённăçĕн тĕп тенттăрĕсем—Парижп, (тĕп хула) Лилль, Валансйен, Нанçи, Мÿлхкауçен, Страспурк пулаççĕ.

Тĕп промышлённăç районĕсем Франтси Пеллкипе тикĕленнĕ çĕрте тата Ельсас-Лоттаринкинте. Ронă айлăмĕнте меттал, хими, пурçăн, промышлённăçсем. Тенттăрĕ—Лион. Вăрçă хыççăн Альпи, Вокесă патĕнти «шур кăмрăкпа» пуйан районсем промышлённăçланса кайрĕç.

Франтси промышлённăçĕ йепле вырнаçнине (55 стр.) кăтартнă карттăран курма пулать.

**Ыйтусемпе ӗҫсем:**

1. Францси халӑх хуҫалӑхӗнђе империалисӑм вӑрҫи хыҫҫӑн мӗнле улшӑнусем пулнӑ? Мӗншӗн?
2. Францсин Анклипе Керманипе мӗнле хирӗҫӳсем пур?
3. Ељсас—Лоттаринки Францси халӑх хуҫалӑхӗнђе мӗнле промышлӗннӑҫсем ӳстернӗ.
4. Францсин ытти патшалӑхсем хушшинђи вырӑнӗ мӗнле улшӑнса пынӑ?
5. Францсири тӗрлӗрен промышлӗннӑҫ найракисем вырнаҫнӑ вырӑнсене карттӑ тӑрӑх тупӑр, ҫырса илӗр.

# Йалхуҫалӑхӗ.

Йалхуҫалӑхне аталантарас йенђен Францсире условийӗсем питӗ йурӑхлӑ терӗмӗр. Францин ҫӗрӗн ҫурҫӗртен хӗвеланӑҫнелле айлӑмсем, хӗвелтухӑҫпе кӑнтӑрпа хӗвелтухӑҫ йенелле тусемпе тӗме вырӑнсем. Керманипе Пељки ђикӗленекен ҫӗрте Артеннӑ тӑвӗсем выртаҫҫӗ, кӑнтӑралла Швейтсарипе ђикӗленнӗ ҫӗрте Йурӑ ту—сӑрђӗсем, Йурӑран кӑнтӑралла Йевроппӑри ђи ҫӳллӗ тусем—Аљппӑ тӑвӗсем выртаҫҫӗ.




21. Францсин промышлӗннӑҫ картти.

Аҁппӑ тӑвӗсенҁен хӗвеланӑҫнелле Ронӑ айлӑмӗсем, уп хыҫҫӑн Франтсири Вӑтам маҫҫив улӑхса хӑпарса кайаҭ.

Аҁппӑ, Пиреней тӑвӗсем Вӑтам маҫҫивсӗр пуҫне йалхуҫалӑхпе хӑтланма пур ҫӗрте те йурӑхлӑ теме пулаҭ.

Климӑт та питӗ йурӑхлӑ; Атлантти оккеан йенҁен вӗрекен ҫилсем ӑшӑ тата ҫӑмӑр илсе килеҫҫӗ.

Франтсин хӗвеланӑҫ йенҁе (айлӑмсем вырӑнӗ) тинӗс климӑҁӗ. Париш айлӑмӗсенҁе, хӗвелтухӑҫ районӗсенҁе ҫулла питӗ шӑрӑх, хӗлле сивӗ, ҫапах та йур ҫунӑ кунсем сахал пулаҫҫӗ. Нӳрлӗх пур ҫӗртре те ҫителӗклӗ.

Ронӑ айлӑмӗн кӑнтӑр пайӗпе Вӑтам ҫӗрти тинӗс хӗрринҁе сивӗсем паҁах пулмаҫҫӗ, нӳрлӗх те сахалтарах ӳкет, ҫанталӑк шӑрӑх тӑраҭ, ҫавӑнпа унта троппиккӑри ӳсен тӑрансене ӗрҁетме май пур.

## Йалхуҫалӑх районӗсем.

Ҫутҫанталӑк условийӗсем тӗрлӗрен пулнипе йалхуҫалӑхӗ те тӗрлӗрен районсенҁе уйрӑм сӑн-тӗслӗ. Аҁппӑ тӑвӗсем хӗвеланӑҫ тайлӑкӗнҁе выҁӑх-ҁӗрлӗх ӗрҁетеҫҫӗ. Вӑтам маҫҫива та выҁӑх-ҁӗрлӗх районӗ теме пулаҭ, анҁах кунта ҫӗрӗҫлесси те хытӑ аталаннӑ. Пӗрҁӗллӗ тырӑсенҁен ыраш, урпа акса тӑваҫҫӗ. Вӑтам тинӗс районӗнҁе, Ронӑ айлӑмӗнҁе винократ, пурҫӑн йӑвӑҫҫисем (тут йӑвӑҫҫи) хытӑ ӗрҁетеҫҫӗ. Ку районӑн хӗвелтухӑҫ пайӗнҁе аппеҁҫин, лимон вӑрманӗсем йешӗреҫҫӗ.

Ҫурҫӗр-Франтси айлӑмӗ патшалӑхӑн тӗп йалхуҫалӑхлӑ районӗ пулаҭ. Кунта тулӑ, сӗлӗ, тата сахӑр кӑшманӗ нумай тӑваҫҫӗ. Ҫак районӑн Шампаҥ провинтсинҁе винократ нумай ӗрҁетеҫҫӗ.

Каронна, шывӗ паҫҫейнинҁе тулӑ, винократ, куккурус, тапак ӗрҁетес ӗҫ вӑйлӑ.

Йалхуҫалӑх куҁттурисенҁен Франтсире пӗрҁӗллӗ тырӑсем—тулӑ, сӗлӗ ытларах тӑваҫҫӗ. Тулӑ тӑвассипе те тулӑ акнӑ лаптӑкӗшпе те Франтси Хӗвеланӑҫ Йевроппӑра пӗрремӗш вырӑн йышӑнаҭ. Винократ тӑвассипе Франтси ытти патшалӑхсем хушшинҁе уйрӑмах малта тӑраҭ.

Выҁӑх-ҁӗрлӗх ӗрҁетесси йалхуҫалӑхӗнҁе иккӗмӗш вырӑнта. Шултра, мӑйракаллӑ выҁӑх-ҁӗрлӗх шуҁӗпе Франтси Хӗвеланӑҫ Йевроппӑри Кермани хыҫҫӑн иккӗмӗш вырӑнта тӑраҭ.

Тырпулӑ тухӑҫӗ йенҁен Франтси Анклипе Керманирен кайра. Анклипе Пеҁкире хура пус 2—3 проҁ. йышӑнаҭ пулсан Франтсинҁе 12—13 проҁ. ҫитет.

Йалхуҫалӑхне ӳсме ҁаракан тӗп сӑлтав—вӑл усӑ курас ҫӗр питӗ вакланса пӗтни. 1—10 кектар тытакан уйрӑм хуҫалӑх кирек йепле пулсан та ҫӗртен тухӑҫ илессине ӳстерме пултараймасҭ.

Вӑрҫӑ, ӗҫлекен вӑйа вӑрҫа илсе кайса, сусӑрласа, сахаллатса вак хресҁен хуҫалӑхсене питӗ амантса хӑварҁӗ. Машшинпа вак хуҫалӑхра усӑ курманни (усӑ курма майӗ те ҫук), ӗҫлекен вӑй сахалланни хуҫалӑха шалтах ӳкерҁӗ. Налуксем ӳсни, Америкӗн йӳнӗ тырри ӑмӑртура вак ҫӗр тытакансене пӗтерҁӗ, йалхуҫалӑхӗ кайалла кайрӗ. Йал халӑхӗ выҫӑ вилес мар тесе хулапалла ӗҫ шырама туртӑнҁӗ. Анҁах хулара та вӗсене економӗк криҫӗсӗ май ӗҫсӗрлӗх, выҫлӑх, нуша кӗтет.

Ҫапла вак хуҫалӑхсем пӗтсе пынӑ май ҫӗр шултра, пуйанрах ҫӗр хуҫисем аллине кӗрсе пыраҭ.

## Екрномӗк криҫӗсӗ тата классен ҫапӑҫӑвӗ.

Керманири ӗҫлекенсен йун тарӗпе, (Керманирен реппаратсипе контрипутси тӳлевӗ илсе тӑрат) ытти патшалӑхсене криҫӗс хӗстернӗ ђух Франтси нумайђђен парӑнмасӑр тӑђӗ. Анђах 1930ҫул пӗтсе 1931 ҫул пуҫланнӑ ҫӗре криҫӗс Франтси промышлӗннӑҫӗн мӗн пур пайракисене те ҫавӑрса илђӗ; вӑл пайракасен тӑвӑмӗ кунтан кун ђакма пуҫларӗ. Йут ҫӗре промышлӗннӑҫ таварӗ кӑларасси ђакни криҫӗс хӗстернине лайӑх кӑтартат. Ҫулталӑкри вӑтам шутпа промышлӗннӑҫ интӗксӗ 1928 ҫулта %% 100 танлашнӑ пулсан, 1930 ҫулта—110 ҫитнӗ. 1931 ҫулта вӑл хытӑ анма пуҫларӗ.

| | | |
|---|---|---|
| Февраљ | — | 105 |
| Март | — | 104 |
| Апрељ | — | 103 |
| Май | — | 101 |
| Ийуњ | — | 99 |
| Ийуљ | — | 97 |

Ҫапла ӗнтӗ тӗнђе криҫӗсӗ Франтсине те хӑйӗн ӑшне ҫавӑрса кӗртсе кайрӗ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн ӗҫсӗрлӗх пађах курман Франтсинђе хаљхи вӑхӑтра пӗр мӗлйун ытла ӗҫсӗр ӗҫлекен шутланат. Ӗҫлекенсен ӗҫ укҫи те хытӑ ђакса пырат. 1930 ҫулта ӗҫлекенсен ӗҫ укҫи вӑрҫӑђђенхипе танлаштарсан 60 проц. кӑна пулнӑ. Криҫӗс ҫивӗђленсе пынӑ май пуршуаҫи ӗҫ укҫи ђакарса ӗҫ кунне вӑрӑмлатасшӑн тӑрӑшат. Ҫакӑ ӗҫлекен класпа пуршуаҫи хушшинђи хирӗҫӗве ҫивӗђлетет. Малтанласа ӗҫлекенсем хӑйсен пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн кӑна, кӗрешнӗ пулсан халӗ Франтсинђи комунисла партти йертсе пынипе кӑпиталисӑм тытӑмне ӳпӗнтерсе ӗҫлекенсене ирӗке кӑларасшӑн кӗрешеҫҫӗ. Хаљхи вӑхӑтра ӗҫлекенсен йухӑмӗ вӑйланса пынӑ май патшалӑх аппараđӗ те фашшисланса пырат.

## Патшалӑх тытӑмӗ.

Франтси патшалӑхӑн пуҫӗнђе преҫитент тӑрат. Ӑна ҫенатпа теппуттатсен палатти суйлаҫҫӗ. Вырӑнти влаҫ (тӗпри) ђенттӑртан лартнӑ ђиновниксен аллинђе.

Парламӗнта суйланӑ ђух тӗрлӗрен парттисен вӑйлӑ ҫапӑҫу пырат.

Комунисла партти 1920 ҫулта пуҫланнӑ, ун шуђӗ те, ђапӗ те хытӑ ӳсет.

## Франтсин колонийӗсемпе колони политтӗкӗ.

Франтси колонийӗсем 12 мӗлйун тӑваткӑл километр ҫӗр йышӑнаҫҫӗ. Вӗсенђе 60 мӗлйун ҫын пурӑнат. Франтси колонисем тытнипе иккӗмӗш вырӑн йышӑнат. Ун ђи пысӑкрах, колонийӗсем Афрӗккӑра: Алшир, Тунис, Марокко, Хӗвеланӑҫ Афрӗккӑ, екваттӑрти Афрӗккӑ тата Матакаскар утравӗ. Аҫири Франтсин колонисем—Интокиттай ҫурутравӗн хӗвелтухӑҫ йенђи ҫурри, Ҫири. Кусемсӗр пуҫсӑр Амерӗкре те колониллӗ тытӑмсем пур. (Квиана).

Пуйанлӑх йенђен Франтси колонийӗсем Анклинђен кайарах. Мӗншӗн тесен колонисем хӑйӑрлӑ хир нумай йышӑнаҫҫӗ. Франтси промышлӗннӑҫӗшӗн ђӗрӗ тавар ҫӑлкуҫӗ пулса тӑрат. Интокиттайпа Матакаскар утравӗ, Хӗвелтухӑҫпе екваттӑрти Афрӗккӑ ҫӗрмамӑкӗ параҫҫӗ, Интокиттайпа екваттӑрти Афрӗккӑ автомопил промышлӗннӑҫне кирлӗ—кауђук, тата ҫӑмтир таврашӗ, ҫурҫӗр Афрӗккӑри колонисем—ҫимӗҫ таврашӗ параҫҫӗ.

Халиђђен Франтси колонисем ђӗрӗ тавар ҫителӗклӗ параймаи: ҫӗрмамӑкӗ кирлинђен—2 прођ., ҫӑм—6 прођ., кауђђук—18 прођ., тырӑ 13 пр.

Ђӗрӗ тавар тӑвӑмне сарас тесе Франтси пуршуаҫийӗ унти халӑхӑн ҫӗрне турта-турта илет. Унти халӑха вӑйпа тӗрлӗрен ҫулйӗр т. ыт. тунӑ ҫӗрте ӗҫлеттерет. Колонисенђи ӗҫхалӑхӗ ђура вырӑнђе, ђӑтма ҫук нушара пурӑнаӗ. Екваттӑрти Афрӗккӑра 20 ҫул ӗлӗк 10 мӗлйун халӑх пурӑннӑ, халӗ 2 мӗлйун ҫын кӑна йулнӑ, ыттисем вилсе пӗтсе пынӑ.

Колонисене Франтси ђиновнӗкӗсем тытса пӑхса усраҫҫӗ. Вырӑнти халӑхӑн нимле ирӗк те ҫук. Ҫавӑнпа та колонири ӗҫҫыннисен пӗр ҫулта пӑлхавсем пулманни иртмест. (Маркко, Ҫири, Интокиттай т. ыт. колонисенђе те вӑйлӑ пӑлхав, вӑрҫӑсем пулђӗҫ, халӗ те пулса пыраҫҫӗ). Франтси империалисӑмӗ пӑлхавҫӑсене йун ӑшне путараӗ. Анђах ҫапах та колонири ӗҫҫыннисем ҫапӑҫма пӑрахмаҫҫӗ. Комунисла партти йертсе пынипе колонисенђе ӗҫлекенсемпе хресђенсен револђутсиллӗ йухӑмӗ хытӑ ӳссе пыраӗ. Франтси империалисӑмӗн пусмӑрӗнђен тухасшӑн колонисенђи халӑх хытӑ ҫапӑҫаӗ.



22. Франтсин Афрӗкри колонисем.

## Франтсин тулти политтӗкӗ.

Франтси тӗнђе политтӗкӗнђе пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан капиталисла патшалӑх. Йевропӑри ӗҫсенђе ӑна йертсе пыракан теме те пулаӗ. Йевроппӑри нумай патшалӑхсем—Пољшшӑ, Йуко-Слави, Ђехо-Словакки, Румыни т. ыт. Франтси алли айӗ пулса, вӑл хушнине туса тӑракансем пулаҫҫӗ. Пољшшӑпа Румыни ССРС-пе ђикӗленекен ҫӗрпе хӑйсен патшалӑхӗсене аслӑлатас шухӑҫа пулӑшса Франтси хӑй, вӑл патшалӑхсем хушшинђе вӑй илсе пыраӗ.

Кунсăр пуçсăр çак асăннă патшалăхсем Керманине хирĕç политтĕкпе пĕрлешеççĕ, мĕншĕн тесен вăрçă хыççăн вĕсем пурте Керманипе Австро-Венкри çĕрĕсем шуђĕпе, хайсен çĕрĕсене аслăлатрĕç.

Тепĕр йенђен Франтси нумай кăпитал йута кăларакан патшалăх. Франтси империалисăмĕ Йевроппăра еккономĕкпа политтĕк йенђен пуç пулса тăрасшăн. Çав шутпах Франтсинђе «Пан Йевроппă» планĕ тунăђђĕ. Вăл план тăрăх пĕтĕм Хĕвеланăç Йевроппăри патшалăхсем сойус тумалла, ăна йертсе пыракан Франтси пулмалла. Ку сойус пĕр йенђен ССРС-не хирĕç кăпиталисăм пĕрлешесшĕннине кăтартаť; тепĕр йенђен Франтси ытлашши таварĕпе кăпиталне вырнаçтармалли май шыраннне пĕлтерет. Франтси пуç пуласран хăраса «Пан Йевроппă» тăвассипе ытти империалисла патшалăхсем хирĕçеççĕ.

Франтси Йевроппăри ђи пысăк, милиттарисла патшалăх. Вăл тĕнђере ђи пысăк çар, сывлăшпа тинĕс флођĕ тытаť. Унăн вăрçă промышлĕннăçĕ тĕнђере ђи вăйли шутланаť. Çав промышлĕннăçа вăл ытти патшалăхсемпе хăйĕн хушшинђи хирĕçĕвĕ татнă ђух кирлĕ пуласспне кура ÿстерет. Нимрен ытла Совет Сойуспе пиťĕ кураймасť.

Кăпиталисăм хирĕçĕвĕсем çивĕђленнĕ май кашниђех вĕсем Совет сойуспе вăрçа кĕртсе йарса ăна пĕтересшĕн тăрăшаççĕ.

Вăрçăђђен Раççейре ытти патшалăхсен-кăпиталĕ хушшинђе Франтси кăпиталĕ пĕрĕмĕш вырăн йышăннă. Ун кăпиталĕ 11 мĕлйарт франклăх шутланнă. Октăпĕр революци патша тÿлевĕсене пĕтерсе пĕтĕм промышлĕннăçа патшалăх аллипе парса експлоататсипе пĕтерђĕ. Çавăнпа та Франтси пуршуаçийĕ ССРС-не вăрçăпа пĕтересшĕн тăрăшаť, унтан вăл каллех хăйне валђи рынăк туса йарасшăн. Совет сойусне тапăнма хатĕрленсе вăл хăйне итлекен патшалăхсенепе те хатĕрлентерет, нимрен ытла Полђăна Румынине, мĕншĕн тесен вĕсем Совет сойусĕпе ђикĕленеççĕ. Йулашки вăхăтр Паолђшăра Франтси кăпиталĕпе вăрçă промышлĕннăçĕ ÿстереçĕç. Франтси Совет сойусне пĕтерме вăрçă хатĕрленипне вретиттĕлсен органисатси «Промпартти» лайăх кăтартрĕ. Вăл ССРС вретиттĕл органисатсийĕ Франтсири кенераллă штап хушнипе ĕçленĕ.

Франтсийех Совет сойусĕ тавар йута кăлараcсипе хирĕçлес ĕçре пуçласа йертсе пыракан пулђĕ. Вăлах Совет сойусĕн таварĕсене илмелле мар саккунсем кăларђĕ.

Çакăнтан та Франтси йепле хирĕçлипе лайăх куратпăр. Анђах кашниђех, Совет сойусне хирĕçнĕ ђух, хăйĕн ĕçлекен клас хăйне хирĕççипе, Совет сойусне сыхланине кураť.

**Ыйтусемпе ĕçсем:**

1. Еккономĕк криçĕсĕ мĕншĕн Франтсине кайран тин çитсе çапрĕ?
2. Франтси йалхуçалăхĕ Анклинђен мĕнрен уйрăм?
3, Франтси йалхуçалăхне ÿсме мĕн ђараť?
4, Йалхуçалăх криçĕсĕ Франтсинђе мĕнле пыраť?
5, Мĕнле майпа вăл ытлашши кăпитал тытакан пулса кайнă?
6, Франтсин мĕнле колонисем пур? Ăçта?
7, Колонири ĕçхалăхне йепле пусмăрланине каласа кăтартăр.
8, Франтсин тулти политтĕкне каласа кăтартăр,
9, «Пан—Йевроппă» планĕ мĕнле шухăш тытаť?
10. Мĕншĕн Франтси вăрçă промышлĕннăçне хытă ÿстерет?
11. Хăйĕн империалисла шухăшсене пурнăçа кĕртнĕ ђух хăш патшалăхсемпе усă кураť
12. Франтсипе ытти кăпиталисла патшалăхсен мĕнле хирĕçĕвсем пур?
13. Промпартти вретиттĕлсен ĕçĕнђе Франтси мĕнле вырăн йышăнса тăнине вуласа пĕлĕр.
14. „Франтси Совет сойусне хирĕç „вăрçа тухасшăн“ йатлă токлат çырăр. Совет сойусĕ пуçланнăранпа Франтси Совет сойусне хирĕçле ĕçсем тунине токлата кĕртĕр.

# Пелки.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Пелки тавра мĕнле тинĕссем пур? Мĕнле патшалăхсемпе ђикĕленет?
2. Пелки патшалăхĕнђе мĕнле йухан шывсем пур, унăн релйеф йепле?

Пелки 30 пин тăваткăл килеметр çĕр йышăнаť, 7,8 мĕлйун çын пурăнаť. Унăн тĕп хули—Прÿççĕл. Кашни тăваткăл километр пуçне 256 çын тивет.

Пелки хĕвеланăç Йевроппăри промышлĕннăçпа куђттурă йенђен малта тăракан патшалăх.

Пелкин хĕвеланăç йенђе тинĕс хĕррипе хăйăрлă сăртсем выртаççĕ, тата хĕвелтухăçнерех пысăк тÿремлĕх.

Кунта çын питĕ нумай пурăннă çĕршыва питĕ аван йусанă; кунталли ђĕршыв пĕтĕмĕшпе сат-пахђа пек курăнса лараť. Климăт ку выраăнсенђе çемçе. Йанвар уйăхĕнђе те сивĕсем пулмаççĕ, шывсем хĕлле те шăнмаççĕ. Çулла сулхăнрах. Пелкин паллăрах хуласем—Прÿççĕл (800 пин çын), Антверпен т. ыт. Антверпен хули Шелте шывĕ хĕррнђе лараť. Шелте шывĕ тарăн майĕпе Антверпена çитиђђенех тинĕс пăрахуђĕсем çÿреççĕ, çавăнпа Антверпен Йевроппăра паллă порт пулса тăраť.

Маас шывĕнђен хĕвелтухăçнелле Артеннă йатлă çÿлĕ вырăн пур; унта климăт урăхларах, хĕлле сивĕ, çулла хĕрÿ.

Пелкире икĕ тĕслĕ халăх пурăнаť: хĕвеланăç пайĕнђе фламантсăсем, хĕвелтухăç пайĕнђе виллонсем пурăнаççĕ.

Пелкире кашнă тăваткăл километр пуçне 256 çын тивет, ку тĕлĕшрен Пелки тĕнђере ђи тăвăр çĕрлĕ патшалăх шутланаť. Пелкире хулара пурăнакан халăх ытларах шутланаť.

# Халăх хуçалăхĕ.

## I. Промышлĕннăç.

Пелки промышлĕннăçлă патшалăх, мĕн пур халăхран çурри промышлĕннăçра ĕçлет, йалхуçалăхĕнђе $^1/_6$ пайĕ çеç.

Пелки промышлĕннăçĕ хытă аталаннă. Хăй пĕђĕк патшалăх анђах пулин те малта тăракан пысăк патшалăхсемпе танлаштарсан вăл паллă вырăн йышăнаť. Пелкийĕн хĕвелтухăç пайĕнђе Маас шывĕ тăрăх çĕркăмрăк тупаççĕ. 1929 çулта çĕркăмрăкĕ 27,5 мĕлйун тоннă тупнă. Çĕркăмрăкĕ нумай тупаççĕ пулсан та Пелки ку тĕлĕшрен (тĕнђере 8-мĕш вырăн йышăнаť). Промышлĕннăç хытă ÿснĕ пирки çĕркăмрăкĕ çитеймест, çавăнпа Пелки йутран, Керманирен нумай илет.

Çĕркăмрăкĕсĕр пуçне Пелкире тимĕр рутисем те ђылай.

Пелкире метталурки промышлĕннăçĕ хытă аталаннă. Йулашки вăхăтра Пелкийе хăйĕн тимĕр руги çитеймест, ăна вăл Франтсирен, Ђукçемпуркран кÿрет. Ђукунпа хурçă тупассипе Пелки тĕнђере пиллĕкĕмĕш вырăн йышăнаť. 1929 çулта Пелкире 4,1 мĕлйун тоннă хурçă, 4 мĕлйун тоннă ђукун ирĕлтернĕ. Çĕркăмрăкĕ районĕ çывăхнерех метталран тĕрлĕрен йапала тăвакан промышлĕннăç питĕ ÿснĕ. Пысăк савăтсенђе тĕрлĕрен машшинсем, твикăттĕлсем тăваççĕ. Лйеш хули пăшал тавраш тупипе паллă. Ђинк тупассипе Пелки промышлĕннăçĕ тĕнђере ÇАПШ хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăнаť, тата вăл авалтанпах кантăк тăвассипе паллă вырăн йышăнса тăраť. Пиравăр промышлĕннăçĕ те пим-

рен ытла çĕркăмрăкĕпе йĕтĕпрен пиравăр хатĕрлесси пысăк вырăн йышăнаҭ. Ку йенђен Пелки Аслă Ԋриттани хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăнаҭ.




23. Франтсипе Пелкин промышлĕннаç картти.

## 2. Йалхуçалăхĕ.

Пелкире йалхуçалăхĕ те питĕ малта тăраҭ. Çĕрсем питĕ тирпейлĕ, аван ĕçлеççĕ, тупăш та пысăк илеççĕ. Тухăçлăх йенђен Пелки йалхуçалăхĕ тĕнђере пĕрĕмĕш вырăнта тăраҭ. Анђах çапах та халăх питĕ йышлă май хăйĕн тырри пихăçан та çитмест. Выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетесси аталаннă май курăксем акмалли çĕр вырăнĕ ўссе пыраҭ, пĕрђĕллĕ тырăсем акнă çĕр лаптăкăшĕ ђакаҭ. Пелкире тата питĕ нумай çĕрулми, сахăр кăшманĕ тăваççĕ. Иилђт шывĕ тăрăх йĕтĕн ђылай акаççĕ.

Выђăх-ђĕрлĕхсенђен Пелкире нимрен ытла лашасем, măйракаллă выђăхсем, сыснасем нумай усраççĕ. Аратлă выђăхсене йут патшалăхсене те нумай сутаççĕ, сăмахран, Пелкири йывăр лавсем туртакан лашасем питĕ мухтава тухнă.

### Çулйĕр.

Пелкин йуханшывсем тăрăх çўремелли çулсем, ђукун çулсем питĕ нумай. Пелкири пек ђукун çул нумайи пĕтĕм тĕнђипе те çук. Унта кашнă 1000 тв. километра 246 километр ђукун çул тивет. Ђукун çулсен ђенттăрĕ Прўççĕл хули пулаҭ. Йут патшалăхсемпе суту-илў тăвасси Антверпен порђĕ урлă пыраҭ.

Пелки йутран апат-çимĕç тавраш ĕсем, промышлĕннăç ваљљи ђĕрĕ таварсем илет. Йута хатĕр тавар, пуриңђен ытла меттал, праваăр промышлĕннăç таварĕсем кăларать.

Вăрçăђђен Пелки Раççейпе суту-илӳ вăйлă тунă: йĕтĕн, тулă т. ыт. пумай илнĕ. Халĕ Совет сойусĕпе суту-илӳ вăйлах мар.

Пелки нихăçанах йута тавар ытларах сутнă, хăй йутран сахалрах илнĕ.

Пелки—конститтутсиллĕ монархи. Саккунсем икĕ палаттă витĕр тепутатсен палаттипе çенат палатти витĕр тухаççĕ. Ĕç тăвакан влаç корољ аллинђе.

Комунисла партти Пелкире 1920 çултанпа ĕçлет.

Пролеттариат пурнăçĕ питĕ йапăх: ĕç укçи питĕ сахал, Пелкири рапођђисем Анклири рапођђисенђен те 2—3 хут кайарах.

Вăрçă хыççăн Кермани колонийĕсенђен ђылайĕшĕ Пелки аллине лекрĕç. Ытти патшалăхсем хушшинђе хирĕçӳ çивĕђленнĕ, вĕсем çапăçнă вăхăтра Пелки каллех колонисем илсе йуласшăн, хăйĕн вырăнне колонисенђе çирĕплетесшĕн.

Пелки економĕк йенђен Франтсипе çыхăну çирĕп тытать, Франтси политтĕкне туса пырать.

Пелкин колонийĕсем—Афрĕккăра. Кунта унăн «Пелкин Конко» çĕршывĕ йатлă колони пур. Конко çĕрĕ 2,4 мĕлйун тăваткăл километр йышăнать, унта 7,5 мĕлйун çын пурăнать.

Конко Пелки економĕкĕнђе пысăк вырăн йышăнать. Кунта троппĕкри ӳсентăрансем ĕрђеççĕ; вăрман та нумай. Вăрманти йăвăçсем хушшинђе кауђук йăвăççисем, тĕрлĕрен паљмăсем тĕл пулаççĕ. Ку пуйанлăхсемсĕр пуçне Конкора тĕрлĕрен çĕрайĕнђи пуйанлăхсем те пур; тĕслĕхрен кунта пăхăр тупасси пысăк вырăн йышăнать, çĕркăмрăкĕ, ылттăн та пур.

## Колланти.

**Карттăпа ĕçлесси.**

1. Коллантисене карттă çинђе тупăр, унăн ђиккисене кăтартăр.
2. Колланти патшалăхĕнђе мĕнле шывсем йухаççĕ, мĕнле пысăк хуласем пур?

Колланти 34 пин тăваткал километр çĕр йышăнать. Унта 7,4 мĕлйун çын пурăнать, тĕп хула—Каака. Халăх Коллантире питĕ йышлă, кашнă тв. километра 217 çын тивет. ??5550

Колланти (тепĕр тĕрлĕ Нитерланты) Керманипе ђикĕллĕ хĕвеланăç йенелле выртать.

Коллантире климăт пур çĕрте пĕр пек мар: хĕвелтухăçнелле çанталăк типĕ тăрать, тăпра та çĕрĕçне йурăхлă мар, хĕвеланăç йенелле нӳрлĕх çителĕклĕ тăпра та йурăхлă, тырăсем те вăйлă пулаççĕ. Колланти йышăннă çĕрĕн 0,25 пайĕ тепĕ пек океан шывĕнђен айаларах выртать. Çавăнпа тинĕс таппин шывĕ ан хупласа илтĕр тесе варне сапур пек йарса (10 метр çӳллĕшĕ, 100 метр сарлакăшĕ) икĕ айăккипе тăпра-хăйăр купаласа хунă.

Çакăн пек плоттинăсем хăшпĕр шыв хĕррисемпе те тунă. Айлăмсенђи шывсене çил вăйĕпе авракан нассуссемпе типĕтмелли канавсене уçласа кăларса йарса тăраççĕ. Коллантин тинĕспе ђылайах çапăçма тивет, вăл пин çул ĕлĕкреппех шыва хирĕç кĕрешсе пурăнать. Тĕрлĕрен типĕтмелли майсемпе Колланти халăхĕ ђылай кӳлĕсене типĕтсе çĕре акса тăма йурăхлă тунă.

Тинĕс тепĕр ђух плоттинăсене татса çĕрсене шыв айне путарса хурать; пĕрре çапла тинĕс шывĕ хупласа илсе пысăк Çӳтерсейе саливĕ пулса тăнă.

## Йалхуҫалăхĕ.

Колланти йалхуҫалăхĕ питĕ тухăҫлă; хура пус мĕн пур акмалли ҫĕртен 0,7 проӆ. ҫеҫ шутланать. Мĕн пур йалхуҫалăх лаптакĕнӆен ҫарансемпе выӆăх ҫӳремелли вырăнсем ҫуррине йахăн йышăнаҫҫĕ. Пĕрӆĕллĕ тырăсенӆен ыраш, сĕлĕ ытларах акаҫҫĕ; техникăллă культурисенӆен—йĕтĕн, сахăр кăшманĕ, ҫĕрулми. Кусемсĕр пуҫне сат ĕрӆетессипе ӆеӆек ĕрӆетесси паллă вырăн йышăнать.

Ҫапах та Колланти ҫĕр ĕҫĕпе мар—выӆăх-ӆĕрлĕх ĕрӆетессипе ытларах пурăнать. Унта нимрен ытла шултра мăйракаллă выӆăх ытларах усраҫҫĕ. Выӆăх-ӆĕрлĕх протукӆĕсем—сĕт, ҫу, ӆăкăт Колланти йут ҫĕре йамалăх та тăвать. Ҫемҫе, тинĕс климăӆĕ, йешĕрекен ҫарансем выӆăх-ӆĕрлĕх ĕрӆетме питĕ йурăхлă.

Колланти хуҫалăхĕнӆе пулă тытасси те паллă вырăн йышăнать; Ҫурҫĕр тинĕсĕнӆе ҫелӆоткă, трескка нумай тытаҫҫĕ.

## Промышлĕннăҫ.

Ҫĕрайĕнӆи пурлăхсенӆен Коллантире ҫĕркăмрăкĕ, торф пур. Ҫĕркăмрăкĕ нумайах мар, хăйне кирлĕ шутран ҫуррине кăна тупать. Промышлĕннăҫра ӆи пысăк вырăн йалхуҫалăх протукӆĕсенӆен тĕрлĕ йапала тăвасси йышăнать: ҫу, ӆăкăт, сахăр, ерех тăвасси. Коллантире тата йутран кӳнĕ ӆĕрĕ таварсенӆен тĕрлĕ тавар, тата карап тăвакан промышлĕннăҫ аталаннă. Пиравăр промышлĕннăҫĕ те ӆылай ӳснĕ.

## Ҫулйĕр.

Коллантире шыв ҫулĕсем нумай: пĕтĕм патшалăхĕпех урлă пирлĕ каналсем ӆавнă,- Коллантиренех Рейн, Маас, Шелӆă шывĕсем пур. Шыв ҫулĕсенӆен ӆи пуйанни тĕнӆере Колланти. Унта кашнă 1000 тăваткал километр ҫĕр лаптăкне 152 километр шыв ҫулĕ тивет. Паллăрах, пысăк портсенӆен Коллантире Рейн шывĕ ҫинӆи Роттертама, тата ҫурҫĕр тинĕсне каналсем тăрăх сыхăннă Амстертама асăнмасăр хăварма пулмасть. Ку портсем пĕр Коллантишĕн кăна мар, Пелкипе Керманишĕн те паллă вырăн йышăнаҫҫĕ. Коллантин тинĕс флоӆĕ те пысăк; вăл тĕнӆе транспăрӆĕнӆе те пысăк вырăн йышăнать. (1929 ҫулта тоннашĕ 2,9 мĕлйун тоннă пулнă.).

Ирĕклĕ суту-илӳ политтĕкне тытнă май кеокрахвиллĕ вырăнĕ питĕ йурăхлипе (Йевроппăри шывсем Ҫурҫĕр тинĕсне йухса тухнă ҫĕрте) Коллантире йут патшалăхсен таварсене сутса илесси питĕ саралнă. Хăйĕн таварĕсенӆен Колланти йута сĕт, сыр, ҫу, ҫăмарта, пиравăр таварĕ кăларать; йутран тырăсем, пиравăр промышлĕннăҫĕ валӆи ӆĕр тавар, ҫĕркăмрăкĕ метталсем илет.

Суту-илӳ Анклипе Керманипе вăйлă пырать. Совет сойусĕнӆен Колланти ӆĕрĕ таварсем, тырă илет.

Колланти тахҫан авалрапа тинĕс тăрăх ҫӳрекен нумай ҫĕршывсемпе суту-илӳ тăвакан патшалăх. Вăл хăй аллине пысăк колонисем ҫавăрса илнĕ: унăн аллинӆе Коллантин Ост-Интийĕ текен ҫĕршывсем кунта Сонт утравĕсем Йавă, Суматра, Тселепес, Порнео утравĕсен пайĕсем кĕреҫҫĕ); Молуккă утравĕсем, тата Ҫĕнĕ Квинейă утравĕн ҫурри кĕрет. Кусемсĕр пуҫне Колланти кăнтăр Америкри Квиана пайне, Вест-Интире—Кĕҫĕн Антталӆ утравĕсенӆен хăш пĕрне тытса тăрать. (Колланти пĕр Ост-Инти колонийĕх 2 мĕлйуна йахăн тăваткăл километр ҫĕр йышăнать, унта 50 мĕлйун ытларах ҫын пурăнать).

Колланти колонийёсем ҫёр лаптӑкёшёпе Коллантирен 60 хут пысӑкрах. унти халӑх шуӗё те 7 хут ытларах.

Колланти колонийёсенӗе тёрлё таварсем нумай: Колланти Интийёнӗе каучук пите нумай, (тёнӗипе паллӑ выран йышӑнать); Йава утравёнӗе сахӑр хӑмӑшё нумай (вӑл Куна хыҫҫӑн сахӑр хӑмӑшё нумаййипе тёнӗере иккёмёш выран йышӑнать. Кашнӑ ҫул 2 мёлйун тоннӑ сахӑр парать). Порнео, Суматра утравёсем ҫинӗе нехтӑ нумай. Колланти Интийёнӗе шур тӑхлан нумай тупаҫҫё.

Ҫак асӑннӑ колонисенӗен Колланти хайён промышлённаҫё валӗӗи пите нумай ӗёрё тавар илсе тӑрать, колонири халӑха пусмӑрласа пурӑнать. Финанс капиталён пусмӑрё ӳснёҫем ӳссе пырать; колонири халӑхран ҫурхакӗа ӗёрё тавар илсе, хайён тауарён хакне ӳстерсе сутать. Пусмӑр пите йавӑр пирки колонисенӗе ӗас-ӗасах революцилле пӑлхавсем пулкалаҫҫё. Ҫапла 1927 ҫулта Йавӑпа Суматра утравёсем ҫинӗе пӑлхавсем пулса иртрёҫ.

**Ыйтусемпе ёҫсем:**

1. Коллантире мёншён выӗӑх-ӗёрлёх ёрӗетме ҫӑмӑл?
2. Коллантин паллӑрах хулисене карттӑ ҫинӗе тупӑр.
3. Колланти мёнле таварсем йута йарать, мён илет? Тиакрам тӑвӑр.
4. Колланти колонийёсене карттӑ тӑрӑх тупӑр. Унта мёнле пуйанлӑхсем пуррине пёлёр?
5. Хӑш районта мёнле промышлённаҫ сарӑлнӑ? Мёншён?

## Иттали.

1. Карттӑ ҫине пӑхса Иттали мёнле патшалӑхсемпе ӗикёленнине пёлёр.
2. Итталире мёнле шывсем, мёнле кӳлёсем, сӑртсем пуррине пёлёр.
3. Итталине мёнле тинёссем ӗикёлеҫҫё, унта мёнле утравсем выртаҫҫё?

Иттали 310 пин тв. километр ҫёр йышӑнать. Ун лаптӑкӑшне Аппенин ҫурутравё, Ломпарт айлӑмлӑхё, Аӗппӑ тӑвён кӑнтӑр йенё, тата Ҫитсили, Сартини, Еӗпӑ утравёсем кёреҫҫё. 1914—1918 ҫулти вӑрҫӑ хыҫҫӑн Австро-Венкри кӑнтӑрти Тироӗ, Атриатти тинёс хёрин пайёмён пурё 25 пин тӑваткӑл километр Итталине кусрё.

Иттали пур йенӗен те Вӑтаҫёр тинёсе тухма пултарать. Суетск каналё ӗавнӑранпа вӑл тинёс Йевроппӑран кӑнтӑрпа хёвеланӑҫ Аҫине каймалӗи тинёс ҫулё пулса тӑӗё.

Итталин ҫурҫёрти пайё айлӑмлӑ. (По шывё тӑрӑх). Климӑт сивё, ҫулла шӑрӑх пулать. Нӳрлёх ҫителёклё. Тӑпрасем ҫёрёҫлеме пите йурӑхлӑ.

Итталин кӑнтӑр йенӗи пайё сӑртлӑрах. Пётём ҫурутрав тӑрӑх ҫӳлех мар Аппенин тӑвёсем тӑсӑлаҫҫё. Кунта тёл-тёл тӳремлёхсем пур.

Иттали Йевроппӑра пысӑк, империалисла патшалӑх пулса тӑрать. Вӑл Вӑтаҫёр тинёсё тавра выртакан ҫёрсене ҫавӑрса илесшён. Анӗах ӑна кунта ытти империалисла патшалӑхсем ӗарса тӑраҫҫё, нимрен ытла Франтси хирёҫ тӑрать, мёншён тесен унӑн та Вӑтаҫёр тинёсре вӑрҫӑ флоӗё пур.

Итталире 40 мёлйун ытларах ҫын пурӑнать. Халӑх пуринӗен ытла Ломпарт айлӑмёнӗе пите йавӑ пурӑнать.

Ҫавӑнпа Итталирен нумай халӑх ытти ҫёршывсене куҫать. Вӑрҫӑӗӗеп кашнӑ ҫул 700 пин ҫынна йахӑн йут ҫёре куҫнӑ, нумайӑшё ҪАПШ-не кайнӑ. Халё ҪАПШ сахалтарах куҫма саккун тухнӑ май йут ҫёршывсене кайасси ӗакнӑ.

Итталире хулара пурӑнакан халӑх ытларах шутланать; хула халӑхё те таврари ҫёрсенӗе ҫёрёҫпе йе сатпахӗа туса пурӑнать.

Италин ӗи пысӑк хули—Неапоӗ, (780 пин ҫын пурӑнать), ун хыҫҫӑн Ломпарт айлӑмёнӗи—Милан. Иттали тёп хули—Рим (Типӑр шывё хёрринӗе).

# Халăх хуçалăхĕ.

## 1. Йалхуçалăхĕ.

Иттали çĕрĕçĕпе пурăнакан патшалăх. Мĕн пур халăхран—55,7 проҌ. йалхуçалăхĕнҌе, 24,7 проҌ. çеç промышлĕннăçра,—10,3 проҌ. çулйĕрпе сутуилӳре ĕçлеççĕ.

Çĕршыв сăртлă май Итталире çĕрĕçпе пурăнма питĕ йăвăр. Ломпарт айлăмĕ çурçĕртен Аљпă тăвĕсем хӳтĕленĕ май, Вăтаçĕр тинĕсрен ăшă вĕри çилсем пынипе, çĕрĕçне питĕ йурăхлă. Кунта пирĕнни пек сивĕсем паҌах пулмаççĕ, йанвăр уйăхĕнҌе те 0 кратус сивĕ пулмасть.

Ломпарт айлăмĕнҌе тĕрлĕрен йалхуçалăх куљттурĕсем тăваççĕ; кăнтăр йенҌе тулă, куккурус, рис, сахăр кăшманĕ акаççĕ.

Шыв хĕрисемпе винократ нумай ĕрҌетеççĕ. УтравсенҌе лимон, аппелçин, мантарин, оливккă (çу тумалли) йăвăçсем питĕ нумай ĕрҌетеççĕ. Технĕкла куљттурăсенҌен ИтталинҌе кантăр акаççĕ. Кантăр акса тăвассипе Иттали ССРС хыççăн тĕнҌере иккĕмĕш вырăн йышăнать.




24. Итталири йалхуçалăх районсен картти

Итталире йалхуçалăх техпĕк йенҌен питĕ кайа йулнă. ПĕрҌĕллĕ тырă акмалли вырăн та çителĕклĕ мар. Çавăнпа Иттали тырă хайне кирлĕ шутран 25—30 проҌ. йутран кӳрет.

Мĕн пур ĕçлеме йурăхлă çĕртен Итталире çурри ытла сатсем йышăнаççĕ. Оливккă çăвĕ тăвассипе, пурçăн Ҍĕрĕ таварне пухассипе (тĕнҌерин—10 проҌ.) Итталине çитекен патшалăх Йевроппăра çук. Винократ лартнă çĕр вырăнĕпе (4,3

мёлйун кектар) вăл тĕнҫере пĕрмĕш вырăн йышăнаҭ, анҫах тухăҫĕ унăн питĕ йапăх, сахал.

Выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетесси йапăх, ĕç выҫăхĕ питĕ сахал. Вылăхсенҫен сурăх каҫака ытларах.

Халăх хуçалăхĕнҫе тинĕссенҫе пулă тытасси те паллă вырăн йышăнаҭ.

Йалхуçалăхне малалла кайма çĕр шултра çĕрулпуҫĕсен аллинҫе тăни кансĕрлет. Çĕрулпуҫĕсем хăйсем хуçалăх тытмаççĕ, çын урлă, йе хăйсемех çĕрсене тупăш пайĕпе усă курмалла тара парса пурăнаççĕ. Тара панă çĕршĕн мĕн пур тухăçран çуррине йахăн, йе тепĕр ҫух ытларах та илеççĕ.

Пĕҫĕк çĕр татăкĕ çинҫе ĕçлекен хресҫен, кунтан кун çĕрне кайалла туртса илессе кĕтсе тăраканскер, кирек йепле пулсан та çĕртен усă курассине ӳстерме пултараймасҭ: çĕре çемçетмелли, йалхуçалăх машшинĕсемпе усă курма унăн укçа та çук, мĕншĕн тесен хресҫене йулнă тупăшĕ ăна хăйне тăранса пурăнма та çитмест.

Йалхуçалăхĕнҫе ĕçлекенсен шуҫĕ Итталире 5 мĕлйуна йахăн. Вĕсем çĕрулпуҫĕсен хуçалăхĕнҫе ĕçлеççĕ.

Халĕ йалхуçалăх криçĕсĕ тĕнҫипех çивĕҫленсе пынă ҫух, Итталири йăвăр пурнăçран йута кайакансем ниçта та ĕç тупаймаççĕ. Çавăнпа ĕçсĕрсен шуҫĕ хытă ӳсет, пурнăçĕ те вĕсен йапăхлансах пыраҭ.

## 2. Промышлĕннăç.

Промышлĕннăç Итталире питĕ йапăх аталаннă. Вăл çрайĕнҫи пурлăхсем çук пирки, нимрен ытла çĕркăмрăкĕ сахал пирки ӳсме пултараймасҭ. Промышлĕннăçра 3,5 мĕлйун ĕçлекен шутланаҭ:

| | | |
|---|---|---|
| Пиравăр промышлĕннăç-ҫе | — 623 | пин çын |
| Тимĕр-тăмăр „ | — 400 | „ „ |
| Ту „ | — 375 | „ „ |
| Апат-çимĕç „ | — 300 | „ „ |
| Йăвăç ĕçлекен „ | — 228 | „ „ |
| Хими „ | — 92 | „ „ |

Пиравăр промышлĕннăçĕнҫен çĕрмамăкĕпе пурçăн тĕртесси хытăрах аталаннă. Апат-çимĕç промышлĕннăçĕнҫен ерехпе, маккарон тăвас ĕç ытларах сарăлнă. Тимĕр-тăмăр промышлĕннăçĕнҫен—автомопил, пăрахут, сывлăшра вĕçмеллисем, вăрçă промышлĕннăçĕ малта тăраççĕ.

Йулашки вăхăтра Иттали «шур кăмрăкпа» нумай усă курма пуçларĕ. Мĕн пур Итталире тупнă електритсă вăйĕнҫен 80 проҫ-не шыв вăйĕ параҭ.

Çĕрайĕнҫи пурлăхсенҫен Итталире кĕкĕрт нумай. Кĕкĕрт тупассипе вăл тĕнҫере пĕрмĕш вырăн йышăнаҭ.

Промышлĕннăç Итталин çурçĕрйенелле ытларах вырнаçнă, мĕншĕн тесен шалти рынăк халăх ҫухăн пирки питĕ хĕсĕк. Çавăнпа промышлĕннăç таварĕ йута нумай кайаҭ. Сăмахран, автомопил промышлĕннăçĕн 75 проҫ. протукси йута кайаҭ.

Иттали çĕршывĕ питĕ хăвăрт интустрпленеймест, мĕншĕн тесен унăн çĕрайĕнҫен кăларакан пурлăхсем сахал, кăпитал сахал, ĕçхалăхĕ ҫухăн пирки тавар нумай илеймест, технĕккă йенҫен кайа йулнă пирки Иттали промышлĕннăçĕ тĕнҫери рынăкра малта тăракан кăпиталисла патшалăхсемпе кĕрешме

пултараймасть. Ҫапах фашшисла правиттĕлствă хăйĕн колониллĕ политтĕкне пăрахмасть.

Фашшисла правиттĕлствă Итталине йутран кĕрекен таварсем ҫине пысăк налук хурать, йут кăпиталиссенҫен хăйĕн промышлĕннăҫне сыхлать, анҫах апла тунипе вăл тавар хакне хăпартса ĕҫхалăхăн пурнăҫне пушшех йăвăрлатать.




25. Итталин тимĕр рути, кӳкĕрт, мрамăр тупакан вырăнсен картти.

Йут патшалăхсемпе ăмăрткаласа Иттали пуршуаҫийĕ тавар хакне йунетесшĕн рапоҫҫисен укҫине ҫакарать. Ĕҫ укҫи 1929 ҫулта вăрҫăҫҫенхипе танлаштарсан 18 проҫ. ҫакнă.

Екпономĕк криҫĕсĕ Итталине питĕ хытă ҫапрĕ. 1929 ҫулта Итталинҫе 300 пин ĕҫсĕр пулнă, 1930 ҫулта—пĕр мĕлйуна ҫитнĕ, 1931 ҫулта ĕҫсĕр аптăракансен, тата ҫур кун анҫах ĕҫлекенсен йышĕ мĕн пур ĕҫлекенсен ҫуррине йахăн пулнă. Хапрăк-савăтсем пултарнă таран ĕҫлемеҫҫĕ, йе паҫах хупăнаҫҫĕ. Криҫĕс ҫивĕҫленсех пырать.

Ҫулйĕр йенҫен Иттали питĕ аван вырăн йышăнса тăрать. Вăл Вăтам Йевроппăри патшалăхсемпе ҫукун ҫулсемпе ҫыхăннă. Ҫукун ҫулсем Ҫурҫĕр Итталире ытларах, ҫылай вырăнсенҫе кунта електритсă ҫукун ҫулĕсем. Ҫурҫĕр Итталирех пăрахутсем ҫуремелли йурăхлă По шывĕ йухать. Суетс каналĕ ҫавнăрапа Иттали пĕтĕм тĕнҫен тинĕс ҫулĕ ҫинҫе пулса тăҫĕ.

Тинĕс флоҫĕпе Иттали тĕнҫере улттăмĕш вырăнта тăрать (3,4 мĕлйун тоннă). Пысăкрах портсем Кенуйа, Венетси, Неапоҫ т. ыт. те.

Екпономĕк пĕҫĕккĕн ӳссе пынă пирки Италире ĕҫхалăх масси йăвăр пусмăрлăх айĕнҫе пурăнать. Вăрҫă хыҫҫăн ĕҫхалăхĕн пурнăҫĕ пушшех йапăхланнипе клас хирĕҫĕвĕсем татах ҫивĕҫленҫĕҫ. Пролеттариат выҫă пирки пуршуаҫине хирĕҫ тăра пуҫларĕ. Рапоҫҫисем кĕрешсе ĕҫ кунне 8 сехете хă-

варђĕç, ĕç укçине кăшт хăparттарђĕç. Кунпа пĕрлех хресђенсем патраксем çĕрулпуђĕсеен çĕрĕсене турта-турта илнĕ. Анђах ĕçлекенсемпе хресђенсен револђутсиллĕ йухăмне çителĕклĕ йертсе пыман пирки ĕç пит малаллах кайаймарĕ. (Комунисла партти ун ђухне вăйсăртарах, пĕђĕкрех пулнă).

Фашшиссем револђутси йухăмне йун ăшне путарђĕç. Пуршуаçипе çĕрулпуђĕсем фашшисла тиктаттурă туса лартрĕç, рапођђисен мĕн пур орканисатсисене пĕтерђĕç. Ку ĕçре Муссолини йертсе пыђĕ. Фашшисла тиктаттурă шултра пуршуаçине çĕрупуђĕсен инттересĕшĕн кĕрешет.

Профсойус орканисатсисенђен пĕрклĕ ĕçлекен фашшисла çинтиккат çеç. Ку çинтиккатра ĕçлекенсемпе хапрăк-савăт хуçисем те тăраççĕ, вăл мĕнле «револђутсиллĕ» иккенни паллах.

Итталире комунисла партти вăрттăн ĕçлет. Фашшиссен влаçне пĕтересшĕн кăпиталисăма сирпĕтесшĕн пĕтĕм рапођђисемпе хресђенсене пĕрлештерсе револђутси тума орканисатсилет.

Итталин колонисем пур. Вĕсем 2 мĕлйун тăвакăл километр çĕр йышăнаççĕ, 2 мĕлйуп ытларах халăх пурăнат. Ун колонийĕсем: Триполитани (900 пин тв. километр, 550 çын пурăнат), Киренаика (600 пин тв. клм., 225 пин çын), Еритрейа (119 пин тв. клм., 390 пин çын), Сомали (400 пин тв. клм., 800 пин çын, Тшупа (90 пин тв. клм., 100 пин çын). Кусем пур те Афрĕккăра. Вĕсем пысăк çĕр вырăнĕ йышăнаççĕ пулсан та економĕк йенђен кайа йулаканскерсем.

Кусемсĕр пуçне Итталине Кретсирен туртса илнĕ Екей тинĕсĕ çинђи ђылай утравсем пăхăнса тăраççĕ, тата Киттайра пĕр пысăках мар лаптăк Тйентсçин пур.

Пур колонисем те Итталин пысăк рынăксем пулаймаççĕ, ђĕрĕ тавар парас йенђен те нађар. Çавăнпа вăл ытти çĕрелле колонисем туртса илесшĕн пурăнат: Палккан çурутравĕнђи Алпани çĕрне алла илесшĕн, Йукославин Талматси çĕрне, Франтсин—Тунис, Корçиккă çĕрĕсем те ăна хытă илĕртеççĕ. Çавăнпа Иттали Франтсине хирĕç вăрçа хытă хатĕрленет. Вĕсем Палккан çурутравĕ çинђе пуç пуласшĕн те хирĕçеççĕ. Кунта Франтси Йукослави Иттали майлă кайасран хăрат.

## Итталипе С.С Р.С.

ССРС-пе Иттали економĕклă çыхăну тытаççĕ, токăвăр тăрăх суту-илў тăваççĕ. Фашшисла Иттали Франтсипе вăрçă тавраш пулсан хăйне кирлĕ таварсене—нехтă, çĕркăмрăкĕ, тырă, т. ыт. Совет сойусĕнђен илсе тăрасшăн пирĕнпе çыхăну тытат. Иттали çав вăхăтрах Совет сойусне питĕ кураймаст. Тĕнђери лару-тăру улшăннă май унăн политтĕкĕ те пађах улшăнса—пырат. Вăл Совет сойусне хирĕç вăрçăпа тухма ђасах хатĕр.

# Йаппони.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Йаппони ытти патшалăхсенђен мĕнле тинĕссемпе, шывсемпе уйăрăлса тăнине карттă çине пăхса пĕлĕр.
2. Тинĕс йухăмĕсем Йаппони климăтне мĕнле урăхлатнине сăнăр.
3. Йаппони утравĕсен пысăкăшне пĕлĕр, ăна мĕнле патшалăхпа танлаштарма пулат.
4. Карттă тăрăх Йаппони çĕр пиђĕ мĕнлине ђухлăр.

Йаппони мĕн пурĕ 686,9 пин тăваткал километр çĕр йышăнат, унта 84 мĕлйун çын пурăнат. Вĕсенђен Йаппони утравĕсем çинђе, 388 пин тăваткал

километр ҫинҫе 59,7 мĕлйун ҫын, Формосă утравĕ—36 пин тăваткал километр ҫинҫе—4 мĕлйун ҫын, Сахалин (кăнтăр) 36 пин тăваткал клм.—6,4 мĕлйун ҫын, Аслă оккеанри утравсем—2,5 пин тăваткал клм.—0,05 мĕлйун ҫын, Корейăра 221 пин тăваткал клм. ҫинҫе—19,5 мĕлйун ҫын, Квантунк 3,4 пин тăваткал клм. ҫинҫе—0,7 мĕлйун ҫын пурăнаҭ.

Вăтам шутласан пĕр тăваткал километр пуҫне 122 ҫын лекет.

Йаппони пирĕнтен хĕвелтухăҫнелле, утравсемпе, маттерикри Квантункпа Корейă ҫурутравĕсене йышăнаҭ.

Муссон ҫилĕсем вĕрни Йаппони утравĕсенҫи климăта ҫемĕҫтерет. Хĕвеланăҫ йенҫен хĕлле Ҫĕпĕр сивĕ ҫилĕ вĕрни сулхăнлантараҭ. Йаппони патĕнҫен иртсе кайакан Куро-Ҫивă ăшă йухăмĕ хĕллепе ҫемҫетет, ҫуллана нӳрĕ, ăшă параҭ.

Ҫурҫĕр Йаппонинҫе (Курил утравĕсем, Саххалиң, Хокканто утравĕсем). Климăт сивĕрех, хĕл те сивĕ, йур нумай ӳкет. Кунта сĕмвăрмансем нумай кăнтăралла вĕсем сайралса пыраҫҫĕ.

Вăта Йаппони (Конто, Ҫиккок, Киу-Ҫиу утравĕсем) йышăнаҭ. Температтурă вăтам: хĕлле те нуҫрен сивĕ пулмасҭ.

Кăнтăралла кайнă ҫемĕн климăт суп-тропиĕкри пек пулса пыраҭ.

Кунта ҫулҫăллă вăрмансем, ĕмĕр симĕс йĕшĕрсе ларакан ӳсен-тăран тĕнҫе.

Кăнтăр Йаппонинҫе (Формосă, тата ытти вак утравсем) нӳрĕ, шăрăх климăт. Кунта Камфар йăвăҫҫисем, пампук, папан, фикус, паҫмăсем ҫитĕнеҫҫĕ.

## Йаппони хуҫалăхĕ.

Йаппони хăвăрт ӳсse ҫитнĕ империалисла патшалăх. Ҫĕрайĕнҫи пуйанлăхĕсем, нехтă, ҫĕркăмрăкĕ, тимĕр рути, ыттисем сахал пулин те, вăл ку пуйанлăхсене Киттайа ҫаратса, ытти утравсене ҫавăрса илсе хăвăрт ӳсse кайрĕ.

Йаппони интустриленсе пыни ҫакăнтанах паллă, 1914 ҫулти вăрҫă умĕн йалхуҫалăхĕ 54 проҫ. йышăннă. 1928 ҫулта 41 проҫ. анҫах йышăнаҭ. Пĕтĕм хуҫалăхра йалхуҫалăхĕ хаҫхи вăхăтра—48 проҫ. йышăнаҭ.

Мĕн пур ҫĕр лаптăкĕн 15 проҫ. (6 млн. к.а.). ҫĕрĕҫне йурăхлă, ытти 67 проҫ. вăрмансем, тусем, йурăхсăр ҫĕрсем йышăнаҫҫĕ.

Йалхуҫалăхра—5,5 мĕлйун вак хуҫалăх шутланаҭ. Кашни хуҫалăха вăтам шутпа 1 кектартан мала мар тивет.

Ҫĕрхуҫисен аллинҫи ҫĕре шута илсен Йаппони ĕҫхресҫенĕсен пурăнăҫĕ мĕнли паллах.

Пĕтĕм ҫĕрĕҫпе пурăнакан ҫынсен 46 проҫҫăн харпăр-хăй анисем ҫинҫе ĕҫлеҫҫĕ пулсан ыттисем тара илсе ĕҫлесе пурăнаҫҫĕ. Йаппони хресҫенĕ ҫĕр сахаллипе хăй анине алăпах ĕҫлет. Унăн ĕҫхатĕрĕсем—кĕреҫе, хусăк.

Ҫĕр пит тухăҫлă пулсан та, хĕсĕк пирки Йаппони хресҫенĕ выҫăллă-тутăллă пурăнаҭ. Ҫавăнпа та пĕр йенҫен Йаппонинҫен ҫулленех йут ҫĕре ĕҫлеме нумай ҫын кайаҭ. Йалхуҫалăхри тĕп куҫттурсем—рис. Ҫулленех рис 10 мĕлйун тоннăран кайа мар тăваҫҫĕ. Анҫах вăл ҫителĕклĕ мар; кирлинҫен ³/₄ анҫах. Ҫитменнине йут ҫĕртен—Приттани Интинҫен, Формосăран, Корейăран кӳреҫҫĕ. Рисран пуҫне тата тулă, урпа, сĕлĕ, куккурус, ҫĕрулми, тапак, ҫĕрмамăкĕ, ҫей акса тăваҫҫĕ.

Тата пурçăн нумай тăваççĕ. Ăна хађ вăрçăђђенхинђен икĕ хут нумай тăваççĕ. Пурçăн тунипе Йаппони тĕнђере пĕрĕмĕш вырăн йышăнаŤ.

Формосă утравĕнђе сахăр хăмăшĕ тата камфар йăвăçĕ ўстереççĕ.

Шултра выђăх ĕрђетесси Йаппонире аталанайман. Халăх хуçалăхĕнђе тата пулă тытас ĕç пысăк вырăн йышăнаŤ. Вăл ĕçре 1 мĕлйун çынна йахăн ĕçлет. 19-мĕш ĕмĕрĕн вĕçĕнђе Йаппони кăпиталисăмĕ аталанса çитсе феоталисăм йĕркисене ишсе кăпиталисăм çулĕ çине тухрĕ.




26. Йаппонипе Киттайăн йалхуçалăх картти.

Кăпиталисăм тара илсе пурăннă хресђенсене çĕрсĕр хăварса улпутсем аллинех ђикрĕ, аталанакан промышлĕннăç вађђи ĕççарĕ туса пађĕ.

Йаппони йалхуçалăхĕн 70 прођ. çĕре тара илсе ĕçлесе пурăнаŤ.

Çĕр укçи питĕ хаклă. (1 кектар çĕрĕн ĕмĕрлĕх хакĕ 1000—2000 тенкĕ тăраŤ).

Çĕре тара илсе акма питĕ хаклă пирки вăтамсемпе ђухăнсем çĕрсĕрленсе ĕççĕре тăрса йулаççĕ. Йалхуçалăхĕнђе ĕçлекенсен хисепĕ ђаксах пыраŤ. Çав май тырă тухăçлăхĕ те ђакаŤ..

Йут патшалăхсен конкурентсийĕ йалхуçалăхне татах нађарлантарса пыраŤ. Вак хресђенсем çĕрĕсене сутса, пăрахса çĕрулпуђĕсен тарçисем пулса тăраççĕ.

Çĕр улпуђĕсен пусмăрĕ ĕçхалăхне револютсилентерсех пыраŤ. Вĕсем ђасђасах пăлхавсем тăваççĕ.

Комунисла партти рапођђисемпе хресђенсене револютси çулĕ çине кăларса пурнăçа аванлатмалли май кăтартса пыраŤ.

## Промышлĕннăç.

Çĕр айĕнђи пурлăх Йапонинђе нумай мар: çĕркăмрăкĕ пур. (8 мĕлйарт тоннă, ССРС-ђен 60 хут сахалтарах). Çĕркăмрăк çулленех—30




27. Йаппони промышлĕннăçĕн картти.

мĕлйун тоннă кăларăççĕ, ку шута Йаппони тĕнђере 7-мĕш вырăн йышăнать.

Çĕркăмрăк промышлĕннăçĕн ђенттăрĕ—Накассакки (Киу-Çиу утравĕ çин-

ђе). Нехтă питĕ сахал. Йаппони «шур кăмрăкран» пуйан, (8 мĕлйун лаша вăйĕ). Ҫав шутран халĕ 40 прођ. ĕҫе кĕнĕ.

Тимĕр тăпри сахал (Корэйăра кăшт ҫеҫ пур). Ыттине Йаппони Киттайран кӳрет. Пăхăр тăпри ҫителĕклĕ. Ăна тупассипе Йаппони тĕнђере 4-мĕш вырăнта тăрат. Промышлĕннăҫра пиравăр промышлĕннăҫĕ пысăк вырăн йышăнат.

Мĕн пур рапођђисенђен 50 прођ. пиравăр промышлĕннăҫĕнђе ĕҫлеҫҫĕ. Пуринђен ытла ҫĕрмамăка арласа тĕртекен промышлĕннăҫ малта тăрат. Тĕнђипе тупăнакан ҫĕрмамăкăн 12 прођ.-не Йаппони тăват.

Ку промышлĕннăҫ 1913 ҫулта хытă ӳсрĕ, Йаппонире 1928 ҫулта 6,3 мĕлйун йĕке шутланнă, (тĕнђере 7-мĕш вырăн). Вăл тĕлĕшпе Йаппони ҪАПШ-па Анкли хыҫĕнђе тăрат. Хăйĕн ҫĕрмамăкĕ ҫителĕклĕ маррипе Йаппони ăна ҪАПШран, Интирен, Йекиппĕтрен илет.

Пиравăр таварĕсем Йаппонирен пуринђен ытла Киттайа кайаҫҫĕ.

Киттайра Йаппонипе Анкли хушшинђе конккурентси вăйлă. Халђхи вăхăтра Йаппони хăйĕн пиравăр таварĕсене Аркенттинăна, Ҫĕнĕ-Ҫелантине, Перҫҫине, Туртсине тата ытти патшалăхсене те йарат.

Йаппонире пурҫăнпа ҫăм промышлĕннăҫĕ те вăйлă аталаннă.

Йаппонирен йута йаракан таварсенђен 70 прођ. пурҫăн таварĕсем йышăнаҫҫĕ.

Тавар хаклăхĕпе, претприйатти шуђĕпе иккĕмĕш вырăнта ҫимĕҫ промышлĕннăҫĕ тăрат. Анђах меххаџисатси тĕлĕшпе вĕсем вак пирки кайа йулнă.

Електритсă промышлĕннăҫĕ Йаппонире пуҫланса кайни 40 ҫул ҫеҫ ҫитет пулсан та вăл хăвăрт, вăйлă аталанса ҫитнĕ. Йаппони електритсă промышлĕннăҫĕ хăй патшалăх панккисенђе ҫеҫ мар, йут ҫĕршывсенђи панккăсенђен нумайăшĕнђе хуҫа пулса тăрат. Електритсă промышлĕннăҫĕ ӳснĕ ҫемĕн контсентратсиленсе пынă. Халђхи вăхăтра електритсă промышлĕннăҫ 5 пысăк фирмă аллинђе. Шыв електростантсисем хытă ӳссе пыраҫҫĕ. Шыв вăйĕпе усă курас тĕлĕшпе (3 мĕлйун лаша вăйĕ). Йаппони ҪАПШ, Канатă хыҫҫăн виҫҫĕмĕш вырăнта тăрат. Йаппони йалхуҫалăхĕнђе метталурки, тата машшин тăвакан промышлĕннăҫ паллă вырăн йышăнат. Вĕсем ытти промышлĕннăҫсенђен хăвăртрах ӳсеҫҫĕ. Пăравус, вакун, пăрахут тăвасси халђ йут патшалăхсен аллинђен Йаппонин хăйĕн аллине куҫрĕ: (1927( ҫулта 20 пин вакунран йут патшалăхсем туни 1,5 пин вакун кăна).

Промышлĕннăҫ ӳснĕ ҫемĕн контсентратсиленсе пырат, ҫавла ҫĕрмамăк пиравăрĕ промышлĕннăҫĕ 90 прођ. пĕр фирмă аллинђе, сахăр промышлĕннăҫĕ 6 фирмă аллинђе, електритсă промышлĕннăҫĕ 5 фирмă аллинђе. Ҫакăнпа пĕрлех панксем те контсентратсиленеҫҫĕ.

Патшалăхри кăпитал 5 панк аллинђе. Шалти рынăк ђухăн пирки Йаппони йут патшалăхри рынăка Киттайа туртăнат. Промышлĕннăҫа ђĕрĕ тавар ҫитменни, нехтă тата ытти ҫунтармалли йапаласем сахалли, Йаппонине ђĕрĕ тавар шыраттарат.

Йаппони пуршуаҫи Киттайăн пуйан ҫĕршывне туртса илесшĕн. Ђĕрĕ тавар хаклă пирки пуршуаҫи тавара йӳнетес тесе рапођђисен ĕҫ укҫине ђакарса тавара йӳнетесшĕн.

Йаппонири пек сахал ĕҫ укҫи нимĕнле патшалăхри рапођђисем те илмеҫҫĕ, рапођђисем кунне 10—19 сехет ĕҫлеҫҫĕ пулин те.

Тĕнђери економĕк криҫĕсĕнђен Йаппони пуршуаҫи рапођђисен ĕҫ укҫине ђакарса, ĕҫ кунне тăсса, ĕҫ тупăҫлăхне хăпартса хăтăласшăн Хапрăк-савăт-

сенђи рапођђисен шутне ђакарса пынă май, йалти ђухăн хресђенсем арканса пынă май ĕçсĕр аптăракансен çарĕ ÿссєх пырат̆. Рапођђисен вак хресђен хуçалăхĕсен пурнăçĕ йапăхса пырат̆. Çав пĕрмай сарăлса пыракан ђухăнлăхран, пушаран пуршуаçине сирпĕтсе пролеттариат влаçа аллине илсе çеç тухма пулат̆.

Револђутси йухăмĕ вăйлансах пырат̆, ăна комунисла партти йертсе пырат̆. Йаппони империалисла вăрçă вăхăтĕнђе хăй вăрçа йермесĕр вăрçакан патшалăхсене вăрçă хатĕрĕсене тăратса питĕ пуйса ÿссе кайрĕ. Вăрçă хыççăн Йаппонипе ăмăртакансен йышĕ ÿссе пырат̆. Йаппонин шалти рынăк тавар нумай илеймн пулса пырат̆. ÇАПШ-сенђи криçĕс вăйлăланнă çемĕн Йаппонин пиравăр промышлĕннăçĕ хĕсĕнсе пырат̆, мĕншĕн тесен ÇАПШ Йаппони пурнăçĕпе ĕçлет. Интире йутран пыракан таварсем çине хуракан налука ÿстерни каллех Йаппонине кансĕрлет. Çапла криçĕс хуçалăха пĕтĕмĕшпех çавăрса илнĕ. Ĕçсĕр аптăракансен шуђĕ ÿссех пырат̆. Ђĕрĕ тавар шыраса, хăй таварне сутмалли вырăн, капитала йута хывмалли вырăн шыраса Йаппони çĕнĕ çĕршыв шыраса çÿрет.

Манђшурине хăйĕн аллине пĕтĕмпех çавăрсѧ илет. Киттайăн Формосă утравне, 1904—1905 ç.ç. Раççейĕн Сахалин, тата Квантунк çурутравне, 1910 çулта Корейăпа туртса илђĕ. 1914 çулхи вăрçă вăхăтĕнђе Лăпкă оккеанри Керманин утравĕсене (Марнан, Каролин) туртса илђĕ. Халђхи вăхăтра Йаппони Аслă (Лăпкă) оккеанра вăй илсе тĕрлĕ утравсене Австралипе тата Амерĕкăн хĕвеланăç йенне хăй аллине илесшĕн, тата Киттай çĕрне хăй çумне ытларах çыпăçтарасшăн. Киттайран туртса илнĕ Формосă утравĕн тĕп пуйанлăхĕ— вăрман. Кунта камфар йăвăççи, кетр, кипарис, палђмă, пампук т. ыт. хаклă йăвăçсем. Çĕрай пурлăхĕсенђен паллăраххисем—çĕркăмрăк, нехтă, пăхăр, ылтăн.

Промышлĕннăç вăйлах мар,—сахăр савăђĕсем, конçервă, йăвăç каскалакан савăтсем пур.

Çĕрĕçĕ йенђен Йаппонине кайакан рис, сахăр хăмăшĕ, випократ акса тăваççĕ.

Корейăра çутçанталăк пуйанлăхĕсем нумай пулсан та вĕсемпе халиђђен çителĕклĕн усă курман.

Корейăра 19,5 мĕлйун çын пурăнат̆. Çав шутра Йаппони халăхĕ 20 прођ. кăна пулин те пĕтĕм çĕр пурлăхĕсем, ђукун çулсем, електритсă промышлĕннăçĕ т. ыт. те Йаппони хапрăк-савăт хуçисен аллинђе.

**Ĕç:** 1. Йаппонири тăвăм мĕнле ынине тиакрам туса кăтартăр.
2. Вĕреннĕ маттериал тăрăх Лăпкă Оккеанри хирĕçÿсен тĕввинђе Йаппони мĕнле вырăн йышăнса тăни çинђен сођђинени сырăр.

# Йаппони империалисăмĕ Манђшурире.

## I. Манђшури пуйанлăхĕ.

Манђшури Киттайăн ђи пуйан районĕ. Унта çĕрайĕнђи пурлăхсем те вăрман та нумай. Çĕркăмрăк сапласĕ 2.969 мĕлйун тоннă шутланат̆. Манђшурире Киттай хăй кашнă çул 11,5 мĕлйун тоннă, Йаппони хăйне пăхăнса тăракан шахтăсенђе 9,6 мĕлйун тоннă тупат̆. Кунсăр пуçсăр Манђшурире тимĕр рутисем, тĕслĕ метталсем, нехтă вырăнĕсем те пур. Çак пуйанлăхсем Йаппонине питĕ илĕртеççĕ. Ђукун, хурçă шăратасси çурри ытла Йаппони аллинђе шутланат̆.

Йаппони промышлённăçĕ вăрçă вăхăтĕнђе хытă ÿсрĕ. Вăл ун ђухне вăрçакан патшалăхсене таварсем, вăрçă хатĕрĕсем т. ыт. сутса пысăк тупăшсем илсе пуйăнђĕ терĕмĕр. Ун аллине вăрçă вăхăтĕнђе Аçири рынăксем кĕрсе ÿкрĕç.

Йаппони промышлённăçĕ çĕнĕ техникăн çитĕнĕвĕсемпе усă курса хăвăрт ÿсрĕ.

Империалисăм вăрçи хыççăн Йаппонин тавар йута кăларасси ђакрĕ, рынăксене «хуçисем» таврăнсан Йаппони рынăк хĕсĕнђĕ—ун кăпиталисăмне криçĕс хĕстерме пуçларĕ. Çакă Йаппони кăпиталисăмне йут рынăк шыраттарат. Вăл Манђшурине тăрăнђĕ. Унта Йаппони кăпиталĕ пĕр мĕлйарт çурă ийен (97 пус) шутланат. Çав шутран çулйĕрте—677,9 мĕлйун ийен, промышлённăçра 105,6 м. ийен, йалхуçалăхĕпе вăрман хуçалăхĕнђе—222,4 мĕлйун ийен, суту-илуре—117,7 мĕл. ийен, ту промышлённăçĕнђе—11,6 мĕлйун ийен т. ыт.

Манђшурире монополиллĕ пĕрлешÿсем те хытă ÿсеççĕ. Кăнтăр-Манђшурири ђукун çулăн аксионерлă кампанийĕ—Манђшурире ђи пысăк, вăйлă пĕрлешÿ. Ун аллинђе ђукунçулсемсĕр пуçне пысăк пăравус, вакун савăђĕсем, склатсем, тинĕс флођĕ, каваңсем, çĕркăмрăк шахтисем, електритсă стантсисем т. ыт. Ку монополиллĕ претприйатти Йаппони правиттĕлçтви аллинђе теме йурат, мĕншĕн тесен 50 прођ. ытла аксийĕ Йаппони аллинђе. Ку пĕрлешÿсĕр пуçне тата панк пĕрлешĕвĕсем пур.

Мĕн пур Манђшурин суту-илĕвĕ Йаппони аллинђе.

Йаппони Манђшурине колонисатсилесшĕн. Тĕрлĕрен çăмăллăхсем, премисем парса Йаппонине Корейăри çынсене Манђшурине куçарат. Кун пек куçни Манђшурире 300.000 çын шутланат.

Манђшурине çавăрса илсе Совет сойусне вăрçăпа тапăнма та аван.

## Империалисла патшалăхсен хирĕçĕвĕ.

Манђшури хăйĕн пуйанлăхĕпе пĕр Йаппонине анђах мар ытти кăпиталисла патшалăхсене те илĕртет. Çултан çул унта çине тăрсах Анкли, Амерĕк, Франтси кăпиталĕ кĕрсе пырат. Ку Йаппони Манђшурире пуç пулассипе, ун прĕкпе ђакарма пултарат.

Тĕрлĕрен килĕшÿсем тăрăх сайомсем парса, ђукун çулсем хывса т. ыт. майпа та Амерĕк кăпиталĕ Манђшурине кĕрсе пырат.

Анкли империалисăмĕ те васкасах Манђшурине туртăнат. Манђшурире империалиссем ђукун çулсемшĕн хирĕçеççĕ. Ку ђукун çул çĕршыва пăхăнтарас ĕçре мĕнле пысăк вырăн йышăнни паллах.

Хаљхи вăхăтра мĕн пур ђукун çулсенђи 40 прођ. Йаппони кăпиталĕн, 30 прођ.—Киттайри Хĕвелтухăç ђукун çулĕ йышăнат, 10 прођ.—Анклин, 20 прођ.—Киттайăн.

Йаппони, Киттай патшалăхĕ ђукун çул строиттĕлствине йут кăпитал кĕртесрен, хытă кĕрешет. Йулашки вăхăтра Анкли кăпиталисăмĕ тумалли Хилутоо портне тухакан ђукун çул Йаппонин Кăнтăр Манђшурири ђукун çул тупăшне ÿкерет. Çавăнпа та вăл çав ђукун çула тутарасшăн мар пур вăйпа тăрăшат.

Пеккин-Муктĕн ђукун çулĕ те Анкли кăпиталĕпе тунăскер. Вăл ђукун çулра Анкли хуçа пулса тăрат.

1927 çулта Пейппин-Муктĕн ђукун çулĕ тума пуçларĕç. Ку ђукун çул Кăнтăр Манђшурири ђукун çул тупăшне ђакарат.

Мĕн пур çĕнĕрен тăвакан çулйĕрсене Киттай йађĕпе тăваççĕ, анђах пурин хыçĕнђе те йе Анкли, йе Амерĕк кăпиталĕ курăнат.

Империалисла патшалăхсем Киттай халăхĕ пусмăртан тухасран Совет влаçĕ тăвасран питĕ хăраççĕ. 70 мĕлйун халăх пурăнакан вырăнта Советсем влаçа хăйсен аллине илесрен, 300000 çынлă Киттай хĕрлĕ çарĕ комунисла партти йертсе пынипе империалисла патшалăхсене çĕмĕрсе тăкасран вĕсем питĕ хăраççĕ. Хĕрлĕ çарпа пĕрле хресђенсен парттисан отређĕсем те нумай.

Империалиссем Киттайри револђутси йухăмне пĕтерес ĕçре пĕр шухăшлă. Çавăнпа вĕсем Йаппони империалисăмĕ Манђшурине, Киттайа çĕмĕрсе кĕрсе кайнине хирĕç нимте каламаççĕ, Ликă-Натси те, II-мĕш Интернатсионал та Йаппонине пулăшаççĕ, Киттайри хĕрлĕ çара пĕтерме Франтси, Анкли, Америк çар йараççĕ.

## Йаппони криçĕсрен хăталасшăн.

Криçĕс Йаппонине калама çук хытă хĕстерђĕ.

Феоталла йĕркепе пусмăрта пурăнакан хресђенсен пурнăçĕ нађарланса пырат, вĕсем ђухăнланса пыраççĕ. Хулари вак пуршуаçине криçĕс тата ђухăнлатат.

Промышлĕннăç ÿсĕмĕ ђарăнат. Нумай панксем хупăнса лараççĕ, хресђенсем ђухăнлансах пыраççĕ. Вăтам шутпа кашни хресђен çемйин 865 ийен парăм шутланат. Йалхуçалăх таварĕсен хакĕсем ÿкеççĕ. Тăвăм ђакат.

Çĕрмамăка арлас ĕç 1929 çултанпа 30 прођ. ђакнă, тĕртес ĕç—37 прођ., пурçăн таварĕсем тăвасси—82 прођ., ђакнă. Хурçă шăратасси—55 прођ., ђемент—53 прођ., пурçăн тĕртесси—35 прођ., çĕрмамăк кăларасси—22 прођ. ђакнă.

Хапрăк-савăтсем 40—50 прођ.-шер кăна ĕçлесе пыраççĕ.

Йутри суту-илÿн çавăрăнăçĕ 1,5 мĕлйарта йулнă.

Ĕçсĕрсен шуђĕ халђхи вăхăтра 2 мĕлйун çынна йахăн. Ĕç укçи ђаксах пырат.

Колонисенђе хресђен хуçалăхĕ йапăхсах пырат.

Ђшан-Суе-Лђан Йаппонине улталаса Америк кăпиталисĕсене сутăнни, Муктĕн провинтси Америк кăпиталне йураса, Йаппонин Хойрен-Тун-Хуе ђукун çулне тума ђарни Йаппони кăпиталне пушшех хăратса пăрахрĕ. Йаппони империалисăмĕ Манђшурине çавăрса илесшĕн икĕ майпа пыђĕ.

Пĕр йенђен Манђшури, Киттайри Корейăри хресђенсем хушшинђе çапăçусем туса, тепĕр йенђен Киттайпа Корейă хулисенђи халăха пĕр пĕрин çине харкаштарса хирĕçтернипе, ĕçхалăхне револђутсиллĕ йухăмран пăрса йарса Манђшурине тытса илес ĕçе туса пыђĕ.

Йаппони империалисăмĕ çав хушăрах ĕçлекенсен револђутсиллĕ йухăмне путарас ĕçе вăйлатрĕ. Револђутсиллĕ, комунисла орканисатсисене хĕстерме тытăнђĕ.

Йаппони Киттай хресђенĕсене, ĕçлекенсене çĕнĕрен пусмăра кĕртсе ÿкерђĕ. Манђшурипе çырлахмасăр, Монколине, Киттайа пĕтĕмпе çавăрса илсе хăйĕн колонийĕ тăвасшăн. Вăл çеç мар, Йаппони Манђшурине туртса илни Совет сойуне тапăнма пикĕс хатĕрленине кăтартат. Манђшурире Йаппони çарĕ çĕнтерни ĕçхалăхне тата вăйлăрах пусмăрласси, пролеттариатсен класлă орканисатсисене салатассине пĕлтерет.

Хаӈхи вăхăтра Киттайа Анклипе Франтси хăйсен çарĕсене илсе пыни кăпиталисла патшалăхсем Совет сойусне хĕвелтухăç йепӈен тапăнас ĕç çĕнĕрен вăйланнине кăтартать.

Йапониri комунисла партти пролеттариата, ĕçхалăх массисене, Йапони империалисăмĕн политтĕкне уççăн кăтартрĕ. Ĕçмассисене Манӈшуриri вăрçăн ӈăн сăн-питне кăтартса паӈĕ, Манӈшурине туртса илнине хирĕçлесе ĕçхалăхне империалисăмпа кĕрешме ӈĕнет.

**Ĕç:**

1. Кĕнеке, хаçат-шурналсенӈен вуласа Манӈшуриri хаӈхи лару-тăру çинӈен токлат тăвăр.

# Колонисемпе çурмалла колониллĕ çĕршыв-сем, тата томинионсем.

## Киттай.

**Карттăпа ĕçлесси;**

1. Карттă тăрăх Киттай çĕршыв мĕнлине вĕренĕр, пĕлĕр; вăл ытти патшалăхсенђен мĕнле тусемпе уйăрăлса тăнине пĕлĕр, унăн тинĕс ђиккисене пăхса тухăр.

2. Карттă çинђе Киттайăн уйрăм пайĕсене (Киттай, Манђшури, шалти Монкођи Киттай Турккестанĕ, Типет) тупăр. Вĕсен лаптăкĕсене ССРС-па хĕвеланăçри Йевроппă лаптăкĕсемпе танаштарса пăхăр.

3. Конттурлă карттă çине Киттайри йухан шывĕсене ӳкерĕр.

Киттайăн çурçĕр пайĕнђе климăт вăтам, кăнтăр пайĕнђе троппĕклĕрех климăт теме те йураť.

Киттайа Манђшурипе пĕрле илсен вĕсен лаптăкĕ 6,4 мĕлйун тăваткал клм. 397 мĕлйун çын йахăн пурăнаť.

Киттай урлă каçса кайакан сартту çĕршыва çутçанталăк тĕлĕшĕнђен икĕ пĕр пĕринђен йăлт урăхла пайа уйăраť. Пĕр пайĕ—Çурçĕрти Киттай; унăн çĕр пиђĕ тӳремлĕ, лапамлă—çĕрĕçне йурăхлă çĕршыв.

Тепĕр пайĕ Кăнтăрти Киттай—сăрт-туллă. Унта тимĕр, пăхăр, тăхлан, нехтă, çĕркăмрăкĕ нумай.

Киттай çирĕп патшалăх мар. Вăл уйрăм пĕр-пĕринпе нађар çыхăнса тăракан пайсенђен тăраť.

Киттайпа Манђшури ђи пысăк пайсем пулса Киттай патшалăхне кӳпелентерсе тăраççĕ. Патшалăхăн ытти пайĕсем—Шалти Монколи, Киттай Туркестанĕ, Типет тĕп Киттайпа екkономĕкĕпе политтĕк тĕлĕшĕнђен нађар çыхăнса тăнă пирки паллă вырăнах йышăнаймаççĕ.

Киттай, Анкли, Йаппони, Америккă, Франтси патшалăхĕсен çур колонийĕ пулса тăраť.

Асăннă патшалăхсем Киттайа йăлт районăн-районăн пайласа йышăнса пĕтернĕ.

Киттайăн çĕр айĕнђе, çийĕнђе те пурлăх калама çук нумай. Çак çутçанталăк пуйанлăхĕсемпе йӳнĕ хаклă ĕçлекенсем нумаййи кăпиталисла промышлĕннăçĕ вађђи Киттай аслă рынăк пулса тăни империалиссемшĕн нимĕпреп те паха. Кăпиталисла патшалăхсем 19-мĕш ĕмĕртех Киттайа пусмăрласа валеççе пĕтернĕ.

Ђи малтанах Киттайа йут патшалăхсенђен оппиум сутăçĕсем пырса кĕнĕ. Сутăççене сыхлама йут патшалăхсенђен хĕçпăшаллă çар, çар карапĕсем йанă.

1840 çулта Киттай халăхĕ оппиума хирĕç вăрçă тапратса йанă хыççăн Анкли Киттайăн Конк-конк портне туртса илсе вăрçа путарса лартаť. «Оппиум» вăрçи хыççăнах Киттай хресђенĕсем хăйсен çĕрулпуђĕсене експлоаттатсине хирĕç, патшапа ђиповнĕксеен влаçне хирĕç «Тайппинк» востанине тапратса йараççĕ. Востанине путарас ĕçе йут патшалăхри кăпитал та хутшăнаť.

Çав ĕçшĕн Киттай правиттĕлстви йут империалиссене хăй патшалăхĕнђи ђи йышлă, аван çĕрлĕ Çи-Тçан, Йан-тсы-тçан таврашĕнђи районсемпе усă курма ирĕк парат҃. Кăпиталиссем çитменнипе Киттай çĕрĕнђех Киттай саккунĕсемпе йĕркисене пăхăнми ирĕк илеççĕ.

Йапонипе Киттай хушшинђе 1894—5 çулхи вăрçăпа 1900 çулхи, покçĕрсен (хресђенсен) пăлхавĕ йут кăпиталиссен Киттайри влаçне татах та çирĕплетрĕç.

Покçĕрсен пăлхавне йут çĕрти кăпиталиссен çарĕсемпе çĕнтерђĕç. Çав «ырă» ĕçшĕн Киттай йут патшалăхсене пысăк контрипутси тӳленисĕр пуçне йут патшалăх çарĕсене Киттай çĕрне кĕртме ирĕк памалла пулнă.

Çав майпа XX ĕмĕрĕн пуçламĕшнелле тĕп Киттайăн 18 провинтсирен 13-ĕшĕ йут кăпиталиссен аллине кĕрсе ӳкеççĕ.

Империалисла вăрçă хыççăн Киттайри, Кермани çĕрĕсем—Шантуђ т. ыт. Киттайа мар Йапонине лекнĕ. Хаљхи вăхăтра Киттайпа Йапони, Анкли, Франтси патшалăхĕсем валеçсе пĕтерне темелле.

Йапони кăпиталĕ Киттайран Манђшурине туртса илсе хăйĕн çумне çирĕплетрĕ ĕнтĕ.

ÇАПШ Киттайа ытти патшалăхсенђен кайарах пырса кĕнĕ пулсассăн та вăл Киттайа пайлас ĕçре ытти империалиссемпе пит те вирлĕн кĕрешет.

Темиçе çул хушши ĕнтĕ Киттайра таттисĕр вăрçă пырат҃.

Вăрçă Киттай йăнăралĕсем хушшинђе патшалăхăн уйрăм пайĕсене хăйсен аллипе илесшĕн йертсе пыраççĕ.

Çак вăрçăра империалисла патшалăхсен ăмăртăвĕпе, Киттайри йăнăралсене пулăшса пырса Киттайа вăйсăрлатса хăйсен аллине çавăрса илесшĕн ĕçлени палăрат҃.

Киттай историйĕ—пусмăрлă çаратупа валеçу историйĕ.

## Йалхуçалăхĕ.

Киттайăн нумай йышлă халăхĕ çĕрĕçĕпе пурăнакан халăх.

Йалхуçалăхăн районĕсем тĕлĕшĕнђен Киттайа икке—кăнтăрпа çурçĕре пайлама пулат҃.

Çак икĕ районăн ђикки Куен-Луђ сăртăн хĕррипеле Хуан-хе шывĕн вăта çĕрти йухăмĕ пулат҃.

**Çурçĕрти** Киттай конттипентлă климăтлă; кунта шăрăх нӳрĕ çупа сивĕ хĕлсем пулаççĕ. Кунта нӳрĕк çуллахи ăшă çилпе килет. Хуан-хе шывĕ таврашĕнђи тӳремлĕх шывпа йухса пырса хывнă љосс тăприллĕ, çавăнпа унта тырă питĕ аван.

Çурçĕр Киттайĕнђе пĕрђĕллĕ, пăрçаллă, çăвлă тырăсем пулаççĕ. Кунта тулă, вир, нимĕç пăрçи, сойă (тĕнђипе пухăнакан сойă тухăçĕн 80 прођ. Киттайра пулат҃) рапспа куншут (çу тăвакан куљттурăсем) акса тăваççĕ.

**Кăнтăрти** Киттай ăшăрах тата нӳрлĕрех климăтлă. Çурçĕрти пекех кунта та нӳрĕке çуллахи ăшă çил кӳрет. Кăнтăрти Киттай сăртлă-туллă. Вăл Йантсы-тçанпа Çи-тçан шывĕсемпе вакланса пĕтнĕ лаптăка йышăнат҃.

Кăнтăрти Киттайра puринђен ытла рис акаççĕ. Рис акса тăвас тĕлĕшпе Киттай тĕнђери патшалăхсенђен ђи малта тăрат҃.

Рис Киттай халăхĕн тĕп апат-çимĕçĕ. Ђей ӳстерсе тăвас йенђен, çĕрмамăк акса тăвас йенђен Киттай тĕнђере 3-мĕш вырăн йышăнат҃.

Тапак, сахăр хăмăшĕ, т. ыт. куљттурăсем акаççĕ.

Тата тут йавăççипе пурçăн тăвас ĕç паллă вырăнта тăрать. Халăх пуринҫен ытла пулă çисе пурăнать.

Çĕр лаптăкĕн 70 проҫ-нĕ çĕрулпуҫĕсен аллинҫе, çĕрулпуҫĕсем çав вăхăтрах ҫинавниксем, налук пухакансем пулса тăраççĕ.

Çĕрулпуҫĕсен хуçалăхĕсем 1000 кектартан иртекенсем те пӳр. Çĕрулпуҫĕсем хуçалăха хăйсем тытса пымаççĕ, çĕрсĕр, сахал çĕрлĕ хресҫенсене тара парса ĕçлеттереççĕ.

Киттайри çĕрĕçĕ ытла та вакă. Кунта çĕре теçеттинăн 10-мĕш пайсемпе виçеççĕ. Хресҫен хуçалăхĕсем çав теçеттинăн вуннăмĕш пайне анҫах йышăнаканни те нумай. Çĕр ĕçне алăпа туса пыраççĕ. Çĕрĕç хатĕрĕсем кивĕ, анҫах çĕре тирпейлĕ ĕçленĕ пирки хăш-пĕр вырăнсенҫе çулталăкра пĕр çĕртех ик-виç хут тырă акса илеççĕ.

Тырă хуçалăхĕ пысăк пулсан та хресҫенсем çулленех выçă лараççĕ. Выçăхасси, хресҫенсенҫен тĕрлĕ налуксем хисепсĕр нумай илнинҫен килет, сăмахран, çĕре тара панăшăн тырă тухăçĕн 60—70 проҫ-не тӳлеттереççĕ. Хăш-пĕр вырăнсенҫе, провинтсисенҫе налука темиçе çул малалла илсе пĕтернĕ, сăмахран, Шен-çи провинтсинҫи хресҫенсем налука 1937 çула çитиҫҫен тӳлесе татнă, Сы-ҫуан провинтсинҫе 1947 çула çитиҫҫен татнă.

Йанăралсен укçалла тытнă çарĕсем хресҫен хуçалăхне татах та çаратаççĕ. Хресҫенсен çав çарсене тăрантмалла, тумлантармалла.

Çапла ĕнтĕ хресҫен ĕнси çинҫе пусмăрлакансем кĕтӳпелех улăхса ларнă.

## Промышлĕннăç.

Киттай нумайҫен алăсталăхĕсĕр пуçне урăх промышлĕннăç курман. Ку таранҫҫенех алăсталăх промышлĕннăçĕ шалти рынăка 75 проҫ. таран тавар парать.

Анҫах Киттай хуçалăхĕнҫе паллă вырăна алăсталăх мар, шултра кăпиталисла тăвăм йышăнать. Киттайра шултра кăпиталисла промышлĕннăç йутран пынă кăпитал аллинҫе.

Йутри кăпитал Киттай хуçалăхĕн ҫи паллă пайĕсене—метталурки, çĕркăмрăк, çăмăл интустрине, ҫукун çулĕсене, панксене йышăнса пĕтернĕ.

Йаппони кăпиталĕн аллине ҫукун, хурăç шăратас, çĕркăмрăк тупас ĕçĕн 80 проҫ. кĕрсе ӳкнĕ.

Ҫукун çулсем пĕтĕмпех йутри кăпитал аллинҫе.

Манҫшури ҫукун çулĕсем Йаппони, кăнтăрпа тĕп Киттай çулйĕрĕсем Анкли, кăнтăрпа хĕвеланăç çулйĕрĕсем Франтси кăпиталĕсем аллинҫе.

Панксем те йутри кăпитал аллинҫе.

Ҫи шултра, пысăк панксем—Анкли панкĕсем. Конк-конк—Шанхай панкĕ çулленех 14 мĕлйун толлăр тупăш илет. Вăл ҫукун çулсен, пысăк савăтсен, суту-илӳ, ҫĕрĕ таварсен склаҫĕсен, кăнтăрти Киттай провинтсисен финанс ĕçне йĕркелесе тытса пырать.

Тинĕсри суту-илӳ флоҫĕн çурриййĕ Анклине пăхăнать.

Шултра портлă, суту-илӳпе промышлĕннăçлă ҫенттăрсем—**Конк-конк, Шанхай, Тан-тçин, Хаҥкоу**, йут кăпитал аллинҫе. Çак промышлĕннăçлă ҫенттăрсем Лăпкă оккеан хĕррипеле, аслă шывсем хĕрринҫе, йут патшалăхри карапсем кĕрсе тухмалла çĕре вырнаçнă. Киттай промышлĕннăçĕн вырăнаçĕвĕ йут патшалăхри кăпитал сăрхăнса кĕнĕ çулсемпе çыхăнса тăрать. Технĕккă

тӗлӗшӗнђен ђи аван йӗркеленӗ ҫӗркӑмрӑк вырӑнӗсем (Ђшили, Тҫан-ҫи провинтсинђе) Йаппони кӑпиталисӗсен аллинђе.

Пиравӑр промышлӗннӑҫӗнђе нумай пулмасҭ Киттай кӑпиталӗ ђи вӑйлӑ, паллӑ вырӑн йышӑнса тӑнӑ пулсан, халӗ йут кӑпитал ҫав ӗҫре 87 прођђӑн йышӑнаҭ. Ҫапла ӗнтӗ Киттай хуҫалӑхӗн аталанӑвӗ йутри кӑпитала пӑхӑнаҭ.



28. Промышлӗннӑҫлӑ Киттай.

Йутри кӑпитал Киттайа интустриленме пулӑшакан хуҫалӑхӑн пайӗсене йури ђарса пыраҭ, мӗнпӗн тесен калӑпӑр, метталурки, машшин тӑвас ӗҫӗн, хими, електритсӑ промышлӗннӑҫне вӑйлатса ўстерсе пырҫан Киттай ирӗке тухма йутри кӑпитал аллинђен ҫӑлӑнма пултараҭ. Ҫавӑнпа та йут кӑпитал асӑннӑ промышлӗннӑҫа ўсме йури ђарса пыраҭ. Киттайа пӑхӑнтарса тӑма, ђӗрӗ таварсем тӑратакан, йутри промышлӗннӑҫ таварӗсене илекен пулса тӑраҭ. Ҫапах та империалисла вӑрҫӑ вӑхӑтӗнђе, тата йулашки ҫулсенђе Киттайра хӑйӗн натсиллӗ промышлӗннӑҫ, натсиллӗ пуршуаҫи аталанма тытӑннипе асӑрхаса хӑвармалла пулаҭ.

## Киттайри револђутси.

Шултра промышлӗннӑҫлӑ районсенђе, вырӑнсенђе Киттай пролеттариаđӗ ӗссе ҫирӗпленсе ҫитрӗ.

Ӗҫ условисем Киттайри йутҫӗр кӑпиталисӗсен претприйаттисенђе калама ҫук йӑвӑр.

Ӗҫ кунӗ 12—16 сехет хушши тӑсӑлаҭ, ӗҫ хакӗ йўнӗ. Йўнӗ ађа вӑйӗпе те усӑ кураҫҫӗ.

Рапођђисемпе ђухӑн хресђенсем Киттай револђутсин тӗп вӑйӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

Киттай пролеттариаđӗ хӑй тӗллӗнех политтӗклӑ вӑй пулса 1919 ҫулта Шанххай провинтсинђе вӑй илђӗ.

1920 ҫулта Киттайра комунисла партти оркаписатсиленђӗ.

Киттайри комунисла партти кӗске хушăрах Киттай пролеттариаđӗн ревођутсиллӗ йухăмӗн пуçӗ пулса тăђӗ.

1924 çулта Киттайра йут çӗр империалисӗсене хирӗç, феоталла-империалисла ушкăнсене хирӗç тапранна ирӗклӗх йухăмӗ сарăлса кайат. Киттай ревођутсишӗн тӗп вăйӗсемсӗр—пролеттариатпа хресђенсемсӗр пуçне ирӗклӗх йухăмне пуршуаçипе вак пуршуаçи те хутшăнат.




29. Промышлӗннăçлă Киттай картти.

Тӗрлӗ хирӗçўллӗ классен ниййӗсенђен пулнă пӗрлешӗве Коминтан парттийӗ пуç пулса йетсе пыђӗ. Çак пӗрлешў, пуçламӗшӗнђех çирӗп пулман пирки ревођутси сарăлса ўссе пынă çемӗн Коминтанри клас ниййӗсен ушкăнӗсем хушшинђи кӗрешў вăйланса пынă çемӗн вăйланса пынă. 1927 çулта Киттайӗпех акрарлă ревођутси сарăлса çӗрулпуђӗсемпе пуршуаçипе хӗстерме пуçласассăн, хулаçенђе стаđккăсен йухăмӗ сарăлсассăн, Коминтан икӗ ушкăна уйăрăлса кайрӗ. Коминтанăн ревођутсиллӗ пайӗ комунисла парттипе пӗрле пулса йулђӗ, тепӗр пайӗ пуршуаçипе феоталлă милиттарисла елементсене пӗрлештерсе контрревођутсиллӗ оркантсатси пулса йулђӗ.

Киттайри комунисла партти пролеттариатпа хресђенсен ревођутсиллӗ йухăмне хăй тӗллӗнех йертсе пырассине хăй аллине илђӗ.

Çак çӗнӗ тапхăрта Киттайри ӗççыннисем Киттайри комунисла партти йертсе пынипе шалти реаксипе, империалисла пусмăра хирӗç Совет влаçӗ тăвассишӗн кӗрешеççӗ. Киттайри ӗççыннисем хăйсемех Хӗрлӗ çар туса контрревођутсиллӗ Коминтанăн çарӗсемпе вирлӗн кӗрешсе Совет Киттайӗн лаптăкне аслатсах пыраççӗ.

Киттайра Совет влаçӗ пулнă вырăнта 60 мӗлйун çын пурăнат. Киттайри

провинтсисенђен, Совет влаçĕ тунă районсене, выçлăхпа експлоаттатсинђен тарса пыраççĕ.

1930 çулта Киттайра пуçласа Совет районĕсенђен пухăнnă теппуттатсен конферентсийĕ пулса иртĕ. Конферентси, калама çук, пысăк ревоԓутсиллĕ ĕçсем туса хăварђĕ; пур хĕвелтухăçĕнђи патшалăхсемшĕн ревоԓутси çулĕ çине тухмаллине кăтартса хăварђĕ. Конферентси ĕçĕсем империалисăмпа кĕрешме тĕнђери пролеттариатпа пĕрлешме кирлине каласа параççĕ. Киттайри ревоԓутсиллĕ криçĕс Совет влаçĕпе Хĕрлĕ çар туса хăварни Киттайа колониллĕ тĕнђен ревоԓутсиллĕ йухăмĕнђе пĕрĕмĕш вырăна тăратаť.




30. Киттайри Совет районĕсем.

## ССРС-пе Киттай.

Тĕнђери патшалăхсенђен Киттайа хăйпе тан шутлакан сăтăр туман патшалăхсенђен пĕртен пĕр ССРС кăна.

ССРС ĕлĕкхи патша Раççейĕн çарату токăвăрĕсемпе контрипутсисене пăрахăçа кăларђĕ.

Империалисла патшалăхсем хĕтĕртнипе Киттай пуршуаçийĕ пĕр вăхăтра ССРС-пе вăрçа çыхлантарасшăн пулнă пулсан, шурă квартипе Киттай йăнăралĕсем хĕвелтухăç Киттайĕнђи ђукун çула туртса илес киревсĕр шухăш пурнăçа кĕреймерĕ.

ССРС шурă пантитсене хăйĕн çарĕпе çапса хуçрĕ.

ССРС Киттай ĕççыннисемшĕн ђи туслă патшалăх пулса, вĕсен Совет Киттайĕшĕн пыракан кĕрешӳне пĕртен пĕр ырлакан, пулăшакан патшалăх пулса тăрат.

## Инти.

### Карттăпа ĕçлесси:

1. Карттă çинђе Интине тупăр; çĕр ђăмăрĕн хăш çĕрте, пайĕнђе вырăнаçнине каласа парăр.
2. Инти тавра мĕнле оккеансемпе тинĕссем пур.
3. Интин шывпа типĕ и ђиккисене тупăр.
4. Интине,—Киттайран, ССРС-ђен, Авканистанран мĕн уйăрса тăрат.
5. Карттă çинђе Текан тӳремсăртлăхне тупăр, хĕвеланăçпе хĕвелтухăçри Катсене, Пенкаљи лаплăхне тупăр.
6. Паллăрах йухан шывсене тупса, вĕсен йађĕсене каласа парăр.

## Çутçанталăк пуйанлăхĕпе вырнаçăвĕ.

Приттанин ђи паха колонийĕ—Инти, Интостан çурутравĕпе Инто-Киттай (Пирма) пайне йышăнат.

Интин çурçĕрти ђикки—тĕнђери ђи çӳлĕ ту (мĕнле тусем?), кăнтăрти, хĕвеланăçри, хĕвелтухăçри ђикки—Инти оккеанĕ пулса тăрат.

Интостан варри тӳремсăртлă.

Тӳремсăртлăхăн хĕррисем хĕвеланăçпе хĕвелтухăçри Кат тăвĕсемпе вĕçленеççĕ. Текан тӳремсăртлăхĕпе çурçĕрти сăртсем хушшинђе Пенкали айлăмлăхĕ выртат.

Çурутравăн варрипеле Рак тропĕкĕ каçса кайат, çав май Инти кăнтăр пайĕ тропĕклă, çурçĕр пайĕ суптропĕклă вырăнта.

Инти муссонсен анлăхĕнђе пулнă пирки çуллахи вăхăтра кăнтăрпа хĕвеланăç муссонĕсем ку çĕре нумай нӳрĕк параççĕ.

Пенкаљин хĕвеланăç хĕррине нӳрĕк ытларах тивет. Текан тӳремсăртлăхĕпе хĕрринђи тусем тытса тăнипе нӳрĕк сахалтарах тивет.

Инти шывĕнђен хĕвелтухăç йепелли район нӳрĕк нихăш районĕнђен те сахалтарах илет. Кунта Тарр йатлă пушă хир кăна.

Климăтпа çĕр сийĕ аван пирки Интире тĕрлĕ куљттурăсем ӳсме пултараççĕ. Кунта,—тулă, рис, вир, тшут, çĕрмамăк, кауђђукконос, сахăр хăмăшĕ, ђей кофĕ, интикă т. ыт. ӳсеççĕ.

Инти çĕрай пурлăхĕпе те пуйан.

Патшалăхăн çурçĕрпе хĕвелтухăç йенђе çĕркăмрăк, Пирмăра—нехтă пур. Çĕркăмрăкĕпе йунашарах тимĕр тăпри нумай, маркăнĕтс пур.

Тсейлон хĕррисенђе ахах нумай.

## Ҫӗр лаптӑкӗпе халӑх йышӗ.

Интин ҫӗр лаптӑкӗ—4,7 мӗлйун тӑваткӑл км., халӑх йышӗ—320 мӗлйун ҫын.

Пӗр тӑваткал километра 68 ҫын тивет. Интин халӑх йышӗ пӗтӗм тӗнҫери халӑх йышӗн 0,25 пайне йышӑнать.

## Анкли Интине пусмӑрласа илни.

Анкли пуршуаҫиййӗ Интине—«Приттани империн пуҫ ҫӗлӗкӗнҫи ҫӗй хаклӑ ахахӗ»—тесе калани ҫӑнах; Инти Анклин ҫи паха колониййӗ. Анкли кӑпиталисӑмӗ аталанасси те Интине ҫаратнинҫен килнӗ.

Инти—авалхи кулҫттурӑн патшалӑхӗ.

Анкли промышлӗннӑҫла патшалӑх пулиҫҫенех, Инти промышлӗннӑҫла патшалӑх пулнӑ.

Инти пиравӑрӗ, ылттӑн—кӗмӗл йапалисем, Инти ахахӗ Вӑта Ҫӗртн тинӗс суту-илӗвӗ вӑхӑтӗнҫех тӗнҫипех паллӑ вырӑн йышӑннӑ. Ҫавӑнпа Интине кайма тӳрӗ ҫул шыраса кайса Колумп Америке тупнӑ, Васкӑ-те Камӑ, Афрӗккӑ тавра Интине кайма тинӗс ҫулӗ тупнӑ. Интине кайма тинӗс ҫулне уҫсанах Йевроппӑ ҫав патшалӑхпа вӑйлӑ суту-илӳ тума пуҫланӑ.

Интинҫе малтанах Колланти, Франтси, унтан Анкли сутӑҫӗсем курӑнкаласҫӗ. Йулашкинҫен Анкли Инти суттинҫе монопполиллӗ вырӑн йышӑнать. Ост-Инти кампани Интири пӗтӗм суту-илӗвӗ хӑй аллине ҫавӑрса илет, ҫитменнине вӑл патшалӑхра политтӗк влаҫне хӑй аллине илме тӑрӑшать.

Ҫапла вара йерипенех Анкли Интипе хӑй аллине 1849 ҫул тӗлнелле темиҫе хут вӑрҫӑпа ҫӗмӗрсе пӑхӑнтарнӑ. Акӑлҫансем Интире монопполи тунн вӗсене Интине ҫаратма пысӑк ирӗк ианӑ. Калама ҫук пысӑк куланайсем илсе, таварсене хаклантарса, тӗпрен пурӑнакансене вӗлерсе, експлоаттатсилесе Анкли правиттӗлстви икӗ ӗмӗр хушшинҫе кампани йаҫӗпе витӗпсе Интин хуҫи пулиҫҫенех кӗрешрӗ.

Анкли Интине Ирлантине путарнӑ пекех путарса лартрӗ.

300 мӗлйун ҫынлӑ пуйан патшалӑхра Анкли пусмӑрлӑхӗ айӗнҫе, XX ӗмӗрӗн малтанхи ҫирӗм пилӗк ҫулӗ хушшинҫе выҫӑ вилӗмпе 80 мӗлйун ҫын вилнӗ.

Интире ку таранҫҫенех тӗнҫери патшалӑхсенҫен пуринҫен ытла етем вилет.

Унта 1000 ҫуралнӑ аҫа пуҫне вилекенни 663 аҫа. Ҫав вӑхӑтрах Румынире (Йевроппӑра ҫын нит нумай вилет) 1000 аҫа пуҫне вилекенни 207 аҫа.

Анкли Интири кивӗ хуҫалӑхӑн никӗсӗсене ишӗлтерҫӗ. Инти хуҫалӑхӗнҫи опҫӑллӑ ҫӗрӗҫлессипе пӗтӗҫекен алӑсталӑхне пӑҫлантарҫӗ.

...«Алпа тӗртекен станокпа йӗке, тӗртекенпе арлакансен мӗлйунлӑ ҫарне ӗҫ парса опҫӑлӑх никӗсне тытӑнтарса тӑнӑ. Пӗлми авалранпах Йевроппӑ, Инти пиравӑр алӑстисен паха ӗҫ йапалисене илсе тӑнӑ. Приттанирен килнӗ ҫын Инти алпа тӗртмелли станокӗпе кӑнҫала ҫӑвӑҫҫине ҫапса ҫӗмӗрҫӗ. Анкли Йевроппӑ рынӑкӗнҫен Инти ҫӗрмамӑк пиравӑр таварӗсене хӗссе кӑларнинҫен пуҫларӗ. Унтан вӑл Интостана арланӑ ҫиппе кӳме, йулашкинҫен ҫӗрмамӑк амӑшҫӗрне ҫӗркӑмрӑк пиравӑр таварӗсене пӳлсе каплантарҫӗ... (Маркс—«Кӑпитал» 1-мӗш том.) Ҫакӑн пек вара Интин опшҫинӑллӑ хуҫалӑхӑн патриархаллӑ йӗрки, Инти алӑсталӑхӗ ишӗлҫӗ, халӑх йышне ушкӑнӗ-ушкӑнӗпе ҫуксӑрлӑхпа вилӗм умне тӑратрӗ.

Интин кивӗ хуҫалӑхне ишӗлтерсе Анкли ӑна урӑхла ӗҫлеттерме тытӑнҭӗ.

...«Ост-Интин Аслӑ Приттани валҭи прӗксӗрех ҫӗрмамӑкӗ, ҫӑм, йӗтӗн, тшут, интикӑ тумалла пулнӑ.»...

Ҫирӗм ҫул хушшинҭе, 1846 ҫулпа 1865 ҫул хушшисенҭе Анкли Интирен ҫӗрмамӑк илсе тухассине 13 хут ӳстернӗ, унпала пӗрлех Анклишҭен Интине ҫӗрмамӑк пиравӑр таварӗсене ытларах кӳре пуҫлаӗ.

Интине йалхуҫалӑхлӑ патшалӑх туса Анкли промышлӗннӑҫне кирлӗ ҭӗрӗ таварсене тӑратакан туса хӑварҭӗ.

## Йалхуҫалӑхӗ.

Интин йышлӑ халӑхӗ йалхуҫалӑх ӗҫӗпе пурӑнаӗ. Пӗтӗм пурӑнакансенҭен 90 проҭ. йалта пурӑнаӗ. Пӗтӗм ҫӗр ӗҫлеме йурӑхлӑ ҫӗрӗн ҫурри тара парса ӗҫлеттерекен ҫӗрулпуҭӗсен аллинҭе. Хресҭен халӑхӗн 52 проҭ. ҫӗрулпуҭӗсенҭен ҫӗре тара илсе ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ; 48 проҭ. пӗҭӗк ана—ҫӗрлӗ хресҭенсем.

Тӗслӗх, Пентшап районӗнҭе 70 проҭ. йахӑн, икӗ кектартан ытла мар ҫӗрлаптӑкӗсем ҫинҭе ӗҫлеҫҫӗ. Ҫав районрах (Инт шывӗпе Сетлетш шывӗ тӑрӑхӗнҭе) 75—80 кектартан маларах тытакан кулакла хуҫалӑхсем те пур.

Ҭухӑн хресҭенсем хӑйсен тупӑшӗн ҫуррине йахӑн куланай тӳлеҫҫӗ.

Хресҭен масси ҭухӑнланса сийенни йалхуҫалӑх пролеттариаҭӗн йышне ӳстерет. Халӗ Интирӗ тӑранирҭен ҫийеймен йалхуҫалӑх пролеттариаҭӗн йышӗ 40 мӗлйун ҫынна йахӑн.

Ҫак ҫар вӑтам шутпа кунта 24 пус таран ӗҫ укҫи илсе пӗҭӗккӗн вилсе пыраӗ.

Инти хресҭенӗсем виҫӗ пусмӑр айӗнҭе:—пӗри—Анкли империалисӑмӗ, тепри—ҫӗрулпуҭӗсем, виҫҫӗмӗшӗ суту-илӳ пуршуаҫи.

1917—18 ҫулсенҭе пулса иртнӗ хресҭен пӑлханӑвӗсене Анкли пуршуаҫийӗ ҫине тӑрса хӗҫпӑшалпа путарса хуҭӗ. Анкли пуршуаҫийӗ Инти хресҭенӗсем хушшинҭе йурийех натсионалла хирӗҫӳсем вӑйлатса революҭтсиллӗ йухӑмран пӑрасшӑн, анҭах йулашки вӑхӑтра Инти хресҭенсен куҫӗ уҫӑла пуҫларӗ, вӗсем пролеттариат кӑтартса пынӑ пек ӗҫлеме тытӑнҭӗҫ.

## Промышлӗннӑҫ.

Халхи Инти хресҭен хуҫалӑхлӗ патшалӑх кӑна мар. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнҭе Интире хӑйӗн промышлӗннӑҫӗ аталанҭӗ. Инти промышлӗннӑҫӗ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнҭе Анклирен тавар кӳресси ҭакнипе ҫеҫ мар, вӑрҫакан патшалӑхсене тӗрлӗ таварсем, вӑрҫӑ хатӗрӗсем тӑратакан пулса ӳсрӗ.

Ҫав майпа вӑрҫӑ вӑхӑтӗнҭе Интире пиравӑр промышлӗннӑҫӗ, ҫӗркӑмрӑк промышлӗннӑҫӗ, меттал промышлӗннӑҫӗ аталанса, ӳссе сарӑлҭӗ.

Патшалӑхра промышлӗннӑҫӑн тӗп вырӑнӗсем ҫаксем:

**Помпей**—ҫӗрмамӑкпа тимӗр-тӑмӑр промышлӗннӑҫӗн тӗп вырӑнӗ.

**Калькуттӑ**—тшутпа меттал промышлӗннӑҫӗн вырӑнӗ.

**Тшамшетпур**—метталурки промышлӗннӑҫӗн вырӑнӗ.

Интире промышлӗннӑҫ вӑйланса пынине ҫак ҭыхвӑрсенҭен курма пулаӗ. 1927 ҫулта 22 млн. тоннӑ ҫӗркӑмрӑк.

3 млн. тоннӑ маркӑнетс тӑпри.

1,2 млн. тоннӑ нехтӑ тупнӑ...

Интире промышлӗннӑҫ аталаннӑ майӗпе Инти пролеттариаҭӗ те ӳсет. Хапрӑк-савӑтра ӗҫлекенсен хисепӗ, ҭей, кофӗ, кауҭҭук плантатсисенҭе ӗҫле-

кенсемпе пĕрле илсен 3 мĕлйуна ҫитет. Ђукун ҫул рапођђисемпе 4 мĕлйуан ҫывхарат̆.

Колонири рапођђин пурӑнӑҫпа ĕҫ условисем Анкли кӑпиталисӑмĕн аталапу вӑхӑтĕнђи рапођђин ĕҫпе пурнӑҫ условисенђен те нађартарах.

Помпей рапођђийĕ вӑтам шутпа кунне—ҫӑкӑр 1,29 кĕрепенке, нимĕҫ пӑрҫи—0,09 к, аш—0,03 к., тӑвар—0,04, ҫу—0,02 к., пĕтĕм ҫимĕҫ—1,54 кĕрепенке ҫийет.

Инти рапођђисемпе вĕсен йышĕсен 40—50 прођ. кашни кун тӑранитђен ҫийеймеҫҫĕ.

Йулашки ҫулсенђе Инти промышлĕннӑҫĕнђе те вӑйлӑ криҫĕс пурри ку-
Анкли пуршуаҫийĕ Интине интустриллĕ патшалӑх пуласран вӑйпах акрарлӑ патшалӑх йĕркинђе усрат̆. Инти акрарлӑ патшалӑхран интустриллĕ патшалӑх пуласран Анкли правиттĕлстви тĕрлĕ хĕстерӳсем, саккунсем кӑларса Интин промышлĕннӑҫне ӳсме ђарса тӑрат̆.

Сӑмахран, Анкли таварĕсене тамӑшнђӑ налукĕсенђен хӑтарса, Инти промышлĕннӑҫне укҫа пами пулат̆.

Инти интустриллĕ патшалӑх пулса Анкли пусмӑрĕнђен тухма пултарат̆, колониллĕ патшалӑх пулма пӑрахат̆ тенĕ йумахӑн суйипе пурӑнӑҫ йӑлт ҫапса ҫĕмерет.

Анкли пуршуаҫийĕ ирĕккĕн, хӑй вађђи тĕрлĕ ђĕрĕ таварсем тӑратма пултаракан, Анкли таварĕсемшĕн ђи наха рынӑк пулса тӑракан патшалӑха, нийепле те ирĕккĕн алран вĕҫертмĕ.

Инти промышлĕннӑҫ ӳсĕмне Анкли вӑйпа ђарса пыни Инти пуршуаҫине хирĕҫтерет, уйрӑм патшалӑх тӑвассишĕн ҫанӑҫма сӑлтав парат̆.

Анклине хирĕҫ тапранса кайнӑ натсионалла йухӑма пĕр вӑхӑта пуршуаҫи йертсе пыђĕ. Анђах хирĕҫӳ пит тарӑнах кайман; Анкли таварĕсене, саккунĕсене т. ыт. йышӑнмасӑр тӑркаларĕҫ, урӑх нимĕнех те ҫук.

Промышлĕннӑҫ аталаннӑ ҫемĕн Инти пуршуаҫи те патшалӑхра паллӑ вӑй пулма пуҫланӑ. 19 ĕмĕрĕн варринђе Инти пуршуаҫийĕ патшалӑхра хӑй те пулас шутпа пĕрĕмĕш натсионалла конкрес орканисатсилерĕ. Унтанпа Инти пуршуаҫийĕ хӑйĕн натсионаллӑ, екккономĕк, политтĕк ыйтӑвĕсене сарса, тарӑнлатса пырат̆. Инти пуршуаҫин ыйтӑвĕсене килентерес шутпа Анклин Интири правиттĕлстви хӑйĕн кĕнерал—кунернаттӑр ҫумĕнђе саккунсемпе хушусем кӑларакан пуху орканисатсилерĕ. Анђах ҫав пуху хӑйĕн саккунĕсене кĕнерал-кунернаттӑр ҫирĕплетмесĕр пурнӑҫа кĕртме пултараймаст̆.

Инти халӑхĕн правасӑрлӑхĕ пĕтĕм пурӑнакансен 320 мĕлйунӑ йышĕнђен 900 пинĕ кӑна суйлавра тӑма пултарнинђенех курӑнат̆.

Кулђтурӑ тĕлĕшĕнђен Инти халӑхĕ питĕ кайа йулнӑ: 320 мĕлйун ҫын ҫине пĕтĕмпе те хут пĕлекенни 23,7 мĕлйун ҫын, йе 7,4 прођђӑн ҫеҫ тивет.

## Интири револђутсиллĕ йухӑмĕ.

Промышлĕннӑҫри криҫĕс класлӑ хирĕҫӳсене ҫивĕђлетсе рапођђисен йухӑмне вӑйлӑ ӳстерђĕ, вĕсем активлӑн кĕрешĕве тытӑннӑ, стађккӑсем сарӑлса пыраҫҫĕ.

1928 ҫулта Помпейра пиравӑр тĕртекенĕсем револђутсиллĕ—«Кирникамкар»—(хĕрлĕ йалав) йатлӑ профсойус орканисатсилерĕҫ. Ҫак сойус 1928 ҫулта Помпейри пиравӑр тĕртекенсен 6 уйӑх хушши тӑсӑлса пынӑ пасттовккине йертсе пыђĕ. 1929 ҫулта пастовккӑ йухӑмĕ промышлĕннӑҫӑн нумай пайĕсемпе

ђукуп çула çавăрса илђĕ. Стађкăллă йухăмсенђен хушăран хĕçпăшаллă хирĕçĕвсем те тухаççĕ.

1930 çулта Интин çурçĕрпе хĕвеланăç йенђе хĕçпăшаллă çапăçу пулђĕ. Хĕçпăшалланнă ĕçлекенсем Пешавар хулине темиçе кун хушши хăйсен аллинђе тытнă.

Çавăн пек пăлхавсем Интин ытти вырăнсенђе те пулнă. Инти пуршуаçийĕ массăллă револђутсиллĕ кĕрешӳсенђен хăраса ӳкнĕ те, Анкли империалисăмĕпе килĕшсе револђутсиллĕ пролеттариата, хресђенсен кĕрешĕвне путарђĕ.

Инти пуршуаçипе унăн йертсе пыраканĕсем (Канти йышшисем) Интири револђутси ĕçне малалла йертсе пыма пултараймаççĕ.

Револђутсиллĕ кĕрешĕве, ĕçлекенсен класĕпе ђухăн хресђенсем, империалисла пусмăрпа кăпиталисла експлоататсине хирĕç, туса пыраççĕ.

Интипе Киттай халђхи вăхăтра, хĕвелтухăçĕнђи колонисенђи ирĕке тухассăн кĕрешекен йухăмăн тĕп вырăнĕсем.

Инти пролеттариађĕн халђхи тĕп сатаđĕ вăл—çирĕп комунисла партти орканисатсилесе натсионалла ирĕклĕхлĕ йухăма пролеттари револђутси йухăмĕ йенелле çавăрса—пролеттари револђутсине тăвас ĕçе хăвăртлатса ăна тăвасси пулаť.

**Тĕрĕслемелли ыйтусем:**

1. Йевроппăри патшалăхсемшĕн Инти мĕнпе паха пулнă?
2. Анкли Интине мĕншĕн хăй çумне çирĕплетесшĕн?
3. Анклине Инти мĕншĕн кирлĕ?
4. Анкли Интине хăй çумне туртса илнине, Инти хуçалăхĕ Анкли кăпиталĕ пырса кĕнипе йепле улшăннине каласа парăр.
5. Интире интустри сарăлнине Анкли мĕншĕн ђарса пыраť?
6 Рис. çĕрмамăк, тулă вырăнĕсене кăтартса парăр.
7. Интин—Тели, Калђуттă, Помпей, Матрас хулисене карттă çинђе тупăр.

## Инто-Киттай.

1. Инто-Киттай мĕнле патшалăхсемпе кӳршĕллине карттă çине пăхса пĕлĕр.
2. Инто Киттайăн çĕр çийĕ мĕнлине, мĕнле шывсем пуррине сăнăр.

Инто-Киттай çурутравĕ Киттайпа Инти хушшинђи Типет тӳремсăртлăхĕнђен тăсăлса пырса кăнтăрта пайăркаланса кайакан сăртлă вырăна йышăнса тăраť. Типет тӳремсăртлăхĕнђен йухса анакан шывсем хăйсен варринђи вырăнсене тăпра хывса çĕрĕçне йурăхлă çĕрлантăкĕсем туса хунă. Инто-Киттай нӳрĕ, ăшă климатлă пирки кунта пампук, каућђук, папан, палђмă йăвăççисен сĕм вăрманĕсем ӳссе ларнă.

Халăх йышĕ шыв варрисен районĕсенђе ытларах пурăнаť. Шăрăх, нӳрĕ çанталăк рис акса тума вырăнлă.

Тĕнђипе рис акса тăвассин 60 прођђăнĕ кунта ĕнтĕ.

Инто-Киттайăн кăнтăр йенĕнђе Малаккă çурутравĕ пур. Вăл тинĕсе шала кайса екваттăр патнех çитет. Инто-Киттай çурутравне икĕ пайа пайлама тивет.

Хĕвелтухăçри пайĕ—Франтси Инто-Киттайĕ, варĕнђе—Çиам патшалăхĕ.

Франтси Инто-Киттайĕ сахал йышлă, çурçĕртен кăнтăралла тăсăлса тăракан сăртлă варриллĕ оплăçлă çĕршыв. Лапамлă çĕрсем çурçĕрти Краснайа шывĕпе, кăнтăрта Меккопк шывĕ тăрăхĕнђе выртаççĕ. Кунта çĕрĕçĕ вăйлă аталаннă. Йалхуçалăх кулђттурĕсенђен паллăраххисем—рис, куккурусă, тапак, сахăр хăмăшĕ, çĕрмамăкĕ, пăрăç, ђей т. ыт.

Вăрманлă сăрт-тусем ҫинҭе хаклă йăвăҫсем пур—тек йăвăҫҫи, смала йăвăҫҫисем, кауҭҭук йăвăҫҫисем.

Ҫӗр айӗнҭи пурлăхсенҭен паллисем—Тонккинри ҫӗркăмрăкӗ.

Промышлӗннăҫ ҫурҫӗр йенҭе кăна ытти ҫӗртинҭен вăйлăрах аталаннă. Алăсталăх ӗҫӗ промышлӗннăҫринҭен нумайтарах вырăн йышăнаť.

Ҭукун ҫулӗ нумай мар.

Ҫӗршывăн уйрăм пайӗсен ҫыхăнăвӗ шыв ҫулӗпе пулса иртет. Портсенҭен паллăраххи Мекконк шыв варринҭи Сайкон порҭӗ.

Йута кайакан таварсен $^3/_4$ пайне рис йышăнса тăраť (1 мӗлйун тоннă йахăн).

Кўрессе йута кăларнинҭен сахалтарах кўреҫҫӗ.

Инто-Киттай ӗҫхалăхӗ Франтси капиталисӗсен пусмăрӗ айӗнҭе.

1930 ҫулта кунта вăйлă пăлхав пулса иртрӗ. Ҫав пăлхава ӗҫхалăхӗ хутне Инто-Киттай ҫарӗ те кӗҭӗ.

Пăлхава Франтси тискерӗн путарса лартрӗ.

## Ҫиам.

Ҫиамăн ҭи нумай пайӗсем Менам шывӗн тăрăхӗнҭе выртаҫҫӗ.

Йалхуҫалăхӗнҭи тӗп куљттурăсем—рис, куккурусă, тапак, сахăр хăмăшӗ, коккăс паљми. Ҫӗршывăн ҫурҫӗрти сăрт-туллă пайӗнҭе тек йăвăҫҫисем нумай. Ҫӗр айӗнҭи пуйанлăхсенҭен ҭи малти вырăнта тăхлан тăраť.

Промышлӗннăҫ аталанайман, алăсталăх ҫеҫ ҫителӗклӗ сарăлса ҫитнӗ.

Тӗп хула—Панккок.

Йута—рис, тӗк йăвăҫҫи, тăхлан—кайаť. Ҫийамра монархи, вăл Анклипе Франтсине пăхăнакан патшалăх.

Инто-Киттай, Интонеҫи империалиссемшӗн хапсăнмалла колонисем. Унта хаклă йапаласем, ҭӗрӗ таварсем (кауҭҭук, рис, ҭей т. ыт) нумай. Ҫавăнпа капиталисла патшалăхсем ҫак колонисемшӗн вăрҫаҫҫӗ, хирӗҫеҫҫӗ. Инто-Киттайпа Интонеҫинҭи нехтă, тӗслӗ метталсем империалисла патшалăхсене хытă илӗртеҫҫӗ.

Револђутси йухăмне, натсине ирӗке кăларас ҫапăҫăвра комунисла партти йертсе пыраť.

Империалиссен пусмăр айӗнҭе нуша курса пурăнакан Инто-Киттай тата Интонеҫи ӗҫхалăхӗ кунран кун револђутсиленсех пыраť.

Комунисла партти колонисенҭи ӗҫхалăх массисене, рапоҭҭисене хăйӗн тавра пӗтӗҫтерсе ирӗклӗхшӗн кӗрешет.

**Ӗҫ:** 1. Хӗвелтухăҫри револђутсиллӗ йухăм сарăлса пынине хаҫат-шурналсенҭен вуласа, ҫав йухăмра Инто-Киттай ӗҫхалăхӗ мӗнле хутшăннине пӗлӗр.

# Туртси.

### Карттăпа ӗҫлесси:

1. Аҫипе Йевроппă картти ҫинҭе Туртси патшалăхне тупăр. Туртси патшалăхӗ таврашӗнҭи, патшалăхсен, тинӗс йаҭӗсемпе паллашăр.

2. Туртсин Аҫи пайӗ Йевроппăри пайсенҭен мӗнле тинӗс пырӗсемпе уйăрăлса тăнине пӗлӗр.

Туртси тӗнҭеп икӗ пайӗнҭе—Йевроппăпа Аҫинҭе вырнаҫнă. Уп лаптăкӗ Кӗҫӗн Аҫи ҫурутравӗпе Палккан ҫурутравӗн пайӗсенҭеп пулнă.

Туртсин ҫӗр лаптӑкӗ 762 пин тӑваткал километр. Ҫав хисепрен Йевроппӑра 21 пин тӑв. километр.

Туртси аван вырӑнта вырнаҫнӑ. Тинӗс пырӗсем Хура тинӗспе Вӑта ҫӗрти тинӗс таврашӗнҗи патшалӑхсене ҫыхӑнтарса тӑраҫҫӗ.

Кӗҫӗн Аҫи ҫурутравӗ Йевроппӑран Посфор пырӗпе уйӑрӑлса тӑрать. Посфор пырӗ Йевроппӑри патшалӑхсемпе Аҫи патшалӑхӗсене (Перҫҫи, Инти, Киттай) ҫыхӑнтарса тӑрать.

## Патшалӑхӑн историйӗ.

Туртси ҫутҫанталӑк тӗлӗшпе аван вырӑн йышӑнса тӑнӑ пулсан та, вӑл вӑрҫӑҗҗен кайа тӑрса йулнӑ патшалӑхсенҗен пӗри пулнӑ.

Еккономӗккӑра йалхуҫалӑх тӗп вырӑн йышӑнса тӑнӑ.

Туртси Йевроппӑран Аҫипе кайакан ҫул хӗррипҗе, ҫавӑнпа ӑна пӑхӑнтарасшӗн империалисла патшалӑхсем тавлашнӑ.

Патша Раҫҫейӗ Туртсин Вӑта ҫӗрти тинӗспе ҫыхӑнтаракан тинӗс пырӗсене туртса илесшӗн пулнӑ. Анкли Раҫҫей Вӑта ҫӗр тинӗсе тухасран хӑранӑ, мӗншӗн тесен Раҫҫей унта тухсан Анклин Интипе кайакан тинӗс ҫулне пӳлме пултарнӑ. Йулашкинҗен Вӑта ҫӗр тинӗсне Кермани те колони ҫырама тухнӑ. Кермани империалисӗсем Туртси правиттӗлствинҗен Константтинопӑљтен Пактат хули урлӑ Перҫҫи тинӗс пырне кайакан җукун ҫул тума контсеҫҫи илнӗ.

Вӑл ҫул Перлинран Константтинопӑле пыракан ҫула малалла тӑсса Интин оккеанне тухса Анклипе хӑратма пултарнӑ.

сенҗен пур вӑйпа палук пухса җинавнӗксене тӑрантса пурӑннӑ, ҫавӑнпа Туртсин

Султтан правиттӗлстви халӑх хуҫалӑхӗн ӳсӗмӗшӗн тӑрӑшман, хресҗенхуҫалӑхӗ питӗ вӑраххӑн ӳснӗ.

Туртси йут империалисла патшалӑхсене (нимрен ытла Керманипе) пӑхӑнса тӑнӑ. Империалисла вӑрҫӑ вӑхӑтӗнҗе Туртси Керманипе пӗр пулса вӑрҫнӑ. Вӑрҫӑра Туртсине ҫӗнтернӗ пирки, унӑн ҫутҫанталӑк пурлӑхӗсемпе пуйан аслӑ ҫӗр лаптӑкӗсене йут патшалӑхсене памалла пулҗӗ. Туртсинҗен Ҫири, Ирак (Мессопоттами) Палеҫтинӑ, Арап патшалӑхӗсене туртса илнӗ. Нехтӑпа пуйан Йекипшӗт вӑрҫӑҗҗен Туртси аллинҗе пулнӑ пулсассӑн, вӑрҫӑ хыҫҫӑн вӑл Анкли империалисӗсен аллине лекнӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнах империалиссем Туртсине хӑйсен колони тума тытӑнҗӗҫ.

Патшалӑхри җи паллӑ портлӑ хуласене (Константтинопӑљ, Ҫмирнӑ) йут патшалӑх ҫарӗсем йышӑннӑ. Туртси халӑхне пӗтерме тытӑннӑ. Патшалӑхра хуҫалӑх пурнӑҫӗ пӑҗланнӑ.

Туртси колони пуласран хӑраса, пуршуаҫи хресҗенсене, ҫар ушкӑнӗсене пӗрлешсе Туртсипе хӑйне хӑй тытӑнса тӑракан патшалӑх тӑвассишӗн, натсипе хӑтарас шутпа кӗрешме тытӑнҗӗ.

1920 ҫулта **Анкорӑ** хулинҗе пухӑннӑ парламӗнт влаҫа хӑй аллине илсе империалиссемпе кӗрешме шут тытать. Туртси империалисӑмпа кӗрешесси Раҫҫейри Октӑпӗр револјутсинҗен килнӗ.

Натсионалла пухӑвӑн решенипе хирӗҫ Анкли Анкорӑ хулине Крек ҫарне йарать, анҗах Туртси ҫарӗ Мусттаффӑ Кемаљ йертсе пынипе Анкли ҫарне хӑваласа йарать; 1922 ҫулта Туртсине Анкли ҫарӗнҗен тӗппех тасатса ҫитереҫҫӗ.

Ҫак вӑрҫӑ хыҫҫӑн Туртси хӑйне хӑй тытӑнса тӑракан патшалӑх шутланса тӑнӑ, анҗах империалиссем Туртсин тинӗс пырӗсене пӑхса тӑракансем пулса йулнӑ.

1923 çулта Туртси пуршуаллă респуплĕк пулса тăђĕ, Султтана патшалăхран хăваласа йађĕç.

Конститутси тăрăх Туртсинђе пĕтĕм влаç парламĕнт аллинђе.

Суйлавра пĕтĕм 18 çула çитнĕ арçынсем сасăлама пултараççĕ. Парламĕнт 4 çуллăха преçитент суйласа хăварать.

Парламĕнтра Туртсинђи пуршуаçин парттийĕ («халăх парттийĕ») пуç пулса тăрать.

## Халăх хуçалăхĕ.

Туртси акрарлă патшалăх. Пĕтĕм 13 мĕлйунлă халăх йышĕн хисепĕнђен 10 мĕлйунĕ çĕрĕçĕпе пурăнать.

Çĕрĕçне ĕçлеме Туртсин çĕр сийĕ аванах мар, тўремсăртлă.

Пĕтĕм çĕрĕн $^1/_3$ пайĕ çĕрĕçпе йурăхсăр.

Туртсире—тулă, урпа, çĕрмамăк, тапак, иçĕм çырли т. ыт. çырласем тăваççĕ, тата выђăх ĕрђетеççĕ.

Сурăхсем, кађакасем (çемçе çăмлă Анкор кађакисем), майракаллă выђăхпа ашаксем.

Тапак, çырла, çĕрмамăк—Туртси експăртĕнђе тĕп вырăн йышăнакан таварсем.

Вăрçă хыççăн (1922) йалхуçалăхĕ вăйланма тытăнђĕ. Патшалăх йалхуçалăхне хăпартас тĕлĕшпе налуксене ђакарать, йалхуçалăх машшинĕсене кўрет.

Анђах çак çăмăллăхсем кулак хуçалăхĕсемшĕн анђах усăллă.

Туртси правиттĕлстви йалхуçалăхне хăпартас шухăшпа експăрта вăйлатса натсиллĕ кăпитала ўстерме тăрăшать.

Промышлĕннăçăн паллăрах пайĕсем—тапак, çăм, çĕрмамăк пиравăр, çимĕç промышлĕннăçĕ. Тапак йута кайать.

Туртсин çĕрмамăк, нехтĕ, тимĕр, пăхăр пур пулсан та шултра промышлĕннăç халĕ тĕ аталанайман.

1928 çулта пĕтĕм ђукун çулсен тăршшĕ 4700 километр çеç пулнă.

Туртсинђи пуршуаллă правиттĕлствăна хуçалăх строиттĕлствин аслă планĕсене пурнăçа кĕртме укçа çукки ђăрмантарать. Ку таранђђен вăл йут патшалăхсенђен кивçене кĕмесĕр пурăнђĕ, анђах плана пурнăçа кĕртме кивçенленме кирли курăнсах тăрать. Промышлĕннăç ўснĕ май рапођђисен хисепĕ ўссех пырать. Пуршуаçи рапођђисене хытă хĕстерни клас кĕрешўне вăйлатса пырать.

Туртси ССРС-па килĕшўллĕ пурăнать. ССРС ăна пулăшса пырать. Халĕ вăрçă мĕн пулсан пĕр-пĕрне тапăнмалла мар килĕшў тата суту-илў килĕшĕвĕ тунă.

## Перççи.

### Карттăпа ĕçлесси:

1. Аçин политтĕк картти çинђе Перççин çут-çанталăкри вырăнне пăхса тухăр, конттур çинђе Перççин ђиккисене, Перççипе кўршĕллĕ патшалăхсен йађĕсене тинĕс йађĕсене çырса ўкерĕр.
2. Перççин фиçĕккă карттине вĕренсе çак патшалăхăн климăђĕ мĕнли çинђен каласа парăр.

Туртси, Аçипе Йевропăна çыхăнтарса тăрать пулсассăн, Перççи уппала йупашар, Анклин Аçири ђи пысăк колонипе çыхăнтарса тăракан сыпăкĕ пулса тăрать.

Перҫҫи еккономĕк тĕлĕшĕнҭен кайра тăракан патшалăх. Империалисла патшалăхсем ăна хăйсен аллине ҫавăрса илессишĕн пĕр-пĕрипе вăрҫнă. Нимрен ытла Перҫҫишĕн Анклипе Патша Раҫҫейĕ кĕрешнĕ.




31. Малти Аҫи картти.

1907 ҫулта Раҫҫейпе Анкли Перҫҫине икĕ пайа уйăрнă—ҫурҫĕр пайне Раҫҫей, кăнтăр пайне Анклй пуршуаҫийĕ хуҫа пулса пурăнма килĕшнĕ.

Октăпĕр револӆутсийĕ Перҫҫине вырăс империалисĕсем тапăнассиҭен хăтарҭĕ, анҭах Анкли пуршуаҫийĕ ку таранҭен те Перҫҫине хăйне пăхăнтарса Перҫҫип ҭи паха вырăнĕсенҭе хуҫа пулса тăрать.

## Халăх куҫалăхĕ.

Перҫҫи халăхĕ ҫĕрĕҫпе выҭăх-ҭĕрлĕх ĕрҭетсе пурăнать. Ку ĕҫпе 10—12 мĕлйун ҫын пурăнать.

Перҫҫи Иран тўремсăртлăхĕн хĕвеланăҫ пайĕнҭе 1645 пин тăваткал километр йышăнать.

Климăт Перҫҫире шăрăх, типĕ.

Перҫҫип тинĕс пырĕпе Моххамĕрă Текеран, Мешхет хулисемпе Авканистан, Инти хушшинҭе пушă, типĕ ҫеҫен хир выртать. Типĕ пирки ҫĕре шăвармасăр ҫимĕҫ тума ҫук. Каҫпи тинĕс хĕрринҭе пўрĕ нумай вырăнта ҫеҫ ҫĕрĕҫлеме аван.

Перҫҫире тулă, урпа, рис, ҫĕрмамăкĕ, винократ, опиум мăкăнĕ, тата тĕрлĕ фруктăсем акса-лартса тăваҫҫĕ. Йалхуҫалăхĕ технĕккă йенҭен пит те кайа йулнă.

Перҫҫире ҫĕр пĕтĕмпех пупсен, ҫĕрулпуҭĕсен, патшалăх аллинҭе, хресҭенсен ҫĕр ҫук. Ҫавăнпа ҫĕрĕҫ сарăлма пултараймасть.

Хресђенсем налукпа ҫӗре тара илнӗшӗн укҫа хаклӑ тӳлеҫҫӗ.

Перҫҫире промышлӗннӑҫ ҫукпа пӗрех, аласталах кӑна, анђах Перҫҫире тӑвакан пурҫӑн пирсемпе, ҫиттисене йут патшалӑхсенђен пыракан хапрӑк-савӑт таварӗсем хупласҫӗ.

Моххамерӑ хулинђен ҫурҫӗрелле Перҫҫин нехтӑран пуйан вырӑнсем нумай, анђах вӗсем пурте Анкли империалисӗсен аллинђе пирки Анкли промышлӗннӑҫӗшӗн кӑна ӗлҫеҫҫӗ.

Перҫҫире пур панксем ҫулйӗрӗсем, суту-илӳ—пӗтӗмпех Анкли аллинђе.

Ормуст проливӗнђен утравсем ҫинђе Анкли ҫар пасисем туса тултарнӑ.

Перҫҫире октӑпӗр революђутси хыҫҫӑн пуҫланнӑ империалиссене хирӗҫ пыракан пӗтӗм натси йухӑмӗ халӗ те ђарӑнмасӑ. Унпа пӗрлех пуршуаҫипе ҫӗрулпуђӗсене хирӗҫ пӑлханусем ӳсе пыраҫҫӗ.

Перҫҫире патша пуҫ пулса тӑрать (монархи). ССРС Перҫҫипе туслӑ пурӑнать. ССРС ӗлӗкхи Раҫҫей, Перҫҫипе тунӑ пусмӑрлӑ килӗшӳсене сӳтрӗ. Перҫҫи ӗҫҫынписем те ССРС ҫине шанса пӑхаҫҫӗ.

## Авканистан.

**Конттурлӑ карттӑпа ӗҫлесси:**

Авканистанӑн фиҫӗкпа политтӗк карттине вӗренсе конттур ҫинђе:
1. Авканистанӑн ђиккисене паллӑ туса тухӑр.
Авканистанпа кӳршӗллӗ патшалӑхсен йађӗсене ҫырӑр.
2. Кинтукуш тӳртне ӳкерсе Аму-Тарйапа Капул йухан шывӗсен йађӗсене ҫырса тухӑр
3. Суту илӳпе атминистратси ђенттӑрӗсене—Капул, Керат, Кантаһар хула йађӗсене ҫырса хурӑр.
4. Авканистанӑн фиҫӗк карттине вӗренсе климӑтпа ҫӗр ҫийӗ мӗнлипе ђухлӑр.

Авканистан Иран тӳремсӑртлӑхӗн ҫурҫӗрпе хӗвелтухӑҫ пайӗнђе вырӑнаҫнӑ, вӑл ҫур феоталлӑ патшалӑх.

Авканистанӑн ҫӗр лаптӑкӗ 634 пин тӑваткӑл километр.

Авканистан ӗлӗкреннех Инти, Перҫҫи, Киттай, Вӑта Аҫи патшалӑхӗсем хушшинђи, Интинђен Малти Аҫипе, Киттайа, Вӑта ҫӗрти тинӗсе Кинтукуш тӑвӗсем урлӑ ђи кӗске пӗртен пӗр типӗри суту-илӳ ҫулӗ кайакан вырӑна йышӑннӑ. Ҫавӑнпа тӗрлӗ патшалӑхсем Авканистана хӑйсен аллипе илессишӗн пулнӑ.

Авканистан Анклин Интипе Раҫҫей хушшинђи хӳме пулса вӗсемшӗн ђи тутлӑ татӑк пулса тӑнӑ. Вырӑс пуршуаҫийӗ Вӑта Аҫинђе вырӑнаҫса Авканистана тата Интипе ҫавӑрса илесшӗн пулнӑ. Анкли те Авканистана алла илсе Раҫҫейе хирӗҫ ҫирӗп вырӑн йышӑнса тӑрасшӑн пулнӑ.

19 ӗмӗрӗн йулашки ҫулӗсенђен пуҫласа вара Анкли Авканистана тӗппех (пуҫпех) хӑй аллипе илет.

Авканистан 1919 ҫулђенех Анклин ҫурколони пулнӑ. 1919 ҫулта, Октӑпӗр революђутси хыҫҫӑн Авканистанра натсипе ирӗке кӑларасшӑн кӗрешӳ сарӑлса Авканистан Анкли пусмӑрӗнђен хӑтӑлса ирӗк патшалӑх пулса тӑђӗ.

Совет сойусӗ Авканистанпа туслӑ пурӑнать.

Авканистанӑн хӑй ирӗклӗхӗшӗн ҫапӑҫасси пӗтменха.

1929—30ҫулта Авканистанри тӗрлӗ йӑхсем Амануллӑ ханӑн реформӑллӑ правиттӗлствипе хирӗҫ пӑлхав тапратса йарсан, Анкли ултавлӑ майсемпе пӑлхава путарма тӑрӑшрӗ.

Авканистан сӑртлӑ-туллӑ патшалӑх. Кинтукушран ҫурҫӗрелли вырӑн лутра,

кӑнтӑралли—ҫӳллӗ. Ҫӳллӗ тусенђе климӑт сивӗ, типӗ Тшелалапатри тӳремлӗхре нӳрӗ, суптроппӗкла климӑт.

Ҫурҫӗрти Авканистанра тӑпра авантарах, кӑнтӑрпа хӗвелтухӑҫ, кӑнтӑрпа хӗвеланӑҫ йенӗсем ђуллӑ, хӑйӑрлӑ пушхирсем.

Климӑт условисем ҫӗр ӗҫлеме йурӑхлах мар пирки уйхирсене йури тунӑ паркӑсемпе шӑвараҫҫӗ.

Авканистанра 7—8 мӗлйун ҫын пурӑнат̆. Пӗр тӑваткал километра вӑтам шутпа 10 ҫын тивет.

Авканистанра тӗрлӗ натси пурӑнат̆, ђи йышли авкан халӑхӗ (3—3,5 мӗлйун ҫын). Вӗсем патшалӑхӑн кӑнтӑр йенӗнђе пурӑнаҫҫӗ. Ҫурҫӗр йенђе Совет Туркменистанӗпе Татшикистан патӗнђе татшиксем, туркменсем, уҫпексем пурӑнаҫҫӗ. Патшалӑхӑн вӑта ҫӗрӗнђе Монколи йӑхӗн хасарей халӑхӗ пурӑнат̆.

Авканистанра хӑшпӗр районсенђе патриархалла йӗркесем, ҫурҫӗрти ҫӗрӗҫпе пурӑнакан районсенђе—феоталлӑ—крепӑҫле йӗркесем.

Улпут-хуҫасен аллинђе пӗтӗм ҫӗрӗн 80 прођӑнӗ. Ҫӗрсӗр хресђенсем ҫӗрулпуђӗсен ҫӗрсене тырӑ-пулӑн мӗскӗн пайӗшӗн ӗҫлесе параҫҫӗ.

Авканистанӑн шалти политтӗкӗ суту-илӳ кӑпиталӗпе ҫӗрулпуђӗсене хӳтӗлет.

Авкани хресђенӗсем ђухӑнланса пынӑ май класлӑ хирӗҫӳсем вӑйланаҫҫӗ. Ђас-ђасах хресђен пӑлхавӗсем пулкалаҫҫӗ. Анђах вӗсене ревољутси ҫулӗ ҫине кӑларма пулӑшакан ҫителӗклӗ вӑйлӑ партти ҫук. Улпутсемпе пупсем ӗҫхалӑхне улталаса вӗсене феоталсемпе кӗрешес вырӑнне Макомет тӗнӗшӗн кӗрештереҫҫӗ.

## Йалхуҫалӑхӗ.

Авканистан—йалхуҫалӑхлӑ ҫӗршыв. Тырӑ ђи аван пулакан район—Керап хули таврашӗнђи Керирут лӑпамлӑхӗ; унта тулӑ, рис, урпа, ҫӗрмамӑк акса тӑваҫҫӗ.

Шыв хӗррисенђе минтаљ панан, винократ, лимон, апелҫсин, т. ыт. ӳсеҫҫӗ.

Йалхуҫалӑх технӗкӗ пит те кайра тӑрат̆.

Ҫӗрӗҫӗсӗр пуҫне выљӑх-ђӗрлӗх ӗрђетес ӗҫ те пур, анђах вӑл ура айӗнђи апатпа ҫеҫ пирки вӑйлах сарӑлма пултарайман.

Выљӑх-ђӗрлӗх протукђӗсем ҫӑм, тир (караккӳљ), выљӑх йут ҫӗре сутакан таварсенђен паллӑраххисем.

Шултра промышлӗннӑҫ ҫук. Ту ӗҫ промышлӗннӑҫӗ кӑшт ҫеҫ аталанма тытӑннӑ. Ылттӑн, тимӗр тӑпри, ҫӗрмамӑк, пӑхӑр, хаклӑ йышши ђулсем, нехтӗ вырӑнӗсем те пур, анђах вӗсене тупас ӗҫе тытӑнман.

Капул хулинђе ҫеҫ ҫар промышлӗннӑҫӗн паллисем пур. Патшалӑха кирлӗ промышлӗннӑҫ таварӗсене ССРС-пе Анклинђен кӳреҫҫӗ.

ССРС Авканистанпа суту-илӳ тӑвас ӗҫре вӑрҫӑђђенхи картран иртсе кайнӑ ӗнтӗ. Авканистан ССРС-пе туслӑ пурӑнассишӗн тӑрӑшат̆, мӗншӗн тесен пӗр Совет сойусӗ ҫеҫ империалиссемпе кӗрешес ӗҫре, хуҫалӑхпа куљттурӑ ӳсӗмне хӑпартас ӗҫре пулӑшма пултаракан патшалӑх.

### Тӗпђев ыйтӑвӗсем:

1. Туртси, Перҫси Авканистан патшалӑхӗсем економӗкпа куљттурӑ йенђен кайа йулнин сӑлтавӗсем мӗнрен килнӗ?

2. Ирӗке тухассишӗн кӗрешес ӗҫре ҫак патшалӑхсене мӗн, кам пулӑшма пултарат̆.

3. Хӗвелтухӑҫри патшалӑхсем ССРС-пе, ытти кӑпиталисла патшалӑхсемпе ҫыхӑну мӗнле тытаҫҫӗ.

# Ирак, Ҫири, Арави, Палеҫттинӑ.

**Карттӑпа ӗҫлесси:**

1. Арави, Ҫири, Ирак ҫӗрсене мӗнле тинӗссем хупласа тӑраҫҫӗ?
2. Вӗсем мӗнле патшалӑхсемпе ђикӗленеҫҫӗ?
3. Ҫак ҫӗрсенђе ҫӗр ҫийӗ мӗнлине пӗлӗр.
4. Ку ҫӗрсем тӑрӑх мӗнле шывсем йухаҫҫӗ?

**Ирак** (Мессопоттами) Тикрпа Йефрат хушшинђи айлӑма йышӑнаť. Климӑт типӗ, шӑрӑх; тӑпра (хура тӑпра майлӑскер) тырӑ пулӑ тума питӗ йурӑхлӑ, тухӑҫлӑ. Елӗк кунта тӗрлӗрен шӑвармаллисем тунӑ хатӗрсем нумай пулнӑ, халӗ вӗсем саланса кайса пӗтнӗ. Ҫавӑнпа ђылай ҫӗртре шурлӑхсем пула-пула тӑнӑ, хӑш пӗр ҫӗрте ҫур пушӑ хирсем те пур. Ҫак пушӑ хирсенђе арап йӑхӗсем куҫса ҫӳреҫҫӗ. Шыв хӗррисенђе, оаҫиссенђе халӑх ҫӗрӗҫпе пурӑнаť. Урпа, тулӑ, вырӑнӑн рис акса тӑваҫҫӗ. Кӑнтӑр йенђе оливккӑ, тут йӑвӑҫҫисем, финик паљмисем ӳсеҫҫӗ. Паљмӑ вӑрманӗсем вара 60 ҫухрӑм Шаť-Ељ-Арапа хӗрри тӑрӑх тӑсӑлаť.

Куҫса ҫӳрекен халӑхсем кӗтӗвӗ-кӗтӗвӗпе сурӑх, тата тӗвӗ (верпљут) усраҫҫӗ.

Ҫӗре нӳрӗк памалли майсем, канавсем, т. ыт. тусассӑн кунта пӗрђӗллӗ тырӑсем те, ҫӗрмамӑкӗ те тума питӗ аван пулмалла.

Ирак ҫӗрайӗнђи пурлӑхсенђен те пуйан. Моссул хули патӗнђе, Пактат хули районӗнђе (Тикр шывӗ хӗрринђе) нумай нехтӑ саппасӗ выртаť. Ҫак нехтӑ пуйанлӑхне туртса илес тесе вӑрҫӑ хыҫҫӑн Мессопоттаминђе акӑлђансем арап патшалӑхӗ Ирак турӗҫ. Кайрантарах кун ҫумне нехтӑпа пуйан Моссуљ районӗ, Туртсинђен туртса илсе ҫыпӑҫтарђӗҫ. Хӑйсен вырӑнне ҫирӗплетес тесе акӑлђансем Перҫҫи саливӗнђен Пактат патне ђукун ҫул хыврӗҫ, Тикрпа Йеврат шывӗсем тӑрӑх пӑрахутсем ҫӳрессине вӑйлатрӗҫ.

Тӗнђе рынӑкне Мессопоттами финик, пӗрђӗллӗ тырӑсем, ҫӑм кӑлараť.

**Арави.** Арави ҫурутравӗ питӗ тӳрем сӑртлӑх. Варрипеле тӳрем сӑртлӑх хӑйӑрлӑ хирпе хупланнӑ, сайра хутра оаҫиссем тӗл пулкалаҫҫӗ. Ҫак оаҫиссем таврари ҫеҫен хирсенђе куҫса ҫӳрекен арап-петуин йӑхӗсем хӑйсен выљӑхсене-сурӑх, тӗве, лаша кӗтӗвсене пӑхса ҫӳреҫҫӗ. Шыв хӗррисемпе нӳрлӗх ытларах ӳкет, халӑх та кунта ҫӑрарӑх, Арави ҫурутравӗн кӑнтӑрпа-хӗвеланӑҫ йенӗнђе нӳрлӗх ытларах ӳкет. Кӑна телейлӗ Арави теҫҫӗ. Телейлӗ Арави тӗнђе рынӑккинђе хӑйӗн кофӗпе (мокко) ђапа тухрӗ.

Ҫыхӑну, суту-илӳ тӗвесемпе ҫеҫ ҫӳресе тытаҫҫӗ. Арави ҫурутравӗн хӗвеланӑҫ пайӗ урлӑ пӗр Кӗҫӗн Аҫинђен пыракан ђукун ҫул каҫса кайаť. Портсенђен Хӗрлӗ тинӗсе тухнӑ ҫӗрте ларакан Атепа тата Тшету кӑтартма пулаť. Тшету порт урлӑ вӑтам Аравипе ҫыхӑну тытаҫҫӗ.

Тытӑм тӗлӗшӗнђен Аравине пӗђӗк, арап патшалӑхӗсем кӗреҫҫӗ. Ҫав патшалӑхсенђен хӑш-пӗрисем пӑхӑнман патшалӑхсем вырӑнӗнђе шутланаҫҫӗ (Нетшт, Кетшас) хӑшӗсем Анклипе пӑхӑнса тӑраҫҫӗ. Пусмӑрласа пурӑнма аванрах пултӑр тесе Анкли ҫак патшалӑхсене вакласшӑн тӑрӑшаť, халӑхсем патшалӑхсем хушшинђе йурийех хирӗҫӳ, ҫапӑҫу кӑлараť.

**Ҫири.** Арави ҫурутравӗнђен ҫурҫӗрелле ҫӳлех мар тӳремсӑртлӑх Ҫири выртаť. Ҫири ҫеҫен хирсемпе хупланнӑ, хӗвелтухӑҫнелле вӑл Ҫири пушӑ хирӗ пулса кайаť. Хӗвеланӑҫ йенђи Ҫирире Вӑтаҫӗр тинӗс хӗррипе Ливанпа Анттиливан тӑвӗсем тӑсӑлаҫҫӗ. Кӑнтӑралла тӳремсӑртлӑх хушшинђе тарӑн ҫаврашка айлӑм выртаť. (Вилӗ тинӗс).

Ҫиринђе тӗрлӗрен халӑх пурӑнаť; йышлӑраххи арап халӑхӗ.

Йортан шывĕпе Вăтаçĕр тинĕсĕ хушшинчи пĕчĕк тӳремсăртлăх Палеçттинă выртат. Вăтаçĕр тинĕс хĕрринче нӳрлĕх çителĕклĕ, пĕрмай сип-симĕс ӳсен-тăран йешĕрсе ларат.

Çирире паллăрах хуласем—Тамаск, Алеппо; Палеçттинăра—Иерусалим.

Халăхăн тĕп ĕçĕ—çĕрĕçлесси. Мĕн пур çĕр лаптăкăшĕнчен 10 проччăннĕпе çеç ĕçлесе усă курраççĕ. Çĕр улпутсем аллинче, нумай хресчен çĕрсене улпутсенчен тара илсе ĕçлесе пурнаççĕ. Тинĕс хĕррипе аппельççин, лимон, маçлинă тăваççĕ, ту тайлăмĕсенче—винократ, тут йăвăççисем, тапак ĕрчетеççĕ; çурçĕр пайĕнче—çĕрмамăкĕ.

Тинĕс хĕрринчен инçерех пĕрчĕллĕ тырăсем—урпа, тулă тăваççĕ; хĕвелтухăçнелле выльăх-чĕрлĕх ĕрчетеççĕ.

Çĕрайĕнчи пурлăхсем пуррине сăнаса пĕлмен. Промышлĕннăç çукпа пĕрех. Алăсталăх промышлĕннăçĕпе вырăнти чĕрĕ таварсене (тапак, пурçăн, çĕрмамăкĕ) ĕçлекелеççĕ.

Кеокрафиллĕ вырăнĕсем Çирипе Палеçттинăн çыхăну йенчен питĕ йурăхлă пулни ытти кăпиталисла патшалăхсемпе çыхăну тытма, суту-илӳ тума пулăшат.

Çирипе Палеçттинă йута оливккă çăвĕ, ерех, чĕрĕ пурçăн, тапак, çăм, тата кăшт пĕрчĕллĕ тырăсем йарат.

Вăрçă хыççăн Лика Натси мантачĕ тăрăх Çири çĕрне Франтсийе панă, Палеçттинă çĕрне—Анклине.

Çирипе Палеçттинăна империалисла патшалăхсем питĕ хытă пусмăрлаççĕ, Вĕсем кунта мĕн тăвас килнĕ çавна тăваççĕ. Вырăнти, колонирти халăхсем империалисла патшалăхсен пусмăрĕнчен тухас, тесе тăрăшаççĕ. Йулашки çулсенче Палеçттинăра та Çирире те, Аравинче те востанисем пула-пула иртрĕç. Аравире арап-петуинсем çурçула йăхăн Анкли империалисăмĕн пусмăрĕнчен тухастăн çапăçрĕç.

Анклипе Франтси востанисене путарма, колонири халăхсене алăран кăларас мар тесе колонисенче çарсене вăйлатаççĕ.

## Афрĕккă.

Афрĕккă маттерикĕ талкăшĕпех империалисла патшалăхсен колонийĕ пулса тăрат.

Ăна тĕрлĕ вăхăтра тĕнчери чи вăйлă империалисла патшалăхсем—Анкли, Франтси, Пелки, Иттали, Испани, Порттукали т. ыт. пăхăнтарса валеçсе пĕтернĕ.

Вăта çĕр тинĕсĕнчен пуçласа кăнтăр хĕррине çитиччен Афрĕккăн хĕвелтухăç йенĕ Анкли аллинче.

Афрĕккăн хĕвеланăç йенĕ Франтси аллинче.

Афрĕккăна пайĕн-пайĕн пăхса тухса ăна пур йенчен сăнама авантарах пултăр тесе, малалла Афрĕккăна уйрăмăн пăхса тухăпăр.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Афрĕккă маттерикĕ хăш йенчен мĕнле тинĕспе чикĕленсе тăнине пĕлĕр
2. Йевроппăпа Аçинчен Афрĕккăна мĕн уйăрса тăнине сăнăр.
3. Афрĕккăри,—сăрт ту, йухан шыв, кӳлĕсене карттă çинче тупăр.

# Çурçěрти Афрěккă.

Çурçěрти Афрěккăн талкăшě калама çук аслă. Ун çěр лаптăкě 3,6 мěлйун тăваткăл километр, унта 28 мěлйун халăх пурăнаť. Маттерикăн ытти пайěсенђен вăл—кăнтăрта аслă пушă хирсемпе уйăрăлса тăраť (Саххарă, Нуби, Ливи пушă хирěсем). Çурçěрте вăл Вăта çěр тинěспе ђикěленсе тăраť.

Çурçěрти Афрěккăна виçě анлăха пайлама пулаť:

1. Вăта çěр тинěс климăтлă, ěмěр йешěл курăклă тинěс хěрри,

2. Ун хыçěнђи пушă хирсен анлăхě.

3. Тўрем сăртлă, çеçен хирлě оплăç. Пушă хирсен талкăшě çěршывăн хěвелтухăç йенелле кăна пěтет. Вăта çěр тинěсне йухса кěрекен Нил шывě тăрăх тырă аван пулакан çěрсем выртаççě. Тěпрен пурăнакансен йышěн хисепě пысăк мар. Ěлěк—авал вěсен уйрăм вак патшалăхсем пулнă. Унта халě те никама парăнман арап, халăх йăхăсем пурăнаççě.

## Йекипěт.

**Карттăпа ěçлесси:**

1. Йекипěт мěнле тинсěссемпе, патшалăхсемпе ђикěленсе тăнине пěлěр.
2. Йекипěт тăрăх мěнле тинěс каналě каçса кайнине пěлěр.
3. Йекипěт çěр пиђě мěнлине сăнăр.

Йекипěт Афрěккăн çурçěрпе—хěвелтухăç йеныěнђе Нил шывě тăрăх вырнаçнă.

Йекипěт шывсăр, нўрěсěр çěршыв. Пěр Нил шывě кăна таврашěнђи çěршыва нўретсе тăраť.                    ! !

Çут çанталăк тěлěшпе Йекипěт икě пайа пайланаť.

Пěри Нил шыв йухăмě тăрăхěнђи лапамлăх. Тепěри Нил таврашěнђи пушă хир.

Нил шывě тăрăхěнђе çěрěçне йурăхлă çěрсем çителěклě.

Нил шывěпе ўсен-тăран тěнђене шăварма мел пурри тěрлě хаклă тырă-курăксене ўстерме, ěрђетме май параť (çěрмамăкě).

Нилăн икě йеннипе нўрě çитеймен çěрте шăрăх хирсем выртаççě. Хěвеланăç йенелле Ливи пушă хирě, хěвелтухăç йенелле—Аравн пушă хирě. Йекипěт халăх йышě Нил лапамлăхěнђе ытти вырăнтинђен çăрарах. 34 пин тв. клм. çěр лаптăкě çинђе, пěр клм. 400 çын тивěçет. Тěпрен пурăнакансем—феллахсем çěрěçěне пурăнаççě.

Пушă хирсенђе вырăнтан вырăна куçса çўрекен арап-петуин халăхě пурăнаť.

Йевропăри кăпитал Йекипěт хуçалăхне хăй аллине çавăрса илнě май вăл суту-илў кăпиталисăмě пулма тытăнђě.

Йекипěт йалхуçалăхě кăпиталисла никěспе аталанса пыраť. Пěтěм çěр лаптăкěн 40 прођ. 20 кектартан мăла тытакан хуçалăхсем аллинђе. Ун пек хуçалăхсен шуђě мěн пур хуçалăхсенђен 1 прођ. кăна пулаť.

Çěр ěçлеме йурăхлă лаптăкăн 10 прођ. Йевропаран куçса нынă çынсен аллинђе. Ытти çěр ђухăнсен, патраксен аллинђе.

Вăтам шутпа ђухăн хресђен хуçалăхне $^1/_2$ рап 1 кектара çитиђђен кăна çěр тивет. Çěрсěр аптраса пурăнакансем питě йышлă. Çулталăкра пěрре çеç шăваракан çěрсем çинђе куккурус, тулă, выђăх апатне йурăхлă курăксем акаççě.

Йаланах шăварса тăракан ҫĕрсем ҫинҫе рис, ҫĕрмамăкĕ, сахăр хăмăшĕ акса тăваççĕ.

Акăлҫансем хăйсен пиравăр промышлĕннăҫне кирлĕ ҫĕрмамăкне Нил шывĕ хĕррисенҫе плантатсисем туса ҫитĕнтерессĕ. Пĕтĕм акма йурăхлă ҫĕрсем Анкли аллинҫе ҫĕрмамăк акса усă кураççĕ.

Ҫĕр айĕнҫи пурлăхсенҫен паллăраххисем—фосфорит, маркăнĕтс тăпри, Моссул ҫĕрĕнҫи нехтăпа пуйан вырăнсем.

Ҫĕрĕ тавартан хатĕр йапала тăвас ĕҫ промышлĕннăҫĕ аталанса ҫитеймен. Йекипĕтра хуҫа пулса тăракан Анкли кăпиталĕ пĕтĕм ҫĕрĕ тавара хăйне илиппе Йекипĕтри промышлĕннăҫа аталанма прĕк памасť.

Йекипĕтра ҫурлйĕр ҫителĕклĕ. Йекипĕт урлă ҫукун ҫул каҫса кайаť.

Нил шывĕн анатри йухăмĕ кимĕсем ҫӳреме йурăхлă. Вата ҫĕр тинĕсĕ хĕррипҫе вăйлă портлă хула Алексантри пур.

Йекипĕт тăрăх Вăта ҫĕр тинĕсĕнҫен Интине кайакан тĕнҫипе паллă тинĕс ҫулĕ— Суетс каналĕ иртсе кайаť.

Каналăн икĕ вĕҫĕнҫе те портсем пур. Вăта ҫĕр тинĕсĕнҫе Порт Саит, Хĕрлĕ тинĕсре—Суетс порҫĕ пур.

Йекипĕтăн тулти суту-илĕвĕ пысăк вырăн йышăнса тăраť. Нимĕнрен ытла ҫĕрмамăкĕ йут ҫĕре кайаť. Мĕн пур йута кайакан таварсен хисепĕнҫен 90% йышăнаť. Йутран промышлĕннăҫ таварĕсене кӳреççĕ.

Йекипĕт ытларах Анклипе сутă тăваť. Вăл 19 ĕмĕрĕн йулашки ҫулсенҫе Анкли кăпиталĕн аллине лекрĕ.

Вăрçă хыççăн Йекипĕтра натсионалла йухăм тапранса карĕ, анҫах Анклипе пур йенҫен те парăмлă пулни Йекипĕта прĕке тухма май памарĕ.

Йулашки ҫулсенҫе Йекипĕтра рапоҫҫисен револҫутсиллĕ йухăмĕ комунисссен партти йертсе пынипе вăйланса пыраť.

## Иттали Ливийĕ.

Йекипĕтран хĕвеланăҫнелле Итталин Ливи колонийĕ выртаť. Ливи ҫĕршывĕ пушă хирлĕ пирки уҫта ҫын сахал пурăнаť.

Шыв хĕрри кăна оливккă йăвăççи, кăнтăрти сат ҫимĕçсем, пĕрҫĕллĕ тырăсем ӳсме йурăхлă.

Типĕ ҫеçен хирсенҫе куçса ҫӳрекен арап, пернер халăхĕсем пурăнаççĕ. Ливи урлă тĕп Афрĕккăран Вăта ҫĕр тинĕсне тухакан караван ҫулĕсем пур. Портсенҫен паллăраххи Триполи хули.

Йута—урпа, еспăрттă куракĕ, выҫăх-ҫĕрлĕх протукҫĕсем кăлараççĕ.

## Алширпа Тунис.

Алширпа Тунис Афрĕккăн ҫи ҫурҫĕр пайĕнҫе, Вăтаҫĕр тинĕсĕ хĕррипҫе выртаççĕ. Кунта нӳрĕк ытларах, ҫавăнпа пурăнма йурăхлăрах. Тинĕс хĕррипҫи оплăҫ пушхирсенҫен сăртсемпе пӳлĕнсе тăнă пирки климăт ҫемçе, кунта ĕмĕр йешĕл ӳсен-тăрансем. Шаларахри ҫĕршыв тӳремсăртлăхлă, климăт контти-нентталлă.

Халăх йышĕ шыв хĕрри оплăçĕнҫе ытти ҫĕртинҫен ҫăрарах пурăнаť. Кунта ҫĕрĕçĕпе пурăнакан пернер халăхĕ пурăнаť тата франтсуссем, испантсăсем, итталийантсăсем пурăнаççĕ.

Паллăрах хуласем Вăтаҫĕр тинĕсĕн хĕррипҫе—Алшир, Тунис.

Халăх çĕр ĕçлесе пурăнаť: çĕрулми, лимон, аппелçсин, иçĕм çырли, оливккă, тулă, урпа, тапак акса тăваť. Выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕç те вăйлă. Кунта сурăхпа кађакасене нумай ĕрђетеççĕ.

Çĕршывăн çĕрай пурлăхĕ нумай. Кунта тимĕр тăпри, тсинк, фосфорит нумай. Фосфорит кăларас тĕлĕшпе Тунис тĕнђере иккĕмĕш вырăн йышăнаť. Вырăнти промышлĕннăçа аталанма çĕркăмрăк çукки кансĕрлет.

Тунис Мароккăпа ђукун çулпа çыхăнса тăраť. Алширтан сат-пахђа çимĕçĕсем, выљăх-ђĕрлĕх протукђĕсем, пĕрђĕллĕ тырăсем, Тунисран—оливккă çăвĕ, тимĕр тăпри, фосфорит йута кайаť, йутран промышлĕннăç таварĕсене кÿреççĕ.

Политтĕк тĕлĕшпе Алширпа Тунис колонипе çурколони шутĕнђе тăраççĕ. Тунисра професçионаллă сойуспа комунисла партти пур.

## Мароккă.

Мароккă Алширтан хĕвеланăç йенелле çĕре йышăнаť. Хĕвеланăçĕнђе шыв хĕрри тÿремлĕхĕ пур. Ку тÿремлĕхĕн çĕр сийĕ хура тăпраллă, нÿрĕ çителĕклĕ илет.

Çĕршывăн вăтам пайĕ, кăнтăрпа—хĕвелтухăç йенђен Çÿлĕ Атласăн вăрманлă тÿрђĕпе хупланакан, тÿремсăртлăхлă. Тăвсем хыççăнах Саххарă пушă хирĕ пуçланаť. Мароккăра пернер халăхĕ пурăнаť, вăл куçса çÿрекен арап халăхĕ.

Шыв хĕррнђе ытти çĕртинђен халăх çăрарах. Кунта çĕршывăн тĕп хули—Фетс.

Шыв хĕрри оплăçĕнђе урпапа тулă пулаť.

Тÿремсăртлăхра выљăх-ђĕрлĕх ĕрђетеççĕ.

Ту пуйанлăхĕсенђен пыллă вырăнта тимĕр тăпри, хура тăхлан, фосфорит.

Кунта аласталăх промышлĕннăç анђах нађар аталаннă. Çулйĕрсем çителĕклĕ мар.

Çĕршывăн тĕп порђĕ Касапланккă Атлантти оккеанĕ хĕррнђе Мароккăран йут çĕре çĕрĕç протукђĕсем—урпа, выљăх-ђĕрллĕх, меттал тăприсем кайаççĕ. Мароккă Франтсине пăхăнса тăраť.

Кипралттар проливĕ çывăхĕнђи оплăç Испанине пăхăнаť.

Кипралттар проливĕ хĕррнђе Анкли аллинђи, Анклин Интине кайакан çула сыхлакан Таншер хули пур.

Мароккă çĕршывĕн шал пайĕсем нимĕнле патшалăха та пăхăнмаççĕ. Унта тĕпрен пурăнакансем—риффсем, тата ытти арап йăхĕсем пурăнаççĕ. Пумай пулмасť Мароккăри риффсен пăлхавне Франтсипе Испани çарĕсем вăйпа арап çĕнтерђĕç.

# Троппĕкри Афрĕккă.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Троппĕкри Афрĕккă таврa мĕнле оккеансем пуррине сăнăр.
2. Троппĕкри Афрĕккăра анлăм вырăнсем, сăртлă вырăнсем, çÿлĕ тусем ăçтине сăнăр.
3. Пысăк кÿлĕсемпе, йухан шывсем пуррине карттă çинђе тупăр.
4. Карттă çинђе тĕрлĕ кăпиталисла патшалăхсен колонисен пысăкĕшне халăх йышне хисепе илĕр.

Троппĕкри Афрĕккăна Саххарă пушă хирĕнҫен пуҫласа Сампеҫи шывне ҫитиҫҫенхи аслă ҫĕр лаптăкĕ кĕрет. Ҫĕршывăн пĕтĕм талкăшĕ сăртлă, унтан аслă тӳремсăртлăх пулса тăрать.

Ҫĕр ҫийĕ, климăт, ӳсен-тăран тĕнҫе тĕлĕшпе пĕтĕм Троппĕкри Афрĕккăна уйрăм районсене пайлама пулать.

## Ҫут-ҫанталăк районĕсем.

Троппĕкри Афрĕккăн ҫурҫĕр пайĕ Атлантти оккеанĕнҫен Хĕрлĕ тинĕсе ҫитиҫҫенех пушă хирсемпе типĕ ҫеҫен хирсем. Ҫак вырăнăн хĕвеланăҫ пайĕ— Саххарă хĕвелтухăҫ пайĕ Ливи пушă хирĕ, Нил шывĕн сылтăм хĕрринҫен Хĕрлĕ тинĕсе ҫитиҫҫенхи пайĕ—Арави пушă хирĕ. Троппĕкри Афрĕккăн $^1/_3$ пайне йышăнса тăракан аслă тӳремсăртлă оплăҫ варри ҫӳлĕленсе, хĕвеланăҫ йенелле вашмакланса пырать.

Пушă хирсен климăҫĕ типĕ, шăрăх. Нӳрĕ сахал. Ҫĕр спйĕ хăйăрлă. Нӳрĕрех вырăнсенҫе финик паҫмисем, вир, маис уйĕсем тĕл пулкалаҫҫĕ.

Ҫĕрĕ-ҫун тĕнҫи ҫухăн. Пушă хирсене типĕ ҫеҫен хирсенҫен кăнтăралла саваннăсен анлăхĕ пуҫланса кайать. Саваннăсенҫе тĕмеллĕ йăвăҫсем, тĕрлĕ кăнтăр йенҫе ӳсекен йăвăҫсем курăклă йăвăҫсемпе курăксем ӳсеҫҫĕ.

Саваннăсен анлăхĕ Сутан, Ҫат кӳллине, хĕвеланăҫ Афрĕккăн кӳлĕ оплăҫне, кăнтăрта Конко шывĕн оплăҫне ҫавăрса Атлантти оккеанĕнҫен пуҫласа Инти оккеаннех ҫитет. Екваттăрăн икĕ йеннипе Тури Квинейăн ансăр шыв хĕрри тăрăхĕпе Конко паҫҫейĕнҫе троппĕк вăрманĕсен оплăҫĕ вырнаҫнă. Троппĕкри Афрĕккăн хĕвелтухăҫ хĕрринҫи ҫӳлĕ тусен йăрăмне уйрăм оплăҫа шутлама пулать. Вăл ҫурҫĕрте Апиҫҫини тӳремсăрлăхĕпе пуҫланать.

Кунта вăтам климăт, ҫеҫен хирсем, улăхсем пур пирки пурăнма ытти вырăнтисенҫен аванрах.

Апиҫҫинин тĕп хулисем, халăх йышĕн ҫи ҫăрарах вырăнĕсем ҫакăнта ĕнтĕ.

## Халăх йышĕ.

Троппĕкри Афрĕккăн ҫĕр лаптăкĕ 23595 пин тăваткăл километр, халăх йышĕн хисепĕ 95 мĕлйун ҫын. Пĕр тăваткăл километра вăтам шутпа 4,5 ҫын тивет. Тури Квинейă хĕррисенҫе халăх ытти ҫĕртинҫен ҫăрарах пурăнать.

Кунта тĕрлĕ халăх пурăнать. Пушă хирсемпе ҫеҫен хирсенҫе арап, пернĕр халăхĕсем пурăнаҫҫĕ, Саххарăн вар пайĕнҫе некăрсем пурăнаҫҫĕ.

Троппĕкри Афрĕккăн кăнтăр пайĕнҫе, Матакаскар утравĕн хĕвеланăҫ пайĕнҫе пантту (некăрсемех) халăхĕ пурăнать—Апиҫҫинипе Сомали ҫурутравĕнҫе хамит халăхĕ пурăнать.

## Хуҫалăх.

Йевроппăран тĕрлĕ халăхсем килиҫҫен тĕпрен пурăнакансем турро (вир йевĕрлĕ), коккăс паҫми, финĕк паҫми т. ыт .куҫттурсемпе йăвăҫ-курăксене ĕрҫетсе ĕҫлесе пурăннă. Йевроппейтсăсем килнĕреппе кунта тĕрлĕ куҫттурăллă ҫимĕҫсем, курăксем ĕрҫетме тытăннă. Сăмахран, рис, каккао, кофĕ, панан, сахăр хăмăшĕ, тапак т. ыт.

Каккао ӳстерсе тăвас тĕлĕшпе нимрен ытла Тури Квинейăри Анкли колонисем маларах тăраҫҫĕ.

Троппĕкри Афрĕккăра выҫăх ĕрҫетес ĕҫ сарăлайман.

Саваннăсемпе троппĕк вăрмапĕсем майракаллă шултра выљăхсене ĕрђетме «тсе-тсе» йатлă сийенллĕ шăна пур пирки йурăхсăр.

Выљăх-ђĕрлĕхĕ, Саххарă хĕррисемпе, çўлĕ вырăнсенђе ĕрђетме кăна йурăхлă. Кунтан йут çĕре тир, тата çăм кайаť.

Ирĕкре ўсен кураксенђен тупăнакан кауђук, маçлишă улмисем, тĕрлĕ смала йут çĕре кайакан таварсем пулса тăраççĕ.

Афрĕккăн троппĕк çывăхĕнђи çĕршывĕ тусенђи хаклă протуктсемпе пуйан. Нумай çĕрте ылттăн, тăхлан, алмас (Пелкин Конко çĕрĕнђе) нумай.

Ку районра пăхăр тупас ĕç калама çук вăйлă ўссе кайнă (Пелкин Конкори Каттанкă çĕрĕ).

Троппĕкри Афрĕккăн çулйĕрĕсем нађар аталаннă.

Шывсем ђуллă, шыв сиккиллĕ пирки кимĕсем çўреме йурăхсăр.

Халђхи вăхăтра кăнтăрти Афрĕккăна Йекипĕтпа çыхăнтарма пултаракан, акăлђансем ђукун çул тăвас ĕçĕ пуçланнă. Çурçĕрпе кăнтăр йенђи ђукун çул пайĕсене туса пĕтерпĕ, вăтам пайĕ (Çампеçипе Нил шывĕ çинђи Харттум хушши) кăна пĕтмен.

Афрĕккăн хĕвеланăç пайĕнђе те ђукун çул тăвассипаллă. Вăл çул Алширтан Квинейă саливне пымалла, анђах ăна тума Саххарă кансĕрлесе тăраť. Афрĕкри суту-илў маттерик варринђи оплăçсемпе çыхăнса тăракан портсем урлă пулса иртет.

Афрĕккăн хĕвеланăç хĕрринђи портлă хуласенђен паллăраххисем Френтси Квинейĕнђи Таккар хули, Анкли Никерийĕнђи Лакос хули, Липери патшалăхĕнђи Монрови хули. Хĕвелтухăç хĕрринђе Порттукалин Мосампик колнинђй Лорентсо-Марккес хули, Санçипар порђĕ.

## Политтĕкпа тытăм.

Троппĕкри Афрĕккăн пуйан оплăçĕсем аваланнах Йевропăри капиталиссене илĕртсе пурăннă.

Йевропăран Афрĕккăна ђи маларах килсе колони йышăнаканни Порттукали патшалăхĕ пулнă, ун хыççăн Анкли, Френтси, Пелки, Кермани, Иттали патшалăхĕсем килнĕ.

Халђхи вăхăтра Троппĕкри Афрĕккăна йăлтах вакласа пĕтернĕ. Пĕр Апиçсинипе Липери паатшалăхĕсем кăна аран çеç хăй тĕллĕн тытăнса тăраççĕ.

Френтси патшалăхĕн Афрĕккăра (Троппĕкри Афрĕккă )пĕтĕм колонисен çĕр лаптăкĕ 9585 пин тăваткăл километр. Çав шута хĕвеланăç Афрĕкĕ, екваттăрти Афрĕкиă, Матакасккар утравĕ,—кĕреççĕ! Пĕтĕм халăх йышĕ 23,3 мĕлйун çын.

Анклин колонисен çĕр лаптăкĕ 7771 пин тăваткал километр, халăх йышĕ 45,1 мĕлйун çын. Çав шута хĕвеланăç Афрĕкĕ, Анкло-Йекипĕт Сутанĕ, Приттани хĕвелтухăç Афрĕкĕ, Ротеçи т. ыт. кĕрееççĕ.

Пелкин Афрĕккăра Конко йатлă, 2406 пин тăваткăл километрла колонийĕ пур. Мĕн пур Конкора 7,5 мĕлйун çын пурăнаť.

Порттукалин Анколăпа Мосампик колонисем пур. Вĕсен лаптăкĕ 2100 пин тăваткăл километр. Халăх йыщĕ 6,9 мĕлйун çын. Итталипе Испани патшалăхĕсен колонисен лаптăкĕ 508 пин тăваткăл километр. Халăх йышĕ 1,05 мĕлйун çын.

Уйрăм колонисенђен паллăраххисем Анкло-Йекипĕт Сутанĕ.

Сутанăн тĕп хули Нил шывĕ ҫинҭи Харттум хули. Ҫав хулана ҫитиҭҭен Суйетс каналĕнҭен ҭукун ҫул тунă.

Колонисенҭи ĕҫхалăхĕн пурнăҫĕ питĕ йăвăр. Тĕп йăх йăлаллă халăхсем ҫын пырса кĕреймен вырăнсенҭе кăна йулнă.

Шыв хĕрри районĕсенҭи ĕҫхалăхĕ йăлт Йевроппă кăпиталисĕсен пусмăрне кĕрсе ӳкнĕ.

Йевроппă кăпиталисĕсем колонисенҭи ĕҫхалăха пысăк куланай хурса, плантатсисенҭе вăйпа ирĕксĕрлесе ĕҫлеттерсе, вăрмансенҭе ĕҫлеттерсе усраҫҫĕ.

Троппĕкри Афрĕккăн хăш-пĕр вырăнĕсенҭе ирĕксĕр ĕҫ, пусмăрлă ĕҫ халĕ те саккунлах пулса тăрать.




Йевроппă патшалăхĕсен Афрĕккăри тытăмсем.

(Анклип Ҫийерра-Леонĕ колонинҭе ҭуралăха 1927 ҫулта ҫеҫ пĕтерне).

Йулашки ҫулсенҭе Троппĕкри Афрĕккăра некăрсен, пусмăрҫăсене хирĕҫ пăлхавсем пулса иртрĕҫ.

Ирĕклĕ патшалăх Липерине Пĕрлешӳллĕ Штатсенҭен куҫса килнĕ некăрсем тупă. Анҭах Липери патшалăхĕн економĕк тĕлĕшĕнҭен Америкри пĕрлешӳллĕ штатсене пăхăнма килет.

Тепĕр «ирĕклĕ» патшалăх Апиҫҫини. Вăл хăйĕн ирĕклĕхне Итталипе вăйлă кĕрешсе кăна ҫухатмарĕ.

Патшалăхăн тĕп хули Атис-Апеп.

# Кӑнтӑрти Афрӗккӑ.

**Карттӑпа ӗҫлесси:**

1. Кӑнтӑрти Афрӗккӑра тусен йӑрӑмне карттӑ ҫинҙе тупӑр.
2. Аслӑ йухан шывсене тупӑр.

Кӑнтӑрти Афрӗккӑпа—Кӑнтӑр Афрӗккӑ пӗрлешӗвӗ (1223 пин тӑваткӑл километр, халӑх йышӗ 7,5 мӗлйун ҫын) тата кӑнтӑрпа—хӗвеланӑҫ Афрӗкӗ (ӗлӗкхи Кермани колонийӗ)—(1594 пин тӑваткӑл километр, халӑх йышӗ 1 мӗлйун ҫын) кӗреҫҫӗ.

Кӑнтӑрти Афрӗккӑн ҫийӗ тӳремсӑрлӑхлӑ.

Инти оккеанӗ йенҙе вӑрӑм, Траккон сӑрт тӑвӗсем тӑсӑлса выртаҫҫӗ.




34. Афрӗккӑ хуҫалӑхӗн картти.

Инти оккеанӗ йенҙен вӗрекен нӳрӗ ҫил хӗвелтухӑҫ пайне нӳрӗк ҫителӗклӗ парса тӑнипе кунта ҫуртропшӗкла ӳсен-тӑран тӗнҙе питӗ пуйан.

Траккон тӑвӗсенҙен хӗвеланӑҫнелли аслӑ тӳремлӗхӗн климӑҙӗ типӗрех.

Атлантти оккеанӗ хӗрнелле Калаххари пушӑ хирӗ выртаӗ.

Кӑнтӑрти Афрӗккӑра йухан шывсем нумай мар. Пӗр Оранҗевайа шывӗ ҫеҫ паллӑ.

Пушӑ хирсенҙе тӑварлӑ кӳлӗсем нумай.

Афрӗккӑра (кӑнтӑрти) тӗпрен пурӑнакансем—кафрсем, коттенттотсем, пушменсем. Йутран килнисем—пурсем (Коллантинҙен килнӗ), акӑлҙансем тата ыттисем те.

Йевроппӑран куҫса килнӗ халӑх йышӗ 1,5 мӗлйун ҫынна йахӑн. Вӗсен аллинҙе ҙи аван ҫӗрсем, аслӑ ҫӗршыври пуйанлӑхсем пур. Кӑнтӑрти Афрӗккӑн хуҫалӑх аталанӑвӗ вайсӑр, йерипен пыраӗ.

Ҫӗрӗҫлеме йурӑхлӑ ҫӗрсен лаптӑкӗ 3 мӗлйун кектартан ытла мар.

Вырӑнта пулакан тулӑ, сӗлӗ—тырӑсем вырӑнтах йулаҫҫӗ. Йута (Йевроппӑпа) куккурусӑ кӑна кайат̆.

Инти оккеанӗ хӗрринђе сахӑр хӑмӑшӗ, ђей нумай пулат̆. Халӑх хуҫалӑхӗнђе паллӑ вырӑна выђӑх ӗрђетес ӗҫ йышӑнса тӑрат̆. Кӑнтӑрти Афрӗккӑра халӗ 9,5 мӗлйун мӑйракаллӑ выђӑх, 30 мӗлйун сурӑх шутланат̆. Йута ҫӑм, аш, тир нумай кайат̆.

Кӑнтӑрти Афрӗккӑн хуҫалӑхӗнђе ту ӗҫ промышлӗннӑҫӗ паха вырӑн йышӑнат̆. Трансвааљ ҫӗрӗнђе тӗнђипе тупӑнакан ылттӑн 40 прођ. вӑрҫӑђђенех пулнӑ. Халӗ тӗнђери тупакан ылттӑнран 50 прођ. унта ӗнтӗ.

(300 пин килокрама йахӑн, 400 мӗлйун тенкӗлӗх).

Алмас тупас тӗлӗшпе те Трансвааљ пысӑк вырӑн йышӑнат̆. (Ҫуллен 80 мӗлйун тенкӗлӗх).

Тусенђе ҫӗркӑмрӑк та нумай.

Кӑнтӑрти Афрӗккӑран нимӗнрен ытла йут ҫӗре ылттӑн, алмас, ҫӑм, страус тӗкӗ кайат̆.

Йутран меттал, пиравӑр таварӗсене кӳреҫҫӗ.

Паллӑрах хуласем—Капштатпа, Йелисавет порт.

## Кӑнтӑрти Афрӗк пӗрлешӗвӗ.

Кӑнтӑрти Афрӗккӑн малтанхи хуҫисем пурсем—Коллантирен килнисем пулнӑ.

Кайран кунта—ылттӑнпа алмас тӑприсемпе, вырӑнӗсене тупнӑ хыҫҫӑн Анкли пуршуаҫи те кунталла тапма тытӑнат̆. 1899 ҫулта 1902 ҫул тӑрӑшшӗнђи вӑрҫӑ хыҫҫӑн, Анкли пурсен Ораншевайапа Трансвааљ респуплӗкӗсене туртса илет. 1910 ҫулта кӑнтӑрти Афрӗккӑри Анклин колонисенђен (Кап ҫӗрӗнђи колони, Натаљ, Ораншевайа, Трансвааљ) кӑнтӑрти Афрӗккӑн пӗрлешӗвӗ йатлӑ томинион пулђӗ.

Кӑнтӑрти Афрӗк пӗрлешӗвӗ тропӗк тулашӗнђи Афрӗк пайӗнђе.

Ҫак пӗрлешӗвӗн лаптӑкӗ тинӗсрен 700 метр ҫӳлерех тӳремсӑртлӑха йышӑнат̆. Климӑт пур ҫӗрте те пӗр мар. Инти оккеанӗ йенђен килекен ҫӑмӑр, пӳрӗк патшалӑхӑн хӗвелтухӑҫ йенне ҫителӗклӗх нӳретсе тӑнипе кунта ҫеҫен хирсем (Саваннӑсем) пулнӑ, хӗвеланӑҫ йенӗ ҫара, пушхир кӑна.

Кӑнтӑрти Афрӗккӑн малтанхи колонисаттӑрӗсем—пурсем аслӑ ҫӗрсем туртса илсе ҫӗрсӗр тӑрса йулнӑ тӗпрен пурӑнакансен вӑйӗпе усӑ курса вӑйлӑ йалхуҫалӑх аталантарнӑ.

Йалхуҫалӑхра сурӑх ӗрђетес ӗҫ тӗп вырӑн йышӑнса тӑрат̆.

Патшалӑхра йалхуҫалӑх пурсен аллинђе пулсан, Анкли пуршуаҫи пур ҫӗр айӗнђи пурлӑха хӑй аллине илнӗ. Ылттӑн, алмас, ҫӗркӑмрӑкӗ ҫӗрайӗнђи пуйанлӑйӑхсенђен ђи паллӑраххисем.

Кӑнтӑрти Афрӗккӑн йута тавар кӑларассипђе Анклин пайӗ 1913 ҫулта 88,7 прођ. пулнӑ пулсан 1925 ҫулта 56,2 прођ. ҫитиђђен ђакнӑ, ҫав хушӑрах ҪАПШ-ен К.А.П. импӑртӗнђи пайӗ 1913 ҫулта 8,9 прођ. пулнӑ пулсан, 1925 ҫула ҫитиђђен 14,7 прођ. ҫитрӗ.

К.А.П-ђе тӗпрен пурӑнакансен ҫӗрсӗрлӗх клас хирӗҫӗвӗсене ҫивӗђлетсе пырат̆. Тӗпрен пурӑнакансен нимӗнле права ҫукки, тара кӗрӗшсе ӗҫлеме тивни, кӑнтӑрти Афрӗккӑ пӗрлешӗвӗнђи промышлӗннӑҫӗнђе ӗҫлекенсен шутӗнђен $^3/_4$ пайне йышӑнни—клас хирӗҫӗвӗсене натсиллӗ пусмӑрлӑхпа витерет.

1922 ҫулта пулса иртнӗ револютсиллӗ йухӑмра хура ӳтлӗ ӗҫлекенсемпе

шурӑ ӳтлӗ ӗҫлекенсем пӗр пулса ӗҫленине хирӗҫ Анкли пуршуаҫийӗ хӗҫпӑшалпа тухсан ҫеҫ ҫӗнтерме пултарнӑ.

**Ӗҫ:** Капштат, порт Йелисавет, порт Натаљ Йоканеспурк хулисене карттӑ ҫинђе тупӑр.

**Тӗпђев ыйтӑвӗсем:**

1. Империалисӑм вӑхӑтӗнђе Афрӗкка колонисатсилесшӗн кӗрешни мӗнрен килет?
2. Афрӗккӑна колонисатсилесшӗн мӗнле патшалӑхсем кӗрешеҫҫӗ?
3. Мӗнле кӑпиталисла патшалӑхӑн Афрӗккӑри колонийӗ пысӑкрах, аслӑрах пуйанрах?
4. Тӗнђери револютсиллӗ кӗрешӳре Афрӗккӑри пусмӑрлӑ ӗҫхалӑхӗн мӗнле ҫулпа каймалла?
5. Каир—Капштат-Каљккуттӑ ђукун ҫулӗ мӗне кирлӗ; кама кирлӗ?

**Ӗҫ:** 1. Ҫтенли, Ливинкстон ҫӳревҫӗсем ҫинђен вулӑр.
2. Конттурлӑ карттӑ ҫинђе кӑпиталисла патшалӑхсен Афрӗккӑри колонисене уйрӑм тӗслӗ сӑрпа сӑрлӑр.
3. Колонисен пысӑккӑшне кӑтартакан тиакрам тӑвӑр.

# Латтин Амерӗкӗ.

**Карттӑпа ӗҫлесси:**

1. Карттӑ ҫинђе Латтин Амерӗкне кӗрекен ҫӗршывсене тупӑр.
2. Ҫӗр ҫийӗ, климат тӑрӑх Латтин Амерӗкне мӗнле пайсене валеҫме пулать?
3. Латтин Амерӗкне мӗнле паллӑрах тусем, йухан шывсем, айлӑмсем кӗреҫҫӗ?
4. Кортилйер тӑвӗсене тупса, вӗсем мӗн ђухлӗ тӑсӑлнине шутласа пӗлӗр.

Латтин Амерӗкӗ тӗнђе хуҫалӑхӗшӗн пысӑк, ҫурколонилле оплӑҫ пулса тӑрать. Вӑл тӗнђе рынӑкне промышлӗннӑҫ валђи питӗ нумай тӗрлӗрен ђӗрӗ тавар кӑларать. Ун ҫӗршывӗсенђе ҫӗр ҫийӗнђи пуйанлӑхсем те ҫӗр айӗнђи пурлӑхсем те калама ҫук нумай.

Латтин Амерӗкне ҫакӑн пек ҫӗршывсем кӗреҫҫӗ:

| Ҫӗршывсем | Лаптӑкӑш пин тӑваткал километрпа | Халӑх шуђӗ (мӗлйун ҫын) | Пӗр тӑваткал километра миҫе ҫын тивет |
|---|---|---|---|
| Мексиккӑ | 1987 | 14,3 | 7,2 |
| Вӑта Амерӗк | 580 | 6,4 | 11,1 |
| Вест-Инти | 237 | 9,9 | 41,8 |
| Венетсуелӑпа Квианӑ | 1469,9 | 3,6 | 2,4 |
| Прӑсили | 8511,0 | 40,5 | 4,6 |
| Колумпи | 1195,8 | 7,3 | 6,0 |
| Екватор | 307,2 | 2,0 | 6,5 |
| Перу | 1382,8 | 5,5 | 4,0 |
| Поливи | 1834,0 | 2,6 | 1,5 |
| Аркенттинӑ | 2952 | 10,6 | 3,6 |
| Уруквай | 187 | 1,6 | 8,6 |
| Параквай | 450 | 1,0 | 2,2 |
| Ђили | 751 | 4,0 | 5,2 |

Мекçиккӑ, Троппӗкри Амерӗккӑ (Ватӑ Амерӗкпе, Кортилйер çӗршывӗсем), Кӑнтӑр Амерӗкри Вӑтам климатлӑ çӗршывсем.

Çак çӗршывсене уйрӑмӑн нӑхса тухапӑр.

1. **Мекçиккӑ.** Мекçиккӑн вӑта çӗрӗнђи оплӑçӗ тўремсӑртлӑ. Кӑнтӑралла кайнӑ çемӗн вӑл çўлӗленсе пырӑт. Мекçиккӑн кӑнтӑр йенђи ђиккинелле 5,5 километра йахӑн çўлӗ вырӑнсем пур (Орисапа, Поппоккаттепеттеђ). Климӑт Мекçиккӑ тўремсӑртлӑхӗнђе вӑтам, ӑшӑ. Нўрлӗх ытлашши те пур, курӑк йешӗрсе ларӑт.

Лӑпкӑ оккеан тата Мекçиккӑ саливӗ хӗррисем шурлӑхлӑ, кўлӗсем нумай.

Мекçиккӑ саливӗн хӗвелапӑç хӗрринђе пӗр йарӑм айлӑм тӑсӑлӑт. Кӑнтӑр йенђе ку айлӑм сарӑлса пӗтӗм Йуккаттан çурутравне йышӑнӑт. Ку айлӑмра нўрлӗх çителӗклӗ, ўсен-тӑрансем те троппӗкри çӗршывсенђи майлӑ.

Мекçиккӑ йалхуçалӑхӗ криçӗсђен паллӑ аталанса ыђӗ. Мӗн пур çӗртен 10—12 мӗлйун кектар акса тӑраççӗ, 50 мӗлйун кектар выђӑх пӑхса усӑ кураççӗ, ытти йурӑхсӑр (тусем, хӑйӑр, шурлӑх).

Климӑт та, тӑпрасем те тӗрлӗрен пулни тӗрлӗрен йалхуçалӑх куђттурисем ўстерме май парӑт.

Шыв хӗррисенђи айлӑмсенђе троппӗкри куђттурӑсене ытларах тӑваççӗ:— какао, кофӗ, папан, ванил. Çак районтах тапак, сахӑр хӑмӑшӗ, çӗрмамӑкӗ тӑвасси пуçланӑт. Вӑтам тўремсӑртлӑхра—куккурус, винократ, паттат тӑваççӗ.

Тўремсӑртлӑхӑн çўлерех вырӑнӗсенђе—тулӑ, çӗрулми, урпа т. ыт. тукалаççӗ.

Мекçиккӑра нимрен ытла куккурус нумай акаççӗ. Куккурус пӗтӗм акакӑн çӗрӗн виççӗмӗш пайне йышӑнӑт.

Выђӑх пӑхмалли çӗр нумай пулсан та выђӑх ӗрђетесси Мекçиккӑра йышлах мар; ытларах мӑйракаллӑ выђӑхсем (кађака) усраççӗ.

## Промышлӗннӑç.

Мекçиккӑ вӑрманран пуйан; вӑрман лаптӑкӑшӗ 30 мӗлйун кектар çӗр йышӑнӑт. Вӑрман пысӑк усӑ парӑт: çуртйӗре кайӑт, кауђђук кӑлараççӗ, тӗрлӗрен краскӑсем, емелсем тӑваççӗ.

Мекçиккӑ хуçалӑхӗнђе ту промышлӗннӑçӗ паллӑ вырӑн йышӑнӑт. Мекçиккӑ тӑвӗсем тӗрлӗрен хаклӑ йышши тӗслӗ метталсенђен пуйан: Мекçиккӑ кӗмӗл тупассипе тӗнђере пӗрӗмӗш вырӑн йышӑнӑт (1928 çулта 3,3 пин тоннӑ тупнӑ), ылттӑн, шур тӑхлаћ, пӑхӑр тата ытти метталсем те ђылай тупаççӗ.

Çунтармалли йапаласенђен Мекçиккӑра нехтӑ нумай. Вӑрçă вӑхӑтӗнђе нехтӑ тупасси пит ўсрӗ—(1921 çулта 25,5 мӗлйун тоннӑ тупнӑ, анђах халӗ нумай ђакнӑ—1929 çулта 6 мӗлйун кӑна тупнӑ.

Мекçиккӑра ту промышлӗннӑçӗ йут патшалӑх кӑпиталӗ аллинђе. Кунта нимрен ытла Анклипе ÇАПШ-сен кӑпиталӗ пуç пулса тӑраççӗ. Анклипе ÇАПШ Мекçиккӑра пуç пуласшы̆н пӗр май çапӑçаççӗ. Тӗслӗх, нехтӑ промышлӗннӑçӗнђе икӗ тӗнђери ђи паллӑ трессем—Амерӗкри «Стантарт Ойђ»-па Анклири «Ройађ Теђђ» тахçантанпах хытӑ çапӑçаççӗ.

Çӗрмамӑк, пиравӑр, тапак промышлӗннӑçӗ паллӑ вырӑнта тӑраççӗ.

Мекçиккӑра шыв çулӗсем сахал. Ђукун çулсем икӗ оккеана çыхӑнтарса тӑраканнисем ытларах. Ку ђукун çулсем ÇАПШ ђукун çулӗсемпе çыхӑннӑ.

Мекçиккӑшӗн тинӗс пысӑк вырӑн йышӑнӑт. Лӑпкӑ оккеанпа Мекçиккӑ саливӗ хӗррипе портсем ђылай: Аккапуђкко, Вера-Крутс, Томпикко т. ыт.

Мекçиккăра хула пуршуаçи пуç пулса тăрать. Унта хупă çула майлă крашТăн вăрçи тăсăлџĕ. Вăл вăрçăра йут кăпиталиссем те пысăк вырăн йышăнџĕç; тĕрлĕрен майпа Мекçиккăри пуйанлăха, Мекçиккă çĕршывне харпăрхăй аллине илесшĕн тăрăшрĕç. Вĕсем ĕçхалăхне хытă пусмăрлаççĕ. Џавăнпа џас џасах востанисем пулса иртеççĕ. Рапоџџисене комунисла партти йертсе пырать.

Вăрçă хыççăн Мекçиккăри Америк кăпиталĕ вăй иле пуçларĕ. Америк кăпиталĕ Мекçиккăра ўсСех пырать. Анкли те хăйĕн кăпиталне ўстересшĕн.

ÇАПШ-сем Мекçиккăри лару-тăру пăсăлса кайсан Мекçиккăна хăйĕн аллине пĕтĕмпех туртса илсе колони тума шутлаççĕ.

## 2. Троппĕкри Америк.

### 1. Вăта Америк.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Карттă çинџе Вăта Америке тупăр. Вăл мĕнле тинĕссемпе џикĕлџĕ.
2. Вăта Америкри тусене, айлăмсене тупăр.
3. Панам каналĕ туни ÇАПШ-сене мĕнле усă парать?
3. Панам каналĕ тăрăх мĕнле çĕршывсене шыв çулĕпе кайма пулать?

Вăта Америк Çурçĕрпе Кăнтăр Америк хушшинџе ансăр пыра йышăнать. Вăл пыр тăршшĕ 2 пин километра йахăн тăсăлать, сарлакăшĕ 500 километр, тĕллĕн ансăрланса 60 километра çитет. Лаптăкăшне Вăта Америк Франтси пысăккăш, халăх шуџĕпе 6 хут кайа. Çĕр çийĕ питĕ туллă, џи çўллĕ вырăнсем Лăпкă оккеан хĕрринелле, Караип тинĕсĕ тĕлĕнџе пĕр айлăм пур.

Икĕ оккеан хушшинџе пулнипе Вăта Америкре климăт—нўрлĕ, троппĕклă. Айлăмри районсем çăра, троппĕкри вăрмансене хупланнă, çўллĕ тухуриллĕ вырăнсенџе курăк-савансем, сайра йăвăçсем ўсеççĕ.

Вăта Америкре тĕрлĕрен натси пурăнать: интейтсăсем, (50 проџ. ытла), испантсăсем, некăрсем т. ыт. Халăх тухуриллĕ, çўллĕ вырăнсенџе ытларах.

Лăпкă оккеан хĕррисенџе йалхуçалăх халăхĕ кофĕ, Караип тинĕс хĕрринџи айлăмсенџе панан тăвать. Вăрмансенџен кауџџук, мăйăр, краскă туса усă кураççĕ.

Вăта Америкре 6 уйрăм респуплĕк икĕ колониллĕ тытăм. Колонисенџен— Приттани Контурасе, тата ÇАПШ-сен Панам каналĕ таврашĕнџи çĕршывсем.

Вăта Америкре џи паллă район вăл Панам канал таврашĕ. Канал тăршшĕ 80 километр. Канал Атланттипе Лăпкă оккеана пĕрлештерет.

Вăта Америк респуплĕксем ирĕклĕ патшалăхсем шутланаççĕ. Вĕсем пĕрпĕринпе мирлă пурăнасси çинџен килĕшў те тунă. Анџах вăл респуплĕксен хуçалăхĕ суту-илĕвĕ, контсеççине, сайомсене пула пĕтĕмпех ÇАПШ-сен аллинџе. ÇАПШ-сем џас-џасах вăл респуплĕксене вăрçă, çар вăйĕпе те нусараççĕ. Çĕр пĕтĕмпех тенĕ пек шултра çĕрхуçисем аллинџе. Вырăнти ишти халăхĕ çĕрсене тара илсе ĕçлесе пурнаççĕ. Хула халăхĕ алăстипе, суту-илўпе хăтланать.

Клас çапăçăвĕ пусмăр вăйлă май çивĕџ тăрать. Востанисем, пысăк çапăçусем џас-џасах пулса иртеççĕ.

### 2. Вест-Инти.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Вест-Интине мĕнле утравсем кĕреççĕ? Карттă çинџе çав утравсене тупăр.
2. Вест-Инти утравĕсен лаптăкĕшне Вăта Америкпе танлаштарăр.

Вест-Инти утравĕсем Вăта Амерĕк пекех туллă. Тĕллĕн вăл тусем 2—3 километр ҫӳлĕш хăпараҫҫĕ. Ђас-ђасах Вăта Амерĕкри пекех ҫĕр ђĕтренисем пулаҫҫĕ. Климăт шăрăх, нӳрлĕ. Вест-Интире ђас-ђасах вăйлă тăвăлсем (торнато) пулаҫҫĕ.

Тепĕр ђух ҫав тăвăлсем хули-хулипе пĕтереҫҫĕ.

Вест-Инти тропикри ӳсен-тăрансемпе хупланнă. Вăрмансем нумайах мар. Ҫĕрĕн пысăк пайне ҫĕрĕҫлесси йышăнат̆.




34. Кăнтăр Амерĕк хуҫалăх картти.

Тропиĕкри куҫттурăсене тăвассипе Вест-Инти тĕнҫере палла вырăн йышăнать. Пĕрĕмĕш вырăнта сахăр хăмăшĕ ĕрҫетесси тăрать. Ку тĕлĕшпе Купа утравĕ питĕ палла: тĕнҫере сахăр хăмăшĕ тунинҫен виҫҫĕмĕш пайĕ (45 мĕлйун квинттал) кунта тăваççĕ. Пур утравсенҫе те кофĕ, какао, панан т. ыт. тăваççĕ.

Выҫăх-ҫĕрлĕх ĕрҫетесси Купа утравĕнҫе хытă сарăлнă. Унта мăйракаллă выҫăх шуҫĕ 5 мĕлйуна йахăн ҫитет.

Шултра промышлĕннăç Купа ҫинҫе çеç пур: сахăр савăҫĕсем, тапак хапрăкĕсем.

Вест-Интиш суту-илӳ, промышлĕннăç ҫенттăрĕ Каванну (Купа утравĕ ҫинҫе, 360 пин ҫын пурăнать).

Вест-Интири Купа утравĕ хăй тĕллĕн респуплĕк шутланать. Кантти утравĕ ҫинҫи икĕ уйрăм респуплĕк—Кантти тата Сан-Томинко. Çакă виçĕ респуплĕкĕ те халҫхи вăхăтра ÇАПШ колонисем пекех пулаççĕ. Малтанласа промышлĕннăçпа суту-илӳ Америĕк кăпиталĕ аллине лекрĕ, унта ÇАПШ çар вăйĕпех респуплĕксене пĕтĕмпех çавăрса илҫĕ. Вест-Интирех ÇАПШ Испанирен туртса илнĕ Портто-Рико утравĕ пур.

Анклине Пакам утравĕсем, Йаманкка, тата Кĕçĕн Анттил утравĕсем пăхăнса тăраççĕ. Франтсипе Колланти Кĕçĕн Анттил ытти утравĕсене тытса тăраççĕ.

## 3. Венетсуелăпа Квианă.

Кăнтăр Америĕкĕн çурçĕрпе хĕвелтухăç кĕтессинҫе Венетсуелă йатлă респуплĕк выртать. Вăл Анкли колонийĕ. Венетсуелăпа йунашарах Квиана çĕр-шывĕ. Квианăна виçĕ патшалăх колонийĕ (Анкли, Франтси, Колланти) пулса тăрать.

Квианăра климăт, шăрăх, нӳрлĕ, кунта тропиĕк вăрманĕ йешĕрсе ларать. Сăртлăхĕнҫе нӳрлĕх çулла çеç нумай ӳкет, çавăнпа çеçен хирсем вăрмансемпе ҫеретленсе пыраççĕ. Климăт та сывлăха йурăхсăр.

Венетсуелăра кофĕ, какао, панан нумай тăваççĕ. Квианă сăртлăхĕнҫе выҫăх ĕрҫетсе пурăнаççĕ. Венетсуелăпа Квианăри вăрман кауҫҫук нумай парать.

Венетсуелăра нехтă тупасси пысăк вырăн йышăнать. Нехтă тупассипе вăл тĕнҫери иккĕмĕш вырăнта тăрать. Венетсуелăри нехтă вырăнĕсемшĕн Анклипе Америĕк кăпиталисĕсем хушшинҫе вăйлă çапăçу пырать.

Венетсуелăра та Квианăра та тĕрлĕрен халăх пурăнать: интейтсăсем, некрсем тата ыттисемпе те.

# Праçили.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Праçили лаптăкăшне виçĕр.
2. Праçили лаптăкăшĕ кăнтăртан çурçĕрелле мĕн ҫухлĕ тăсăлнине шутлăр.
3. Праçили мĕнле йăрăмра? Климăҫĕ йепле?
4. Праçили ҫиккисене, шывсене кăтартăр.
5. Праçили климăҫĕ мĕнле йалхуçалăх куҫттурисене йурăхлă?

Кăнтăр Америĕкре ҫи пысăк патшалăх—Праçили. Унăн çутçанталăк пуйанлăхĕ питĕ нумай: тимĕр рути, ылттăн, кĕмĕл, пăхăр, алмас, тăхлан; (шур ылттăн, нехтă, пурте пур. Праçили вăрмантан та питĕ пуйан; хаклă йышши тропиĕкри йăвăçсем кауҫҫук паракан йăвăçсем нумай. Праçили «шур кăмрăкран» та пуйан.

Климăт тĕрлĕрен, вăл йалхуçалăх пур уйрăмĕсене те аталантарма май парать. Анҫах çак пур асăннă пуйанлăхсемпе сахал усă кураççĕ, мĕншĕн тесен ÇАПШ империалисăмĕ проиcвотствăна ўсме йури ҫарса тăрат.

Економĕк сăнпиҫĕ йенҫен Праçили плантатсиллĕ, йалхуçалăхлĕ патшалăх пулса тăрат. Йалхуçалăх куҫттурисенҫен кофĕ тăвасси ҫи пысăк вырăн йышăнат, вăл йалхуçалăхĕнҫе ытти куҫттурăсене те хĕссе кăларнă; çавăнпа Праçили промышлĕннăç таварĕсене кăна мар йалхуçалăх таварĕсене те (çимелли) сутăн илет. Çакă, йалхуçалăх пĕр йенелле кăна сулăнни, Праçилине пĕтĕмĕшпех йут рынăка пăхăнтарат. Мĕн пур йута тавар кăларнинҫен Праçилире 80 проҫ. кофĕ йышăнат.

Йулашки çулсенҫе ытти йалхуçалăх куҫттурисене тăвасси те сарăлма пуçларĕ: рис, какао, сахăр хăмăшĕ, пиравăр промышлĕннăçĕ валҫи çĕрмамăкĕ.

Çĕр, çĕрулпуҫĕсем аллинҫе ытларах. Ĕçхресҫенĕсем нумайĕшĕ çĕрулпуҫĕсем (планттаттăр) патĕнҫе кĕрĕшсе ĕçлесе пурăнаççĕ.

Çĕрпе усă курни çак таплитсăран курăнат:

| Хуçайствă пысăккăшĕ | Хуçалăх шуҫĕ | Лаптăкăш (кектарпа) | Лаптăкăш (кектарпа) | % % пĕтĕм лаптакăшран |
|---|---|---|---|---|
| 40 ка кайа . . . . | 317.800 | 49 | 6 115.000 | 3,5 |
| 40—200 кектара çитиҫен | 217.500 | 33,5 | 20.047.000 | 11,5 |
| 1000 кектартан мала . | 26 000 | 4 | 111.000.000 | 63,4 |

Çапла çĕрĕн 63,4 проҫ. пуйан улпутсен, капиталисла фермĕрсен аллинҫе тăрат.

Промышлĕннăç таварĕсене Праçили йутран кўрет. Йулашки вунă çул хушшинҫе апатçимĕç, çĕрмамăк-пиравăр промышлĕннăçĕсем аталанма пуçларĕç.

Праçилин йут çĕршывсемпе суту-илў тăвас ĕçре пĕрĕмĕш вырăн ÇАПШ йышăнат. ÇАПШ Праçилирен кофĕ илсе ăна промышлĕннăç таварĕ парат.

Йалхуçалăх криçĕсĕ Праçилине питĕ хытă çапрĕ. Малтанах тĕнҫе рынăкне пăхăннăскер Праçили криçĕсрен нихăш çĕршывран хытă аптрарĕ. Кофĕ питĕ нумай ытлашши купаланса кайрĕ, илекенĕ çук, хакĕ укнĕçемĕн ўксе пырат. Патраосен пурнăçне ку пушшех йăпăхлатрĕ. Акнă çĕр лаптăкăшĕ ҫакнă май ĕçсĕрлĕх те ўсcех пырат. Пуршуаçи таварсен хакне йалхуçалăх тухăçне пĕҫиклетнипе, çимĕçсене çунтарса йанипе хăпартасшăн. Иртнĕ çулта Праçилире икĕ мĕлйун мăйăх кофĕ шыва путарнă, кăçал 72 мĕлйун килокрам кофĕ çунтарнă, т. ыт. те.

Праçили ÇАПШ-шĕн рынăк йенҫен те, ҫĕрĕ тавар илес йенҫен те, кăпитал вырнаçтарас йенҫен те ҫи тупăшлă вырăн. Вăрçăҫҫен унта Анкли пуç пулса пурăнҫĕ. Вăрçă хыççăн хытă ўснĕ Амерĕк Анклийе Праçилинҫен хĕсĕрлесе кăларма пуçларĕ. Праçилишĕн Анклипе Амерĕк хушшинҫе хирĕçў питĕ вăйлă çивĕҫленсе пырат; Анкли хăйĕн пуç пуласси́не çухатасшăн мар, Амерĕк империалисăмĕ те тупăш шыраса вăйпах кĕрсе кайат.

**Ыйтусемпе ĕçсем:**

1. Мĕншĕн Амерĕк Праçилире тăвăм вăйĕ ўсессине йури ҫарса пырат?
2. Праçилире меттал пуйанлăхĕ пысăк пулсан та ăна тупасси питĕ наҫарри мĕнтен килет?
3. Йалхуçалăх криçĕсĕ Праçилине хытă амантни мĕнтен килет
4. Хаçат-шурналсем тăрăх хаҫхи вăхăтра Праçилире криçĕс мĕнле сарăлса пыни çинҫен вуласа пĕлĕр?

# Троппĕк Амерĕкри Кортиҫйер çĕршывĕсем.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Карттă çинҫе Кортиҫйер çĕршывĕсене (Колумпи, Екватор, Перу, Поливи) тупăр.
2. Вăл çĕршывсен çĕрпиҫĕ уйрăмлăхне пĕлĕр.
3. Кортилйер тăвĕсем мĕн ҫухлĕ тăсăлнине шутлăр.
4. Çĕрпиҫĕ тăрах Кортилйер çĕршывсене мĕнле пайсене уйăрма пулаҭ.
5. Карттă çинҫе паллăрах хуласене портсене тупăр.

Троппĕк Амерĕкри Кортилйер çĕршывĕсен оплăçĕнҫе Лăпкă оккеан хĕррипе тăсăлса выртакан Антă (Кортилйер тăвĕсем выртаççĕ. Çавăнпа çĕр çинĕ питĕ сăртлă, сайра хутран тӳремтуллăхран, айлăмсем те пур. Çак çĕршыва виçĕ района валеçме пулаҭ: 1) хĕвелтухăç айлăмлăхĕ 2) сăртлă оплăç, 3) Лăпкă оккеан хĕрри.

Лăпкă оккеан хĕрри Панам каналĕнҫен пуçласа екваттăра çитиҫҫенех. Унта климăт йурăхлă, нӳрлĕх çителĕклĕ май çăрă тĕрлĕрен вăрмансем нумай. Екваттăртан кăнтăралла (Перу, Екватор) шыв хĕрринҫе нӳрлĕх сахал, климăт та типĕ. Ӳсен тĕнҫе пуйанах мар—çур çеçен хир майлă, типпе тӳсекен йăвăçкурăксем çеç ӳсеççĕ!

Хĕвелтухăç айлăмлăхĕнҫе климăт шăрăх, нӳрлĕ. Тусем çинелле пĕр километр çурра йахăн хăпараҫҫенех троппĕк вăрманĕсем сарăлса выртаççĕ. Тусем çинелле кайнă çемĕн климăт сивĕ. Кунта вăрмансем çукпа пĕрех, курăксем, тĕмĕллĕ йăвăçсем çитĕнеççĕ.

Халăхсенҫен—меттиссем, испантсăсем, интейтсăсем, пурăнаççĕ. Халăх ту айаккисенҫе ытларах пурăнаҭ.

Йалхуçалăх куҫттурисенҫен—кофĕ, тапак, çĕрмамăкĕ, маис, тулă тăваççĕ. Айлăмсенҫе кауҫҫук, панан, каккао тăваççĕ, тӳремлĕхсенҫе выҫăх ĕрҫетеççĕ.

Кортилйер тăвĕсенҫе тĕрлĕрен хаклă йышши тĕслĕ metталсем нумай. Ылттăн, кĕмĕл пур респуплĕкĕнҫе те тупаççĕ; нихăшĕнҫен ытла Перупа Поливи ку тĕлĕшпе паллă вырăнта тăраççĕ. Кусемсĕр пуçне Поливинҫе пăхăр, шур тăхлан, Перура—нехтă ҫылай тупаççĕ.

Хатĕрсем тăвакан промышлĕннăç наҫар аталаннă. Промышлĕннăç таварĕсем йутран нумай илеççĕ. Çулйĕрсем наҫар. Ҫукун çулсем сахал.

Ку патшалăхсем пурте—пуршуаллă респуплĕксем. Влаç çĕрулпуҫĕсен аллинҫе. Вĕсем интейтсăсене хăйсен çĕрĕсем çинҫе, рутниксенҫе вăйпа тепĕ пек ĕçлеттерсе пурăнаççĕ, ĕç укçи питĕ сахал, йе наҫах та памаççĕ. Ку респуплĕксенҫе ҫас-ҫасах краштăн вăрçисем пулса иртеççĕ. Ĕçлекен клас питĕ сахаллăн.

Респуплĕксен хуçалăхĕпе политтĕкĕнҫе ÇАПШ пысăк вырăн йышăнаҭ. Панам каналĕ ҫарпăранпа ÇАПШ кăпиталисăмĕ кунта хăйĕн кăпиталне ытларах вырнаçтара пуçлаççĕ. Панам каналĕ ҫавпи Амерĕк кăпиталне ытти патшалăхсемпе çапăçма та çăмăллатрĕ, мĕншĕн тесен тавар турттарасси Амерĕке канал тăрăх йӳне лараҭ. Анклин вăйĕ Кортилйерта Амерĕк кăпиталне вырăн нумайса ҫакнăçемĕн ҫакса пыраҭ. Хирĕçӳ те икĕ империалисла патшалăх хушшинҫе çивĕҫленет.

**ыйтусем:**

1 Кортилйер çĕршывĕсем тĕрлĕрен çĕрте мĕнле йалхуçалăх куҫттурисем тунипе каласа парăр?
2. Çĕршыв пуйанлăхĕ пысăк пулсан та промышлĕннăç наҫар аталанни мĕнтен килет.
3. Кортилйер çĕршывĕсенҫе мĕнле çĕрайĕнҫи пуйанлăхсем пур?
4. Панам каналне Амерĕк мĕншĕн ҫавнă пулĕ?

# Кӑнтӑр Америкри вӑтам климӑтлӑ ҫӗршывсем.

**Карттӑпа ӗҫлесси.**

1. Карттӑ ҫинҭе К. А. вӑтам климӑтлӑ ҫӗршывсене (Аркентинӑ, Уруквай, Параквай, кли) тупӑр.
2. Мӗнле тусем, айлӑмсем, йухан шывсем пуррине пӗлӗр.
3. Аркенттинӑ, Параквай лаптӑкӑшне виҫӗр.
4. Карттӑ ҫинҭе Лаплат айлӑмне Паттакон сӑртлӑхне тупӑр.

**1) Аркенттинӑ** Кӑнтӑр Америкре пысӑккӑшӗпе иккӗмӗш вырӑн йышӑнат. Аркенттинӑн климӑт ӑшӑ. Ҫутҫанталӑк пуйанлӑхӗсем йалхуҫалӑхӗпе промышлӗнӑҫа аталантарма ҫителӗклӗ.

Аркенттинӑ йалхуҫалӑхлӗ патшалӑх. Вӑл ҫӗр ҫийӗпе кӑна усӑ курат. Акнӑ ҫӗр 24 мӗлйун кектара йахӑн. Економӗк йенҭен Аркенттинӑ йалхуҫалӑх протукҭӗсем тӑвакан хапрӑк пулса тӑрат. Йалхуҫалӑх протукҭӗсем тӑвассипе вӑл тӗнҭере паллӑ вырӑтна. Кашнӑ ҫул йут ҫӗре 60 мӗлйун квинттала йахӑн тулӑпа куккурус кӑларат. Куккурус йута кӑларассипе вӑл тӗнҭере пӗрӗмӗш вырӑн йышӑнат.

Тӗнҭе рынӑкне тулӑ 20 проҭ., маис 56 проҭ., йӗтӗн вӑрри 71 проҭ., ҫӑм 16 проҭ. Аркенттинӑ парат.

Ҫӗрпе усӑ куракан хуҫалӑхсем Аркенттинӑра питӗ шултра. 10.000 кектар ҫӗр тытакан хуҫалӑхсем те сахал мар.

Ҭи пысӑк хуҫалӑхсем выҭӑх-ҭӗрлӗх усраканнисем. Вӗсенҭен вуншар пин шултра мӑйракаллӑ выҭӑх, лашасем усраҫҫӗ. Ҫакӑн ҭухлӗ выҭӑх усрама, пӑхма пысӑк ҫӗр лаптӑкӑшӗ кирлӗ.

Аркенттинӑ ҫӗрхуҫисем хӑйсем хуҫалӑх тытмаҫҫӗ; вакласа тупӑш пайӗпе усӑ курмалла хресҭенсене тара параҫҫӗ. Йалхуҫалӑхӗнҭе 70 проҭ. хресҭен ҫӗр тара илсе ӗҫлесе пурнаканнисем. Ҫӗрсене унта халӗ те вӑхӑтлӑха кӑна тара параҫҫӗ. Ҫӗре ҫапла тара пани, кайран вӑхӑт иртсен (иквиҫ- ҫултан, калӑпӑр) туртса илнӗ пирки ҫӗр тара илсе ӗҫлекенсем вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳреҫҫӗ, нушта кураҫҫӗ. Ҫӗр тара илсе ӗҫлесе пурнакансен пурнӑҫӗ йӑлтах тырра мӗнле хакпа сутнинҭен килет. Унта тырӑсене ани ҫинҭех йӳнӗ хакпа сутаҫҫӗ.

Пӗрҭӗллӗ тырӑсенҭен Аркенттинӑра куккурус, тулӑ, сӗлӗ, урпа ытларах тӑваҫҫӗ. Йӗтӗн акса тӑвасси те паллӑ вырӑнта. Аркенттинӑра сахӑр хӑмӑшӗ ҫӗрмамӑкӗ, тапак, винократ планттатсисем те ҭылай.

Ӗлӗкрех сурӑх ӗрҭетесси питӗ пысӑк вырӑн йышӑннӑ, халӗ вӑл ҭакса пырат, ун вырӑнне сӗтлӗ выҭӑх ӗрҭетесси саралса пырат.

Промышлӗннӑҫ наҭар аталаннӑ. Нехтӑпа воҭфрам тупасси, аш, тир-ҫӑм промышлӗннӑҫӗ кӑшт ураланнӑ. Промышлӗннӑҫ претприйаттисем ҫурри ытла йут патшалӑхри хуҫасен. Анклипе Америк кӑпиталисӑмӗ Аркенттинӑна нумай кӑпитал вырнаҫтарнӑ. Кунта пуҫ пуласишӗн, Америкпе Анкли хушшинҭе вӑйлӑ ҫапӑҫу пырат.

Аркенттинӑ йалхуҫалӑхӗ тӗнҭе рынӑкне нумай тавар кӑларат. Ҫавӑнпа ӑна тӗнҭери йалхуҫалӑх крисӗсӗ питӗ хытӑ ҫапрӗ. Пӗрин хыҫҫӑн тепри ҫӗршерӗн-ҫӗршерӗн ҫӗр тара илекенсем ҭухӑнланса пӗтсе пыраҫҫӗ, ҫӗрӗсне пӑрахса выҫӑхса ӗҫсӗр ҫӳреҫҫӗ.

## 2. Параквай, Уруквай.

Ку икӗ республӗк Лаплат айлӑмӗнҭе Параквайпа Уруквай йухан шывсем тӑрӑх выртаҫҫӗ. Нӳрлӗх Аркенттинӑринҭен нумай. Параквай республӗкӗнҭе

троппёкри йавăçкурăксем те нумай ӳсеççĕ. Ку респуплĕк наҫар аталаннă, халăх та питĕ сахал. Халăх ҫей, çырласем туса пурăнаҭ. Хуçалăх аталанассине çулйĕр çукки те (тинĕсрен айакри) ҫарса пыраҭ. Параквай тĕп хули Асунсион.

Уруквайра халăх Параквайринҫен йышлăрах. Вăтам климăтлă май акмалли çĕр те нумай, выҫăх-ҫĕрлĕх те йышлă. Сурăх шуҫĕ 15. мĕлйун пуçа йахăн. Уруквай йута çăм, тир нумай йараҭ. Тĕп хула—Моҥттевитио (Лаплат оккеана кĕнĕ çĕрте).

3. Ҫили ту йарăмĕнҫи патшалăх. Çĕр çийĕ сăртлă, анҫах лапам вырăнсем те пур.

Кăнтăртан çурçĕрелле ҫылай тăсăлнă май климăт пĕр пек мар. Çурçĕр пайĕ троппĕкех кĕрсе кайаҭ; климăт кунта типĕ, шăрăх, çавăнпа пушă хир Аттакаму выртаҭ. Вăтам пайĕнҫех нӳрлĕх çителĕклĕ, климăт вăтам, çĕрĕçне те йурăхлă. Ҫилин кăнтăр пайĕнҫе климăт нӳрлĕ, сулçăллă, йĕп çулçăллă çăра вăрмансем ӳсеççĕ.

Халăхăн тĕп ĕçĕ—йалхуçалăх. Тулă, урпа, çĕрулми акаççĕ. Винократ пахҫисем, сат-пахҫисем те пысăк çĕр вырăнĕ йышăнаççĕ.

Выҫăх ҫĕрлĕх ĕрҫетесси те хытă саралнă. Сурăх нумай усранă май йута çăм ҫылай кăлараҭ.

Йут суту-илӳре Ҫилире аталаннă ту промăсли паллă вырăн йышăнаҭ. Ант тăвĕсенҫе тĕрлĕрен метталсем, минералсем нумай выртаççĕ, тупма та çăмăл.

Нимĕнрен ытла таса çелитрă питĕ нумай тупаççĕ (Аттакамура) 1929 çулта 3,2 мĕлйун тонна йахăн таса çелитрă тупнă. Пăхăр тупассипе те Ҫили ÇАПШ хыççăн иккĕмĕш вырăнта тăраҭ. Ытти çĕрайĕнҫи пуйанлăхсенҫен—ылттăн, кӳкĕрт, çĕркăмрăкĕ тупаççĕ. Йут патшалăхсемпе суту-илӳ тăвас тĕлĕшрен Ҫили Праçилипе таплашаҭ. Йута пăхăр, çелитрă нумай кăлараҭ.

Суту-илӳ тĕп ҫенттăрĕ—Ваҫпарайсо порҫĕ. Ку порт тĕп хула Сант-Йакопа ҫукун çулпа çыхăннă.

Кăнтăр Америкри пур çĕршывсенҫе те тĕрлĕрен натси пурăнаҭ.

Йулашкинҫен çакна каламалла. Латтин Америкĕнҫи çĕршывсене йалхуçалăхпа промышлĕннăç криçĕсĕ те хытă хĕстерҫĕ. Латтин Америкĕ тĕнҫен рынăкĕн çурколониллĕ оплăçĕ пулса тăраҭ. Ун çĕршывĕсем пĕтĕмпех тĕнҫе рынăкне пăхăннă. Криçĕс хытă саралнă май тĕнҫе рынăкĕн тавар илме пултарасси калама çук пĕҫикленҫĕ. Латтин Америкĕнҫи çĕршывсен уйрăмах нумай тупă таварĕ кайми пулҫĕ. Промышлĕннăç та, йалхуçалăх та купран кун ҫакса пыраҭ. Питĕ нумай вак хресҫенсем ,çĕр тара илсе ĕçлекенсем хуçалăха тытса тăраймаççĕ, вĕсен хуçалăхĕсем саланса кайаççĕ. Темиçе мĕлйун çĕрулпуҫĕсен тытăмĕнҫе ĕçлекен патраксем акнă çĕр лаптăкĕшĕ ҫакса пынă май ĕççĕр йулҫĕç. Çĕрулпуҫĕсен выҫăхĕсене пăхакан кĕтӳçсем те нумайĕшĕ ĕççĕр йулаççĕ.

Хапрăк-савăтсенҫе те тăвăм ҫакаҭ. Ĕççĕрсен шуҫĕ ӳсет. Криçĕсрен тухмалли çул шыраса пуршуаçи ĕçлекенсен ĕç укçине тапăнаҭ. Ĕçлекенсемпе хресҫенсен ахаҫте йăвăр пурнăçĕ татах йăвăрланаҭ. Империалисла патшалăхсем криçĕсрен тухас тесе Латтин Америкри ĕçлекенсемпе хресҫенсене тата ытларах пусмăрлама тытăнаççĕ.

Ĕçлекенсемпе хресҫенсен пуршуаçине хирĕç револҫутсиллĕ çапăçăвĕ вăйлансе пыраҭ. Ҫас-ҫасах востанисем, краштăн вăрçисем пулса иртеççĕ.

Латтин Америкĕ хуçалăхпа политтĕк йенҫен те ÇАПШ империалисăмĕ аллипе кĕрсе пыраҭ. Анкли те хăйĕн вырăнне ирĕккĕнех парасшăн мар. ÇАПШ-пе

Анкли ку ҫӗрсене хӑйсен кӑпиталӗпе пӗрле ҫар, вӑрҫӑ хатӗрӗсем йараҫҫӗ, ӗҫхалӑхӗ вађђи ҫӗнӗрен пусмӑр сӑнђӑрӗ илсе пыраҫҫӗ, Латтин Америкӗнђи ӗҫхалӑх массин йунӗнђен ылттӑн тӑвасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ.

Латтин Америкӗ—ҪАПШ-пе Анкли хушшинђи хирӗҫӳсен пӗр тӗвви пулса тӑрат.

**Ыйтусемпе ӗҫсем:**

1. Аркенттинӑ мӗнле районсене уйӑрӑлнине карттӑ ҫинђе кӑтартӑр.
2. Аркенттинӑ кӗске вӑхӑтрах тӗнђе рынӑкӗнђе йалхуҫалӑх таварӗсемпе паллӑ вырӑн йышӑнни мӗнрен килет?
3. Аркенттинӑ мӗнле йалхуҫалӑх протуктисем тӑвать? Мӗнлисене йута кӑларат.
4. Промышлӗннӑҫ Аркенттинӑра нађар аталанни мӗнтен килет?
5. Тӗнђери йалхуҫалӑх криҫӗсӗ Аркенттинӑна Параквайа, Ђилине, Уруквайа йепле хӗстернине калаҫа кӑтартӑр.
6. Ђили, Уруквай, Паракввай тӗнђе рынӑкне мӗнле таварсем кӑлараҫҫӗ?
7. Латтин Америкӗнђе, уйрӑмӑн кӑнтӑр Америкре мӗнле халӑх, мӗн ӗҫпе пурӑннине калаҫа кӑтартӑр.
8. Мӗншӗн йалхуҫалӑхпа промышлӗннӑҫ криҫӗсӗ Латтин Америкӗнђи ҫӗршывсенђе хытӑ сивӗђленђӗ?
9. ҪАПШ-пе Анкли Империалисӑмӗ Латтин Америкри пуҫ пулассишӗн мӗнле ҫапӑҫнине калаҫа кӑтартӑр.
10. Латтин Ам-ре революутси йухӑмӗ мӗнле пырат? Унта комунисла парттисем пысӑки?

# Канатӑ.

**Карттӑпа ӗҫлесси:**

1. Карттӑ ҫинђе Канатӑна тупса вӑл тӗнђен хӑш пайӗнђе выртнине, мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине калаҫа парӑр.
2. Унӑн тавра мӗнле тинӗссем пур?
3. Канатӑн ҫӗр питне карттӑ ҫинђе сӑнаса вӑл мӗнлине калӑр.
4. Лаврентти, Саскађђеван, Мекенҫи шывӗсене тупӑр, вӗсем ӑҫтан пуҫланса ӑҫталла йухнине сӑнӑр.

Канатӑ—Приттанин томинионӗ. Вӑл империнђе ђи пысӑкки. Канатӑ Анклин Инти оккеанӗ тавраш ӗнђе выртакан колонисенђен айакра тӑрат. Вӑл ҪАПШ-пе йунашар пирки Анклирен ҫулран ҫул уйӑрӑлса ҪАПШ аллине кӗрсе пырат.

Канатӑра климӑт сивӗ. Тунтрӑсем вӑрмансем нумай. Канатӑн хӗвелтухӑҫ хӗррипе ҫӳрекен сивӗ Лапратор йухӑмӗ тырӑ акса тума кансӗрлет, ҫавӑнпа тырӑ акса тӑвакан вырӑнсем кӑнтӑр йенерех выртаҫҫӗ.

Халӑх йышӗ сахал. 1 тӑв. клм. 1 ҫынна кайа тивет. Халӑх йышӗ Йевроппӑрап куҫса килнипе кӑна хушӑнат теме йурат.

Канатӑ империалисла вӑрҫӑђђенех йалхуҫалӑхла патшалӑх пулнӑ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнђе унӑн йалхуҫалӑхӗ те промышлӗннӑҫӗ те вӑйлӑн ӳсрӗҫ.

Вӑрҫӑ, оккеан урлӑ ҪАПШ, Йаппони, Канатӑ, Австрали, Аркенттинӑ патшалӑхӗсен ӳсӗмне хӑвӑртлатрӗ. Вӑрҫа ҫимӗҫ таварӗсем нумай кирли Канатӑн йалхуҫалӑхне ӳстерђӗ.

Канатӑн ҫӗрӗҫне йурӑхлӑ, патшалӑхӑн кӑнтӑрпа хӗвеланӑҫ йенђе ӗҫе кӗмен (Винипек хулинђен хӗвеланӑҫ йенелле) аслӑ ҫӗрсем нумай.

1914 ҫултан 1928 ҫула ҫитиђђен тырӑ тӑвӑмӗ икӗ хут ытларах ӳснӗ.

Тӗп тырӑсем—тулӑпа сӗлӗ.

Кунта фӗрмӑрла-кӑпиталисла хуҫалӑх. Пӗрђӗллӗ тырра сутас ӗҫ те шултра кӑпиталисла оранисатсисен аллинђе.

Канатӑн ҫӗр пуйанлӑхӗ те хисепсӗр нумай.

Ҫӗркӑмрӑк хисепӗпе Канатӑ тӗнђере 4-мӗш вырӑн, кӗмӗл хисепӗпе 3-мӗш вырӑн йышӑнса тӑрат.

Тӗнђери никкӗл тупас ӗҫре Канатӑ 90 прођ. йышӑнат.

Кунта тĕнђери ђи вăйлă 600 пин лаша вăйлĕ, Ниакар çинђи, електростантси пур.

Анђах çĕрпурлăхĕсем патне пыма çулсем нађар пирки Канатăн хăй çĕрĕнђе тупассинђен ытла хăшпĕр йапаласене (çĕркăмрăка) йут патшалăхсенђен кӳме тивет.

Канатă интустриалисатсиленнине йалпа хулара пурăнакансен хисепне танаштарнинђенех курма пулаť. Иртнĕ ĕмĕрĕн йулашки çулĕсенђе пĕтĕм халăх йышĕнђен йалта пурăнаканĕсем 70 прођ. пулнă, 1921 çулта 50,5 прођ. кăна йулнă. Промышлĕннăçра вăрман ĕçĕпе çимĕç тăвас ĕç тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ.

Канатă интустриалисатсиленесси йутран ÇАПШ-пе Анклинђен килекен кăпиталран килнĕ. ÇАПШ-пе Канатă хушшинђе тĕрекленсе пыракан еккономĕк çыхăнăвĕсем Анклин çыхăнăвĕсене карталаса пыраççĕ.

Канатăн импăртĕнђе ÇАПШ пайĕ 1913 çултанпа 1929 çула çитиђђен 64 прођђăнран 69,9 прођ. çитиђђен ӳснĕ пулсан, Анклин пайĕ 21,3 прођ. 14,7 прођ. çитиђђен ђакнă.

Çак ђыхвăрсенђен Анклин колонисем метрополинђен уйрăлма тытăннине аванх кăтартаççĕ.

Канатă хуçалăхĕ 1929 çултанпа йăвăр криçĕса лекнĕ. Криçĕс йалхуçалăхне те промышлĕннăçа та çавăрса илнĕ.

Криçĕс ӳсĕмĕ ĕçсĕрлĕх ӳсниңђен те паллă. 1929 çулта теккапĕр уйăхĕнђе профсойус ђленĕсем хушшинђе ĕçсĕрсен шуђĕ 3 прођ. ийуң уйăхне çитиђђен 11,4 прођђăн ӳснĕ.

**Ыйтусемпе ĕçсем:**

1 Канатăн теп хулине—Оттавăна, промышлĕннăç ђенттăрĕн—Монреаљ, Квепек хулисене, Ван-Кувер портне тупăр.
2 ССРС-пе Канатăн йалхуçалăхсенђи мĕн пĕр пекки пур?
3. Канатă йут çĕре мĕнле протуктсем кăлараť.

## Австралипе Çĕнĕ Çеланти.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Инти оккеанĕ тавраşĕнђи Анклин колонисем хушшинђе Австрали мĕнле вырăн йышăнса тăнине каласа парăр.
2. Австрали тавра мĕнле тиңĕссем пуррине калăр.
3. Австрали Аçинђен мĕнпе уйрăлса тăраť.
4. Австралипе Çĕнĕ Çеланти çĕр питне пăхса тухăр, Австрали кортилйерĕсене тупăр.
5. Муррей шывне, Тарлинк шывне, Ейр кӳлĕңе унта йухса кĕрекен Куппĕр шывне тӳпăр.

Австрали Анклин Инти оккеанĕнђи ђи инçетри колонийĕ. Анклйн Австралипе çыхăну Канатăринђен çирĕпрех. Анђах кунта та Анклин вăйне ÇАПШ-пе Йаппони патшалăхĕсем имперлетсе пыраççĕ.

Австрали çĕр ђăмăрĕн кăнтăрти çурринђе вырăнаçнă (хĕл кунта—ийуң, ийуљ, авкуст уйăхĕсенђе, çу—теккапĕр, йанвар, февраљ уйăхĕсенђе пулса иртет). Австралин Çурçĕрти пайĕ ţроппĕк климăтлă.

Маттерикăн хĕвелтухăç хĕррипе Австрали Кортилйерĕсем тăсăлса тăраççĕ. Çак тусем хĕвелтухăçĕнђи сăрт тайлăмĕсенĕн нӳрĕке ђарса тăнипе маттерикăн варрине тиңĕтсе хăварнă. Унта шывсăр çеçен хирсемпе пушă хирсем кăна.

Хуçалăх тăвăмне Австралин хĕвелтухăçпе кăнтăрпа-хĕвелтухăç йенĕсем йурăхлăрах.

Австралипе 18-мĕш ĕмĕр вĕçĕнђеп пуçласа халăх куçма пуçланă.

Австрали хирĕсенђе сурăх ĕрђетсе Анкли хăй промышлĕннăçĕ ваљђи çăм хатĕрленĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн çурринђе Австралире ылттăн вырăнĕсене тупнă хыççăн унта халăх йышĕ питĕ хăвăрт ўсет. Вара тĕпрен пурнакансене пĕтерме, хĕсме тытăнаççĕ. Халĕ Австралире тĕп çынсен хисепĕ 60 пин çынна йахăн çеç йулнă. Австралире пурăнакан халăх йышлăраххи акăлђансем.




35. Австрали картти.

Австралире выљăх-ђĕрлĕх нимрен ытла сурăхпа шултра выљăх усрас ĕç сарăлнă. Выљăхсене хĕвелтухăçĕнђи Австралин çеçен хирĕсенђе ĕрђетеççĕ. Сурăх ĕрђетессипе вăл тĕнђере пĕрĕмĕш вырăн йышăнаť.

Уйри тырпулсенђен паллăраххи тулă.

Експăрта çăм, тулă, тир, аш кайаççĕ. Вĕсем експăртăн 60 прођ. йышăнаççĕ.

Австрали йалхуçайстви шултра кăпиталисла таварлă хуçалăх. Пĕтĕм акăнакан çĕрĕн 70 прођ.—400 кектартан ытларах тытакан çĕрхуçисем аллинђе.

Австрали çĕр пурлăхĕпе (çĕркăмрăкĕ, пăхăр, ылттăн, кĕмĕл) пуйан. Унăн çĕркăмрăк хисепĕ Анклиринђен сахалтарах. Çĕркăмрăк тупăнакан районсенђен паллăраххисем Нйу-Кеçтљпе Çитней.

Империалисла вăрçă вăхăтĕнђе Австрали хуçалăхĕ нумай йенђен улшăнђĕ. 1913—1927 çул хушшинђе меттал промышлĕннăçĕ 10 хут ытларах ўснĕ.

Промышлĕннăç ўснĕ çемĕн Австралире рапођђи класăн хисепĕ те ўсет. Промышлĕннăçа эталанма аван условисем пулни пуршуаçине рапођђи класа Йевроппăри патшалăхсенђинђен авантарах усрама май пана. Австралири рапођђисен çўлти сийĕ Анклин тĕнђери рынăксенђе хуçа пулса пурăннă вăхăтри Анклири рапођђисен аристократтийĕн пурнăçĕ йевĕрлĕ пулнă.

Анђах кăпиталисăма криçĕс çĕмĕре пуçланă пирки кăпиталиссем рапођђисен ĕçхакĕпе ĕçкунне тапăнаççĕ. Криçĕс унта та питĕ хытă çапрĕ. 1931 çулăн малтанхи уйăхĕсенђе профсойусра тăракан рапођђисенђен 25,8 прођ. ĕçсĕр йулнă.

Криçĕс тарăнланса пынă çемĕн рапођђисен пурнăçне тапăнасси, рапођђисем кăпиталисла çиçтемăна хирĕç тăрса, ăна пĕтерессишĕн тăрăшни вăйлансах пымалла. Пролеттарнатăн парттийĕ—комунисла партти Австралире 1920 çулта орканисатсиленнĕ.

## Çĕнĕ Çеланти.

Çĕнĕ Çеланти хуçалăх тĕлĕшĕнђен Австралирен уйрăм мар.

Çĕнĕ Çеланти Австралирен кăнтăрпа—хĕвелтухăç йенђи икĕ, пĕр-пĕриннђен Кук проливĕпе уйăрăлакан, утравсенђе выртаť.

Çĕнĕ Çеланти Австрали йевĕрлех шултра кăпиталисла, выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетекен хуçалăхлă патшалăх. Йута кайакан таварсенђен сĕт протуктисем çу, ђăкăт, çăм тата аш—паллă выранта тăраççĕ.

Анклин економĕк çыхăнăвĕсем вăйлине, Австралипе кўрекен таварсен çурринĕ, йута тухакан таварсен 75 прођ. Анклин аллинђе пулниннђенех курăпаť.

ССРС-шĕн Австрали пирĕн инçетри хĕвелтухăç крайĕнђи—вăрман, пулă, сутмалли рынăкĕ, пулма пултараť.

# III. кăпиталисăм вăтам ўснĕ çĕршывсем.

## Финљанти.

**Конттурлă карттăпа ĕçлесси:**

1. Финљантин фиçĕкпа политтĕк карттине вĕренсе конттурлă карттă çине:
1) Финљантипе ђикĕленсе тăракан патшалăхсен йађĕсене,
2) Йухан шывсен,
3) Кўлĕсен,
4) Тĕп хуласемпе портсен—Кељсинкки, Таммерфорс, Апо, Выпăрк хуласен, йађĕсене çырса тухăр.
2. Йухан шывсемпе кўлĕсене кăвак сăрпа, тăвлă вырăнсене, тусене хăмăр сăрпа ўкерĕр

### Финљанти историйĕ.

Финљанти Совет сойусĕнђен çурçĕр йенелле выртат̆. Унăн талкăшĕ Палтти тинĕсĕн çурçĕрпе хĕвелтухăç хĕррипђен (Потнитђĕски, Фински пырĕсем) пуçлаçа Çурçĕрти Сивĕ тинĕсе çититђенех пырат̆. Çĕр пысăкĕшне илсен вăл (388,2 пин тăв. клм.) Пољшшă патшалăхĕнђен кăшт çеç пĕђĕкрех, халăх йышĕпе вăл Пољшшăна мар хăйĕн кўршине—Швецине те çитеймест.

Финљанти 1918 çултанпа çеç уйрăм патшалăх пулса тăрат̆. 1918 çулђен вăл Ĕлĕкхи Раççей империн автономи правипе усă куракан пайĕ кăна пулнă, анђах автономи прави ăна Раççей пусмăрĕнђен хăтарайман.

Октăпĕр революцси Финљантине натси пусмăрĕнђен хăтарса хăйне-хăй политтĕкпе економĕк тĕлĕшĕнђен аталанма ирĕк пађĕ.

Анђах Финљанти пролеттариаđĕ çителĕклĕ тађă оркаписатсиленменни пуршуаçине влаçа хăй аллине илсе кăпиталисла йĕркесем тума май пађĕ.

1918 çулта рапочђисен пăлхавĕ пулса иртнĕ хыççăн патшалăхăн кăнтăр йенĕ Хĕрлĕ çар аллине лексеђђĕ, анђах хыççăнах тапранпă краштăн вăрçинђе Кермани империалисăмĕ пулăшнипе пуршуаçи пролеттари револютсине путарса лартрĕ.

Финљанти çурçĕрпе хĕвеланăçри Йевроппă патшалăхĕсемпе йунашарри, унăн тинĕс ђиккисем нумай вырăн йышăнни, Çурçĕрти сивĕ тинĕс хĕрри (Пеђенкă оплăçĕ) хĕлле шăнманни, йут патшалăхсемпе çыхăну тытассине çăмăллатат̆.

Финљантин тинĕс ђиккисем çўлĕ мар, каскаланђăклă пирки тинĕсри порт вырăнĕсемшĕн аван, çавăнпа та Финљантин портлă хуласем йышлă. Паллă портсем—Кељсинкки, Апо, Выпăрк. Патшалăхăн типĕри ђикĕсем палаксăр, пĕр Торнео шывĕ çеç Финљантипе Швеңси хушшинђе çут-çанталăк ђикки пулса, тата ССРС хушшинђе Манçелкке сăрт тўрђĕ çут-çанталăк ђиккисем пулса Финљантине ытти патшалăхсенђен уйăрса тăраççĕ.

Финљантинђе 3,5 мĕл. çын пурăнат̆, пĕр тăваткăл километра 10 çын тивет.

Натси тĕлĕшĕнђен—финсем—88,7 проц. швецсем—10,9 проц., вырăссем 0,4 проц., Финљантире йалхуçайствипе вăрман промышлĕннăçĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Çутçанталăк условисем çĕрĕшĕл йурăхлă мар.

Йалхуҫаласхне йурахла ҫӗр лаптакӗ пӗтӗм ҫӗр лаптакӗн 9 проҍ.-не ҫеҫ йышанса тарат. Финҍантин ҫӗр сийӗ тӳрем сартла, нумай кӳлӗллӗ, шурла, йухан шывла.

Ҫӗр ӗҫне йурахла ҫӗрӗн тапра сийӗ пит-те ҫӳхе, хашпӗр выранта ҫара кранит ҫеҫ климат та сивӗ. Ҫуркунне, ҫулла пулакан сивӗсем пӗрҍӗллӗ тырасене ӳсме ҍараҫҫӗ. Пӗтӗм ӗҫе йурахла ҫӗрӗн 63 проҍ. улпутсемпе пуйан—кулаксен аллинҍе, вӗсем пӗтӗм хуҫаласхсен хисепӗнҍен 20 проҍ. кана пулин те. Кулакла хуҫаласхсем Финҍантин фашписла правиттӗлстван ҍи шанҍакла пуласшаканӗсем.

Сахал йе паҍах ҫӗрсӗр хресҍен массисен ҫӗре улпутсенҍен тара илсе ӗҫлеме тивет.

Йалхуҫаласхӗнҍи пролеттариатан йышӗ 400 пин ҫын шутланат.

Финҍанти йалхуҫаласхӗнҍе выҍах ӗрҍетес ӗҫ нумай выран йышанат. Пӗрҍӗллӗ тырасенҍен ытла тӗрлӗ куравсем акаҫҫӗ.

Йута кайакан палла таварсенҍен—ҫу, ҍакат. Тырпул ҫитмен пирки Финҍанти ССРС-пе ҪАПШ-ҍен тыра илсе пуранат. Патшаласхан тӗп пуйанласхӗ—варман. Вал ҫӗрӗн 60 проҍ. йышанат. Варман ӗҫӗпе пӗтӗм халасхан ҫурри пуранат. Йаваҫ каскалас ӗҫпе хут промышлӗннаҫӗ пӗтӗм промышлӗннаҫ протукси хакласхӗн ҫуррине йышанат. Финҍанти експартӗнҍе варманпа йаваҫ протукҍӗсем тӗп выран йышанса тараҫҫӗ. Варман промышлӗннаҫне аталанма ҫӗрсӗр хресҍенсем нумаййин, пулашат.

Финҍанти пролеттариаҍӗ ҫурри йахан йаваҫ каскалас ӗҫ; хут, варман промышлӗннаҫӗнҍе ӗҫлет. Финҍанти шыв ҫулӗсемпе пуйан патшаласх, ҫаванпа та вармана йута сутма аван. Финҍантин варман протукҍӗсене Анкли, Франтси, Колланти, Кермани патшаласхӗсем ытларах илеҫҫӗ.

Ҫӗр айӗнҍи пурласхӗнҍен Финҍанти ҍухан; ҫӗркамракӗ ҫуккипе вал шыв вайӗпе уса курат. Шыв сиккиллӗ вырансенҍе Финҍантин промышлӗннаҫла ҍенттарсем Таммерфорс, Келҫинкфорс, Выпарк т. ыт. хуласем выранаҫна.

Финҍанти шыв сиккиллӗ вырансем нумай пирки хуҫаласха електрофиккатсилес тӗлӗшпе мала кайна патшаласх.

Електростантсисенҍен ҍи вайла Иматра шыв сиккинҍи стантса.

(Сайм кӳллинҍен Латаш кӳлline йухса пыракан Вуокса шывӗ ҫинҍе). Пиравапа меттал промышлӗннаҫӗ йутран кӳнӗ ҍӗрӗ таварпа ӗҫлет, ҫаванпа вал шалти рынак ваҍҍи кана ҫителӗклӗ тавар каларат.

Финҍанти пуршуалла фашписла респуплӗк.

1918 ҫулта револютсине путарна хыҫҫан Финҍанти пуршуаҫиӗ револютси ҫӗнӗрен пуласинҍен хаталас тесе рапоҍҍисене тискерӗн хӗсӗрлет.

Йаланхи ҫарсар пуҫпе (35 пин ҫын) пуршуаҫин ҫурма ҫарла «Шӳтскор» йатла 100 пин ҫынла фашписла орканисатси пур. Унта кулаксемпе, помешҍӗксем пуршуаҫи ҫамракӗсем. Финҍантин ӗҫлекенсен класӗ еккономӗкпе политтӗк тӗлӗшӗнҍен пит те йапах условисенҍе пуранат.

Тӗнҍери еккономӗк криҫӗсӗ Финҍантине те вайлан кисрентерҍӗ; унта та тавам ҍакса ӗҫсӗрлӗх ӳсе, ӗҫхакӗ ҍакса пырат.

Финҍанти пролеттариаҍӗ сахал йышла пулсан та тӗнҍери пролеттари йухамӗн ҫирӗп, пултарулла отреҍӗсенҍен пӗри пулса тарат. Пролеттариата комуниссен партти йертсе пырат. Унан варттан ӗҫлеме тивет.

Ӗҫлекенсен йухамӗпе тапах йалта та револютсиллӗ йухам аталанат. Йала пуршуалла-акрарла реформапа лаплантарас ӗҫ пуранаҫа кӗреймерӗ. Ҍухансен, патраксен пуранаҫне ҫав реформа ҫамаллатаймарӗ.

Политтӗк тӗлӗшӗнҗен Финҗантине Анклипе Франтси йертсе пыраҫҫӗ.

Финҗанти ССРС-пе хирӗҫӳллӗ пуранаť. ССРС-не хирӗҫле пырасси влаҫа фашиссем хайсен аллине илнӗ хыҫҫан татах та вайланҗӗ.

Лаппуас йухамӗн влаҫа алла илнӗ хыҫҫанхи лосанкӗ—(Лаппуа—фашписам тӗп йави) Финҗантине Совет Карелипе Ленинкрат опласне (ӗлӗкхи инкерманланти) тытса илсе аслатасси. Фашиссен офитсиалла оркане Финҗантин хӗвелтухаҫри җикки Урал тавӗнҗе пулмалла тесе ҫаптараť.

Ҫакан пек условисенҗе ССРС-пе Финҗанти хушшинҗе лапка пуранаҫ пулма пултарайманни паллах. ССРС лапка пуранаҫшан тарашакан патшалах пулса Финҗанти пуршуаҫин аванťтурисла шухашӗсене ҫапса хуҫма пултарассине шансах тамалла.

## ССРС-ӗн хӗвеланаҫри кӳршӗллӗ патшалахсем.

ССРС-ӗн хӗвеланаҫри җикки тарах Ҫурҫӗрти парла тинӗсрен пуҫласа Хура тинӗс хӗррине ҫитиҗҗенех пуршуалла, вак патшалахсем выранаҫна. Ҫав 2800 километр тасалакан җикӗ леш йенӗпе Империалисла варҫа хыҫҫан пулна Финҗанти, Есттони, Латви, Литва, Поҗшша патшалахӗсем вырнаҫна.

Румыни кана кивӗ патшалахсенҗен пӗри, вал та варҫа хыҫҫан пусмарла майпа хайӗн ҫӗр лаптакне ҫӗнӗ ҫӗрсене (Совет сойусӗн Пессарапи шуҗӗпе) туртса илнипе асланҗӗ. Хӗвеланаҫри кӳршӗсенҗен нумайӗшӗ ӗлӗкхи Раҫҫей империн ҫӗрӗ ҫинҗе пулҗӗҫ. Патша Раҫҫейӗ вахатӗнҗе ҫав патшалахсенҗи халахсене пусмарта пулнаран Октапӗр революҗутси хатарса Раҫҫейри кашни халахах хайне-хай уйрам патшалах туса пуранмах ирӗк парса вырас капиталисамӗ пусмарӗнҗен хатарҗӗ. Анҗах пӗр пусмартан хаталса, пролеттариатпа ӗҫҫыннисем хайсен натсионалла пуршуаҫин, ҫӗрулпуҗӗсен, тӗнҗери капиталисамӑн тата тискертерех пусмарне кӗрсе ӳкрӗҫ.

Поҗшшапа Румыни ирӗксӗрлесе ҫыпҫантарна пелорус, украйна, молтаван ӗҫхалахӗсем уйрамах пусмарла пуранаҫҫӗ.

Пролеттарипе хресҗенсем ҫителӗклӗ орканисатсиленмен, сотсиал-темократ парттисем ултална пирки асанна патшалахсен пуршуаҫипе Анкли, Франтси, Кермани, ҪАПШ капиталҫисем пулашнипе ӗҫкласӗн пролеттари влаҫне тавасшан кӗрешнине путарса пуршуалла йӗркесем туса лартма май пулҗӗ. Пирӗн кӳршӗллӗ патшалахсенҗи пуршуаҫипе ҫӗрулпуҗӗсем хуҫаланнипе, җаннипе вӗсен патшалахсен политтӗкпа економӗк тӗлӗшӗнҗен те харпар-хайлахне ҫухатнипе курма пулаť. Вӗсем тӗрӗссипе—шултра капиталисла патшалахсен ҫурколонисем пулса йулҗӗҫ.

Тӗнҗери шултра капиталҫасемшӗн ҫак патшалахсем експлоаттатси ойпекҗӗсем пулса тарисӗр пуҫне капиталисла тӗнҗене Совет сойусӗнҗен уйарса таракан хӳме, варҫа мӗн пулас пулсассан пролеттари тиктаттурӗн патшалахне хирӗҫ контр-революҗутсиллӗ вай пухса таратмалли выран пулса тараҫҫӗ. Ҫак пӗҗӗк патшалахсем, калама ҫук, вирлӗн варҫа хатӗрленни, совет патшалахӗн лапка пуранас тӗлӗшпе пуранаҫа кӗртекен ӗҫсене хирӗҫни, шултра капиталисла патшалахсен интересне пуршуалла фашисла тиктаттура урла сыхланине пӗлтерет.

Кӳршӗ патшалахӗсенҗи пролеттарисем, ӗҫхресҗенӗсем, пусмарла натсисем хайсен комунисла парттисем йертсе пынипе тӗнҗери фашисампа пусмарлакансемпе паттарран кӗрешме тытанаҫҫӗ.

Совет сойусӗнҗи пролеттарипе хресҗенсен ӳсӗмлӗ сотсиалисам тавас ӗҫне

кура кӳршӗри пролеттарисем те ҫав ӗҫех хайсен патшалӑхӗсенҀе тума вирлӗч пикенеҫҫӗ. Кӳршӗри патшалӑхсенҀен Ҁи пысӑкраххисем Пољшшӑ, Румыни, ФинЉанти патшалӑхӗсем.

## Пољшшӑ.

**Картҭӑпа ӗҫлесси:**

1. Пољшшӑ патшалӑхӗн картти ҫинҀе:
а) Пољшшӑпа кӳршӗллӗ патшалӑхсен йаҀӗсемпе хӑш йенҀен Ҁикӗленсе тӑнине пӗлӗр.
у) Вислӑ, Немӑн, Принет, Варнӑ шывӗсене тупӑр.
ы) Атминистратсипе хуҫалӑх тӗп хулисене—Варшавӑ, Лотҫ, Пелосток, Кракккӑв, Љвов, КтыҀӑ, Тантсик, ВиЉнӑ хулисене тупӑр.
2. Ҫӗркӑмрӑк, нехтӑ, тимӗр тӑпри вырӑнӗсене паллӑ туса хурӑр.

Пољшшӑ Йевропӑ патшалӑхӗсем хушшинҀе ҫителӗклех пысӑк патшалӑх. Унӑн лаптӑкӗ 388,3 пин тӑв. километр.

Пољшшӑ патшалӑхӗн Ҁиккисем пумай пулмасӑ йӗркеленсе ҫитрӗҫ. Ҫав Ҁикӗсем екконом
ӗк, кеокрафи тӗлӗшӗнҀен те килӗшӳсӗр.

Пољшшӑ патшалӑхӗ йӗркеленсе ҫитнин историйӗ—талкӑшпех вӑрӑ-хурахлӑ ӗҫӗн историйӗ пулса тӑраӑ.

1919 ҫулта Пољшшӑри пуршуаҫи империалиссемпе соклашшаттӗлсен партти пулӑшнипе **Калитсине** тытса илҀӗ.

1921 ҫулта ирӗксӗрлесе **ВолынҀпе Хӗвеланӑҫри Пелоруҫҫи** (Украинӑпа Пелоруҫҫи республӗкӗсем патнелле туртӑнакансем) оплӑҫсене тытса илҀӗ.

1921 ҫултах Литваран ВиленшҀинӑпа Литва патшалӑхӗн тӗп ВиЉнӑ хулине тытса илҀӗ.

1922 ҫулта КерманинҀен Тури Ҫилеҫипе хӗвеланӑҫ Пруҫҫи пайӗсене туртса илнӗ.

Тинӗсе тухма уҫӑ ҫул туни («Пољшшӑ кӑрипорӗ») Пољшшӑна Вислӑ шывӗн варрипе хӑйӗн аллине илсе Пољшшӑ пуршуаҫине екконом
ӗкпа политтӗк тӗлӗшӗнҀен ҫирӗпленме май паҀӗ.

Пољшшӑ патшалӑхне ҫирӗплетмешкӗнех тӗнҀери пуршуаҫи Тантсик хулине ирӗклӗ хула туса хӑварҀӗ, Ҁӑннипе илсен, Тантсик Пољшшӑн аллине пуҫпех лексе, вӑрҫӑ пулас пулсан ҫар паси пулма йурӑхлӑ вырӑн пулса йулҀӗ.

Пољшшӑ пуршуаҫийӗ патшалӑхӑн халЉхи Ҁиккисемпе килӗшесшӗн мар. Вӑл Пољшшӑран тинӗсрен тепӗр тинӗсе ҫитекен «Аслӑ Пољшшӑ» тӑвасшӑн.

Ҫак шухӑш пурнӑҫа кӗрес пулсан Ҁи малтанах ССРС хирӗҫ, унӑн Совет Украйнӗпе Пелоруҫҫине туртса илсе пӗр патшалӑх тӑвас шухӑш пулаӑ.

Пољшшӑ Йевропӑн варринҀи пайа йышӑнса, хӗвеланӑҫри Йевропӑпа ХӗвелтухӑҫӗНе ҫыхӑнтарса тӑракан кӗпер, маттериклӗ патшалӑх пулаӑ.

Пољшшӑн тинӗс Ҁиккийӗ Палтти тинӗсӗн хӗррипеле 100 километр патнелле йышӑнаӑ.

Палтти тинӗс хӗрринҀи Тантсик хулинҀен 20 километрта Пољшшӑ Франтси пулӑшнипеле тинӗс ҫар пасине—КтынҀӑ портне туса лартрӗ.

Пољшшӑн тинӗсри Ҁиккисем пӗтӗм талкӑшӗпех (5397 километр) шыв, йе сӑртпа Ҁикӗ пулса тӑраймаҫҫӗ, кӑнтӑр йенҀи пайӗ ҫеҫ Ҁехо-Словакки йенҀен Карпат сӑрҀӗпе хупланса тӑраӑ.

## Халӑх йышӗ.

Пољшшӑра пӗтӗм пурӑнакан халӑх йышӗн хисепӗ 1928 ҫулхи Ҁыхвӑрпа шутласан 30,2 мӗлйун ҫынна ҫитнӗ.

Натси тĕлĕшĕнҫен Поҫшшă нумай, тĕрлĕ натсиллĕ патшалăх.

Вак халăхсем—украинĕтс, пелорус, йеврей, нимĕҫ, литва халăхне илсен вĕсемех пĕтĕм пурăнакансен хисепĕн 36 проҫ.-не йышăнаҫҫĕ.




36. Поҫшшăри натсисен вырнаҫăвĕн картти.

Поҫаксем пĕтĕм пурăнакансен хисепĕн ҫуррине кăна, ыттине вак халăхсем йышăнаҫҫĕ.

Хăш-пĕр оплăҫсенҫе натсиллĕ пĕҫĕк халăхсем пысăк вырăн йышăнаҫҫĕ. Сăмахран хĕвеланăҫ Украйнинҫе 6 мĕлйун украинĕтс пурăнаť, вĕсем пĕтĕм унта пурăнакансен хисепĕн 60 проҫ. йышăнаҫҫĕ; Потоли, Волынҫ, Виленшҫинăра натси тĕлĕшĕнҫен сахал йышлисем пĕтĕм пурăнакансен 65 проҫ., хĕвеланăҫ Пелоруҫҫинҫи Полеҫйĕре поҫаксем 24,3 проҫ., пелоруссем—42,6 пр. йышăнаҫҫĕ.

Поҫшшăри натси ыйтăвĕ ҫивĕҫ ыйту пулса тăраť. Поҫшшă пуршуаҫиĕ вак халăхсене калама ҫук хайаррăн пусмăрлаť: натсиллĕ шкулсене хупаť, кĕ-

неке-хаҫат кӑларас ӗҫе ђараѓ, политтӗкпе кулђт.-ҫут. оркаписатсиҫене салатаѓ, пелоруспа украинӑ хресђенсен ҫӗрӗсене туртса илсе Полђшӑ кулакӗсене параѓ.

Вак халӑхсен пурӑнӑҫӗ йавӑррине, кулђттура тӗлӗшӗнђен кайра тӑнине спӗр пӗтӗм Полђшӑра пурӑнакан халӑх йышӗн 29 прођ. хут пӗлменнинђен, хӗвеланӑҫ Пелоруҫҫипе Виленшђинӑра 48,5 прођ. хут пӗлменнисем пурринђен курма пултаратпӑр.

Шкул ҫулне ҫитнӗ ађасен хисепӗн ҫурри йахӑн шкула ҫӳреме пултарайма҇ҫҫӗ.

## Хуҫалӑх йӗрки.

Полђшӑ акрарлӑ-интустриллӗ патшалӑх.

Халӑх йышӗнђен йалхуҫалӑхӗнђе 78 прођ. ӗҫлеҫҫӗ пулсан, промышлӗннӑҫпа ҫулйӗр ӗҫӗнђе 11,5 прођ. кӑна ӗҫлеҫҫӗ.

Полђшӑ, империалисла вӑрҫӑ хыҫҫӑн йухӑнса ипӗлсе пӗтнӗ хуҫалӑхлӑ патшалӑх пулса йулђӗ.

Хуҫалӑх йухӑнасси 1920 ҫулта Полђшӑ пуршуаҫийӗ Совет Раҫҫейӗпе пуҫласа йапӑ вӑрҫӑ хыҫҫӑн татах та вӑйланђӗ.

Хуҫалӑх аталанӑвӗ ССРС хуҫалӑхӗн аталанӑвӗпе пӗр вӑхӑтрах пуҫланђӗ.

ССРС сотсиалисӑмла хуҫалӑха ӳстерсе, тӗреклетсе пит те пысӑк ҫӗнтерӳсем тунӑ пулсассӑн, Полђшӑ кӑпиталисла ҫулпа кайса хӑйӗн хуҫалӑхне ҫирӗплетсе ӳстерес вырӑнне патшалӑха ђухӑнлатса кӗлмӗҫе кӑларђӗ.

Полђшӑн хӑйӗн хуҫалӑхне аталантарма условисем ҫителӗклӗ. Унӑн ҫӗркӑмрӑкӗ те, нехтӑ, тсинк, тимӗр-тӑпри те нумай, ҫӗрӗҫне йурӑхлӑ ҫӗрсем те нумай.

Анђах ҫут-ҫанталӑк пуйанлӑхӗсем нумай пулсан та класлӑ, натсиллӗ хирӗҫӳсем пурри ҫав пуйанлӑхсемпе усӑ курма ђарса тӑраѓ. Полђшӑ хуҫалӑхӗ вӑтам кӑпиталисла хуҫалӑх—вӑл халӗ вӗҫӗмсӗр криҫӗсра, ҫав криҫӗсран хуҫалӑхӑн пӗр пайӗ те хӑтӑлайман-ха.

Кӑпиталисӑмшӑн вӑхӑтлӑх ӳсӗмӗ вӑхӑтӗнђе те Полђшӑ хуҫалӑхӑн ӳсӗмӗ вӑрҫӑђђенхи карта ҫитеймерӗ.

1927 ҫулта ҫӗркӑмрӑк кӑларасси 93 прођ., ђукун шӑратасси 59 прођ., ҫӗрмамӑка ӗҫе кӗртесси 35 прођ. кӑна ҫитнӗђђӗ. Хуҫалӑх ӳсӗм тӗлӗшӗнђен кайа йулса пыни хуҫалӑха кӑпиталисла майпа ӳстерме пултармалла марринђен килет.

Промышлӗннӑҫӑн ђи паллӑ (пиравӑр, метталурки, нехтӑ) пайӗсем ӗлӗк Раҫҫей, Кермани, Австро-Венкри аллинђе пулни, вӗсене вӑйпа ҫыхӑнтарни, кӳршӗ патшалӑхсемпе хирӗҫсе пурӑнни суту-илӳ рынӑкӗсене ҫухаттарђӗ.

Тулти рынӑксенђе хуҫалӑх ҫыхӑнӑвӗсене ҫӗпетме пикенни пурӑнӑҫа кӗрейменни, Полђшӑ промышлӗннӑҫӗ нађар, имшер пирки кӑпиталисла патшалӑхсемпе ӑмӑртма пултарайманнинђен килет.

Полђшӑн шалти рынӑкӗ те нађар. Полђшӑри рапођђин ӗҫхакӗ мӗскӗн. Криҫӗс вӑйланнӑ майӗпе ӗҫсӗрлӗх те пит вӑйлӑн ӳсет. Йалӑн ђухӑнпа вӑтам сийӗсем акрари криҫӗсӗн пусмӑрне кӗрсе ӳкнӗ.

Правиттӗлствӑн економӗк политтӗкӗ пролеттариатпа хресђенсен пурӑнӑҫлӑхне ђакарса пынӑ май, вӗсен илӳ вӑйне те ђакараѓ.

Полђшӑ хуҫалӑхӗн тӗп уйрӑмлӑхӗ—вӑл йут патшалӑхсен кӑпиталӗ хуҫа-

ланса тăни (Франтсипе Америк) хуçалăхăн тĕп пайĕсене илсен унта йутри кăпитал çирĕп вырăнаçни курăнаť: нехтă промышлĕннăçĕнђе—88 прођ., çутмалли шăрпăк промышлĕннăçĕнђе Шветсипе Америк контсĕрнĕ, тсинк промышлĕннăçĕнђе Америк формисем хуçа пулса тăрраççĕ.

Йутри кăпитал хăйĕн тулашĕнђи парăмĕсене шанђаклăнах илсе тăрас майĕпе Пољшшăн тапак, сахăр промышлĕннăçĕн, тамăнђăпа, патшалăхăн ђукун çулĕсем тупăшне хăй илсе тăраť. Йут капитал хуçаланни, йутран кивçенленни ĕçхалăхĕн пурăнăçне татах та йапăхлантараççĕ.

Пољшшă вăрçă ĕçпе, калама çук, пысăк тăкаксем тăваť.

Патшалăх пŭтшеђĕн çурри вăрçă промышлĕннăçне, тинĕсри çар пасине (Ктынђă) тума, Палтти тинĕсĕнђи флота тума, йышлă çара тытма (300 пин салтак). Фашшисла çар орканисатсисене («Стрелетс», )«Лекпонерсен сойусĕ») тытма кайаť.

Вăрçă промышлĕннăçĕ кăна крисĕс пулсан та хăйĕн тăвăмне сахаллатма мар аслатса пыраť.

Тĕпђипех саралнă економĕк крисĕсĕ Пољшшă хуçалăхĕнђи хирĕçŭсене татах та вăйлатаť. Крисĕс йалхуçалăхне татах та вăйлăрах пырса çапăнђĕ.

## Йалхуçалăхĕ.

Пољшшă хуçалăхĕн тĕп пайне йалхуçалăхĕ йышăнаť. Çĕрĕçне ĕçлеме çутçанталăк условисем çителĕклĕ. Патшалăхăн çурçĕр йенĕ лапăллă, кăнтăралла çеç сăртлă. Кăнтăр йенĕн Румыни ђиккинђе çеç çŭлĕ Карппат тăвĕсем хупласа тăраççĕ.

Пољшшăн вăтам континентлă, çителĕклĕ нŭрĕклĕ климăт.

Лапамлăхăн çурçĕрти пайĕнђе кĕлтăпра пирки тырă тухăçĕ аван пултăр тесен сиплĕх кирлĕ. Тырă аван пулакан хура тăпраллă çĕр лăпамлăхăн пайĕнђе.

Пољшшăн вăта çĕрти пайĕпе хĕвелтухăç хĕррисенђе тырă нађар пулаť. Ку вырăнсенђе талкăшпех торф кŭллисемпе лађакасем-шурсем.

Лађакаллă, кŭлĕллĕ, шурлă çĕр лаптăкĕсем хĕвеланăç Пелоруççин Припетпе Пинă шывĕ тăрăхĕнђи Полесйĕ йатлă вырăнта нумай.

Çĕр мĕнле валеçĕнсе тăпине пăхсан çакă курăнаť:

| | |
|---|---|
| Сухалакан çĕр . . . . . . . | 49 % |
| Çаран . . . . . . . . . | 22 % |
| Вăрман . . . . | 23 % |
| Йурăхсăр çĕр . . . . . . | 6 % |

Йалхуçалăхри куљттурăсенђен паллăраххисем—ыраш, тулă, урпа, сĕлĕ; сахăр кăшманĕ, йĕтĕн, çĕрулми. Йалхуçалăх районĕсенђен паллăраххисем—Калитсипе Поснанђ оплăçĕсем.

Поснанђ ĕлĕк Кермани патшалăхĕнђе пулнăскер йалхуçалăх техпĕкки тĕлĕшпе ђи малта тăракан район, ытти районсем нађар технĕккăллă, нађар тырă пулăллă районсем.

Пољшшăн йалхуçалăхĕ халђи вăхăтра хăйĕн тăвăмĕ патшалăха кирлĕ йапала тăратса çитерейместь.

Пољшшăра пĕтĕм хресђенсен 50 прођ. хăйсене тăрантмалăх çĕр çук, пĕђĕк ана çĕрлĕ, тепĕр йенђен çĕрулпуђĕсемпе кулакла хуçалăхсем çĕрĕн çуррине хăйсен аллинђе тытса тăраççĕ. Пољшшă хресђен çулсăрлăх умне пырса тăђĕ.

Промышлённăçа кайма ăна криçĕс, ĕç çукки ђарса тăраť, тепĕр йенђен çĕрулпуђĕпе кулак патне тарçăна кайма вĕсем паťĕнђи ĕç ăна çуксăрлăхпа кĕлмĕç пурнăçĕнђен хăтарма пултарайманни пӳлет. Йут патшалăхсене куçса кайма ђарса тăракан саккунсем пӳлсе тăраççĕ.

Хĕвеланăç Пелоруççипе хĕвеланăç Украинăри хресђенсен пурнăçĕ татах та мĕскĕнтерех, пусмăрлăрах. Хуçа пулса тăракан класăн политтĕкĕ çак оплăçри хресђенсене вĕçĕмсĕр выçлăха кĕртсе йађĕ.

## Промышлĕннăç.

Полђшăн тĕп, промышлĕннăçлă, районсем кăнтăр, хĕвеланăç йенĕпе, патшалăхăн варринђи пайĕсене йышăнса тăраççĕ. Çак районсенђех патшалăхăн енеркеттĕк саппасĕсем те пур. Çĕр айĕнђи пурлăхсенђен паллăраххисем: Тури Çилеçинђи, Томпров районĕнђи çĕркăмрăкĕ, Калитсинђе нехтĕ, Тĕп Полђшăн кăнтăрпа хĕвеланăç йенђи тимĕр тăпри, Тури Çилеçинђи тсинк.

Промышлĕннăçĕн тĕп пайĕсем—туĕç, меттал, пиравăр промышлĕннăçĕ. Йулашки вăхăтра химипе вăрçă промышлĕннăçĕ сарăлса çитрĕ.

Ту ĕçĕпе меттал промышлĕннăçĕн тĕп районĕ—Тури Çилеçи (Керманинђен туртса илнĕ район). Кунта пĕтĕм çĕркăмрăк хисепĕн 75 прођ., тсинк, хура тăхлан, тупăнаť. Кунтах метталурки, меттал, хими промышлĕннăçĕн хапрăксавăђĕсем те выранаçнă.

Пиравăр промышлĕннăçĕн тĕп хулисем—**Лотç, Пелосток, Варшшавă.**

Пиравăр промышлĕннăçĕ йут çĕртен кӳнĕ ђĕрĕ таварпа, Раççейри рынăкшăн ĕçленĕ. Халĕ çав рынăк Полђшăшăн çухалнă пирки пиравăр промышлĕннăçне ӳсме май та çухалђĕ. Промышлĕннăçăн ытти пайĕсенђе те ĕç çавнашкалах.

Тĕнђери економĕк криçĕсĕ пуçлансассăнах Полђшă промышлĕннăçĕн тытăнђăксăрри курăнђĕ. Тăвăмăн пур пайĕсенђе те тавар тăвас хисеп ђакса пыраť. 1930 çулта çĕркăмрăк кăларасси, 1913 çулхипе танаштарсан 91 прођђăна ӳкрĕ.

Тăвăм ђакса пыни пиравăр промышлĕннăçĕнђе те паллă. Лотç пиравăр промышлĕннăçĕ вăрçăђђенхинђен 53 прођ. ӳкнĕ.

Полђшăри рапођђи класăн пурăнăçĕ куллен-кун йапăхланса пыраť, ĕçхакĕ ђакаť.

1930 çулăн вĕçнелле промышлĕннăçри пролеттариатăн çурри ĕçсĕре тăрса йулнă.

Полђшă—пуршуаллă респуплĕк. Ђи аслă оркăнĕ—парламĕнт пулса тăраť.

Халђхи вăхăтра парламĕнт Пилсутђĕк—фашшиссен тарçи кăна пулса тăраť.

Полђшă пуршуаçин фашшисла тиктаттурĕ 1926 çулта ĕççыннисен хӳттипе криçĕсран тухмалли йулашки мел пулса тăђĕ. Фашшиссен влаçĕ сотсиалфашшиссен партти (П.П.С.) пулăшнипе рапођђи класпа хресђенсен револютсиллĕ йухăмне, натсиллĕ-ирĕклĕхлĕ йухăма пĕтерме ĕçхалăхне пусмăрласа хуçалăхăн капиталисла стапилисатсине иртерессинђе фашшисăм вăйсăрри курăнђĕ. Фашшисăм политтĕкĕ фашшисăм тиктаттурипе економĕкне те криçĕс умне тăратрĕ.

Класлă хирĕçӳсем кулленех çивĕђленсе пыраççĕ.

Çĕр ыйтăвне нумай çĕрте, аслă çĕрлĕ улпутсен çĕр калăпăшне пĕђĕклетсе çăмăллатас майпа кăларнă саккун тĕрĕссипе хресђенсене улталанипех иртсе кайрĕ.

Шултра кулаксен хуҫалăхĕсен ӳсĕмĕ ҫарăнса тăмарĕ. Улпут-хуҫасенҫеп илнĕ ытлашки татăк-кĕсĕк ҫĕрсем йалти кулаксен аллине кайрĕҫ.

Хресҫенсем налукран хăтăлас майпа улпутсен кил-ҫурҫĕсене тĕртсе ҫунтараҫҫĕ, вырăнĕ-вырăнĕпе хĕҫпăшаллանса пăлхавсем тăваҫҫĕ.

Натсионалла ирĕклĕхлĕ революҫтсиллĕ кĕрешӳ вăйпа пусмăрласа Польшă ҫумне ҫыпҫăнтарнă Украинăпа Пелоруҫҫи оплăҫĕсенҫе вăйлансах пырать.

Пролеттариллĕ клас кĕрешĕвĕ сарăлсах пырать. Еккономĕк ыйтăвĕсем пирки тапранса кайакан пастовккăсем политтĕкла пастовккăсем пулса кайаҫҫĕ.

Комуниссен партти йертсе пынипе рапоҫҫисен кĕрешĕвĕ хресҫенсен революҫтсиллĕ пăлхавсемпе натсионалла-ирĕклĕхлĕ кĕрешӳпе таҫăран-таҫă ҫыхăнса пырса Польшăра революҫтсиллĕ криҫĕс хăвăрт ӳссе ҫывхарса пынине пĕлтерет.

## ССРС-па Польшă.

Польшă ССРС-не питĕ кураймасть.

Польшăпа Румыни—Франтсии, ССРС-не хирĕҫ инттервентсине хатĕрлес ĕҫре ҫи шанҫăклă тарҫисем.

Франтси Польшăна вăрҫă промышлĕнпăҫне вăйлатма укҫа парса пулăшать, Польшă ҫарне реорканисатсилет, тинĕсри ҫар флотне тума пулăшать, ССРС ҫикки йенелле ҫукун ҫулсем, шоссе, ҫар ҫулĕсем тăвать.

Франтси пулăшнипе Польшă фашшисла тиктаттурăна ҫирĕплетсе пырать. Вăлах Польшăна Украинăпа Пелоруҫҫи респуплĕкĕсене тапăнма хĕтĕртет.

Еккономĕк криҫĕсĕ Польшăн хуҫалăх никĕсĕсене вăйсăрлатса фашшисăм тиктаттурин криҫĕсне те хăвăртлатать.

Польшă фашшисăмĕ криҫĕсрен хăтăласшĕн ĕҫхалăхне пусмăрласа, ССРС ҫине вăрҫăпа тапăнса тухасшăн.

Польшă, Франтси Румыни патшалăхĕсемпе вăрҫă килĕшĕвпе ҫыхăннă Ҫав ĕҫе вăл ССРС-не хирĕҫ Франтси йертсе пынипе туса пырать.

Польшăпа Литва хушшинҫе Вильнă оплăҫĕ пирки тавлашу пырать. Польшăри фашшиссен ушкăнĕсенҫе Литвана Польшă ҫумне ҫыпăҫтарас шухăш пур, анҫах ССРС-не хирĕҫ вăрҫă хатĕрленнĕ майĕпе Польшăпа Литва хушшинҫе килĕшӳ тăвас йухăмсем те пур.

Польшă—Есттони, Латви, Финьанти патшалăхĕсене совета хирĕҫ ĕҫе туртать.

ССРС-не хирĕҫ вăрҫа хатĕрленни—Польшă пуршуаҫин тĕп ҫеретлĕ сатаҫĕ пулса тăҫĕ.

Ҫав ĕҫе вăл патшалăхăн шалти-тулти политтĕкĕн пур ыйтăвĕсене те пăхăнтарса пырать.

# Есттони, Латви, Литва.

### Карттăпа ĕҫлесси:

1. Есттони, Латви, Литва патшалăхĕсемпе кӳршĕллĕ патшалăхсен ҫиккисене паллă тăвăр.
2. Контурлă карттă ҫинҫе хĕвеланăҫри Твина, Немăн, Великайа йухан шывсене тупăр.
3. Атминистратсипе хуҫалăх ҫенттăрĕсене, портсене—Таллин, Рикă, Лъипавă, Мемел, Каунас хулисен вырăнĕсене паллă тăвăр.

Палтти тинĕс ҫывăхĕнҫи патшалăхсем Йевроппăри ҫи пĕҫĕк патшалăхсем. Виҫĕ патшалăхне пĕрле илсен те 169,2 пин тăваткăл километр кăна йышăнаҫҫĕ; унта 5,2 мĕлйун ҫын пурăнать.

Тĕнҫери кăпиталисла хуҫалăхра ҫак пĕҫĕк патшалăхсем паллă вырăн йы-

шăнса тăраймаççĕ. Империалисла вăрçăђђен вĕсем пурте Раççей импери пайĕсем пулнă.

Палтти тинĕсĕн хĕвелтухăç хĕрринђе выртакан Литва, Латви, Есттони патшалăхĕсен аван вырăнĕ. Патша правиттĕлствине тинĕс портсем туса йут патшалăхсемпе суту-илў тума пулăшнă. Ревеђ, Рикă, Винтавă, Липавă порђĕсем Раççейĕн ђи вăйлă промышлĕннăçлă, йалхуçалăхлă районĕсемпе ђукун çулĕсемпе çыхăнса тăнă май хăварт ўссе таврари районсен еккономĕк ўсĕмне те хăпартса пынă.

Есттонипе Латви вăрçăђђенех аталаннă промышлĕннăçлă (машшин тăвас ĕç, карап тăвас ĕç, хими, пиравăр, реçинă) районсем пулнă.

Империалисла вăрçăпа Раççейри револђутси çак патшалăхсенђе екконо-мĕкпа хуçалăх улшăнăвĕсем турĕ.

Тĕнђери кăпитал ирĕкĕпе Есттони, Латви, Литва патшалăхĕсем ССРС-пе ытти патшалăхсене пўлсе тăракан хўме çеç пулса йулђĕç.

Пролеттариллĕ револђутсисем хыççăн Палтти патшалăхĕнђи пуршуаçи вла-çа илсессĕнех ССРС-не хирĕç тăђĕ. Краштăн вăрçи вăхăтĕнђе вăл шурă квар-тине пулăшрĕ; краштăн вăрçине хăй те хутшăнса Совет Раççейне хирĕç кĕ-решрĕ. Краштăн вăрçи пĕтсессĕн ССРС Палтти патшалăхĕсемпе лăпкă пурăнас-сишĕн килĕшўсем турĕ пулсассăн та çав патшалăхсен хирĕçўллĕ политтĕкĕ ђарăнмасť.

Империалиссем Совета хирĕçле ушкăна Палтти патшалăхĕсене те туртаççĕ.

Литвапа çеç, унăн Полђшшă империалисĕсен тапăнăвне ђăтма тивнипе, епĕр килĕшўллĕ пурăнатпăр.

Есттони, Латви, Литва йалхуçалăхлă патшалăхсем. Çак патшалăхсен çĕр сийĕ пĕђĕк сăртлă, тўремлĕхлĕ. Пур çĕрте те кĕллĕ тăпра пирки çĕрĕçне туса пыма çемĕçтермелли кирлĕ; климăт çемçе, нўреклĕ пулнă майĕпе кунта курăк-сем аван ўсеççĕ. Çĕр лаптăкĕн нумай пайне вăрманпа çаран йышăнаççĕ.

Литва ытти патшалăхсенђен те ытларах йалхуçалăхĕпе пурăннипе çĕрĕç-çыннисен шуђĕ пĕтĕм пурăнакансен хисепĕн 77 прођ. йышăннинђен курма пулаť. Латвине илсен унта 61 прођ., Естонире—59 прођ...

Тулти рынăка çак патшалăхсем йалхуçайствипе вăрман протуксипе тăра-таççĕ: Литва—97 прођ., Латви—80 прођ., Есттони—70 прођђăн.

Латвипе Есттони промышлĕннăçĕ вăрçă вăхăтĕнђе аманнинђен халĕ те тўрленсе çитеймен. Вăл ССРС-пе çыхăну çуккинђен, пуршуаçи хăйĕн хуçалăхне хăпартма пултарайманнинђен килет.

Çак виçĕ патшалăхăн хуçалăх пурăнăçĕнђе Анклипе Кермани кăпиталисĕсем хуçа пулса тăни паллă.

Тĕнђери еккономĕк криçĕсĕ çак вак патшалăхлă хуçалăхсене имперлетсе кăпиталисла патшалăхсен пай вырăнне тăратса хăвараť.

Пур виçĕ патшалăхшăн та çĕр ыйтăвĕ пысăк вырăнта тăраť. Уйрăм пат-шалăхсем пулса тăрсанах пуршуаçи çĕр реформи иртерсе çĕре хресђенсене валеçсе пађĕ, анђах валеçессине пуршуаллă правиттĕлствă иттересĕсене сых-лама тăрăшакан кулакла хуçалăхсене ўстерес шутпа irттернĕ майĕпе, ђухăнпа вăтам хресђенсен çĕр çуклăхне пĕтерме пултараймарĕç. Ђухăн хресђенсемпе патраксен пурнăçĕ нађарлансах пыраť. Патраксен ĕçхакĕ вăрçăђђенхинђен 1/3 пайĕ ђакрĕ.

Есттонине илсен унта мĕн пурĕ 200 пин патрак шутланаť. Çĕр реформи иртттерни çакăн пек клас кĕрешĕвне вăйлатсах пыраť.

Рапођђи клас калама çук йăвăр условисенђе пурăнаŷ. Пуршуаçи револђутсиллĕ орканисатсисене тĕппех пĕтерессишĕн тăрăшаŷ.

Йӳнĕ ĕçхакĕ, вĕçĕмсĕр ĕççĕрлĕх правасăрлăх—Палтти патшалăхсенђи рапођђисен кунçулĕ.

Економĕк криçĕсĕ вăйланнă çемĕн пуршуаçи ĕçмассисене пусмăрласси те вăйланса пыраŷ.

Пуршуаçи пусмăрне хирĕç пролеттарипе хресђенсен револђутсиллĕ йухăмĕ комунисла партти йертсе пынипе вăйлансах пыраŷ.

## Есттони.

Фински пыртан кăнтăралла 48 пин тăваткăл километр çĕр йышăнса тăраŷ. Унăн тата Палтти тинĕсĕнђе Еселпе Тако утравĕсем пур. Фин пырĕ хĕрринђе Есттони тĕп хулипе порт—Таллин (Ревел), Есттони ССРС-пе пĕр ђикки Пейпус (Ђутски) кӳлли урлă каçаŷ.



Есттони картти.

Халăх йышĕн хисепĕ 1,1 мĕлйун çын. Пĕр тăваткал километра 23 çын тивет. Натси тĕлĕшĕнђен 87,7 прођ. иĕст халăхĕ йышăнаŷ.,

Есттони хуçалăхĕн никĕсĕ—йалхуçалăхĕ. Выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕç пĕрђĕллĕ тырă тăвассинђен ытларах.

Есттонин çĕрай пурлăхĕ çунакан слантсăсăр пуçне нимех те çук.

Вăрçăђђен Есттонире ӳсме тытăннă промышлĕннăçлă Раççей рынăкĕ вађђи ĕçлекен претприйаттисем халĕ ђакса пыраççĕ.

## Латви.

Ришски пырĕн таврашĕнђе 65,7 пин тăваткăл километр çинђе вырнаçнă патшалăх. Латвинђе мĕн пур пурăнакан 1,8 мĕлйун çын.

Пĕр тăваткăл километра 28 çын тивет. Натси тĕлĕшĕнђен: латтишсем 73,4 прођ., вырăссем 12,6 прођ., йеврейсем 5,2 прођ., нимĕђсем 3,8 прођђăн поліаксем 2,8, ыттисем 1,2 прођ. йышăнаççĕ.

Латвин еккономĕк пурăнăçĕн пикĕсĕ—выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕç. Выђăх-ђĕрлĕх протуксисем експăртра паллă вырăн йышăнаççĕ.

Çĕрĕçĕ технĕккă тĕлĕшĕнђен иттенçивлă пулсан та хăйсене çитмен пирки тырпулла йут çĕртен кӳме тивет.

Тĕнђе вăрçи Латви промышлĕннăçне вăйлăн çĕмĕрсе тăкрĕ. Пысăк савăтсене Раççейе куçарса пĕтерђĕç, хăшне пĕрне ишрĕç.

Пуршуаçи промышлĕннăçа пурлăх, суту рынăкĕсем çуккипе хăпартаймарĕ.

Халĕ йăвăç каскалакан, пиравăр, хими (реçинă) промышлĕннăçĕн пĕђĕк претприйаттисем çеç ĕçлеççĕ.

Рапођђи клас ђи паллă портлă хуласенђе (Рикă, Винтавă, Липавă). Вĕсеп йышĕ 80 пин çын шутланать.

Еккономĕк криçĕсĕ пуршуаллă-кулакла правиттĕлствă ĕçкласне тапăнассине вăйлатрĕ.

Рапођђисен пурăнăçĕ йăвăрланса çитрĕ. Ĕçсĕрлĕх калама çук вăйлăн сарăлђĕ. Пролеттариатăн револђутсиллĕ кĕрешĕвне компарттипе револђутсиллĕ профсойуссем йертсе пыраççĕ.

**Литва**—Немăн шывĕн вăта çĕртипе, апатри йухăмĕнђи лапамлăхра 56 пин тăваткăл километрла çĕр лаптăкне йышăнса тăракан патшалăх.

Унта 2,3 мĕлйун çынна йахăн пурăнать. ССРС-пе Литвана Виђнă оплăçĕ (Литва корриторĕ) уйăрса тăрать.

Литва ĕлĕк Кермани порђĕ пулнă. Мемĕл хулипе туртса илнипе тинĕсе тухма май илнĕ.

Литвара—литтовтсăсем 83 прођ., йеврейсем 7 прођ., полђаксем 4 прђ., ыттисем 6 прођ. пурăнаççĕ.

Литва кайра тăракан йалхуçайствиллĕ патшалăх. Çĕрĕçĕ йапăх. Вак хуçалăхсем нумайййи, налук пусмăрĕ йăвăрри, йалăн кăпиталисла-кулакла сийĕ вак хуçалăхсене пусмăрлани йалхуçалăхне аталанма ђăрмавласа тăраççĕ.

Йута кайакан таварсенђен йĕтĕн. Выђăх ĕрђетес ĕç те паллă вырăнта.

Промышлĕннăç аталанса çитеймен, вак претприйаттисем кăна.

Патшалăхăн тĕп хули **Виђно** пулса тăрать. Вăл Полђшă аллинђе. Атминистратси ђенттăрĕ **Каунас** (Ковно) хули пулса тăрать.

Литвăра 1926 çулхи фашшисла пăтрану пулнă хыççăн фашшисла тиктаттурă револђутсиллĕ орканисатсисене салатса йађĕ, профсойуссене хупнă, комуниçла партти пытанса ĕçлет.

Литва пролеттариађĕпе хресђенсен пурăнăçĕ еккономĕк криçĕсĕ пуçланнăранпа нађарлансах пырать.

**Ĕç:** 1. Пирĕн хĕвеланăçри кӳршĕллĕ патшалăхсем вăрçа хатĕрленнине кăтартмашкăн ђыхвăрсене тупса шкулри „сыхлăх кĕтесси" валђи карттокраммă тăвăр.

2. Хаçатпа шурналсенђен сахал йышлă натсисен (украинтсăсемпе пелоруссен) Румынипе Полђшăри пусмăрлă пурнăçĕ çинђен калакан маттериалсене пухса МОПР кĕтесси валђи алђпом тăвăр.

3. Пĕтĕм, вĕренсе тухнă, маттериал тăрăх пĕрĕмĕш май валђи тĕнђери пролеттарисен тата колонисенђи натсиллĕ—ирĕклĕхлĕ йухăм çинђен калакан токлат хатĕрлĕр.

## Румыни.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Румынипе кӳршĕллĕ патшалăхсене карттă çинђе тупăр.
2. Тунай, Прут, Марокка, Тиестр шывĕсене тупăр.
3. Пуххарест, Кишинĕв, Коматс, Кӳстентиш хулисен вырăнĕсене тупăр.

4. Румыни çĕр пиҫĕн кӳлеписене, Карпат, Трансилвани тăвĕсене карттă çинҫе сăрăпа ӳкерсе йаҫĕсене çырăр

5. Румыни карттине хут çине ӳкерĕр.

Румыни ССРС-пе йунашар Полҫшăран кăнтăр йенерех выртаҫ.

Империалисла вăрçă хыççăн Румыни çĕнтерекен патшалăхсен шутне кĕрсе хăйĕн çĕрлаптăкĕпе халăх йышĕн хисепне икĕ хут ӳстерҫĕ.

Вăрçăҫҫенхи Румынин (кивĕ Румыни) виçĕ оплăç пулнă:

**Валаххи**—Карппатпа Тунай шывĕ хушшинҫи оплăç; **Молтави**—Карппатпа Прут шывĕ хушшинҫи оплăç, **Топрутши**—Тунайпа Хура тинĕс хĕрри хушшинҫи оплăç.

Асăннă оплăçсемсĕр пуçне Румынине ĕнтĕ çĕнĕрен 6 оплăç кĕҫĕç. Вĕсенҫен паллăраххисем: **Пессарапи**—1918 çулта вăйпа илнĕ Прут шывĕпе Тнестр хушшинҫи оплăç, **Трансилванипе Пукковинă.** Румыни Пессарапине туртса илнĕ пирки, пирĕн Румынипе пĕр ҫикĕ хĕвелтухăçнелле сиксе Тнестр шывĕ хĕррипе пулса тăҫĕ.

Румынин вырнаçăвĕ пур йенҫе те аван, унăн Хура тинĕсе тухакан шăнман порт Кӳстентши (ĕлĕкхи Констаитсă) пур.

Руммынин Хура тинĕсе кĕрекен Йевроппăри суту-илӳ çулĕсенҫен ҫи пахи—Тунай шывĕ.

Паллакнри патшалăхсемпе кӳршĕлле пулни Румынишĕн суту-илӳ ĕçне сарма усăлли курăнаҫ.

Румынире халăх йышĕ натси тĕлĕшĕнҫен Полҫшăри пекех тĕрлĕ. Пурăнакансен 18 мĕлйунлă йышĕнҫен румыни халăхĕ 12 мĕлйун йышăнаҫ, ытти 6 мĕлйунне: молтавансем, венкрсем, украинтсăсем, йеврейсем, нимĕҫсем, пăлхăрсем кĕреççĕ.

Хăшпĕр оплăçсенҫе сахал йышлă натсисем халăх йышĕн ҫи нумай пайне йышăнаççĕ.

**Траçилванипе Пукковинă оплăçĕсенҫе те çавнашкалах. Полҫшăпа Румыни** натси политтĕкĕ тĕлĕшĕнҫен пĕр пек патшалăхсем.

Румынире, калама çук, тискер хăрушă пусмăрлă натси политтĕкĕ.

Сахал йышлă натсисен шкулĕсене хупаççĕ, суйлав прави памаççĕ, кулҫтурлă, опҫăллă орканисатсисене салатаççĕ, кăшт пăхманшăнах политси тыта-тыта хупаҫ.

Çĕнĕрен çыпăçтарнă вырăнсенҫе халăха татах та хытă пусмăрлаççĕ. Çав вырăнсенҫе тĕпрен пурăнакансен çĕрĕсене туртса илсе Румыни колонисене параççĕ. Пессарапи халăхĕ ССРС-не кĕрес шухăшлă пирки Румыни Пессарапине хытăран хытă пусмăрлаҫ.

## Халăх хуçалăхĕ.

Румыни йалхуçалăхлă патшалăх. Вăл ытти патшалăхсенҫен çĕрĕçĕпе кайра тăраҫ. Çĕрулпуҫĕсемпе пуршуаçи хуçаланса тăни Румыни ĕççыннисен пурнăçне йухăнтарса пыраҫ. Румынин Тунай шывĕ тăрăхĕнҫе лапамлăхра тырă аван пулаҫ.

Çак, Çурçĕр йенҫен Траçилвани, кăнтăр йенҫен Палккан тăвĕсемпе пӳлĕнсе тăракан, ҫослă тăпраллă çĕр çинҫе климăт континентлă пирки шăрăхпа тырă пулманни те пулкалаҫ.

Йалхуçалăх техникки кайра тăнă пирки кунта тырпулă пуласси çут-çанталăкри нӳрекрен килет.

Румынин çурçĕрпе—хĕвеланăç йенĕ вăрманпа витĕннĕ пĕҫĕк сăрт-туллă, тӳрем сăртлăхлă.

Румынире вăрман пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 20 проҫ. йышăнса тăрать. Карпат ту умĕсенҫе нехтăпа тăвар вырăнĕсем пур; Трансçилвани—ылттăн, кĕмĕл, пăхăр, хура тăхлапла пуйан.

Пĕтĕм пурăнакансен хисепĕнҫен 80 про-нĕ творенсен—çĕрулпуҫĕсен ал-Румынире шултра çĕрулпутла çĕрĕçĕ халĕ те пĕтмен-ха.

Пĕтĕм çĕрĕçне йурăхлă çĕрĕн 20 проҫ-не творенсен—çĕрулпуҫĕсен аллинҫе. Хресҫен хуçалăхĕнҫен 83 проҫ-нĕн çĕр лаптăкăшĕ кектартан пуçлаласа 5 кектара çитиҫҫен кăна.

Çĕр налукĕн ҫи нумай пайĕ çак вак хуçалăхсене тивет.

Румыни правиттĕлстви кулаксен, çĕрулпуҫĕсен хуçалăхне хӳтĕлет. Сахал çĕрлĕ херсҫенсем хăйсен çĕрĕсене ĕçлесе тăранса пурăнма май килменнипе çĕрулпуҫĕсенҫен çĕре тара илсе ĕçлеççĕ, улпутсем патне тарçăна кайаççĕ. Румынире пулакан тырпулсенҫен паллăраххисем—куккурусă, тулă, урпа.

Технĕклă куҙттурăсем çаксем—сахăр кăшманĕ, тапак, пçĕм çырли.

Румынире промышлĕннăç наҫар аталаннă. Тĕп вырăна нехтă промышлĕннăçĕ йышăнать.

1927 çулта нехтă промышлĕннăçĕнҫе 26 пин рапоҫҫи ĕçленĕ. Нехтă тупăнакан районсенҫен паллăраххисем Праххăвпа Тымповитс районĕсем. Тĕнҫипе нехтă тупас ĕçре Румыни улттăмĕш вырăна йышăнса тăрать. Нехтă протукҫĕсен çурри йут патшалăхсене кайать.

Нехтăна йут çĕре кăларма нехтă районĕсенҫен константсă портне тухакан нехтă пăрки пур. Румынин нехтă промышлĕннăçĕ Анклипе Франтси капиталĕсем аллинҫе. Патшалăх наҫар интустриленнĕ пирки металпромышлĕннăçĕ сарăлсах çитмен.

Савăтсем кивĕ Румынипе Трансçилванинҫе нумайтарах.

Ҫĕрĕ йапаларан хатĕр таварсем тăвас промышлĕннăç сарăлман пирки промышлĕннăç таварĕсене йут çĕртен кӳме тивет.

Тĕнҫери рынăка Румыни тулă, выҙăх, нехтă, вăрман тăратать. Тĕнҫери кăпиталис хуçалăхĕн криçĕсĕ Румыни хуçалăхне те вăйлăн амантрĕ.

Румынире çĕрĕçĕн ӳсĕмне ҫарса çĕр ыйтăвне çемĕçтермелли çĕр реформи Поҙшшăри пекех иртрĕ.

Хресҫенсем улпут хуçасемпе правиттĕлствăна хирĕç кĕрешесси вăйланса пырать.

Рапоҫҫи пурнăçĕ калама çук наҫар, ĕç укçи пит те йӳнĕ. Ĕç кунĕ 10—11 сехете çитет. Пролеттариатăн револютсиллĕ йухăмне тискерĕн путарса пыраççĕ, револютсиллĕ орканисатсисене салатаççĕ, комунисла парттин вăрттăн ĕçлеме тивет.

Çапах та террăра пăхмасăрах Румынири револютси йухăмĕ вăйланса пырать.

Рапоҫҫи клас сотсиал-фашшиссене йеринех сиссе, пуршуаçипе çĕрхуçисемпе кĕрешессинҫе пуç пулмаллине туйса çитет.

Румынире халĕ те монархи. Çĕрулпуҫĕсем пуршуаçипе танах политтĕклă вăй пулса тăраççĕ. Халĕ влаç фашшиссен аллинҫе.

ССРС, Румыни пиртен Пессарапине туртса илнине тĕрĕс тесе шутламасть. Румыни Поҙшшă пекех шултра империалисла патшалăхсем (сăмахран Франтси) Совет сойусне хирĕç кĕрешес ĕçре, вĕсен шанҫăклă тарçи çеç.

Францси кăпиталисĕсем пулăшнипе хăвăрт пăшалланса пырат. Вăл та ССРС-не хирĕç тухма хатĕрленет. Çав шутпа вăл Полшăпа вăрçă килĕшĕвне тунă.

## Ҹеххословакки.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Ҹеххословаккипе кӳршĕллĕ патшалăхсен вырăнаçĕвĕпе, Ҹеххословаккин ҹиккисене сăнаса тухăр.
2. Ҹеххословаккинҹи сăрт тӳрҹĕсене, лапамлăхсене тупса вĕсен пысăкăшне пĕлĕр.
3. Ҹеххословаккинҹи йухан шывсене тупăр.

Ҹеххословакки империалисла вăрçăҹҹен Австро-Венкрипе Керманн патшалăхсен аллинҹи çĕршыв татăкĕсем çинҹе пулнă патшалăхсем. Вăл Полшăран кăнтăр йенелле выртат.

Ҹеххословакки хуçалăх тĕлĕшпе 3 района пайланат.

Патшалăхăн хĕвеланăç пайĕ—Ҹеххи, (Покеми), Морави, Словакки.

Покемине виçĕ йенҹен те çӳлĕ тусем карталаса тăраççĕ. Покеми урлă Елпă шывне йухса кĕрекен Молтавă йухан шывĕ каçса кайат.

Покеми климăҹĕ континентлă. Çу шăрăх, хĕл сивех мар.

Çĕршыв çĕрĕçне йурăхлă. Кунта ыраш, сĕлĕ, урпа, тулă, çĕрулми, сахăр кăшманĕ акса тăваççĕ.

Покемин çурçĕр пайĕ çĕркăмрăкпа тимĕр тăприпе; тата ытти çĕрай пурлăхĕнҹеп пуйан. Кунта пысăк, аталанса çитнĕ, промышлĕннăçлă район пур. Вăл вăрçăҹҹен хайĕн протуксипе, халĕ саланса кайнă, Австро-Венкрине туйантарнă. Ҹеххословаккин тĕп хули—Пракă; вăл Молтавă шывĕ хĕрринҹе, Покемин варринҹе тăрат.

Ҹеххословаккин иккĕмĕш районĕ—Морави.

Моравин çĕр пиҹĕ кăнтăралла тайлăмлă пирки, унăн йухан шывĕсем, сăмахран, ҹи паллăрах Морави (Марх) шывĕ кăнтăралла йухса Тунай шывне йухса кĕрет.

Хуçалăх тĕслĕхĕпе Морави Покеми йевĕрлех. Лапамлăхсенҹе климăт ăшăрах майĕпе кунта Покемири култтурăсемсĕр пуçне куккурусăпа винократ акса тума май килет.

Ту пуйанлăхĕсем кунта çителĕклĕ çавăнпа ку Ҹеххословаккин иккĕмĕш промышлĕннăçлă район.

Моравин тĕп хули—Прно (Прӳн).

Ҹеххословаккин виççĕмĕш районĕ—Словакки. Вăл талкăшпех Карпат тăвĕсен оплăçне йышăнса тăрат.

Карпат тăвĕсем аслă вăрмансемпе витĕнсе тăраççĕ, Тунай шывĕ хĕрринҹе пысăк çырансемпе вĕçленеççĕ.

Кунта вăрмансемсĕр пуçне уй-хирсем те нумай. Тулă, куккурус, тарăн лапамсенҹе винократ, аван пулаççĕ.

Карпат ту пуйанлăхĕсем питĕ пысăк, нумай, анҹах вĕсене халиҹҹен ĕçе сахал кĕнĕ.

Тусенҹе ылттăн, кĕмĕл, пăхăр, хура тăхлан нумай.

Ҹеххословаккинҹе 1 тăваткăл километра 100 çынна йахăн пурăнат.

Промышлĕннăç та йалхуçалăхĕ те пĕр пекех çитĕннĕ.

Йалхуçалăхĕнҹе ыраш, сĕлĕ, тулă, нимрен ытла çĕрулми, сахăр кăшманĕ, хăмла, питĕ пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Сахӑр кӑшманӗ тӑвас тӗлӗшпе Ђеххословакки Йевроппӑра иккӗмӗш вырӑнта тӑрат̆. Вӑрман хуҫалӑхӗ те пысӑк тупӑш парат̆. Вӑрман пӗтӗм ҫӗрӗн виҫҫӗмӗш пайне йышӑнат̆. Йӑвӑҫа каскалакан промышлӗннӑҫ вӑйлӑ.

Ђеххословаккин промышлӗннӑҫне аталанма ӳсме пур кирлӗ ђӗрӗ таварсем, йапаласем ҫителӗклех. Ту пуйанлӑхӗсем, тимӗр тӑпри, ҫӗрмамӑк, пӑхӑр, крафит тата ыт. пур. Тимӗр тӑрпипе ҫӗркӑмрӑк нумайӹи меттал промышлӗннӑҫне аванлатма вӑй панӑ.

Покемипе Моравинђе машинисем, нимрен ытла йалхуҫалӑх машинӗсем тӑвакан савӑтсем нумай. Меттал промышлӗннӑҫӗпе танах пиравӑр промышлӗннӑҫӗ те сарӑлнӑ.

Пиравӑр промышлӗннӑҫӗ Йевроппӑра 6-мӗш вырӑна йышӑнат̆. Ђеххословаккинђе ђукун ҫулӗсем Франтсиринђен нумайтарах. Шыв ҫулӗсем—Еԓпӑ, Молтавӑ, Отӗр, Тунай.

Шултра кӑпиталисла патшалӑхсен инттересӗсем Еԓпӑ, Отӗр, Тунай шывӗсене интернатсионалла ҫулйӗрсем туса хунӑ. Ђеххословакки промышлӗннӑҫлӑ пулни, промышлӗннӑҫ таварӗсене сутма рынӑксем шыраттарат̆.

Кӳршӗллӗ патшалӑхсем—Венкри, Румыни ҫӗрӗҫлӗ пулни пӗр вӑхӑтлӑха Ђеххословаккишӗн рынӑк пулса тӑђӗҫ, анђах Палккан патшалӑхӗсенђи, тата йунашар патшалӑхсенђи йалхуҫалӑх криҫӗсӗ Румыни, Венкри йалхуҫалӑхне те ҫавӑрса илсе Ђеххословаккишӗн рынӑк пулма пултарайманни палӑрђӗ. Ҫав май Ђеххословакки промышлӗннӑҫӗн криҫӗсӗ татах та вӑйланат̆.

Йута Ђеххословакки хатӗр таварсем, сахӑр, вӑрман йарат̆.

Йутран—ҫимӗҫ, ҫӗрмамӑк, ҫӑм т. ыт. илсе килет.

Ђеххословаккипе Совет сойусӗ хушшинђи суту-илӳ тӑвас ӗҫ халӗ те йӗркелесе ҫитеймен-ха.

Тӗнђери економӗк криҫӗсӗ Ђеххословаккин прмышлӗннӑҫне, вӑрҫӑ промышлӗннӑҫӗсӗр пуҫне, ишӗлтерсех пырат̆.

Вӑрҫӑ промышлӗннӑҫ кӑна тытӑнса тӑрат̆. Вӑл Поԓшӑпа Румынине вӑрҫӑ хатӗрӗсемпе туйантарса Совет сойусне хирӗҫ тухас вӑрҫӑ хатӗрленӗвне вӑйлатса пырат̆. Криҫӗс вӑйланса пынӑҫемӗн ӗҫхалӑхӗн пурнӑҫӗ нађарланса пырат̆. Револуутсиллӗ йухӑмра ӗҫлекенсемпе ӗҫ хресђенӗсене Ђеххословаккинђи комунисла партти пуҫ пулса тӑрат̆.

Ђеххословаккире тӗрлӗ политтӗк парттисем пур.

Паллӑ вырӑнта сотсиал-темократсен парттийӗсем тӑраҫҫӗ. Сотсиал-темократсен парттисем, пуршуаҫин ђыслӑ ӗҫлекенсен сийӗн инттересӗсене сыхлакансем кӑна пулса тӑраҫҫӗ. Кусемсӗр пуҫне натсионаллӑ, нимӗђ, венкр парттисем пур.

Ђеххословаккири комунисла партти 1921 ҫулта ҫулла орканисатсиленсе ҫитрӗ. Вӑл халӗ Ђеххословаккири ђи массӑллӑ партти пулса тӑрат̆. Пролеттариатӑн ђи массӑллӑ орканисатси пулнине, комуниссен парттинђе 50 пине йахӑн ђлен тӑнинђенех курма пулат̆.

**Тӗпђев ыйтӑвӗсем:**

1. Промышлӗннӑҫ аталанӑвӗн никӗсӗ мӗн пулса тӑнине, мӗнрен килнине каласа парӑр.
2. Ђеххословаккин товар сутмалли, ђӗрӗ таварсем илмелли рынӑкӗсем ӑҫтине, мӗнле патшалӑхсем уншӑн рынӑк пулса тӑнине каласа парӑр.
3. Еԓпӑ, Отӗр, Тунай йухан шывӗсем Ђеххословаккине мӗнле тинӗссемпе ҫыхӑнтарса тӑнине калӑр.

**Еҫ:** 1. Хаҫат шурналсенђен Ђеххословаккинђи револђутсиллӗ йухӑм ӳснине, промышлӗннӑҫ ђакнине, тӑвӑм пӗтӗмӗшпе ђакнине пӗлсе ђиакрам ђуса кӑтартӑр.

2. Ђеххословаккинђи ҫамрӑксен йухӑмӗ, пионер, комсомол орканисатсисен ӳсӗмӗ ҫинђен вуласа пӗлсе, йут патшалӑхри револђутсиллӗ йухӑма кӑтартакан „МОПР кӗтесси“ вађђи плаккат тӑвӑр.




Палккан ҫурутрав пе Тунай таврашӗнђи ҫӗршывсем.

**Йукославн** вăрçă хыççăн тĕрлĕрен токăвăрсем тăрăх Çерпи патшалăхĕ çумне çĕнĕ çĕрсем хушшипе пулса тăӈĕ. Çерпи çумне çак çĕршывсем хутшăнӈĕç, Маккетони пайĕ, Коссов оплăçĕ, Поçни, Кретсоковина, Войевотина, Кратси; Славони тата Словени пайĕ. Çак çĕрсем Маккетонипе Коссов оплăçĕсĕр пуçне Çерпине Австро-Венкриӈен куçрĕç.

Çутçанталăк уйрăмлăхĕсемпе Йукославине виçĕ пайа уйăрма пулаť.

1. Хĕвеланăç пайĕ—Хорватти, Талматси, Ӈернокори, т. ыт. сăртлă вырăн Алӈпă тăвĕсен оплăçех—пушхирлĕ. Ĕçлеме йурăхлă çĕр питĕ сахал. Шыв хĕррисемпе çеç, нӳрлĕх нумай сат-пахӈисем, винократ пахӈисем ĕмĕр симĕс йешĕрсе лараççĕ.

2. Çурçĕрне Хĕвелтухăç пайĕ Венкри айлăмне йышăнаť. Çĕр питĕ тухăçлă, нӳрлĕх çителĕклĕ, климăт çемçе. Ку Йукославине тăрантаракан район.

3. Кăнтăрпа хĕвелтухăç (Çерпи пулни) çăра вăрманпа хупланнă. Морави шывĕ тăрăх пыракан айлăмра климăт çемçе, çĕрĕ те питĕ сĕтеклĕ, тухăç нумай параť, çавăппа çĕрĕçĕ хытă аталаннă.

Йукославинӈе тĕрлĕрен халăх пурăнаť: çерпсем (45 проӈ.) хорватсем, словентсăсем, нимĕӈсем, алпантсăсем, турккăсем, венкăрсем, т. ыт. Вак халăхсем пусмăртан тухасшăн ӈас-ӈасах çапăçусем кăлараççĕ.

Халăхăн тĕп ĕçĕ—йалхуçалăхĕ; вак хресӈен хуçалăхĕсем çĕрĕçлесе пурнаççĕ. Австро-Венкрирен килнĕ оплăçсенӈе шултра çĕрулпуӈĕсем те пур.

Тырăсенӈен куккурус, тулă тăваççĕ. Атриатти тинĕс хĕррипеле винократ сатсем ĕрӈетеççĕ.

Промышлĕннăç пысăк вырăнах йышăнмасť. Çĕрайĕнӈи пурлăхсем ӈылай, анӈах вĕсене сахал тупаççĕ.

Полкари вăрçă хыççăн çĕрне ӈылай çухатрĕ: Топрутши Румынине куçрĕ, Маккетони пайĕ—Йукославине, кăнтăрти хăйĕн çĕрĕн пайĕ—Кретсине.

Климăт вăтам, кăнтăр пайĕнӈе Рутокоп шывĕсем сивĕ çилтен сыхлапă май ăшăрах. Çĕрĕçне йурăхлă çĕр нумай. Полкари—йалхуçалăхлĕ патшалăх. Çĕр вак хресӈенсем, кулаксем аллинӈе. Мĕн пур халăхран 75 проӈ. йалхуçалăхĕпе пурăнаť. Ытларах пĕрӈĕллĕ тырăсем—тулă, куккурус тăваççĕ. Çурçĕр Полкари тӳремлĕхĕнӈе выӈăх-ӈĕрлĕх ĕрӈетесси (сурăх, ĕне выӈăх) саралнă. Тусенӈе вăрман ĕçлесси паллă вырăн йышăнаť.

Çĕрайĕнӈи пурлăхсем сахал. Промышлĕннăç питĕ наӈар аталаннă. Промышлĕннăçра ĕçлекенсен шуӈĕ 100 пин çынна та çитеймест.

Патшалăхра пуршуаçи фашшисла майсемпе пуç пулса тăраť.

Кретси. Вăрçă хыççăн хăйĕн çĕр талкăшне икĕ хут ӳстерӈĕ, ун çумне тата Фраки хутшăнӈĕ. Кретси çĕршывĕ питĕ сăртлă, çĕрĕçне ĕçлеме йурăхлă мар. Шыв хĕррисенӈе çеç, лăпамĕсенӈе, тӳрем вырăнсенӈе тĕрлĕрен троппĕкри ӳсентăрансене те ĕрӈетме май пур. Йурăхлă çĕре наӈар ĕçленĕ пирки тырпулă тухăçĕ питĕ пĕӈĕк. Пĕрӈĕллĕ тырăсенӈен тулă ытларах акса тăваççĕ (Фраки), анӈах хăйне çителĕклĕ мар. Сат, винократ ĕрӈетесси хытă саралнă. Çурçĕр Кретсинӈе тапак нумай тăваççĕ (тĕнӈере пĕрĕмĕш вырăн йышăнаť).

Выӈăхсенӈен сурăх, каӈака нумай усраççĕ. Пулă тытасси те Кретсинӈе паллă вырăн йышăнаť.

Ту пурлăхĕсем нумайах мар, тупма та сахал тупаççĕ.

Промышлĕннăç наӈар аталаннă. Пиравăр промышлĕннăçĕ, оливккă çăвĕ, супăӈ, ерех, тапак тăвасси маларах тăраť.

Тинĕс хĕрринђе вырнаçнă пирки суту-илӳ пысăк вырăн йышăнать, суту-илӳ флођĕн тоннашĕ 1,3 мĕлйун тоннă.

Кретсире мĕн пурĕ 6 мĕлйун çын пурăнать. Çав шутран рапођђисем— 250 пин çын шутланаççĕ.

Алпани Палккан çурутравĕн кăнтăрпа хĕвеланăç йенђе Атриатти тинĕс хĕрринђе выртӑт. Çĕршыв питĕ сăртлă. Алпанинђе кортсăсем пурнаççĕ. Çĕршыв исвесккăллă, çĕрĕçлеме йурăхсăр. Тинĕс хĕррипе çеç çĕрĕçне йурăхлă тăпрасем пур.

Халăхăн тĕп ĕçĕ сурăх ĕрђетесси. Айлăмсенђе, шыв хĕррисенђе çĕрĕçĕн— пĕрђĕллĕ тырăсем, тапак, акса тăваççĕ. Çĕрайĕнђи пурлăхсене тĕпђесе пĕлмен. Промышлĕннăçĕ çукпа пĕрех. Çулйĕрсем вырăнне тусем çинђи сукмаксем. Ђукун çул çукпа пĕрех. Йут суту-илӳ пысăк вырăнта мар. Екклномĕк йенђен Итталипе ытларах çыхăннă. Иттали Алпанине хăйне пăхăнтарасшăн тăрăшать.

Алпани монархиллĕ патшалăх. Влаç феоталсем аллинђе.

## Натси ыйтăвĕ.

Империалисăм вăрçи Палккан çурутравĕ çинђе пысăк улшăнусем турĕ, натси ыйтуне тата йăвăрлатрĕ, çивĕђлетрĕ. Кунта патшалăхсем тĕрлĕ оплăçсене вĕсем екклномĕкпа куљттур йенђен пĕр пек мар пулин те пĕрлештерсе, пĕр натси тепĕр натсине пусмăрта усраççĕ, çавăнпа натсисем хушшинђи çапăçу питĕ вăйланђĕ. Пусмăрта пурнакан натсисем револютси туса ирĕке тухасшăн кĕрешеççĕ.

Ку кĕрешӳ пуринђен ытла Румынипе Йукослави... Макетони... Посни, Словени, Войевотинă çĕрĕсенђен пулса тăђĕ терĕмĕр. Çак çĕршыври халăхсене Çерпи кăпиталисăмĕ калама çук пусмăрлать. Вĕсене Çерпи çумне çыпăçтарнăранпа Кроатсемпе словентсăсем ирĕке кăларасшăн çапăçаççĕ. 1918 çулта киле таврăнакан салтаксем Кроатси ирĕклĕ респулĕк тăвасшăн востани турĕç. 1924 çулта та Кроат ĕçлекенĕсемпе хресенсем ирĕке тухасшăн револютсиллĕ востани турĕç.

Ӳссе пыракан екклномĕкпа политтĕк криçĕсĕ 1928 çулта, натсийĕн ирĕке тухасшăн кĕрешессине çĕнĕрен ђĕртсе йађĕ. Ђылай вырăнсенђе (Кроатси, Посни Маккетони, Ђернокори) хресђенсем револютсиллĕ востанисем турĕç. Ку ĕçре Йукославинђи комунисла партти йертсе пыђĕ. Вăрçăллă-фашшисла тиктаттурă револютси йухăмне пĕтерсе, ăна йертсе пыракансене катăркăна, тĕрмене хупса пĕтерђĕ, нумайăшне тытнă çĕртех пере-пере вĕлерђĕ.

Натсийĕн ирĕке тухассишĕн кĕрешесси Румынире те вăйлă пырать. 1919 çулта Пессарапинђе хресђенсен востани пулђĕ. Уйес-уйесĕпе хресђенсем Руни, Маккетони, Ђернокори) хресђенсем револютсиллĕ востанисем турĕç. Ку çĕре тарђĕç. 1920 çулта Пентер уйесĕнђе çĕнĕрен востани пулђĕ. 1924 çулта Тарапунар востанийĕ пулђĕ. Пуршуаçи хаçађĕсем пĕлтернĕ тăрăх çак востанисене путарнă ђух 15 пин çын вĕлернĕ. 1928 çулта ĕçлекенсемпе хресђенсен çĕнĕрен револютсиллĕ çапăçу пулса иртрĕ. Анђах ку револютсиллĕ йухăма хресђен парттийĕ сутрĕ. Вăл çĕршерĕн çĕршерĕн ĕçлекенсемпе хресђенсене пере-перĕ вĕлерђĕ.

Палккан çурутравĕ çинђе рапођђисемпе хресђенсен револютсиллĕ йухăмĕ вăйлă. Полкарире 1918 çулта салтаксен востанийĕ пулђĕ, 1919 çулта ђукун çул çинђе ĕçлекенсен сапастовкки т. ыт. те. Екклномĕк криçĕсĕ çивĕђленсе пынă май Кретсире те ĕçлекенсемпе хресђенсем револютсиленсе пыраççĕ; тĕс-

лёхрен 1930 çулта Метилен утравĕ çинҫе ĕçлекенсем шантармасенҫен пăшал хатĕрсене туртса илсе хулара пуç пулса тăҫĕç. Çакăн пек ĕç 1930 çулта Каваљ хулинҫе те пулса иртрĕ. Пуршуаçи ку востаанине рапоҫҫисен вăйĕ сахал пирки хăвăрт путарҫĕ.

## Екокомĕк криçĕсĕ.

1928 çултанпа Палкканри пăтшалăхсенҫе екокомĕк криçĕсĕ çивĕҫленсе пырат̆. Ҫылай вăхăт Палкканри патшалăхсем криçĕсрен тухас тесе йутпатшалăхсенҫен сайомсем те илсе тăҫĕç. Сайомсем екокомĕк криçĕсне вăхăтлăха тӳлеклентерҫĕç, анҫах йут патшалăхсене пăхăнассине ӳстерҫĕç, мĕншĕн тесен сайом илме вĕсен ирĕксĕрех империалисла патшалăхсене хăйсен промышлĕннăçне, вăрмансене, ҫукун çулсене, çĕрайĕнҫи пурлăхсене памалла пулҫĕ. Çапла Румыни хăйĕн ҫукун çулĕсене Амерĕк кăпитал аллине пама хатĕрленет̆; Йукослави Поçнири вăрмана усă курма Амерĕк, Анкли, Франтси империалиссене панă; Йукославири хими промышлĕннăçĕ Франтси кăпиталĕ аллинҫе; Йукославири Талматси Иттали кăпитталĕ аллинҫе; Румыни нехтине Анкли кăларат̆, Полкарин çĕркăмрăк районĕсем Анклипе Иттали кăпиталĕ аллине куçаççĕ, т. ыт.

Йалхуçалăхпа промышлĕннăç криçĕсĕ çивĕҫленсе пынă май ĕçсĕр аптăракансен шуҫĕ ӳссех пырат̆.

Кăпиталиссем криçĕс йăвăрлăхне ĕçлекенсемпе хресҫенсем çине тиеççĕ: ĕç укçи ҫакат̆, ĕç кунне вăрăмлатаççĕ т. ыт., налуксене ӳстерсех пыраççĕ. Налуксене хресҫенсем тӳлесе татма пултараймаççĕ. Налук татманшăн вĕсен çĕрĕсене, выљăх-ҫĕрлĕхне, ĕçхатĕрĕсене йунĕ хакпа сутаççĕ.

Палкканри комунисла парттисем пурте вăрттăн ĕçлеççĕ. Вăрттăн ĕçлени ĕçхалăх массипе çыхăнассине йăвăрлатат̆.

## Империалисăмла патшалăхсем Палкканра пуç пулассишĕн çапăçни.

Палккан çурутравĕ йут çĕршывсемпе суту-илӳ тăвас йенҫен питĕ аван вырăн йышăнат̆: унтан шыв тăрăх тĕнҫен пур йенне те кайма пулат̆, ун патĕнҫи тинĕссем тăрăх тĕнҫери ҫи паллă, суту-илӳ шыв çулĕсем иртсе кайаççĕ. Çавăнпа империалисла патшалăхсем хушшинҫе Палккан çурутравĕ çинҫе пуç пулассишĕн çапăçу пырат̆: пĕр йенҫен пысăк империалисла вăйсем хушшинҫи хирĕçӳ (ÇАПШ-пе Анкли, Анклипе Франтси, Франтсипе Иттали, тепĕр йенҫен— Палкканри патшалăхсем хушшинҫе.

Анкли Палкканра Франтси вăйĕ ӳсесрен хытă хăрат̆, мĕншĕн тесен вăл Хура тинĕсе тухма йăвăрлатма пултарат̆. Тепĕр йенҫен Палкканран тупăш курасси те ҫакат̆. Çавăнпа та Анкли Франтсипе Иттали хирĕçĕвĕнҫе Итталине пулăшат̆. Ҫи пысăк хирĕçӳсем Франтсипе Иттали хушшинҫе. Иттали Атриатти тинĕсĕнҫе пĕҫҫен хуçа, пуç пуласшăн тăрăшат̆, Вăтаçĕр тинĕсĕн çурçĕрпе хĕвелтухăç пайне Полкарипе Кретсине хăйĕн аллине илесшĕн. Ку Франтси поçитсине, ун вăйне ҫакарат̆.

Нимрен ытла Йукославипе Иттали хушшинҫе хирĕçӳ питĕ çивĕҫ. Итталине Талматсинҫе çăмăл условисемпе контсеççисем панă. Анҫах Иттали контсеççине çеç çырлахасшăн мар. Вăл Талматсине пĕтĕмпех хăйĕн аллине çавăрса илесшĕн. Талматси урлă Иттали Атриатти тинĕсĕ çинҫе пуç пулассипе çирĕплетесшĕн. Талматсине туртса илес тесе Иттали Йукославире пулса иртекен фашшисла пăлхавсемпе те усă курат̆.

Йукославипе Полкари те Маккетонире пуç пулассишĕн тапăçаççĕ.

Маккетони малтан Полкарин пулнăскер вăрçă хыççăн вакланса Йукославине, Кретсине кайрĕ. Полкари халĕ те Маккетонипе хамăн тесе шутлаť.

Куп пек хирĕçӳсем татах пур. Йукославипе Кретси хушшинђе Салоникăшăн, Полкарипе Кретси хушшинђе Франтси çĕрĕшĕн, т. ыт. те.

Империалисла патшалăхсем Совет сойусне хирĕç вăрçă хатĕрлес ĕçре Палканри патшалăхсемпе те усă кураççĕ. Çав патшалăхсем урлă пирĕн çине килесшĕн тăрăшаççĕ. Франтси çак шутпах Румынипе Йукославине вăрçă хатĕрĕсем тăвассине ӳстерме сайомсем параť, тĕрлĕрен вăрçă-токăвăрĕсем тунă (Поđшшăпа Румыни) т. ыт. Румыни, Кретси, Полкари, Йукослави патшалăхĕсенђе Совет сойусне хирĕç вăрçă хатĕрлекен шурă кварти орканисатсийĕсем пĕклĕнех ĕçлеççĕ. Рапођђисемпе ĕçхресђенсене комунисла партти йертсе пыраť, вăл ĕçхалăх массин куçне уçаť, вăрçа хатĕрленес ĕçе ђарса пыраť.

**Ыйтусемпе ĕçсем:**

1. Палккан çурутравĕн кеокрахвиллĕ вырăнне çыхăну тытас Йенђен мĕнрен аваннине каласа кăтартăр.

2. Палкканри патшалăхсенђе промышлĕннăç нађар аталанни мĕнтен килет?

3. Алпани хуçалăхĕ питĕ кайа йулни мĕнрен килет?

4. Мĕншен Палкканри патшалăхсенђе натси ыйтăвĕ питĕ çивĕђ тăраť. Натсисем ирĕке тухасшăн мĕнле çапăçнине каласа кăтартăр.

5. Мĕншĕн Палкканри капиталисем империалисла патшалăхсене пăхăнаççĕ. Палканра пуç пуласшăн мĕнле патшалăхсем хирĕçеççĕ.

## Скантинави патшалăхĕсем.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Скантинави çурутравĕ тавра мĕнле тинĕссем пур.—тупăр.

2. Скантинави çурутравĕ çинђе мĕнле патшалăхсем вырăнаçнă,—карттă çинђе ђиккисене тупăр. Унти шывсене, пысăк хуласене тупăр.

Норвеки патшалăхĕ—ђулпа пăрлă çĕршыв. Швետси—кранит, кӳлĕ, шур, вăрман—çĕршывĕ. Скантинави патшалăхĕсенђен кăнтăрарах вырăнаçнă Тани патшалăхĕ кăна çаранлă, уйлă çĕршыв.

Çак виçĕ патшалăх—акрарлă, çĕрĕçĕпе пурăнакан патшалăхсем.

## Норвеки.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Норвеки патшалăхĕ мĕнле патшалăхсемпе ђикĕленет? Патшалăхăн çĕр виђĕ мĕнле?

Норвеки Скантинави çурутравĕн хĕвеланăç пайне йышăнса тăраť. Вăл сăртлă тинĕс хĕрри питĕ каскаланса пĕтнĕ. Атлантти оккеанĕ йенђе климăт çемçе, ăшă, мĕншĕн тесен кунта Коđфштром йухăмĕ пур. (Коđфштром йухăмне карттă çинђе кăтартăр).

Йалхуçалăх кулđттурĕсем оккеан хĕрринђи пĕтĕм талкăшĕпех пĕр пек пулма, ӳсме пултараççĕ.

Норвекин варринелле сăрт-тусем хупласа тăраççĕ.

Халăх оккеан хĕрринђе ытларах пурăнаť. Норвекинђе пурĕ халăх 2,8 мĕлйун пурăнаť, çĕр лаптăкĕ 324 пин тăваткăл километр.

Норвеки хуçалăхĕнђе пулă тытас ĕç тата шывсем тăрăх çӳрев ĕç тĕп вырăнта тăраť.

Вăрманпа улăх-çарансем патшалăхăн кăнтăр йенĕнђе çеç. Вăрман, çĕр лаптăкăн $^1/_4$ пайне (24 проđ.), улăх—2 проđ., уй-хир—3 проđ. йышăнаççĕ, ытти çĕр хуçалăха йурăхсăр çĕр.

Норвекире шыв сиккиллӗ йухан шывсем нумай, ҫавӑнпа вӑрман ӗҫ, хӑма, хут промышлӗннӑҫӗ «шур кӑмрӑк» вӑйӗпе ӗҫлет.

Промышлӗннӑҫ протуксинҫе паллӑрах вырӑн спиҫкӑ, сывлӑшран тӑвӑнакан асотлӑ ҫӗре ҫемӗҫтермелли имҫамсем, алҫумини йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Норвекире тата карап тӑвас ӗҫ вӑйлӑ.

Норвекин тинӗс флоҫӗ тӗрлӗ патшалӑхсен таварӗсене пӗр ҫӗртен тепӗр ҫӗре куҫарас ӗҫпе пӗтӗм тӗнҫери тинӗс флотӗнҫе паллӑ вырӑна йышӑнса тӑрать.

Норвекин тӗп портлӑ хуласенҫен паллисем—Осло, Перкӗн, Каммерфест.

Йут патшалӑхсене вӑрман-йӑвӑҫ таварӗсем, хут, пулӑ, ҫу, ҫӑралатнӑ сӗт, тата ытти те кайать.

Йутран—тырӑ, ҫӗркӑмрӑкӗ, метталпа пиравӑр кӳреҫҫӗ.

Норвекинҫе конҫтитутсиллӗ монарххи. Пуҫлӑх, халӑх суйлавӗсем туса иртерекен парламӗнт шутланать.

Ӗҫлекенсене «ӗҫлекенсен партти» текен партти (транмелистсен партти) йертсе пырать.

Комунисла партти пысӑках мар; унӑн транмелистсемпе сотсиал-темократсемпе вӑйлӑн кӗрешме тивет. Вӑл ҫулран ҫулах тӗреклӗнсе ӳссе пырать.

## Швется.

**Карттӑпа ӗҫлесси:**

1. Швется патшалӑхӗ мӗнле патшалӑхсемпе ҫикӗленсе тӑнине пӗлӗр.
2. Шветсинҫе мӗнле пысӑк кӳлӗсем, хуласем пур?
Карттӑ ҫинҫе тупӑр.

Швется—континентлӑ климӑтлӑ патшалӑх. Шветсинҫе ҫурҫӗр йенҫе тунтӑрсем, унтан кӑнтӑралла аслӑ вӑрмансем, ҫи кӑнтӑр пайӗнҫе—ҫарак-улӑх, уй-хирсем, унтан—кӑшманпа тулӑ уй-хирӗсем.

Швется патшалӑхӗнҫе тимӗр тӑпри нумай, анҫах унӑн ҫӗркӑмрӑкӗ пӗртте ҫук, ҫавӑнпа та тимӗр тӑприне Швется патшалӑхӗ Анклипе Керманине сутать.

Швется метталуркийӗ ҫи аван суртлӑ меттал кӑна шӑрататӑ.

Метталуркире йулашки вӑхӑтра електритсӑ вӑйӗпе усӑ курма тытӑнҫӗҫ.

Хуҫалӑхра вӑрман ӗҫӗ паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӑрмана йут ҫӗре нумай сутнисӗр пуҫне вӑрман промышлӗннӑҫа нумай кайать.

Хут, спиҫкӑ, електротехнӗккӑ, пиравӑр промышлӗннӑҫӗ йулашки ҫулсенҫе вӑйлӑнах сарӑлса пыҫӗ.

Шветсинҫе 6 мӗлйуна йахӑн ҫын пурӑнать.

Паллӑрах хуласем—Стокколҫм (тӗп хула), Кетепорк, Малҫме.

Швется парламӗнтлӑ-конҫтитутсиллӗ монарххи.

Ӗҫлекенсем хушшинҫе сотсиал-темократтисем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ, анҫах комуниссен партти те вӑйлансах пырса ӗҫлекенсен пӗртен-пӗр йертсе пыраканӗ пулса тӑрасси паллах.

## Тани.

**Карттӑпа ӗҫлесси:**

Тани патшалӑхӗ тавра мӗнле тинӗссем пур, карттӑ тӑрӑх сӑнӑр, вӑл мӗнле патшалӑхсемпе ҫикӗленнине сӑнӑр.

Ҫӗр пиҫӗ мӗнле?

Тани патшалӑхӗ Йутланти ҫурутравӗпе, Ҫеланти утравне йышӑнса тӑрать. Патшалӑхӑн ҫӗрлаптӑкӗ 43 пин тӑваткӑл километр кӑна, унта 3,4 мӗлйун ҫын пурӑнать.

Тани йалхуçалăхĕ тĕнђере пĕрĕмĕш вырăнта тăрат теме те йурат. Нимĕнрен ытла кунта выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕç аталанса çитнĕ. Тани утравĕсем—сĕт фермисем. Çак аслă фермăсем хăйсен протуксине Аслă Приттанине сутса тăраççĕ, ăна сĕт-çу кирлĕ таран парса тăраççĕ. Танин сĕт-çу хуçалăхĕ пĕтĕмĕшпех Анкли кăпиталĕпе ĕçлет; кунта шултра кăпиталиссем копператтивсене пĕтĕмĕшпех хăйсен аллине çавăрса илнĕ.

Йалхуçалăхĕнђе машшинпа електритсă вăйĕпе ĕçлесси пысăк вырăн йышăнса тăрат.

Тани выђăх-ђĕрлĕхсем вађђи апат-çимĕç йут патшалăхсенђен кӳрет.

Йалхуçалăхĕнђе шултра, ăратлă выђăх-ђĕрлĕх ĕрђетес ĕç, нимрен ытла ĕнепе сысна выђăх ĕрђетесси, паллă вырăнта. Кашни 100 çын пуçне Танире 108 пуç выђăх тивет (сысна).

Кайăк ĕрђетес ĕç те паллă вырăнта. Тани промышлĕннăçĕ çимĕç таварĕсенђеч тĕрлĕ фаприккатсем тăват.

**Çулйĕр çителĕклĕ.**

Тани тĕп хулипе порђĕ—Коппенкакен. Йута Танирен çу, сĕт, çăмарта, аш, выђăх кайат. Йутран—пĕрђĕллĕ тырăсем, çĕркăмрăкĕ, пиравăр, меттал таварĕсем кӳреççĕ.

Тани конçтитутсиллĕ-монарххи. Парламĕнт пур.

Йалхуçалăхĕнђе пуйанпа вăтам хресђен хуçалăхĕсем нумайрах.

Ĕçлекенсен йухăмĕ сотсиал-темократсен аллинђе. Комунисла партти шуђĕ пысăках мар. Тĕнђери еккономĕк криçĕсĕ комуниссен парттин ĕређĕсене нумайлатса тĕреклетсех пырат.

## Испани.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Испанипе кӳршĕллĕ патшалăхсене, Испани таврашĕнђи тинĕссен йађĕсене пĕлĕр, Испанин кеокрафиллĕ вырăнне сăнăр.
2. Испани çĕршывĕ тăрăх мĕнле шывсем йухаççĕ; Испани çĕрпитĕнђе мĕнле тусем, лапамлăхсем пуррине сăнăр.
3. Картта тăрăх çĕрайĕнђи пурлăхсен—тимĕр, пăхăр, т. ы. хăш вырăнтине тупăр.

Испани Пиреней çурутравĕ çинђе 500 пин тăваткăл километр çĕр лаптăк йышăнса тăрат.

Испани патшалăхĕ ытти патшалăхсенђен Пиреней тăвĕсемпе уйăрăлса тăрат. (Йевроппăран). Кăнтăралла вăл Афрĕккăн çур çĕр вĕçĕ патнех пырат, унтан вăл Кипралтар проливĕпе (12 килом. сарлакăшĕ) уйăрăлса тăрат. Çутçанталăк уйрăмлăхĕпе Испанине 4 пайа уйăрма пулат:

1) Çурçĕрпе хĕвеланăç пайĕ (шыв хĕрри, ăшă климăт, нӳрлĕх çителĕклĕ).

2) Атлантти оккеан хĕрри, вăтам тӳремсăртлă пай (Меçеттă, ăна йĕри тавра тусем, климăт çулла шăрăх, хĕлле сивĕ, нӳрлĕх çителĕклĕ мар).

3) Вăта çĕр тинĕс хĕрри, (ăшă климăт, ĕмĕр йешĕл куракссем).

4) Кăнтăр пайĕ, Испанин ђи ăшă пайĕ.

Испанин кеокрафиллĕ вырăнĕ питĕ аван. 16-мĕш ĕмĕрте Испани Йевроппăри ђи вăйлă патшалăх пулнă, унăн Амерĕкре те колонисем пулнă.

Ытти еккономĕк йенђен хăвăрт ӳсекен патшалăхсем, нимĕнрен ытла Анкли тинĕс çинђе, йут суту-илӳре вăйлашни Испани вăйне тинĕсри суту-илӳрен ђакарат. Колонипе рынăксемпĕн вăрçнă çĕрте Испани хăйĕн колонисене пĕрерĕн-пĕрерĕнех çухатса пынă. Унăн колонисене Анкли ÇАПШ-сем туртса илнĕ.

Колонисене çухатнă май, Анклипе Франтси кăпиталне тӳсеймесĕр Испани хăйĕн ђапне çухатнă çемĕн çухатса пынă еккономĕкĕ те ђакса пынă.

Халђхи вăхăтра Испанин колонийĕсем çаксем—хĕвеланăçри Саххарă (Рите-Оро)., Ифни, Испани Квинейĕпе ун çумĕнђи утравсем (Фернанто т. ыт.), Испани Мароккĕ.

Мĕн пур колонисен лаптăкĕ—320 пин тăваткăл километр, 1 мĕлйун та 100 пин çын пурăнаť.

## Халăх хуçалăхĕ.

Испани йалхуçалăхлă патшалăх, йалхуçалăхĕнђе мĕн пур халăх йышĕн 56 прођ. ĕçлет. Анђах йалхуçалăх технĕккă йенђен наđар, кайра тăраť, вăл Испани халăхне тăрантса усраймасť; пĕрђĕллĕ тырăсене йутран кӳреççĕ.

Сат-пахђа лартса ӳстерессипе выљăх ĕрђетес ĕç малта тăраť. Сатсем, винократ, сахăр кăшманĕ Анталуçи çĕрĕнђе, тата Вăта çĕр тинĕс хĕрринђе—сахăр хăмăшĕ, аппелçсин, лимон, оливккă ĕрђетеççĕ.

Выљăх—Меçет районĕнђе ĕрђетеççĕ. Кунта меринос сурăхĕсем ĕрђетеççĕ. Хĕвеланăç районĕнђе шултра, мăйракаллă выљăх ытларах. Выљăха хĕлĕн-çăвĕн ура айĕнђи апатпа усраççĕ.

Пĕрђĕллĕ тырăсенђен тулă тата маис акаççĕ. Йалхуçалăхĕ технĕккă кайра тăнă пирки наđар.

Çĕрулпуђĕсен (çинйорсен) тата мăнастырсен аллинђе; вак хресђенсен аллинђе сахал. Çавăнпа вак хресђенсем прĕксĕрех пĕтĕм тупăшăн $^3/_4$ пайне çинйорсене парсах вĕсенђен çĕр тара илсе акаççĕ.

Çĕрĕн 40 прођ. çĕрхуçисен аллинђе. (вĕсен йышĕ пĕтĕм çĕрĕçлекенсенсенђен 0,5 прођ. кăна). Çав вăхăтрах вак хресђенсен аллинђе мĕн пур çĕрĕн 4,7 прођ. кăна.

Çавăнпа 1 кектар çĕрлĕ хуçалăхсем сайра мар. Испанире 3 мĕлйун çĕрсĕр патрак шутланаť. Çĕр улпуђĕсем патĕнђе ĕç çук вăхăтсенђе вĕсен паđ выçă ларма тивет.

Çаккăн пек йăвăр условисенђе пурăнакан хресђенсемпе патраксем çĕрулпуђĕсемпе мăнастырсене хирĕç кĕрешеççĕ. 1930 çулта 400 пин çын пастовккăна хутшăннă.

## Промышлĕннăç.

Испанире промышлĕннăç аталанайман.

Йалхуçалăхĕпе пурăнакан ĕçхалăхĕ хуçалăхăн ытти пайĕсенђе хăйне валђи пурăнмаллăх тупăш тупаймасť.

Çĕрайĕнђи пурлăхсенђен тĕрлĕ тĕсли пур:

тимĕр тăпри (Йевроппăри тимĕр тăприн хисепĕн 7 прођ. Испанинђе шутланаť), тăхлан (Йевроппăра тупнин çуррине тупаççĕ), ђĕркĕмĕл (ртуť, тĕнђере иккĕмĕш вырăн йыпăнаť), тимĕр тăпри Испанин çурçĕрпе хĕвеланăç йенђе Пилђао районĕнђе нумай. Анђах Испанире çĕркăмрăкĕ сахал, çавăнпа Испанире тимĕре шăратса çитерейmеççĕ те Анклипе сутаççĕ, пăхăрпа (Йевроппăра тупнин $^1/_4$ пай) тимĕр тăпри çурçĕрти районсемсĕр пуçне Анталуçи рутникĕсенђе нумай тупăнаť.

Испанири паллăрах рутниксем Анклипе Франтси аллинђе; патшалăхри çĕр пурлăхĕсене кăларса усă курас ĕçĕн $^2/_3$ пайĕ йут кăпитал аллинђе, çавăнпа вĕсем пĕр-пĕриппе кунта хирĕçеççĕ. Ђĕрĕ йапаларан тĕрлĕ хатĕрсем тăвакан

промышлённăç: çĕрмамăк, пурçăн, çăм промышлённăçĕ паллăрах вырăн йышăнаççĕ. Вĕсенҫе пĕтĕм рапоҫҫисенҫен 20 проҫ. ĕçлет. Ытти промышлённăçсенҫен паллăраххи—меттал промышлённăçĕ.

Промышлённăçлă хӳласем—Парççелон, Матрит, Малако, тата ыттисем.

Испанире ҫукун çулсем сахал, пурĕ 16 пин километр çеç. Йухан шывсем пăрахутсем çӳреме йурăхсăр. Йут патшалăхсемпе суту-илӳ вăйлах мар, йута сат-пахҫа çимĕçĕсене тата тĕрлĕ меттал тăприсене сутаççĕ. Йутран промышлённăç таварĕсене, çĕрмамăкĕ, пĕрҫĕллĕ тырăсене кӳреççĕ.

Тĕнҫери екномĕк криçĕсĕ Испани хуçалăхне те вăйлă кисрентерҫĕ: йалхуçалăхне вăл ытла та вăйлă тиврĕ, çавăнпа йалхуçалăх протукҫĕсен хакĕ ҫакса пырат, вĕсене тăвасси те ҫакса пырат. Тĕслĕхрен,—маçлинă пухасси 1929 çулта 650 пин тоннă пулнă пулсан, 1930 ç. 190 пин тоннăна çитиҫҫен ҫакнă. Промышлённăçра, криçĕс тимĕр тăпри кăларас ĕçе хавшатрĕ. 1930 çулта тимĕр тăпри тупасси 7 мĕлйун тоннăран 5 мĕлйуна çитиҫҫен ҫакрĕ. Тăхлан, ҫĕр кĕмĕл тупасси те ҫакрĕ. Криçĕс çивĕҫленнĕ пирки революци йухăмĕ Испанин феоталлă пуршуаçин влаçне хавшатрĕ.

Ĕçхалăхĕн пурнăçĕ йăвăрланнă май революциллĕ йухăм вăйланса кайрĕ.

Испанирҫе пурнăç йĕрки финанспа промышлённăçла пуршуаçи çитĕнсе çитеймен пирки пĕтĕмпе феоталла пуршуаçин, çĕрулпуҫĕсен аллинҫеҫҫĕ. Феоталлă пуршуаçисĕр пуçне пупсем пысăк реаксиллĕ вăй пулса тăраççĕ: Испанири каттолĕк ҫиркĕвĕсем—пысăк çĕрхуçисем, шултра хапрăк-савăт хуçисем.

1931 çулта криçĕс вăйланса пынă çемĕн революциллĕ йухăм та вăйланса пырса монарххине ишрĕ.

Вĕсен аллинҫе питĕ нумай çĕр, хапрăк-савăтсем, ҫукун çулсем, çĕркăмрăк вырăнĕсем. Испанире пурĕ 38000 ҫиркӳ, шкул 35000 кăна.

Хута пĕлменнисем—45 проҫ.

Анҫах патшана сирпĕтнĕ хыççăн пулнă, пуршуалла респуплĕк рапоҫҫисемпе хресҫенсен пурăнăçне çăмăллатаймарĕ.

Монарххи вырăнне фашисла тиктаттурă пулса тăҫĕ. Промышлённăçри рапоҫҫисен хисепĕ пĕтĕм халăх йышĕн 5,5 проҫ. кăна пулса тăрат.

Рапоҫҫисен пурăнăçĕ калама çук йăвăр.

Испанире, ытти патшалăхсемпе танаштарсан, ĕç укçи питĕ йӳнĕ, пурăнăç хаклă. Ĕç кунĕ 10—11 сехет. Рапоҫҫисене нимĕнле пулăшу та памаççĕ. Ĕçсĕр рапоҫҫисем 550 пин çын шутланаççĕ.

Çавăнпа та ĕнтĕ стаҫкăсен шуҫĕ çулран çул ӳссе пырат.

1930 çул пуçламăшĕнҫе 50 пин çын пастовккă тунă пулсан 1930 çул вĕçнелле 600 пин çынна çитнĕ.

Халҫи вăхăтра революци йухăмĕ сарăлса, ӳссе пырат.

Халĕ нумай районра революциллĕ рапоҫҫисемпе хресҫенсем совет влаçĕ тума тытăннă. Ăна комунистсен партти йертсе пырат.

# IV. Кăпиталисăмсăр аталанакан çĕршывсем.

## Монколипе Тува респуплĕкĕсем.

**Карттăпа ĕçлесси:**

1. Политтĕк картти çинђе Монколипе Тува халăх респуплĕксене пăхса тухăр. Унта кўршĕллĕ патшалăхсен йађĕсене ўкерĕр.
2. Фиçĕк картти çинђе Монколипе Тува респуплĕкĕсен çĕр çийне, шыв çўлĕсене, кўлĕсене, сăртсене вĕренсе йађĕсене ўкерĕр.

Монколипе Тува халăх респуплĕкĕсем хĕвелтухăçри патшалăхсенђе ђи кайра тăракансем. Вĕсен хуçалăхне кăпиталисăм тĕртĕнмен-ха.

Монколипе Тува респуплĕкĕ кăпиталисăмла аталанмаççĕ, вĕсем Совет союсĕ пулăшнипе, Киттайпа Йаппони империалисăмĕпе икĕ çул пуç хурса кĕрешнĕ хыççăн, ирĕккĕн, кăпиталисăм пусмăрĕнђен хăтăлса çитĕнме пуçларĕç.

Октăпĕрти револђутсиђђен халђи Монколи (тулти Монколи) çĕрĕ Киттайăн автономиллĕ уйрăмĕ шутланса тăнă, анђах тĕрĕссипе вăл Раççей сутуилў кăпиталĕн аллинђе пулнă. Тува та патша Раççейĕн (Урепхей крайĕ) колони пулнă.

Раççейсĕр пуçне çак патшалăхсенђе ĕлĕкреппех Киттайăн кăпиталĕ хуçа пулса тăнă.

Вăрçăђђен Анкли кăпиталĕ те сăрхăнса кĕме пуçланă пулнă.

Монколипе Тува ĕçхалăхне пусмăрлакапĕсем йурийех çак патшалăхсен хуçалăх, политтĕк аталанăвне ђарса тăнă.

Çавăн пирки те Монколипе Тувари ђукун çул та, промышлĕннăç та, аталаннă çĕр ĕçĕ те çук.

Халăх кулђтурлăхĕ те пит кайра тăрат.

1921 çулта Монколипе Тува хăйсен револђутсилле халăх парттийĕсем йертсе пынипе уйрăм патшалăхсем туса пурăнăçне хăйсем тĕллĕнех ирĕккĕн йĕркелеме пуçларĕç.

Монколи (тулти) 1924 çултанпа респуплĕк пулса тăрат. Çав вăхăтђен вăл темократтиллĕ монархи пулнă. Ђăнпипех патшалăха йертсе пырас ĕçе 1921 çултах револђутсиллĕ халăх партти туса пырат.

ССРС-пе хĕвелтухăçри пролеттарисем пулăшнипе Монколипе Тува халăх респуплĕкĕсем ĕçхалăх пурăнăçне йусамалли хăпартмалли пĕртен-пĕр меле—кăпиталисăмсăр пурăнăçа тытăнђĕç.

Монколипе Тува респуплĕкĕн политтĕкпа хуçалăх аталанăвĕн никĕсĕ—феоталисăмпа пурщуаллă темократтине тĕппипех пĕтерсе, кăпиталисла елементсене хĕстерсе, выђăх-ђĕрлĕхне çĕр ĕçне коллективлатасси.

### Монколи респуплĕкĕ.

Монколи халăх респуплĕкĕ тĕп Аçи тўремсăртлăхĕн çурçĕр пайне йышăнат. Унăн çĕр лаптăкĕ 1472 пин тăваткăл километр. Вăл Анкли, Франтси, Кермани патшалăхĕсене пĕрле илсен, вĕсен çĕр лаптăкĕн хисепĕпе тан. Унта мĕн пурĕ те 682 пин сын.

1 тӑваткӑл километра вӑтам шутпа 0,7 ҫын кӑна тивет. Тӗпрен пурӑнакан Монколпи халӑхӗсӗр пуҫне кунта 160 пин киттай ҫынни, 30 пин пурет ҫынни, 7—8 пин вырӑс тата ытти сем пурӑнаҫҫӗ.

Монколи вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳрекен выљӑх-ђӗрлӗхлӗ, кайа йулнӑ ҫӗрӗҫӗпе пурӑнакан патшалӑх.

Ҫут-ҫанталӑк условисем Монколире ҫӗрӗҫпе йурӑхсӑр, мӗншӗн тесен ҫӗр ҫӳлӗ тӳремсӑртлӑ (тинӗсрен 1200 метр ҫӳлӗ). Патшалӑхӑн ҫурҫӗр йенӗ ҫӳлӗ тусемпе вӗҫленет, варринђе шывсӑр ҫеҫен хирсем, кӑнтӑрта тӗп Аҫин аслӑ пушӑ хирӗ—Копи. Климӑт континентталлӑ, нӳрӗк сахал, ӳсен-тӑран тӗнђе ђухӑн. Шыв лапамлӑхӗсенђе кӑна ҫӗр ӗҫлеме йурӑхлӑ.

Выљӑх-ђӗрлӗхе ӳсрас ӗҫ ӗлӗк авалхи пек пулса пырат: вӗсен выљӑх-ђӗрлӗхӗ хӗлӗн-ҫӑвӗн хирте пурӑнат, пӗр ҫӗртен тепӗр ҫӗре ура айӗнђи апат пӗтнӗ май куҫса ҫӳрет. Ҫавӑнпа, тӗрлӗ ђирсем пирки, сивӗпе, выҫӑпа выљӑх-ђӗрлӗх нумай пӗтет.

Патшалӑхӑн тӗп пуйанлӑхӗ—выљӑх.

Револђутсиллӗ халӑх парттин 7-мӗш сиесӗ тӗлне (1928 ҫ., теккапӗр) аратсен (вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳресе выљӑх-ђӗрлӗх ӗрђетсе пурӑнакансен).

Ђухӑнпа вӑтам пайӗ пӗтӗм халӑх йышӗн 83 проц. пулнӑ пулсан та ун аллинђе пӗтӗм выљӑх хисепӗн 45 проц. кӑна пулнӑ; феоталлӑ-кӑпиталисла сийӗ халӑх йышӗн 17 проц. кӑна пулсан та унӑн аллинђе пӗтӗм выљӑхӑн 55 проц. пулнӑ. Монколинђи патшалӑх йӗрки ӗҫхалӑхӑн интересӗсене сыхлат. Конҫтитутси тӑрӑх халӑхӑн ҫын ӗҫӗпе пуйакансене, сутӑҫсене, ӗлӗкхи кнђаҫсене, ламӑсене (манахсене) суйлав прависӗр хӑварнӑ.

1929 ҫулта правиттӗлствӑ налук ҫиҫтемине пӑхса тухса ђухӑнпа вӑтам аратсене ҫӑмӑллӑх панӑ, пуйансене налукне ӳстернӗ. 1929 ҫулта феоталсен пурлӑхӗсене конфискатсиленӗ хыҫҫӑн вӑтам арат хуҫалӑхӗсен сийӗ тӗп си пулђӗ. Ҫапах та кулак хуҫалӑхӗсен аллинђе халӗ пӗтӗм выљӑх хисепӗн 38 проц. пурха.

Йалхуҫалӑхӗ ҫӗнӗлле ӗҫлеме тытӑннипе 1931 ҫулта респуплӗкӗпе 612 кол-

Выљӑх-ђӗрлӗхе ӳсрас ӗҫ ӗлӗк авалхи пек пулса пырат: вӗсен выљӑх-ђӗрхос, вӗсенђе 42701 хуҫалӑх, вӑл пӗтӗм респуплӗкри хуҫалӑхсен 30 проц. пулса тӑнинђен куратпӑр. Ҫӗр ӗҫӗ халиђђен те аталанайман. Пӗтӗм ӗҫлеме йурӑхлӑ ҫӗрӗн $^{2}/_{3}$ пайӗ киттайсен аллинђе. Ҫӗрӗҫне йурӑхлӑ вырӑнсем Ҫеленкӑпа Орххон шывӗсем тӑрӑх ҫеҫ.

Промышлӗннӑҫ ҫукпа пӗрех, йалхуҫалӑх ђӗр таварӗсенђен тӗрлӗ йапала тӑвакан пӗр-ик савӑт кӑна.

Патшалӑхӑн тӗп хули Уланпаттӑр. Унтан инҫе мар Налайххӑв ҫӗркӑмрӑк вырӑнӗсем пур, анђах ҫӗркӑмрӑк кӑларасси вӑйсӑр-ха.

Правиттӗлствӑ натсионаллӑ промышлӗннӑҫ тӑвас ӗҫ планне туса пурнӑҫа кӗртет.

## Тува респуплӗкӗ.

Тувӑ халӑх респуплӗкӗ Монколинђен пӗђӗк. Унӑн мӗн пурӗ 200 пин тӑваткӑл километр. Халӑх йышӗ 72 пин ҫын. 1 тӑваткӑл километра 0,3 ҫын ҫеҫ тивет. Тӗпрен пурӑнаканӗ—тува халӑхӗ. Кунта татах 12 пин вырӑс ҫынӗ пурӑнат.

Хуҫалӑх тӗлӗшӗнђен Тува респуплӗкӗ Монколи майлах. Кунта та вырӑнтан

вырӑна куҫса ҫӳрекен выҗӑх-җӗрлӗх ӗҫӗпе, кайӑк ӗҫӗпе пурӑнаҫҫӗ. Ҫӗр ӗҫӗпе, пӗтӗм пурӑнакан халӑх йышӗн 25 проҗ. ҫеҫ пурӑнать. Выҗӑх-җӗрлӗх ӗрҗетме те, ҫӗр ӗҫлеме те ҫанталӑк условисем Монколиринҗен авантарах: кунта ҫӗр ӗҫлеме, выҗӑх ӗрҗетме аван вырӑнсем нумай.

Пуйанлӑхсенҗен—вӑрман, ылттӑн, кӗмӗл, платтина, ҫӗркӑмрӑк, пӑхӑр, тимӗр нумай. Анҗах Тува ӗлӗк колониллӗ патшалӑх пулнӑ пирки, пуйанлӑхсемпе усӑ курайман. Империалиссен пусмӑрӗнҗен хӑтӑлсассӑн тин Тувӑ ӗҫхалӑхӗ ССРС пулӑшнипе хӑй патшалӑхри тӑвӑм вӑйӗсене сотсиалисӑмла никӗс хурса аталантарма тытӑнҗӗ.

Халҗхи вӑхӑтра Тува правиттӗлстви револҗутсиллӗ халӑх партти йертсе пынипе ҫӗршывне интустрилеме коллективлатма тытӑнҗӗ, ССРС-пе ҫыхӑнассине тӗреклетме тытӑнҗӗ.

1930 ҫулта Тувара 27 пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх орканисатсиленнӗ, вӗсенҗе 252 кил пулнӑ; вӑл пӗтӗм хуҫалӑхсен 1,8 проҗ. пулнӑ. 321 кайӑкҫӑ ерттелӗ орканисатсиленнӗ.

Копператсинҗе пӗтӗм халӑх йышӗн 25 проҗ. тӑнӑ. (1930 ҫулта) 1931 ҫулта копператсире пӗтӗм халӑх йышӗн 50 проҗ. пулнӑ, 3 вӑйлӑ патшалӑх хуҫалӑхӗсем орканисатсиленӗ.

Аратсем вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳрессине пӑрахса пӗр вырӑнти пурнӑҫа хӑнӑхма пуҫланӑ.

Тува натсионалла промышлӗннӑҫ планне пурнӑҫа кӗртме тытӑннӑ. Җи малтанах җӗрӗ тиртен сӑран тӑвакан савӑтсене тумалла. Тӗп промышлӗннӑҫ претприйаттийӗсем респуплӗкӗн тӗп хули Кӑсӑл тавра пулмалла.

Тувапа Монколи хуҫалӑх ӳсӗмне ССРС-ӗнҗи ҫӗнтерӳллӗ сотсиалисӑм строиттӗлстви вӑйлатса пырать.

ССРС-ӗн, хӗвелтухӑҫра ӳсекен кикан җӗсем Урал-Куҫнетск кӑмпинаҗӗпе Анкар кӑмпинаҗӗ Тувапа Монколири сотсиалисӑмлӑ строиттӗлствӑпа татах та вӑйлӑлатӗҫ.

**Тӗпҗев ыйтӑвӗсем:**

1. Тувапа Монколи хуҫалӑхӗсен аталанӑвӗ кӑпиталисӑмсӑрри мӗнрен килет.
2. Хӗвел тухӑҫри патшалӑхсемшӗн Тува Монколи патшалӑхӗсен кӑпиталисӑмсӑр аталанӑвӗ мӗншӗн паха.

## Криҫӗс кӑпиталисӑм вилӗмӗ.

«Кӑпиталӑн җи шултӑра патшалӑхӗсем тӗнҗене тепӗр хут валеҫесшӗн пӗрпӗрнипе империалисла кӗрешни тӗнҗе вӑрҫи (1914—1918 ҫ. ҫ.) патне илсе пыҗӗ. Вӑл вӑрҫӑ пӗтӗм кӑпиталисӑм ҫиҫтемине лӑскаса тӑкрӗ, вара унӑн п ӗ т ӗ м ӗ ш п е криҫӗс тапхӑрӗ пуҫланса кайрӗ. Вӑл вӑрҫӑ вӑрҫакан ҫӗршывсен халӑх хуҫалӑхне пӗтӗмӗшпех хайне валҗи ӗҫлеттерҗӗ,—ҫапла патшалӑх кӑпиталисӑмӑн тимӗрленӗ җышки пулса тӑҗӗ; вӑрҫӑ вырӑнсӑр тӑкаксене тем пек ӳстерсе йаҗӗ, тӑваслӑх хатӗрне, җӗрӗ ӗҫ вӑйне тем җухлӗ вырӑнсӑр ахаҗ пӗтерҗӗ, тем җул халӑха ҫукка хӑварҗӗ, интустрире ӗҫлекенсем, хресҗенсем, колонири халӑхсем ҫине вӗҫӗхӗррисӗр йӑвӑрлӑхсем тийерӗ. Вӑл клас ҫапӑҫӑвне хайарлатса ҫитерҗӗ, вара массӑсем револҗутси ҫулӗ ҫине тухрӗҫ, краштӑн вӑрҫи пуҫланса кайрӗ. Империалисӑм фронҗӗ хӑйӗн җи наҗар сыпӑкӗнҗен—патша Раҫҫейӗнҗен—татӑлса кайрӗ. 1917-мӗш ҫулти февраҗ револҗутсийӗ шултра помещҗӗкле самотершави хуҫа пулса тӑрассине пӗтерҗӗ. Октӑпӗр револҗутсийӗ пуршуаҫи хуҫа пулса тӑрассине йӑтӑнтарса антарҗӗ». (К. И. П.)




Хĕвеланăç Йевроппăн вăрçăççенхи картти.

Империалисӑм вӑрҫи питӗ пысӑк сийен кӳрҭӗ. Темӗн ҭухлӗ тӑвӑм вӑйӗ пӗтерҭӗ, 10 мӗлйун ытла ҫын вилҭӗ, нумайӗшӗ ӗмӗрлӗхе суранланҭӗҫ, район-районӗпе промышлӗннӑҫпа йалхуҫалӑхне пӗтерсе темиҫе мӗлйун ҫынна выҫӑ хӑварҭӗ.




40. Хӗвеланӑҫ Йевроппӑн вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи картти.

Империалисăм вăрçи тĕнђене валеçрĕ. Кермани мĕн пур хăйĕн колонисене çухатрĕ. Ун колонисем Франтси, Анкли, Йаппони аллине лекрĕç.

Кунсăр пуçсăр Анкли Туртсине нехтăпа пуйан Мессопоттами çĕрне, Палеçттинăна илђĕ. Франтси Çирине çавăрса илђĕ. Çак туртси çĕрсенђе (Марокко, Çири, Пелеçттина) патĕнђи халăх çĕрсене туртса илнине хирĕç тăрса востани тусан Анклипе Франтси вĕсене вăрçăпа пырса çĕмĕрђĕç. Темиçе пин çынна йун ăшне путарђĕç.

Керманин хăйĕн ђылай çĕр Пољшăпа Франтси аллине куçрĕ. Франтси—аллине тимĕр рутисемпе пуйан Ељсас-Лоттаринки çĕрĕ куçрĕ.

Пысăк Австро-Венкри патшалăхĕ ваклanса екконоĕмĕккă йенђен «ирĕклĕ» патшалăхсем—Ђеххословакки, Австри, Венкри, пулса тăђĕç. Малтан Австро-Венкри пулнă патшалăхăн ђылай çĕрĕ—Иттали, Румыни, Çерпи аллине куçрĕ. Çерпи патшалăхĕнђен çав туртса илнĕ татăксене хушса Йуко-Слави патшалăхĕ пулса тăђĕ.

Патша Раççей пулнă çĕртен Финљанти, Есттони, Латви, Литва, патшалăхĕсем уйăрăлђĕç. Çакă пур патшалăхсенђе те Франтсипе Анкли пулăшнипе вĕсем хĕсĕрленипе пуршуаçи аллине куçрĕ.

Раççей, Кермани, Австро-Венкри патшалăхĕсене кĕнĕ çĕрсенђен пысăк патшалăх Пољшă пулса тăђĕ.

Çакă çĕнĕрен пулса тăнă патшалăхсем тулти политтĕкне Франтсипе Анкли хушнипе туса тăраççĕ, вĕсен итлекен йыттисем пулаççĕ. Вĕсем ССРС-пе ђикĕленсе, ăна вăрçăпа килсе тапăнас ĕçре кĕпер пулса тăраççĕ.

Империалиссăм вăрçипе тĕнђе кăпиталисла хуçалăхĕн ђенттăрĕ Йевроппăран ÇАПШ-а куçрĕ. ÇАПШ империалисăм вăрçинђе вăрçакан патшалăхсене тĕрлĕрен вăрçă хатĕрĕсем, апат-çимĕçсем т. ыт. парса тăрса пуйса кайрĕ. Мĕн пур Йевроппăри патшалăхсем пур те ăна кивçенленнĕ.

Амерĕк кăпиталисăмĕ питĕ вăйланса кайнăскерне вăрçă хыççăн хăйĕн рынăкĕ тăвăр пула пуçларĕ, вăл пур çĕре кĕрсе кайса Анклипе хĕсме пуçларĕ.

ÇАПШ-ăн тĕнђе хуçалăхĕнђи вырăнĕ мĕн ђухлĕ ӳсни çак таплитсăран курăнаť:

| | | Тĕнђе тăвăмĕнђен 1913 | %% 1923 |
|---|---|---|---|
| ÇАПШ | Ђукун | 39,7 | 61,2 |
| Анкли, Франтси / Пелки, Кермани | Ђукун | 47;7 | 28,6 |
| ÇАПШ | Хурçă | 41,7 | 61,2 |
| Анкли, Франтси / Пелки, Кермани | Хурçă | 44,4 | 28,1 |
| ÇАПШ | Суту-илӳ флођĕ | 43 | 21,4 |
| Анкли, Франтси / Пелки, Кермани | Суту-илӳ флођĕ | 44,3 | 32,9 |

Йаппони те вăрçăран усă курђĕ. Вăл хăйĕн аллине Аслă оккеан ç[illegible]ђи Кермани колонийĕсене çавăрса илђĕ, ытти патшалăхсем вăрçа пикеннĕ в хăтра хăйĕн вăйне Киттайра ӳстерђĕ.

Тӗнҫе вӑрҫи хыҫҫӑн вӑйсем улшӑнҫӗҫ: Йевропӑ вырӑнне хуҫалӑх ҫепттӑрӗ Амерӗк пулса тӑҫӗ, Анкли—промышлӗннӑҫ маҫтерскойӗ пулма пӑрахрӗ. Тӗнҫе вӑрҫи хирӗҫӳсене пӗтермерӗ, ҫӗнӗрен хытӑрах вӑйлатрӗ. Анклипе Амерӗк хушшинҫи хирӗҫӳ—тӗнҫери тӗп хирӗҫӳ пулса тӑрат.

1914—1918 ҫҫ. вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи крисӗсе вӑйлапма вӑрҫӑ вӑхӑтӗнҫе колонипе ҫурколопиллӗ ҫӗршывсенҫе промышлӗннӑҫ ӳсни пулӑшрӗ.

Колониллӗ, ҫурколониллӗ ҫӗрсенҫе промышлӗннӑҫ ӳснӗ май метрӧпполи промышлӗннӑҫӗн рынӑк тӑвӑрланат, тата пролеттариат ӳснӗ пирки колонисенҫе револютсиллӗ вӑй ӳсет, ҫирӗплепет, кӑпиталисӑма хӑратат.

Империалисла вӑрҫӑ тӗнҫери револютси йухӑмне сарса йаҫӗ, халиҫен «лӑпкӑ» патшалӑхсенҫе те вӑйне кӑтартрӗ. Раҫҫейре вӑл ҫӗнтерҫӗ. Ытти ҫӗрсенҫе те револютси пулса иртрӗ. (Кермани, Венкри т. ыт.) анҫах ӑна пуршуаҫи йуп ӑшне путарҫӗ. Револютси вӑхӑтлӑха ҫарӑнса ҫӗнӗрен тата вӑйлӑрах сиксе тухма вӑй пулат, хӑйӗн йӑнӑшӗсене шута илсе влаҫшӑн йепле кӗрешмеллине Совет союсӗнҫи пролеттариатран вӗренет.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑнах рапоҫҫи класа хӗстернипе ӑна пусмӑрланипе кӑпиталисӑм хуҫалӑхне кӑшт («ҫирӗплетрӗ». Анҫах вӑл ҫирӗпленни вӑхӑтлӑха, щанҫӑксӑр йапала пулҫӗ, кӑпиталисӑм ӑшӗнҫен ҫӗрме тытӑнҫӗ. Кӑпиталисӑм хуҫалӑхӗнҫи пӗтми хирӗҫӳсем (тӑвӑм вӑйӗ пултарулӑхӗпе ӗҫхалӑхӗн ӳксе пыракан илӳ пултарулӑхӗ хушшинҫи хирӗҫӳсем) каллех пысӑкланса, ҫивӗҫленсе сиксе тухрӗҫ.

# V. Тĕнҫе кăпиталисăмĕн халҫхи хирĕҫĕвĕсем. Тĕнҫе екkономĕк криҫĕсĕ. Икĕ ҫиҫтемă кĕрешĕвĕ.

## Вăрҫă хыҫҫăнхи кăпиталисăм хирĕҫĕвĕсем:

### I. Тĕнҫе хуҫалăхĕ икĕ пайа уйăрăлҫĕ.

Раҫҫейре Октапĕрте рапоҫҫи класпа ĕҫхресҫенĕ кăпиталсăма ҫĕнтерсе пролеттари тиктаттурĕ тунă хыҫҫăн тĕнҫе хуҫалăхĕ икке уйăрăлҫĕ: пĕр йенҫе—хирĕҫў пысăкланнипе шалтан ҫĕрекен, ипĕлекен кăпиталисăм, тепĕр йенҫе—сотсиалисăм хуҫалăхне план тăрăх йĕркелесе пыракан пĕртен пĕр пролеттари патшалăхĕ ССРС. Ĕлĕк пĕр пулнă тĕнҫе хуҫалăхĕ айĕнҫе пĕр-пĕрипе килĕшеймен пĕр-пĕрипе хирĕҫўллĕ икĕ ҫиҫтемă: кăпиталисăм ҫиҫтемипе сотсиалисăм ҫиҫтеми пулса тăҫĕҫ. Кăпиталисăм ҫиҫтеми експлоаттатсипе пурăнакан пуршуаҫи класĕ аллинҫе, сотсиалисăм—пролеттариатăн ĕмĕҫĕ, кунҫулĕ, унăн пурнăҫĕ. Сотсиалисăм пуҫлани, вăл ҫитĕнсе ҫĕнтерсе пыни кăпиталисăм ĕмĕрĕ кĕскелнине, унăн вилĕм ҫывхарнипе кăтартаҭ. Ҫавăнпа кăпиталисăм сотсиалисăмла ҫиҫтемăна кураймасҭ, ăна ҫасрах пĕтересшĕн.

Тĕнҫери пролеттариатăн халĕ хăйĕн патшалăхĕ пурри, тĕнҫери пролеттариатăн пĕртен пĕр тăван ҫĕршывĕ пурри ăна халĕ клас кĕрешĕвĕнҫе пĕтĕм тĕнҫене пĕрлештерет. Тĕнҫери ĕҫҫынисемпе пусмăрта пурăнакансене ҫул кăтартса тăракан Совет сойусĕ пурри хăйне пĕҫҫен илсен те тĕнҫе кăпиталисăм ҫиҫтеми криҫĕсĕ тарăн иккенне, клас ҫапăҫăвĕ ҫивĕҫленсе сарăлса пынине кăтартаҭ. Кăпиталисăм Совет респуплĕкне пĕтерес тесе хăйĕн вăйне пухаҭ. Анҫах Совет сойусне тавра пĕтĕм тĕнҫери ĕҫлекенсем ҫăмăртанаҫҫĕ. Кăпиталисăм вăйне хирĕҫ пролеттариат тиктаттури, унпа пĕрле, уншăн ҫапăҫма хатĕр тĕнҫери пусмăрта пурăнакан халăх тăраҭ.

«Ҫапла ĕнтĕ империалисăм вăрҫисен малтанхи сăҭрăмĕ хыҫҫăн пĕтĕм тĕнҫипе историллĕ принтсĕплĕ хирĕҫў—ССРС-пе кăпиталисăм хушшинҫи хирĕҫў—пулса тăҫĕ».

### 2. Тĕнҫе хуҫалăхĕн кăпиталисăм картишĕнҫи хирĕҫўсем.

Ҫурҫĕр Амерĕкри Пĕрлĕшўллĕ Штатсем тĕнҫе екkономĕкĕнҫе пысăк вырăн йышăнма пуҫлани, вĕсем тĕнҫе експлоаттаттăрĕ пулса тăни—ҪАПШ-па Йевроппăри кăпиталисăм, нимрен ытла Анкли кăпиталисăмĕ хушшинҫи тăрусене хирĕҫтерсе, питĕ хайарлатса йаҫĕ.

ҪАПШ-па Анкли хушшинҫи хирĕҫў тĕнҫери хирĕҫўсен тĕп тенелĕ пулса тăраҭ.

Версаљ килĕшĕвĕ тăрăх ҫаратнă Кермани, хуҫалăх тĕлĕшĕнҫен халҫ йусанса ҫите пуҫланăскер, империалисла политтĕке активлă пурнăҫа кĕртме тытăннăскер, тĕнҫе рынăкĕнҫе каллех вăйлă конккурент пулса тухаҭ.

Лăпкă оккеан ҫинҫе те Амерĕкпе Йаппони хушшинҫи хирĕҫўсем ҫыхăнса ҫивĕҫленеҫҫĕ.

Çак тĕп хирĕçӳсемсĕр пуçне ытти патшалăхсем хушшинче те хирĕçӳсем пур. (Ун çинчен уйрăм патшалăхсене пăхнă чухне калайăпăр).

ССРС кăпиталисăм хуçалăхĕнчен тухса ӳкнĕ. Йевроппăра вăрçă хыççăн рынăксем тăвăрланнă, чĕрĕ тавар çунтармалли йапаласене монополиллĕ тыткалама пуçланă. Çак вăхăтра, кăпиталисăм тăвăмлăхĕ ӳсни кăпиталисăм патшалăхсен хушшинчи çапăçăва çивĕчлетет. Тимĕр-тăмăршăн, кăмрăкшăн, нехтăшăн, каучукшăн тата кăпитал вырнаçтармалли вырăнсене çĕнĕрен валеçессишĕн «лăпкă» кĕрешни, прĕксĕрех çĕнĕрен пĕтĕм тĕнче вăрçи тăвас шухăш патне илсе çитерет.

Тĕнчери кăпиталисла патшалăхсем хушшинчи тĕп хирĕçӳсем çаксем пулаççĕ:

а) Анклин, Франтсин тата Çурçĕр Амерĕкри Пĕрлешӳллĕ Штатсен империалисăмĕсем Йевроппăри пуç пуласишĕн пĕр-пĕринпе çапăçни;

у) Афрĕккăра, Малти Аçире, Палккан çурутравĕ çинче Франтси, Анкли, Иттали патшалăхĕсем пуç пуласшăн кĕрешни; Вăтаçĕр тинĕс проплеми.

ы) Инçетри хĕвелтухăçĕнче, кăнтăр йенчи Аçире Франтси, Йаппони тата ÇАПШ пуç пуласшăн кĕрешни, Лăпкă оккеан проплеми;

ă) ÇАПШ-пе Анкли империалисăмĕсем Канатăпа Латтин Амерĕкĕнче пуç пуласшăн пĕр-пĕринпе çапăçни.

Ку хирĕçӳсем мĕнрен тухнине, мĕнле пынине уйрăм патшалăхсем çинчен калаçнă чухне епĕр тĕплĕ пăхса тухрăмăр. Халĕ кунта Лăпкă оккеанрипе Йевроппăри хирĕçӳсене пăхса тухăпăр.

## Лăпкă оккеанри хирĕçӳсен тĕвви.

Империалисла патшалăхсем хушшинчи кĕрешӳвĕн паллă вырăнĕ—Лăпкă оккеан. Лăпкă оккеан проплемин тĕп вырăнĕ вăл Лăпкă оккеанăн кăнтăрпа хĕвеланăç кĕтесси (Киттай, Ост-Инти, Филиппин, Австрали, Çĕнĕ Çеланти т. ыт. утравсемпе çĕршывсем).

Çак район тĕрлĕ чĕрĕ таварсем тупăнакан чи пуйан, халăх йышĕн чи çăра вырăнĕ (Киттайра 400 мĕлйун çынна йахăн, Интире 320 мĕлйун çын). Çавăн пирки çак район Амерĕк, Йаппони, Анкли, Франтси империалисĕсемшĕн чи паха, калама çук аслă суту-илӳ рынăкĕ, чĕрĕ тавар, йӳнĕ ĕç-вăй вырăнĕ пулса тăрать. Кăпиталисла патшалăхсене çак вырăн хăй патнелле туртать. Кашни империалисла патшалăхах пĕрпĕринчен ăмăртса ытларах туртса илесшĕн.

## Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Анкли.

Лăпкă оккеаншăн кĕрешекенсенчен чи вăйлисем—ÇАПШ-пе Анкли. Вĕсем нехтă вырăнĕсене, Киттайа, колониллĕ рынăксене пĕрпĕринчен туртса илесшĕн кĕрешеççĕ. Анклипе пăхăнакан çĕршывсенче (Австрали, Çĕнĕ Çеланти) вĕсем таварпа кăпитал кăларнипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Пĕр-пĕринпе вăрçма пĕрмайах тĕнчере шанчăклă сойуçнĕксене шыраççĕ, тĕнчери чи паллă çулйĕрсене хăйсен аллине илесшĕн çапăçаççĕ. Çапла вĕсем хушшинчи кĕрешӳ пур йенчен те вăйланса хĕрӳленсе пырать.

Хĕвелтухăçри пур аслă патшалăхсемпе ÇАПШ-сене суту-илӳ, финанс çыхăнăвĕсене çирĕплетсе аслатса пыни Анклине халиччен пуйан тупăш паракан вырăнсенчен хĕстерсе кăларать.

ÇАПШ-сем Анклине Ост-Инти, Инти, Малти Аçи рынăкĕсенчен хĕстерсе кăларса пыраççĕ.

ÇАПШ Праçили, Липери, Филиппин çĕрĕсенђе кауђук плантатсисем туса Анкли халиђђен кауђук тăвас ĕçре монополилле пулнине пĕтерсе пырат̆.

Çак пĕђĕк тĕслĕхсенђен епĕр ÇАПШ-пе Анкли хушшинђи хирĕçӳ тарăннине, вăрçăсăр пĕр патшалăхĕ тепĕрне парăнма пултарайманнине .уççăнах куратпăр.

**Анклипе Йаппони.** Анклипе Йаппони хушшинђи хирĕçӳсем ÇАПШ Анкли хушшинђи пекех тарăн.

Анклипе Йаппони хушшинђи хирĕçӳсен сăлтавĕ—Киттай. Йаппони империалисăмĕ Киттайа експлоаттатсилемесĕр пурăнма пултараймаст̆. Киттай Йаппони аллинђен тухса ӳксен Йаппони хуçалăхĕн ӳсĕмĕ ђарăнса ларасси паллах. Империалисла вăрçă вăхăтĕнђе Йаппони йут патшалăхсемпе суту-илӳ тăвассине виçĕ хут ӳстерђĕ. Нимрен ытла хатĕр йапаласене, пустав таварĕсене йут çĕре сутасси ӳсрĕ.

Çак таварсемпе Йаппони хĕвелтухăçĕнђе Анклипе вăйлăн ăмăртат̆.

Йаппони пиравăр промышлĕннăçĕн таварĕсем Киттай, Колланти Ост-Интин, Приттани Интин, Афрĕккă, Перççи, Туртси рынăкĕсенђен Анклин пиравăр промышлĕннăçĕн таварĕсене хĕстерсе кăлараççĕ.

Киттайăн импăртĕнђе Йаппони таварĕсем 1923 çулта 19 прођ .йышăнса тăнă пулсан, 1927 çулта вĕсем 33,5 прођ. çитнĕ.

Анклин пайĕ 20 прођђăпран 15 прођ. çитиђђен ђакнă.

Киттайа кăпитал хывас тĕлĕшпе те Йаппони Анклипе ÇАПШ-ђен ытларах вырăн йышăнса тăрат̆.

Йаппони Киттай çĕрĕсене туртса илсе економĕк тĕлĕшпе çирĕпленсе çитнĕ. Анкли Киттайра хуçа пулса пурăнасси пĕтсе пыма пуçланă. Çакна кура Анкли хăй вырăнне çухатасшăн мар çапăçат̆. Ахаљ мар ĕнтĕ 1921 çулта Вашшинктонри конферентсинђе Анклипе Йаппони хăйсем хушшинђи пĕрлешĕве çĕнетмесĕрех хăварнă.

**Йаппонипе Амерĕк.** Лăпкă оккеанри хирĕçӳсен тĕввинђе Амерĕкпа Йаппони хушшинђи хирĕçӳ паллă вырăн йышăнса тăрат̆.

Ĕлĕк Кермани аллинђе пулнă Лăпкă оккеанри Йаппони колонисене туртса илнĕ хыççăн татах та çивĕђленђĕ.

**Каттăпа ĕçлесси:**

1. Лăпкă Оккеан картти çинђе Амерĕкпе Йаппони колонисем мĕнле вырнаçнине пăхса тухăр.
2. Йаппони Лăпкă оккеанри утравсем—Маршшал, Каролин Маршан Амерĕкĕн Кавай утравĕнђен Филиппин утравне кайакан тӳрĕ çула пӳлсе тăнине сăвăр.

1921 çулта Вашшинктон конферентсинђе ÇАПШ-сем Анкли пулăшнипе Йаппонирен ĕлĕк Кермани аллинђе пулнă колонисенђен хăшне-пĕрне Киттайа тавармалла тунă. Киттайа тамăшнђă ыйтăвĕсенђе екстериттори ыйтăвĕсем тĕлĕшпе Йаппони шуђĕшĕн çăмăллăх пама пулнă.

ÇАПШ-сем çав конферентсинђех Анклипе Йаппони хушшинђи килĕшĕве пăрахăçа кăларнă.

ÇАПШ-пе Анклине пăхăнакан çĕршывсем—Австралипе Çĕнĕ Çеланти Йаппонине хăйсен çĕрне кĕме ђаракан саккунсем кăларђĕç.

Хирĕçӳ çивĕђленнĕ пирки Йаппонин екномĕк тĕлĕшĕнђен прĕксĕрех ÇАПШ-сене пăхăнма тивет.

Йаппони ђĕрĕ пурçăн, ђей кăмфара таварсен çуррине йахăн ÇАПШ-не йарат̆, ун вырăнне ÇАПШ-ђен çĕрмамăкĕ 50 прођ., машшинсем 40 прођ., автомопилсем 82 прођ., вăрман 68 прођ., нехтă протуктисем 70 прођ., електротехнĕккă таварĕсене илет.

Епӗр пӑхса тухнӑ хирӗҫӳсем Лӑпкӑ оккеанра империалиссеп хӗҫпӑшаллӑ ҫапӑҫӗвӗ пулассине тӑтӑклӑ кӑтартса параҫҫӗ.

Вӑрҫа хатӗрленес тӗлӗшпе ҪАПШ Лӑпкӑ оккеанра оппорлӑ пунктсем туса тултарҭӗ.

1) Кавай утравӗсем—Амерӗкпе Аҫи хушшинҭи ҫур ҫулта;

2) Филиппин утравӗсем—Киҭтайпа Инти оккеанне тапӑнма ҭи аван вырӑн;

3) Тутуиллӑ (Самоа утравӗсенҭен пӗри) утравӗ—ҪАПШ Австралине хӑйӗн аллине ҫавӑрса илме пулӑшакан вырӑн.

ҪАПШ халӗ ҫар флоҭӗ вӑйӗпе Анклинҭен кайа мар; Панамӑ каналӗ вӑрҫӑ мӗн пулас пулсан ҫав ҫар флотне Атлантти оккеанӗнҭен Лӑпкӑ оккеана куҫарма ҭи ҫывӑх ҫул пулса тӑраҭ.

Анкли ҪАПШ-пе йе Йаппонипе вӑрҫас мӗп пуласран сыхланса кӑнтӑрти Афрӗккӑран пуҫласа ун пӗтӗм хӗвелтухӑҫри хӗрринеле (**Атенпа Суеса** ҫитиҭҭен Аравн, Перҫҫи урлӑ **Ҫинкапурти** ҫар никӗсӗн **Конк-конк** таранах) оппорлӑ пунктсем туса ҫирӗплетсе тухаҭ. Австралинҭе Тарвин сӑмсинҭе ҫар порҭӗ туса лартнӑ.

Йаппони те вӑрҫӑ тӗлӗшпе хӑйне хӑй сыхланса тата тӗрлӗ вӗтӗ пӗҭӗк, хӑйӗн тавра сапаланса тӑракан утравсене ҫирӗплетет.

Йаппони Киттай ҫывӑхӗнҭи утравсене вырнаҫнӑ, Киттайра унӑн паллӑ колонисем, оппорлӑ пунктсем пур (Корейӑ ҫурутравӗ, Тайрен, Формосӑ, Пескатор). Ҫаксем Лӑпкӑ оккеанра Йаппонин пысӑк вӑй пулса тӑраҫҫӗ. Унӑн ҫар флоҭӗ пысӑк, ҫар пасисем ҫывӑхра. Ку Йаппонине татах вӑйлатаҭ..

Ҫапла ӗнтӗ кашни империалисла патшалӑх хӑйӗн Лӑпкӑ оккеанри вӑрҫӑ вырӑнӗсене ҫирӗплетсе, пулас ҫапӑҫусене хатӗрленсе тӑраҭ. Ҫавӑнпа пӗрлех Киттайрь Инто-Киттайри, Малай утравӗсенҭи, Интири пролеттариатӑн револютсиллӗ йухӑмне манса хӑварма йурамасҭ. Империалисла патшалӑхсенҭе хӑйсенҭе те револютсиллӗ йухӑм хытӑ ӳсет. Револютси йухӑмӗ комуниссен партти йертсе пынипе империалиссен планне ҫапса салатса пыма пултараҭ.

Империалиссем хӗрсе вӑрҫа хатӗрленни вӗсем ССРС-не тапӑнас ӗҫе вӑйлатса пыни пире Лӑпкӑ оккеан хӗрринҭе пулса иртекен ӗҫсене асӑрхаса пӑхма, сыхӑ тӑма, Хӗрлӗ ҫара ҫирӗплетме хушаҭ.

## Кӑпиталисла патшалӑхсен Йевроппӑри хирӗҫӳсен тӗвви.

х Тӗнҭери еккономӗк криҫӗсӗ ҫивӗҭленсех пыраҭ терӗмӗр. Йевроппӑ маттерикӗ ҫинҭе хирӗҫӳ тӗвви—тӗнҭери вӑрҫӑра ҫӗнтернӗ патшалӑхсемпе (Анкли, Франтси) парӑннӑ патшалӑхсем хушшинҭи хирӗҫӳ.

Анклипе Амерӗк ӑмӑртса хирӗҫни пӗтӗм Йевроппӑ континенҭӗшӗн паллӑ. ҪАПШ Йевроппӑ маттерикӗ ҫинҭе хуҫа пулма пӗр-пӗр никӗслӗ тӗкӗ кирлӗ пулнӑ. Ун пек вырӑн—вӑрҫӑра питӗ хытӑ аманнӑ хуҫалӑхлӑ Кермани пулса тӑҭӗ. ҪАПШ-сем ӑна нумай кивҫен парса пулӑшса ҫӗнӗрен ура ҫине тӑма пулӑшрӗ. Амерӗкрен кивҫен илнипе Кермани промышлӗнӑҫӗ, йусанса тӗнҭери рынӑка тавар кӑларма пултаракан пулса тӑҭӗ.

1924 ҫулта вӑл тӗнҭери експӑртра 6,1 проҭ. йышӑннӑ пулсан, 1929 ҫулта 12 проҭҭӑнран иртрӗ.

Кермани ҫакӑн пек йута нумай тавар кӑларма пуҫлани ытти кӑпиталисла патшалӑхсемшӗн, пуринҭен ытла Анклипе Франтсишӗн хӑрушлӑ йапала пулса тӑраҭ. Ҫавӑнпа та Франтси Кермани ҫулне пӳлсе пырасшӑн, пӗр-пӗрипе вӗсем ҭас-ҭасах хирӗҫеҫҫӗ.

Кермани империалисамӗ йунк планӗ тăварлăхне тӳсейми пулать, унăн ҫиккинҫен тухса кайма тапратать.

Кунҫа пӗрле Кермани хайне ҫӗнтернӗ патшалăхсене «тивӗҫлӗ» тӳлевсене султан ҫулхи тӳлевсене пăхса тухас ыйту тăратать.

Кермани ҫӗнӗрен, вăрҫă хыҫҫăн ҫухатнисене, вăрҫă хатӗрӗсене ӳстермелли ирӗке, колонисене кайалла илме ыйтать.

Анклипе Кермани хушшинҫи хирӗҫӳсем те ӳссе пыраҫҫӗ; Керманин йута кайакан таварӗсем Анклине Вăта Йевроппăпа Скантинави патшалăхӗсенҫен хӗстерсе кăларма тытăнаҫҫӗ.

Халех уҫҫăн хирӗҫесси ҫинҫен Кермани шухăшлама пултараймасть пулсассăн та, ҫӳллен-ҫул ҫитӗнсе пыракан Кермани империалисла вăрҫăра ҫӗнтернӗ патшалăхсене хăратма тытăнать.

Ҫак вăхăтрах ҫӗнтернӗ патшалăхсем хушшинҫе те хирӗҫӳсем ҫивӗҫленсе пыраҫҫӗ.

Аслă Приттани Америкпа хирӗҫнӗ вăхăтрах Йевроппăра пуҫ пулса тăрассине ҫухатасшăн мар. Йевроппăра Анклишӗн ҫи хăрушла патшалăхсем Франтсипе Кермани пулса тăраҫҫӗ.

Анклишӗн Франтси ҫи вăйлă тăшман.

Франтсин шултра интустрийӗ Анклинҫен вăйлăрах ӳсе пынă. 1928 ҫултах вăл ҫукун-хурҫă шăратассипе Анклирен иртсе кайнă.

| | Ҫукун шăратасси (пин тоннăпа) | | Хурҫă (пин тоннăпа) | |
|---|---|---|---|---|
| | 1913 ҫ. | 1928 ҫ. | 1913 ҫ. | 1928 ҫ. |
| Франтси . . . . . . | 5100 | 9900 | 4600 | 9200 |
| Анкли . . . . . . | 10300 | 6000 | 7700 | 8500 |

Тепӗр йенҫен Франтси ҫар, сывлăш флоҫӗ вăйлă ӳсни Анклишӗн хăрушлăх пулса тăрать.

Хирӗҫӳсем ытти кăпиталисла патшалăхсем хушшинҫе те пур, анҫах пуринҫен ытла вăл Франтсипе Анкли хушшинҫе ҫивӗҫленсе пырать.

Итталинҫе колонисем ҫителӗклӗ мар. Унăн промышлӗнăҫ таварӗсене Итталинҫи сахал ӗҫ укҫи илекен патрак илме пултараймасть. Ҫавăнпа ăна тавар сутмалли рынăк кирлӗ.

Шултра промышлӗнăҫа ӳстерме ăна ҫӗрӗ тавар рынăкӗсем кирлӗ.

Кунсăр пуҫне унăн халҫхи колонисем ҫӗрӗ тавар та ҫителӗклӗ параймаҫҫӗ, рынăк та вăйлă мар. Иттали хăйӗн колонисене аслăлатасшăн. Вăл хăйӗн аллине Палккан ҫинелле тăсать. Анҫах Палкканра унăн Франтсипе, Йукославипе, хирӗҫме тивет. Иттали хăйӗн Афрèккăри колонисене Франтсин—Тунис, Ҫири колонисене туртса илсе ӳстерешшӗн. Хăйӗн шухăшӗсене пурнăҫа кӗртес шутпах вăл Вăтаҫӗр тинӗс ҫинҫе вăй илесшӗн: тинӗс флотне вăл Франтсинипе танаштарасшăн. Анҫах кăна кура Франтси те хăйӗн флотне ӳстерсех пырать. Франтсин тинӗс флоҫӗ ӳснипе Анкли килӗшмест, мӗншӗн тесен Вăтаҫӗр тинӗс урлă Анклин Интине кайакан ҫулӗ выртать. Халӗ ӗнтӗ епӗр Вăтаҫӗр тинӗс ҫийӗнҫе виҫӗ империалисла патшалăх—Франтси, Анкли, Иттали хирӗҫӗвӗсен тӗввине куртăмăр.

Ҫак патшалăхсен хирӗҫӗвӗпе танах, вӗсен шухăшне палăртса ытти вак-

тĕвек патшалăхсем те хутшăнаççĕ (Австри, Йукослави, Палккан çурутравĕ çинҫи патшалăхсем).

Вак патшалăхсем хăйсен политтĕкне çав виçĕ пысăк патшалăх хушнипе тытса пыраççĕ.

Çак хирĕçӳсен тĕввипе вăрçăсăр татма, нихăш патшалăх та пултарайманни аванах курăнаť. Çавăнпа вĕсем вăрçă хатĕрĕсене пур вăйпа ӳстерсе пыраççĕ.

Вăл çак ҫыхвăрсенҫен паллă.

Пӳтшетран вăрçă ĕçне миçе проҫҫăн кайаť.

Франтси—21 проҫ., Анкли—13 проҫ., Иттали—22 проҫ., Польшшă—39%; Румыни—30 проҫ.

**Ĕç:**

1. Вăрçă тăкакĕ пӳтшетăн миçе проҫҫăнне йышăннине тиакрам туса кăтартăр.
2. Тĕнҫери кăпиталисла патшалăхсен вăрçă тăкакĕ ӳссе пынине тиакрам туса хурăр.

## 3. Метропполисемпе колонисем, çурмалла колониллĕ çĕршывсем хушшинҫи хирĕçӳсем.

Револютси йухăмĕ колонисенҫе çурколониллĕ çĕршывсенҫе сарăлса пыни империалисла патшалăхсене хăратаť. Вĕсем ăпа пĕтерес шутпа пусмăрлассине, хĕстерессине татах хытă çирĕплетсе пыраççĕ. Анҫах револютси йухăмĕ унпа пĕтмест, хăйĕн çумне çĕнĕрен те çĕнĕрен çар хушса вăйланса пыраť. Колонисемпе çурколониллĕ çĕршывсенҫи ĕçхалăхĕ империалиссен пусмăрĕнҫен тухас тесе вăрçни вăйланаť.

Çапла ĕнтĕ вăрçă хыççăнхи империалисăмра метропполисемпе колонисем, çурмалла колониллĕ çĕршывсем хушшинҫе хирĕçӳсем пĕр майах ӳссе пыраççĕ.

## Империалисăм варĕнҫи хирĕçӳсем.

Пуршуаçи хăйĕн влаçĕ çирĕпрех, хытăрах, пĕр пек тăтăр тесе парламĕнт йĕркисенҫен тĕрлĕ парттисене пăхăнман фашшисăм йĕркипе куçса пыраť. Кунийм пытармасăр, тӳррĕн рапоҫҫи класа пусармалли шур террăр, пуршуаçин тиктаттуррĕ. Пуршуаçи пролеттариата унăн пурнăçне, тивĕçлĕхне тапăнаť. Шур террăр пĕр май ӳссе пыраť, çавăнпа ĕçлекенсем пуршуаçине хирĕç ҫасҫасах тăра нуçлаççĕ, клас çапăçăвĕ хайарланнăçемĕн хайарланса пыраť. Ĕçпе кăпитал хушшинҫе хăватлă çапăçусем пулса иртеççĕ. Комуниссен парттин хăваҫĕ хăпараť. Совет сойусне кăпиталисла патшалăхсенҫи ĕçлекенсем ытларах кăмăллама пулаççĕ, уншăн кĕрешеççĕ. Çаксем пурте империалисăм варринҫе револютси çĕнĕрен çĕклесе кайасси çывăххине кăтартаççĕ.

Тĕнҫе империалисăмĕн çиçтеми пур йенҫен те çиййĕнсе пыраť. Тĕнҫери револютси ӳсет.

Империалисăм револютсине хирĕç вăйне пуçтараť. Çĕнĕ тĕнҫе вăрçи пуçласси, колонисене çĕмĕрсе револютси хумне путарасси, ССРС хирĕç вăрçăпа тухасси империалисăмăн кун йĕркинҫи ĕç пулса тăраť. Вăл вăрçă тĕнҫери револютсин вăйне ӳстерсе, çирĕплетсе, ҫăмăртаса кăпиталисăма хирĕç тăратмалла, кăпиталисăма пĕтермелле.

## Кăпиталисăм криçĕс пусмăрĕнҫе.

1929 çултанпа тĕнҫе кăпиталисăм хуçалăхĕ каллех халиҫҫен пулман вăйлă економĕк криçĕсне кĕҫĕ. Кăпиталисăм криçĕсĕ никĕсĕ—ӳссе пыракан тăвăм ĕçхалăхĕн илӳ пултаруллăхĕ ҫакни çине пырса тăрăннинҫе.

Пур патшалăхра та пролеттариатпа тĕнҕерп ĕçхалăхĕ тӳсекен выçлăхнушаллăхпа йунашар тĕлĕнмелле нумай ниçта ҕикме çук, ытлашши тавар купаланса кайрĕ.

Хаҕхи вăйланса пыракан криçĕс пĕтĕм капиталисла çиçтемĕн криçĕсенҕен тухат. Вăл ĕçхалăхĕ наҕарланса, çука йулса, капиталисăм хирĕçĕвĕ калама çук çивĕҕленсе пынипе пĕрле пырат. Унăн уйрăмлăхĕсем çаксем:

1) Хаҕхи криçĕс—тĕнҕе криçĕсĕ, вăл мĕн пур капиталисла патшалăхсенҕи пур хуçалăх пайракисене те хăйĕн хĕскĕҕĕпе хĕстере пуçларĕ.

2) Хаҕхи криçĕсре промышлĕннăç криçĕсĕ йалхуçалăх криçĕсĕпе пĕрлешрĕç.

3) Хаҕхи криçĕс питĕ вăрăма тăсăлҕĕ; хăш пĕр патшалăхсемшĕн криçĕс виçĕ çула йахăн (ÇАПШ, Анкли, Кермани), теприсемшĕн—колопиллĕ çĕрпывсенҕе тăватă çул пырат, анҕах та криçĕс пĕтме мар хытăран-хытă çивĕҕленсе ӳссе пырат.

4) Хаҕхи криçĕс питĕ тарăна карĕ; капиталисăм историйĕ кун пек вăйлă криçĕс пулнине пĕлмест.

Криçĕс тăвăма тĕлĕнмелле ҕакарҕĕ, ĕçсĕрсен шутне калама çук ӳстерсе йаҕĕ, ĕçхалăхĕн ахалте йапăх пурнăçне пушшех пĕтерҕĕ.

## 1. Промышлĕннăç криçĕсĕ.

Криçĕс йепле тăвăма ҕакарни хуçалăхăн уйрăм пайракисене илсе пăхсан питĕ аван курăнат.

Çакă икĕ çул хушшинҕе ҕукун тупасси тĕрлĕрен патшалăхсенҕе çапла ҕакнă:

| | | |
|---|---|---|
| ÇАПШ | — | 59% |
| Анкли | — | 47% |
| Кермани | — | 44% |
| Франтси | — | 21% |

Çĕркăмрăк тупасси çапла улшăннă: (пит тоннăпа).

| | 1930 ç. | | 1931 ç. | | Çурçулта | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | Йанвар | Ийуҕ | Йанвар | Ийуҕ | 1930 ç. | 1931 ç. |
| Кермани . . . . . . . | 14167 | 10631 | 11341 | 9344 | 72164 | 59297 |
| ÇАПШ . . . . . . . . | 50729 | 34730 | 39910 | 30199 | 236096 | 197359 |
| Анкли . . . . . . . . | 20639 | 19163 | 1943 | 18118 | 123834 | 113161 |

Хурçăпа тимĕр шăратасси татах хытă ҕакнă (тимĕр пин тоннăпа):

| | Çурçулта | |
|---|---|---|
| | 1930 ç. | 1931 ç. |
| Кермани . . . . . | 5502 | 3289 |
| ÇАПШ . . . . . . | 18260 | 11103 |
| Анкли . . . . . . . | 3150 | 2038 |

Хурçă (пин тоннăпа).

| | Çурçулт | |
|---|---|---|
| | 1930 | 1931 |
| Кермани . . . . . . . . . | 6470 | 4535 |
| ÇАПШ . . . . . . . . . . . | 23791 | 15257 |
| Анкли . . . . . . . . . . . | 3708 | 2694 |

Çакăнтан епĕр тăвăм вăйĕ мĕнле ђакса пынине лайăх куратпăр.

ÇАПШ-ен промышлĕннăç тăвăмĕ пĕтĕмĕшпе шутласан 30—35 прођђăн ђакнă. 1930 çулта 1929 çултипе танлаштарсан çĕркăмрăк тупасси 11,5 прођ., (63.100 пин тоннă) ђакнă, ђукуп шăратасси—23 прођ. (11.057 пин тоннă, хурçă—28. прођ. (15.280 пин тоннă) ђакнă. 3

1931 çулта çиђĕ уйăх хушшинђе 1929 çулти çав вăхăтрипе танлаштарсан çĕркăмрăкĕ тупасси 29 прођ. (72.800 пин тоннă) ђакнă, ђукун шăратасси сакăр уйăх хушшинђе 53 прођ. (15.575 пин тоннă), хурçă шăратасси—51 прођ. (20.280 пин тоннă) ђакнă.

Нехтă тупасси 1929 çултипе танлаштарсан 1930 çулта 11 прођ. (106 мĕлйун паррелђ. 1 паррелђ 136 килокрама), 1931 çулта 13 прођ. ђакнă.

Криçĕс ÇАПШ-сен автомопил промышлĕннăçне хытă çапрĕ.

ÇАПШ-сенђе автомопил кăларни:

| | 1929 ç | 1930 ç. | 1931 ç. |
|---|---|---|---|
| Йанвар Авкуст . . . . . . . | 4 225 пин | 2.668 | 1966 |
| Çулталăкĕпе . . . . . . . . | 5.359 „ | 3.344 „ | — |

Çакă çулте кăтартнă тĕп промышлĕннăç тăвăмĕсем хытă ђакни, промышлĕннăçăн ытти пайракисем мĕн ђухлĕ ђакма пултарнине лайăх пĕлтереççĕ. Йутран тавар илесси те йута тавар кăларасси те хытă ђакнă.

Нихăш патшалăхран ытла Тађес, Йунк планĕсемпе сăнђăрланă **Кермани** патшалăхĕ криçĕсрен хытă аптрарĕ.

Унта 1930 çулта 1929 çулхинђен çĕркăмрăкĕ тупасси 21 мĕлйун тоннă (13 прођ.), хурçă шăратасси—5 мĕлйун (31 прођ.) тоннă, ђукун шăратасси 4 мĕлйун тоннă (31 прођ.) ђакнă.

1931 çулта 1929 çулти малтанхи сакăр уйăхрипе танлаштарсан çĕркăмрăкĕ—26 прођ. (28 мĕлйун тоннă), хурçă—45 прођ. (15 мĕлйун тоннă), ђукун—50% сахал тупнă.

**Анклире** промышлĕннăç криçĕсĕ Керманиринђен кайрантарах пуçланђĕ. Анклире тăвăм йепле ђакнине пăхсан çапла куранаť:

1931 çулти çиђĕ уйăхра 1929 çулăн çав вăхăтсенђинђен çĕркăмрăкĕ 13% (18,7 мĕлйун тоннă) сахал тупнă. 1931 çулти сакăр уйăх хушшинђе 1929 çулăн çав вăхăтсенђинђен ђукун—48 прођ. (2,4 мĕлйун тоннă), хурçă—46 прођ. (3 мĕлйун тоннă) сахал тупнă.

Франтси, Керманирен реппаратси укçи сăхса тăраканскер, криçĕсе ђас парăнмарĕ. 1931 çулта çеç ун тăвăмĕ пур йенђен те тенĕ пек анма пуçларĕ. Ун промышлĕннăç протукси интексĕ çулсерен çапла улшăнса пынă: (прођ.)

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1928 | | | — 100,0% |
| 1929 | çулăн III | кварттăлта | — 109,5% |
| 1930 | „ III | „ | — 109,8% |
| 1931 | „ II | „ | — 101,6% |

## Йалхуçалăх криçĕсĕ.

Кăпиталисла патшалăхсенђе 1927—28 çултанпа криçĕс талкăшпе çавăрса илсе вăйланса кайрĕ. Йалхуçалăх криçĕсĕ çĕршерĕн-пиншерĕн вак хресђен хуçалăхсене салатса, ĕçхалăхне выçă- тăратса хăварђĕ. Ку нимрен ытла колонисенђе хытă палăраť.

Ёҫхалӑх масси выҫӑ ларат пулсан та склатсенҭе мӗлйуншар тоннӑ тулӑ, сахӑр, кофӗ тата ытти йалхуҫалӑх протукҭӗсем ҫӗреҫҫӗ.

Тырӑ акнӑ лаптӑкӑшсем кӑпиталисла патшалӑхсенҭе, нимрен ытла колонисенҭе, ҫурколонисенҭе, пӑхӑнса тӑракан ҫӗрчывсенҭе ҫултан ҫул хытӑ ҭакса пыраҫҫӗ: Аркенттинӑра тулӑ акмалли лаптӑкӑша—25 проҭ., ҪАПШ-ҭе хӗл каҫакан тырӑсем акассине 1931 ҫулта—12 проҭ, ҭакарнӑ. 1931 ҫулта Йекиппӗтра ҫӗрмамӑкӗ акасси 20 проҭ. ҭакнӑ, Интире—9 проҭ.

Ҫаксемпе пӗрлех финанс криҫӗсӗ те вӑйланса пырат. Панксем пӗрин хыҫҫӑн тепри хупӑнса лараҫҫӗ. ҪАПШ-ҭе 1929 ҫулта 642 панккӑ, 1930 ҫулта—1345, 1931 ҫулта сакӑр уйӑх хушшинҭе 1098 панк хупӑннӑ.

Австри, Кермани, Анкли тата ытти патшалӑхсенҭе те ҫавах.

## Рапоҭҭи клас.

Криҫӗс рапоҭҭисем ҫине йӑвӑрӑн лекет. Кӑпиталисӑм криҫӗсран ёҫхалӑхне пусмӑрлассине вӑйлатса, уп шуҭӗпе тухасшӑн, ҫавӑнпа вӑл пролеттариатӑн ёҫ укҫине ҭакарнӑ ҫемӗн ҭакарса пырат, ёҫсӗрсене посопи парассине йе пӗтерет, йе хытӑ ҭакарат. Криҫӗс мӗн ҭухлӗ ҫивӗҭленет, ҫавӑн ҭухлӗ ёҫсӗрсен шуҭӗ ытларах ӳссе пырат, ёҫхалӑх массин пурнӑҫӗ йапӑхланса пырат.

| | Ёҫсӗрсен шуҭӗ |
|---|---|
| 1. ҪАПШ | 14.000.000 |
| 2. Кермани | 6.200.000 |
| 3. Анкли | 3.000.000 ытла |
| 4. Йаппони | 3.000.000 йахӑн |
| 5. Поҭшшӑ | 1.300.000 |
| 6. Франтси | 1.000.000 |
| 7. Иттаҭи | 7 500 000 |
| 8. Румыни | 7.500.000 |

Мӗн пурӗ ёҫсӗрсен шуҭӗ 40 мӗлйун ҫынтан иртет. 1929 ҫулта, криҫӗс пуҫламӗшӗнҭе 15—16 мӗлйун кӑна шутланнӑ. Ёҫсӗрсемсӗр пуҫне тата ҫуркун йе ҫур ерне ҫеҫ ёҫлесе пурӑнакансен шуҭ ёте питӗ нысӑк.

Ёҫ укҫи тӳлемелли фонт ҫултан ҫул ҭакса пырат.

ҪАПШ-ҭе 1930 ҫулта 9.600мӗлйун толлӑр, 1931 ҫулти 1-мӗш кварттӑлта—3 мӗлйарт толлӑр ҭакнӑ.

Анклинҭе 1930—1931 ҫулсен 1—2 кварттӑлсенҭе 22 мӗлйун кӗренке ҫтерлинк ҭакнӑ.

Норвекинҭе ёҫ укҫи иртнӗ ҫулта 8 проҭ. ҭакнӑ. Кермани, Франтси тата ытти патшалӑхсенҭе те ҭакса пырат.

Керманинҭе сотсиал-фашисӑм ёҫ укҫи ҭакарма пулӑшса пырат.

Криҫӗс рапоҭҭи класӑн, ёҫхалӑхӗн пурнӑҫне хытӑ йапӑхтарса револутси йухӑмӗ сарӑлассине вӑйлатат, кӑпиталисӑмпа рапоҭҭи клас хушшинҭи хирӗҫӗве вӑйлатат, ҫивӗҭлетет. Комунисла партти йертсе пыни пур патшалӑхсенҭе сапастовккӑсем, стаҭккӑсем, темонстратсисем пулса иртеҫҫӗ. Рапоҭҭи клас буршуаҫи влаҫне сирпӗтсе пролеттари тиктаттури тӑвас ыйтӑва уҫҫӑнах лартат. Колонисенҭе, ҫурколонилле, пӑхӑнакан ҫӗршывсенҭе империалисла патшалӑхсем криҫӗс майӗпе пусмӑр вӑйлатнипе, ёҫхалӑх масси питӗ нушана йулнипе револутси хумӗ питӗ ӳссе пырат, ҭас-ҭасах востанисем, вӑрҫӑсем пулса пыраҫҫӗ.

## ССРС-пе капиталисăм тĕнђи.

Капиталисăм тĕнђи криçĕсе кĕрсе ӳксе йулашки кунсем пурăнаҫ пулсан, ССРС пысăк утăмсемпе малалла кайаҫ, кунтан кун çирĕпленсе пыраҫ, тăвăмне халиђђен историре курман ӳсĕмсемпе малалла йараҫ. ССРС кăçал сотсиалиçăм никĕсне хывса пĕтерет. Промышлĕннăç протуксийĕ кăларассипе вăл тĕнђере ÇАПШ хыççăн иккĕмĕш вырăна куçрĕ. ССРС промышлĕннăç протукси кăларассипе иккĕмĕш вырăнта тăраҫ. Нехтă тупассипе ССРС иккĕмĕш вырăна, çĕркăмрăк тупассипе улттăмĕш вырăнтан тăваттăмĕш вырăна, ђукунпа хурçă тупассипе Анклирен иртсе кайса тăваттăмĕш вырăна куçрĕ. Промышлĕннăç протуксийĕ 1931 çулта малтанхи çултипе танлаштарсан 20—21 прођ. ӳснĕ. Ӳсĕмсем айалта кăтартнă ђыхвăрсенђен аван курăнаççĕ.

Еçлекенсен клас шуђĕ (вăрманпа йалхуçалăхĕнђе ĕçлекенсемсĕр пуçне).

| | |
|---|---|
| 1930 | 12.111 пин çын. |
| 1931 | 13.713 пин çын. |

### ССРС-ђи тăвăм.

| Çулсем | Ђукун (пин тоннăпа) | Хурçă (пин тоннăпа) | Çĕркăмрăкĕ (пин тоннăпа) | Нехтă (пин тоннăпа) | Електрă вăйĕ (мĕлйун киловат сехет) |
|---|---|---|---|---|---|
| 1913 | 4.210 | 4.250 | 28.900 | 9.300 | — |
| 1925 | 1.292 | 1.868 | 16.100 | 6.960 | 2.300 |
| 1926 | 2.205 | 2.911 | 24.400 | 8.220 | 3.240 |
| 1927 | 2.961 | 3.592 | 31.000 | 10.100 | 3·910 |
| 1928 | 3.373 | 4 278 | 34.600 | 12.000 | 5.160 |
| 1929 | 4.322 | 4.907 | 40.300 | 14.100 | 6.465 |
| 1930 | 5.330 | 6.023 | 56.700 | 18.900 | 8 800 |
| 1931 | 8.000 | 8.800 | 83.600 | 27.502 | 10.700 |
| 1932 | 9.000 (план) | 9.500 (план) | 90.000 (план) | 28.000 (план) | 17.000 (план) |

### Машшин тăвасси.

(Мĕлйун тенкĕпе)

| Çулсем | Машшин тăвасси (пĕтĕмпе) | Йалхуçалăх машшинĕ тăвасси |
|---|---|---|
| 1930ç. | 1.475 | 414 |
| 1931 | 2.483 | 760 |
| 1932 | 6.800 | 940 |

Çăмăл интустри ӳсĕмне кăтартакан таплитсă.

| Çулсем | Çĕрмамăк пиравăрĕ (мĕлйун метрпа) | Урана тăхăнмалли (обувь) (мĕлйун мăшăр) | Сахăр (пин тоннă) | Конçервă (мĕлйун панккă) |
|---|---|---|---|---|
| 1930 | 2.454 | 68 | 1.737 | 232 |
| 1931 | 2.835 | 84,6 | 2.527 | 600 |
| 1932 (план) | 3.061 | — | — | 1000 |

Йалхуçалăхри паллăрах культтурисен пухăнăвĕ. (мĕлйун квинтталпа).

| Çулсем | Çĕрмамăкĕ | Сахăр кăшманĕ | Пĕрҫĕллĕ тырăсем |
|---|---|---|---|
| 1930 | 13,46 | 151,7 | 873,8 |
| 1931 | 21,02 | 214,4 | 978,6 |
| 1932 | — | — | — |

Ҫукунçул транспăрҫĕ.

| Çулсем | Крус çавăрнăçĕ (мĕлйарт тоннăпа) |
|---|---|
| 1928 | 156,2 |
| 1929 | 187,6 |
| 1930 | 244,0 |
| 1931 | 300,0 |
| 1032 (план) | 320,0 |

Халăх тупăшĕ 1928 çулта 27 мĕлйун тенкĕллĕх пулсан, 1931 çулта 50 мĕлйуна çитрĕ. Çав шутран сотсиалисăмла пайĕ 1931 çулта 89,5 проҫҫăн йышăннă, 1932 çулти план тăрăх вăл 91 проҫ. йышăнмалла.

Колхоспа совхос строиттĕлстви те хытă ӳсет. Кăçалхи çул пĕтĕмĕшпе илсен хресҫен хуçалăхĕсем коллектива пĕрлешсе пĕтмелле. ССРС-ҫе тĕнҫере çук, шултăра сотсиалисăмлă йалхуçалăхĕ ӳсет.. Талкăшпе колхоса куçнă май кулаксем клас пулса тăрассине пĕтеретпĕр.

Ĕçхалăхĕн ССРС-ҫе пурнăç хисеплĕхĕ пур йенҫен те лайăхланса, хăпарса пырат.

Советсойусĕ ӳсни империалисăма хăратат. Пролеттари патшалăхĕнҫе сотсиалисăм туни ытти пусмăрта пурăнакан халăха шанҫăк парат, вăй кĕртет. Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем Совет сойусĕ çине кăмăлласа пăхаççĕ, комунисла парттисем йертсе пынипе унăн йери тавра ҫăмăртанаççĕ.

Çакă тĕнҫери кăпиталçăсене пушшех тарăхтарат. Вĕсем пĕртен пĕр пролеттари патшалăхне вăрçăпа тапăпма пĕтĕм вăй хурса тăрăшаççĕ; ăна хирĕç вăй пухас тесе тĕрлĕрен суйа халапсем сараççĕ, кăмпанисем иртереççĕ (хĕрес поххоҫĕ, совет «темпинке» т. ыт.), темĕн тĕслĕ сăлтавсемпе усă курса вăрçа туртса кĕртесшĕн тăрмашаççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, комунисла партти йертсе

пынипэ ăнăçлă сотсиалисăм тăвакан Совет сойусне пĕтерессишĕн пуршуаçи мĕн пур майпа тăрăшат̆.

Кăпиталисăма крисĕс хĕстернĕ вăхăтра Совет сойусĕ ӱссе пыни кăпиталисăмшĕн ҫи хăрушлă йапала пулса тăрат̆.

Кăпиталисăм тĕнҫи пирĕнпе еккономĕккăпа политтĕк йенҫен сыхăну тытат̆ пулсан та, хутте хăçан та пире хирĕç вăрçăпа тухма пултарат̆, çавăнпа пирĕн йаланах хатĕр пулмалла. Тĕнҫери пролеттариатпа çирĕп çыхăну тытмалла, сотсиалисăм тăвас ĕçе тата тимлĕрех туса пымалла.

---

Послано в производство 2-VI-1932 г.
Подписано к печати 14-VII-1932 г.
Редактор Иварбеев
Тех. редактор Н. Степанов

Уп. Чувашлита № 1445. Заказ № 865 Тираж 9.100 экз.

Ст. ф. б. 2604×185. Об'ем 10 п. л. 66,000 п. з. в п. л.

ЦЕНА 1 р 50 коп.

У—2

Н. Колюшкин и М. Сироткин.

# ГЕОГРАФИЯ для III группы ШКМ.

Чувашиздат 1932 Чебоксар